ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕМ

# ТРАКТĂР

ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА КРИТИКĂ
АЛЬМАНАХĔ

▪

ТĂХХĂРĂМĔШ
КĔНЕКЕ

9

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР — 1949

**А. ТАЛВИР.**

# ЫЛТТӐНТУ.

РОМАН СЫПӐКӖСЕМ[1].

## ПӖРРЕМӖШ СЫПӐК.

### I.

Аттесӗр пурнӑҫ аван сӗт паракан ӗненех базара ҫавӑттарса кайтарчӗ. Пӗр йат ҫӗрне те пулин актармала. Пахчара улма лартмала, вӑрлӑх та ҫук. Ирӗксӗрех ӗнене сутассипе килӗшрӗмӗр.

Акана тухрӗҫ.

Пире айалкасри хӑтасем акса пама пулнӑ. Пӗр ирхине анне кӑвак-ҫутлах ана кӑтартма кайрӗ. Епӗ кил сыхлама йултӑм.

— Марйе вӑранмасӑр тула ан тух, кӑшкӑрма пикенӗ,—кантӑк витӗр каласа хӑварчӗ анне.

Пӗртен пӗр йӑвӑр кроват ҫинче сывӑракан пӗчӗк йӑмӑк, анне тӑрса кайнӑ хыҫҫӑн, хӗвелпе пӗрлех куҫне уҫрӗ.

— А-ан-нне-ее!.. ту-тту!—кӑшкӑрса йачӗ вӑл.

— Анне ҫук сывӑр ха, ҫывӑр, сывӑр, Марйе,—йӑмӑка йӑпатасшӑн хам.

— Ту-ту-у!—хытах кӑшкӑра пуҫларӗ вӑл.

Вӑт айван, куҫне усӑ-уҫманах сӗт ыйтат, хамӑрӑн ӗне ҫуккине те пӗлесшӗн мар. „Сук“ тесен, йӗме пуҫлат.

— Час анне килет, ту-тту та анне парӗ, ан йӗр, йӗрсен сынсем куласҫӗ.

Йамӑк ырӑн ҫинчен тӑрса ларсах мана аптратма пикенчӗ, епӗ каланине хӑлхине те чикмест. Хӑйӗннех перет. Пӗр-ик кашӑк сӗт пур пулсан, ун кӑмӑлӗ тулнӑччӗ те вӗт... Кансӗр мӗн ӗнесӗр пурнӑҫ. Вӗҫӗмсӗр „ту-тту“ лагакан пӗчӗк Марйене анне хиртен таврӑниччен йӑпатса усрас кӑмӑлпа (тарӑхнӑ йенне), чей курки йатса Харийассем патне тухса утап. Вӗсен ӗни ҫаварниччченех пӑрулана.

— „Кӑшт та пулин сӗт тупса памӑр-ши?“ —алакран кӗнӗ-кӗменех ҫапла каласа хурасшӑнччӗ, анчах сасса кӑлармa хал ҫитмерӗ, пурте кӑшкӑрса йӗреҫҫӗ. Харийасӗ, Праски вилсен ҫуралнӑ унӑн пӗчӗк йӑмакӗ, амӑшӗ—виҫҫӗшӗ те такама ылханаҫҫӗ.

— Ей, ачам Кируш, пӗтрӗмӗр вӗт, пӗтрӗмер, тинех ӗнтӗ ик киллипех харӑсах ҫырма тӗпне путас пулчӗ!—ман алӑри курка ҫине пӑхса пушшех уласа йачӗ Харийас амӑшӗ.

— Лашасӑр тӑратса хӑварчӗҫ, лашасӑр... Мӗнле акса пӗтерӗпӗр, мӗнпе улма лартӑпӑр, кантӑр мӗнпе акӑпӑр? Ай, турӑҫӑм, ҫӳлти турӑ, мӗншӗн ҫав-тери сылӑха кӗтӗмӗр-ши, мӗншӗн ҫав-тери хурлӑх кӑтартан-ши?

Карташне кӳршӗсем пуханчӗҫ. Уретник те ҫут тӳмелӗ кӑкӑрне каҫӑртса ҫитрӗ.

---

[1] „Ылттӑнту“ роман пӗтӗмӗшпе Чӑвашизатра уйрӑм кӗнекен тухат.

— Пĕр йĕр те çук, пĕр йĕр те çук, лаша пĕтрĕ, лаша пĕтрĕ, йе, мантаран турри мĕншĕн çуратнă-ши? Мĕншĕн ӳстервĕ-ши?—çав-çавах вĕри куççулĕпе питве çăвăт Харийас амăшĕ.

- Йе, йе, инке, чаран макăрма!—чăвашла кăшкăрса пăрахрĕ уретник. Халиччен епĕ уретниксем пурте вырăсран тухнă тесе пелнĕ, чăваш та пур иккен. Вăрăсем илсе кайнă лаша мĕн тĕслине ыйтса тĕпчем пекки тукаласан, вăл, йепле килнĕ çаплах, хĕçсине суллантарса хапха умĕнчи йĕнерлĕ лаши патне утса кайрĕ. Ун хыççăн кӳршĕсем те, лаша вăррисем сӳтсе хăварнă хӳмене йусакаласа, Харийассен карташĕнчен салава пуçларĕç.

— Ытла хыпса ан çун-ха есĕ, кин, пуç пулсан—çĕлĕк пулат, теççĕ, ак час варçă чаранĕ, упăшку таврăнĕ. йе, чаран пĕреххут куççулне тăкма,—купа калакан карчăк лаша вăррисене „йĕрлеме“ пуханнă çынсенчен йулашки пулчĕ. Харийас амăшĕ, тăртанса кайнă пит-куçне пĕр сиктермесĕр вите çине пăхса тăна май, вăл та, уçă кăçвалăкран тухса кайрĕ.

Карташ, çемйери пĕртен-пĕр арçынна вăрçа илсе кайнă пек, хурлăхлан пушанса йулчĕ.

* * *

Манăн сĕтшĕн антратакан йăмăк тепĕр уйăхран çăкăр ыйтса йĕме пуçларĕ. Çураки вăхăтĕнче чĕллĕн-чĕллĕн çӳхен касса, вĕтĕ тăвар сапса çийекен анне пĕçернĕ кăпăш çăкăр пĕтрĕ. Кăпăшши мар—тачки те, йӳççи те çук. Ларта—çăнăх, пӳлмере—аванмали ыраш пĕрчи те çук, уйра çеç хумханса сарăхат. Вăл ĕлкĕриччен пирĕн уткăшкарпа вĕлтĕрен шӳрпипех пурăнас пулат. Шапа пăтти пек симĕс шыв çиме ларсан, пĕчĕк йăмăкăн мар, хамăн та кăмăл пăтранат.

— Йурса çиме турăх та çук-ке, качака илсе йулнă пулсан та пĕр майччĕ, качака та илеймерĕмĕр,—апат çиме вăхăт ситмессерен тарăхат анне.

— Çăкăр—анне куçĕнчен пăхса ыйтат Марйе.

Малтанлăха анне чĕвмест. Пĕчĕк Марйе йĕме пуçлат.

— Çакăр!.. çакăр...

— Хĕрĕм, чунăм, ăçтан илем ĕнтĕ еп çăкăр, амам çисе кайнă çăкăрне.. çук.

Ман йăмăк, пĕчĕкĕскер, нимĕн те пĕлмест, пĕрмайах кăшкăрат—çиме ыйтат.

Хутран-ситрен йалăн тепĕр вĕçĕнче пурăнакан кукамай пĕрер чӳлмек турăх кӳрсе парсан, праçник ситеччĕ вара. Пĕчĕк Марийе те çакăр ыйтма чаранса, уткăшкар йашкине турăхпа йурса сисен ванлĕ выртса çывăраччĕ

Йулашки вăхăтра кукамай килми пулчĕ, турăх пĕтрĕ, текех кӳрсе парассине те шанми пултăмăр (хăйсен çемйи пысăк).

— Кируш, ачам, ыран базар вăйлă пулат мĕн, çавталăк уйар. капла пурăнса пулмаст, йулашки пурлăхăмăра та—пăрăва сутатпăр пуль, ерне, е... усрасан аванччĕ те, урăх нимĕн сутмали çук,—кĕçнерни каç çапла каларĕ анне.

Тепĕр кунне пăру уксипе пĕр пăт ыраш-çăнăх, ик чĕрес уйр н, ал чăмăр пысăккĕш усламçу илтĕмĕр.

— Ну, Кируш, хаҫ ĕнтĕ выçă вилсен те пĕр йапала çук сутмали, кана çисе пĕтерсен. —йăвăррăн сывласа илчĕ анне, базартан тавранна майпа çанăх шўрпи çисе ларнă чух.—Чалтун Матвине сат сыхлама хуралçасем кирлĕ пулаканччĕ, сана илмĕ-ши?

— Кайса пăхас —анне çине пăхмасăр калатăп хам.

— Мĕн тесе пĕлен, çемйери пĕр пыр чакаť вара, иттуш самай, хыраму та тутă пулĕ иçмаса...

Малтанлаcа Чалтун Матви патне мана анне йертсе кайрĕ.

— Карaçăм ачи пулсан, илес сат сыхлама, хăй пит аван сынччĕ, таврăнсан, каллех кирлĕ пулаť-ха вăл мана,—шĕвĕр сухалне йакатса куçне выҫатрĕ Чалтун.—Хĕрача вăҫҫи Хўсантан кăрмахвун илсе килнĕччĕ те, тем мурĕ пулчĕ, йурламасť. Караçăм пулсан наччасра йусаса параканччĕ те... Тĕрĕс-тĕкел çаврăнса килме тур пулăштăрах.

Анне мана ĕçе илнĕшĕн Чалтун Матвине тав туса, пĕчĕк йăмăк ваҫҫи пĕр-ик кĕренке вĕт панулми парса йама ыйтрĕ.

— Йакур! - кăшкăрчĕ хуçа.

Кăçналăкран крыҫца çивче ларакан хуçа патне салтак кĕпи тăхăнна типшĕмрех çўлĕ çын тухса тăчĕ.

— Сак Караçăм маткине ик кĕренке çилпе тăкавнă панулми виçсе пар-ха,—хушрĕ вăл тарçине,—укçине хăçан?

Епĕр чĕнме аптравипе шăла çыртса тăтăмăр.

— Укçине кайран парĕç, пыр, виçсе пар икĕ кĕренке... А есĕ, Карачăм ачи,—мана шур куçĕпе тĕллерĕ хуçа,—ыран ирех улма йăвăççисен таврашне çемçетме кил. Вăтаçĕрти спасчен ўркенмесĕр ĕçлесен, кĕркунне кĕпепе шалавар илсе парăп. Ашшĕне пăхнă пулсан, ĕçрен хăрама кирлĕ марччĕ.

— Ашшĕне, ашшĕне... хам пекех, хуť мĕнле ĕçре те, хамран йулмасť..- кашт хĕрелсе каларĕ анне.

Пушăт хуппинчен тунă пĕчĕк кунтăкпа симĕс панулми тухса паракан Йакур—тин çеç хăрах чĕркуççине пуҫăпа çĕмĕрттерсе çартан тавранвă салтак пулвă иккен. Унпа епĕ ĕçе тытăннă кунах паллашса çитрĕм. питĕ те кăмăллă çын. Вăл нимĕç вăрçине кайиччене Чалгун Матви патĕнче тарçăра пурăннă пулнă. Çурт-йĕр çук увăн. Çавăнпа, халĕ те. ĕлĕкхи хуçа патне таврăнса, суранлă ури йусанса çитнĕ-çитменех ĕçе пикеннĕ.

— Ман пек суранлисене лазаретран тухсанах тепĕр хут аккупа илсе кайаççĕ те, анчах манăн темле шăмă чирĕ пур, çавăнпа йачĕç,—тет Йакур.

Сат пахчинчи ĕç йăварах мар пулсан та, пĕр вĕçĕмсĕр ĕçлемеле, ир пуçласа кăнтăрлахи апат çиме çеç чарăнатпăр, унтан каллех, мĕн хĕвел анса ларичченех, панулми йăвăççисен йĕритавраше тимĕр кĕреçепе хырса тасататпăр. Çитменнине—манăн вăй та сахал, хытă çĕре таккаса хулпуççисем ырата пуçларĕç. Хуçа çĕрле те черетлĕ çеç сывăрма хушат.

— Кăчухвсхи антăхнă халăх улма ĕлкĕрменнине пăхса тăмĕ, йешĕллех силлесе кайĕ, лайăх астунă пултăр. Атту!.— сассине хулăмлатрĕ. Йакур мана шеллет, çурçĕр çитиччевех хўшше кĕрсе вырттарат те, вара хĕвел тухмасăр та вăратмасť.

Ирхине хӳшше уйранпа чӑмӑрла улма тата ҫур ҫӑкӑр кӳрсе параҫҫӗ.

Апатланнӑ хыҫҫӑн, иксӗмӗр те, ҫӗрлехи ҫилпе ӳкнӗ хуртлӑ панулмисене пуҫтаратпӑр. Йакур хӑй пулнӑ полкри салтаксем ҫинчен каласа кӑтартма пуҫлат. Епӗ итлеп

...Акӑ вӗсем нимӗҫсене ҫӗвтерсе пыраҫҫӗ. Тӑхлан пулђасем шӑйлатса хӑлха ҫунатти ҫуммипех иртсе кайаҫҫӗ, тупӑсем те вӗҫӗмсӗр ҫурӑлса ҫӗре тӗпретеҫҫӗ. Унччен те пулмарӗ—пӗр пулђӑ Йакур чӗркуҫҫине шӑп айлӑм вырӑнала аннӑ чух шӑтарса суранлатат...

— Нимӗҫсене час ҫӗнтереҫҫӗ-и пирӗннисем?

— Пирӗннисем, тетӗн?—ман йенне пӑхса куҫне выљатат вӑл.

— Пирӗннисем ҫав.. Раҫҫей салтакӗсем... Вӑрҫӑ час чарӑнат-и? тетӗп .. Ей, часрах нимӗҫсене ҫӗнтермеле те, вӑрҫма та чарӑнмала.

— Нимӗҫсене кураймастӑн-им есӗ, Кируш?

— Ма хӑйсем Раҫҫей салтакӗсене вӗлереҫҫӗ, сана та ав суранлатнӑ? Пӗтӗмпе вӗлерсе пӗтермеле вӑл нимӗҫсене.

Йакур пуҫне пӑркалат, еп калани килӗшмест ӑна.

— Нимӗҫсем те пирӗн пекех ҫынсем-ҫке, вӗсен те вилес килмест?

— Мӗншӗн ҫапӑҫаҫҫӗ хӑйсем?—Йакура парӑнасшӑн мар хам.

— Раҫҫей мӗншӗн ҫапӑҫат?

— Раҫҫей... Раҫҫей-и?

— Раҫҫей, Раҫҫей .. Мӗншӗн ҫапӑҫат Раҫҫей?

— Мӗншӗн тесен, нимӗҫсем ҫапӑҫаҫҫӗ,—епӗ такӑннине курса, Йакур, вӗт улмасене пухма чарӑнсах, чӗлӗм тивертсе йарат те, канмашкӑн йӑвӑҫ умне ларат.

— Есӗ ҫамрӑк ҫав-ха, Кируш .. Вӑрҫа пуҫлаканнисем салтаксем мар, вӑрҫа ӑна патшасем пуҫланӑ Салтаксем вӗсем Раҫҫейӗн те, Германин те—пирӗн пек ҫынсемех. Хушнӑ та вӗсене, текех пӗрне-пӗри тураҫҫӗ. Нимӗҫ хресченӗ те ҫӗр акса пурӑнат, епӗр те ак санпа иксӗмӗр ..

— Сат сыхлатпӑр, —тетӗп, Йакура пӳлсе.

— Тӗрӗс, тӗрӗс. Епӗр сат сыхлатпӑр, теприсем ӳтӑ ҫулаҫҫӗ, суха тӑваҫҫӗ.

Хӗвел „вырӑс апачӗ тӗлне“ ҫитсен, уҫӑлма тӑрса тухнӑ хуҫа епӗр панулми пухма чарӑннине курса, тискеррӗн кӑшкӑрса пӑрахрӗ:

— Ёҫлес пулат, ман сире ура хуҫса ларнӑшӑн тӑрантарса усрас-им?

Хуҫа хыҫҫӑнах пахчана ҫӗмӗрт ҫеҫки пек чечен хӗрӗ те тухрӗ. Утмӑл-турат тӗслӗ кӗпепе хӑй, уринче сарӑ пушмак, ҫарран тӑхӑннӑ, вӑрӑм ҫӳҫне хыҫалала икӗ ҫиттуни туса кӗрен пурҫӑнпа ҫӑлтӑрланӑ, чӑлт шурӑ чӗрҫитти ҫакки хулпуҫҫийӗ урлӑ пилӗкне ыталанӑ

— Куратна, Пике тухрӗ?—шӑппӑн калат Йакур.

Пике пирӗн умран ҫырма хӗррипеле иртсе кайрӗ, вӑл та, епӗр те хире-хирӗҫ пӗр сӑмах та хушмарӑмӑр.

— Йакур!—шыв хӗрринчен кӑшкӑрчӗ хайхи,—кимме шыв тулнӑ...

...Чалтун Матви хуçа патĕнче Йакур ĕçлени маншăн питĕ те усăлă пулчĕ. Икĕ уйăх хушшинче вулама, çырма, шутлама вĕрентрĕ. Ку вара манăн хуçа умĕнчи хака та хăпартрĕ.

— Шутлама пĕлсен, панулмипе сутă тума базарсене те тухма пултаратăн,—тет вăл.

Кĕркунне чăнах та Йакурпа иккĕн ик лавпах базарсем тăрăх çӳреме пуçларăмăр. Питĕ пиншак та тупса пачĕ хуçа. Шанакан пулчĕ, çуллахи пек кăшкăрма та чарăнчĕ.

— Укçа нумай тусан, Чĕмпĕре илсе кайатăп,—хĕпĕртеттерет мана.

Панулми лайăх пулнишĕн савăнсах тепĕр сат хуралçи тытрĕ.

— Есĕр ĕнтĕ Йакурпа иксĕр те хам ывăл шутĕнче. Хĕле кĕрсен те таварпа çеç çӳретекен пулăп, кăçал лапка уçап, текех хушăра çыврăттармăп сире, унта çывăрма Пракуç пур, Пракуç!—пире хăй патне чĕнсе кĕртсе пылпа чей ĕçтерет хуçа.

...Чылай çуллă Пракуç пиçнĕ панулмилĕ пахчана лекнĕлекменех ăшпа эптраса илсен, хуçа арăмĕн кăмăлне кайрĕ.

Виççĕмĕр те пĕрле панулми татнă чух, Пракуç хĕрарăм халапне пикенет, хушшинчев, хуçаран та кулса илет.

— Чаршав айĕвче хăйпе йунашар çывăрнă çĕртенех Чалтун матки мана шыраса лупас хыçне тухат. Унтан иксĕмĕр те хăмла ăшне чăматпăр, упăшки туймаст, пулат те ĕне! ха-ха-ха!..

Епĕр кулмастпăр.

Пракуç ун пултарулăхĕнчен тĕлĕнменшĕн кăмăлсăрланат, мухтанма чарăнса Йакура чĕпĕткелеме пуçлат.

— Хăçантанпа пурăнан, çапах та хĕрне çавăраймастăн. çамрăк çын—салтак тен хăвна ху... Тепĕр çын пулсан сан вырăнта, тахçанах Чалтун кĕрӳшĕ пулса, пыллă кĕрчеме çеç ĕçсе лармала. Ач-ху! Санран килет.

— Тĕрĕс, тĕрĕс, Пракуç, тепри пулсан сан вырăнта çакăн пек тарçăра та пурăнмаст, чул çурт лартса лапка çеç тытат, есĕ пур, пирĕнпе, начар çынсемпе пĕрле, Чалтун сатĕнче панулми пухан. Ач-ху! Санран килет...

Епĕ чăтса тăраймарăм, Йакур сассине Пракуçла хăралтаттарса каланинчен ахăлтатса йатăм.

— Ан кул-ха, ан кул, папаккăм, сан çулăнта епĕ пĕтĕм кас хĕрĕсене хам хыçран чуптарнă, есĕр иксĕр те пĕр йĕкĕте тămастăр.

— Епĕ вунпĕрте кăна-ха,—тетĕп Пракуса хирĕç.

— Çулу çамрăк пулсан та, сан пĕвӳ пысăк... Ей, айван! Хуçа хĕрĕ арман вырăс ачисене ама йытă пек кĕрт пухнине те ĕненместĕн-ха есĕ...

— Ес калани пурте тĕрĕс пулсан, хĕвел те тепĕр май çаврăнĕ,—анис улмине хуп пăтавккана тултарнă чух каласа йатăм.

— Тавлашатна? Тавлашатна! Чĕкеç çинчен кĕркунне каласа пани тĕрĕс пулмасан, пĕр пăтавкка панулми çисе йарап, тĕрĕс пулсан, есĕ çийĕн, йурат-и?

— Аçтан пĕлес ман? Те тĕрĕс, те тĕрĕс мар, ĕнен-ха сана,—тарăхса çитрĕм ĕçти çук лăпăртатнине итлесе.

Йакурпах килĕштеретĕп епĕ. Вăл нимĕç салтакĕсем çинчен те, тыткăна лекнĕ Австри çыннисем çинчен те каласа кăтартат. Пĕртте кирлĕ-кирлĕ маршăн çăвар тутине сайа йамаст.

— Шĕвилке есĕ,—тавлашса пуçтарнă панулмийе сутса килнĕ каç мана хулпуççинчен лăскаса шыв хĕррине çавăтса кайрĕ Пракуç. Ватă йуман патне сывхарсан, йерипен йăпшăнса хăй хыççăн пыма хушрĕ.

— Ак кунтан хăва хушшинерех лăх,—шăппăн калат Пракуç,—куртăн-и?

Епĕ чĕнместĕп.

— Куртăн-и, тетĕп, арман вырăс ачипе Чĕкеç хăва хушшинче хăшăлтатнине?.. Шĕвилке ес! Манпа тавлашма пăхсан, пĕрре ăса кĕртмеле-ха сана,—ватă йăмра патĕнчен кайала хушша таврăннă май сассине хулăмлатса пычĕ вăл,—тинех пĕр пăтавкка панулми çийес пулчĕ сан. Илтетне?

— Хаљ ĕнтĕ,—тепĕр хут пуçларĕ Пракуç,—ман пата хуçа арăмĕ хăмла ăшне тухниве курса тăма пултаратăн. Вăт мĕнле вăл тĕнче! Хĕрĕ хăва ăшĕнче, арăмĕ хăмла ăшĕнче. Чалтунĕ çеç чыслă тӳшек çинче сысна пек çыврат. Пулат те тăмана! Хи-хи-хи!

Кун хыççăн епĕ текех Пракуçпа çыхланма парахрăм.

...Кĕрхи шăнкăр уйар кунсенче хуçа мана тавар илме Чĕмпĕре лартса кайрĕ.

Урара—шăп хама çĕлетнĕ пек сăран атă, çире—хура халат, пуçра—вĕр-çĕнĕ картус.

— Капла есĕ чăваш пек те мар, вырăс ачи пек курăнан,—çул тăрăх мухтаса пырат мана хуçа,—вырăсла пĕртте пĕлмесне ес?.. „Чĕмпĕр çулĕ такăр çул та, вăрăм çул“,—теççĕ халлапра, унта çитиччен епĕ сана пăртакçă вырăсла та вĕрентем-ха. Итле, Кируш, магазина пырсан, калăпăр, сăнăн атă илмеле; магазина пыран та, вара ак çапла ыйтан,—малала вырăсла калат хуçа, унтан хăйĕн сăмахĕсене тепĕр хут мана калаттарат. Епĕ аташап, пĕлместĕп вырăсла калаçма.

— Вĕренес пулат. Епĕ сана çамраклах çын тăвас тетĕп. Ĕмĕр асăнăн... Вунçичче çитсен авлантарса йарăп ак, пĕр-пĕр пуйан хĕр илсе парăп. Хăвăр патăрта пурăнсан, авланап тесен, те пĕр хĕр пымĕ сана, вăл çук, ку çук, лаши çук, ĕни çук, çурчĕ çук, тейĕç. Туйна вайлă тăвăп. Е-йай-йай!—тилхепипе карт туртат.

Вăрăм çилхелĕ çӳрен лаша пуçне пĕкĕпе танлашарса хитрен йуртат.

— Ей-йай-йай, чăмăрла сĕлĕ хыптармала-и мĕн сана, начар çын лаши пек тĕкĕртетсе пыран!

Хулана иккĕмĕш кунне çĕрле çитрĕмĕр.

— Кунта Иван Йакăлч Йакăвлĕв пурăнат,—пысăк çуртлă урампа иртсе пынă чух ман йенне кăшт тайăлса майĕпен калат хуçа.

— Пирĕн йалсем-и мĕн вăл?

— Çук. Пирĕн йалта ун пек чаплă çын çуралайман-ха. Иван Йакăлч вăл йенерал вĕт. Патша патĕнче хăнара пулнă, тет вăл. Кунта унăн чăвашсене вĕрентекен шкулĕ пур. Пирĕн

йалти Шерне ачи вӗренет унта. Кӗҫӗр еп хваттере кӗрсе апатланнӑ хыҫҫӑн, ун пагне кайса килем-ха, килӗнчен парса йанӑ кучченеҫне леҫсе памала ман. Ыран вӑхӑт пулмаст.

Шур ҫуртлӑ ырӑс патӗнче ҫӗр выртнӑ хыҫҫӑн, ирпеле иксӗмӗр те магазинсем тӑрӑх ҫӳреме тухса кайрамӑр.

Лапка уҫмашкӑн илнӗ вак-тӗвӗк таварсем хыҫҫӑн, ман хуҫа, йури, тепӗр магазина кайса Чӗкеҫӗ валђи пӗр мӑшӑр ботинкӑпа ҫутӑ калуш илчӗ. Епӗ, кӑмӑлне кайтӑр тесе, ҫынсем умӗнчех мухта пуҫларӑм.

— Ан павра,—хулран тӗртрӗ вӑл.

„Мухтани кӑмӑлне каймарӗ-шим?" Урӑх ним шутлама аптӑрарӑм.

Магазинтан тухсан хуҫа ҫиленсех каларӗ:

— Ҫынсем умӗнче тек чӑвашла сӑмах кӑларнӑ ан пул. Мӗншӗн-ха сана еп ҫул тӑрӑх вырӑсла вӗревтсе килтӗм?

Тӑрук, ҫиҫӗм ҫиҫен хӑвӑртлӑхпа хама шкултан кӑларса ывӑтни асӑма килсе тукрӗ. Сасартӑк, хам ҫумри йулташа аҫа ҫапвӑ пек, чӗтресе ӳкрӗм, темскер пыртан туртӑнса куҫҫулне кӑларчӗ. Ей, Чӗмпӗр, Чӗмпӗр! Кунта чӑвашла калаҫма йурамастех-ши мӗн вара? Ҫук, йуратмастӑп сана, Чӗмпӗр, мана хам чӗлхепе калаҫтармастӑн пулсан, сурап сан питӳ ҫине!

Хуҫа ман пуҫри шухӑша туймаст. Ӑшчике кӳрентерсех, базар варрипе иртсе пынӑ май, ман йенне куҫ хӳрипе пӑхса мӑкӑртатат:

— Вырӑсла вӗревес пулат, ав арбуз сутаҫҫӗ, патнерех пырса ыйт-ха, арбуз мӗн хак, те, вырӑсла вӗренсен малашне тавар илме хӑва ҫеҫ йарӑп. Ма пӗртте чӗнместӗн, ҫуламан пӑру пек ан пул. Сутӑ тӑвас ӗҫре чӗлхе ҫивӗч пулмала.

„Чарӑн паврама, ыр ҫынӑм, хуҫа!"—кӑшкӑрса каласшӑн еп.— „Куратна, ав пысӑк ҫурт тӑрринче виҫ тӗслӗ йалав; ун ҫине: чӑвашла калаҫма йурамаст, тесе ҫырни курӑнат. Ҫӗклесе ҫапас ҫав йалава, виҫ тӗслӗ йалава!"

## VII.

Вырӑн ҫинчен тӑричченех карташ йенчи ҫӗмрӗк кантӑк витӗр такшин уласа йанине илтеп. Кӑшт пуҫа ҫӗклесе пӑхсан, аннепе йӑмӑк иккӗш те, кроват ҫинчех, йунашар ҫывӑрнине астурӑм.

— Мӑнтарӑн турри, турри, мӗншӗн ҫуратнӑ-ши, мӗншӗн ӳстернӗ ши?

— Авантарах итлесен, Харийас амӑшин сассине уйӑртӑм.

Хыпаланса тӑрӑх сак ҫинчен сиксе тӑрап. Виҫӗ ҫул кайала Харийассен лашине вӑрласа кайнӑччӗ, ун чух ҫапла кӑшкӑрса йӗвӗччӗ амӑшӗ. „Хаљ мӗн пулнӑ-ши? Ӗнине ҫавӑтса кайман-ши?"—нумай шухӑшласа тӑмарӑм. Йепле сиксе тӑнӑ, ҫаплипех, ҫарранах урама чупатӑп. Хамӑр хапхаран тухса карташлисен кӑҫналӑкӗ йенне йарса пуссан, мана инкесем тӗл пулчӗҫ:

— Ей, хӗрӗм, хӗрӗм, ачалах вӑрларӗҫ, ачалах вӑрларӗҫ!—Харийас амӑшӗ пӳртӗнче каҫса кайсах йӗрет.—Вунултта ҫеҫ тултарнӑ, вунултта ҫеҫ...

Кăçналăк умĕнче хирĕç пулнă икĕ хĕрарăм мана—хуçасăр çуртра мĕнле хурлăх сиксе тухнине пĕлтерчĕç.

Хаљ çеç карташ варривче ĕне суса ларакан Харийаса икĕ салтак сĕтĕрсе хапхумне тухнă та (унта йамшăк кĕтсе тăнă), трантас çине çĕклесе çапса, арăм тума илсе кайнă.

Çавăнпа ĕнтĕ унăн амăшĕ чĕрипе татăлса йĕрет.

— Салтаксем вăрланă та, хĕр хыççăн кайакан та çук, хăраççĕ,—кăшт нăшлатса илчĕ мана каласа кăтартакан инке,—шел вĕт-ха, вунулт çулхискере варлаççĕ, çылăха та пĕлмеççĕ, мурилесшĕсем, çĕр çăтмансем. Ун хутне кĕрекен çук та, ашшĕ салтакра пуçне хунă иккен те, килĕвче те мăшкăл тăваççĕ пулат.

— Ан та кала, ан та кала...

— Ей, мĕн çав есĕр хыпса çуннă... йали... авалтан çапла та, хĕре ăна авалтан вăрлаççĕ те,—вĕтĕртеттерчĕ тин çеç кăçналăкран тухнă виççĕмĕш инке,—кам йĕкĕчĕ ваљљи вăрланине çеç пĕлес пулат.

— Харийас вачар хĕр мар, ăна темле пуйан ачи те хапсăнма пултарнă.

— Пултарнă, пултарнă...—хутшăнчĕç хĕрарăм сассисем.

— Пирĕн Тарук курнă вăрласа кайнине, железнăй ход трантаспа çухăртсах илсе кайрĕç, тет.

— Лаши Чалтун Матвин пулнă, тет.

— Ей, апла пулсан, Чалтун ывăлĕ ваљљи пулсан, хуйхăрмали те çук.

— Йалти пĕр пуйан! Йалти пĕр пуйан. .

— Пуйанни пуйан та, самани темле пулат вĕт, екерте пуйансене пĕтерекен хĕрлисем çитсен...

— Хĕрлисене Çĕпĕрех хăваласа йанă, тет вĕт.

— Ес ăçтан пĕлен?

— Тен, хăваламан...

— Чăнахах Чалтун ывăлĕ авланат пулсан, туйĕ вăйлă пулмала вара...

Урам варриве пухăннă инкесене нумай шавласа тăма памарĕç. Таçтан сиксе тухнă пилĕк салтак кăшкăрса пăрахсан, пурте чăл-пар саланчĕç

Епĕ, Чалтун Матви патĕнчен киле выртма çеç килнĕскер, пўрте кĕрсе ура сыртăм та, сат сыхлакан Пракуç патне пиçнĕ панулмисене татса хатĕрлеме кайрăм.

— Каçпа киле таврăн, хăруш кăчухнехи самавара,—тесе йулчĕ Харийаса вăрланивчен тĕлĕннĕ анне.

„Хĕр вăрлакансен лаши Чалтунăн"—çак хыпар ман асран туха пĕлмест. Хуçа патне хыпаланап. „Иртсе кайрĕç иккен пĕчĕк чухнехи кунсем, савăнăçлă кунсем. Пĕр шухăшсăр выљаса çўреттĕмĕр Харийаспа. Унăн амăшĕ çитĕнсен, мана кĕрў тăватăп, тетчĕ. Ак ĕнтĕ, пултăм кĕрў!—Чалтун тарçинчен тухаймастăп. Ачаран пĕрле ўснĕ Харийаса куçкĕретех тахшин ваљљи вăрласа кайаççĕ. Нумай пулмаст вăрçăран таврăннă Чалтун ывăлĕ Тарас ваљљи вăрланă-ши мĕн вара? Чăнахах çапла-ши, чăнахах Харийас, вунулт çулхи хĕр, Тарас арăмĕ пулат-ши? Çук, чăтса пулмаст ку хурлăха".

Сатри хушăра пĕчченех ĕреххетленсе выртакан Пракуçа çитнĕ-çитмевех Харийаса вăрланине каласа кăтартап.

— Ан пашка арман чулĕ йăтнă пек, епĕ санран малтан пĕлнĕ ăна,— кулса выртат Пракуç.

— Тарас ваљљи-и мĕн?

— Хей, айван. Тарас ун пек чухăн хĕрне илсе тăрат-и?.. Вăт ухмантей.. Харийаса ăна пĕр вирйал салтакĕ ваљљи вăрланă, куртăн пуљ ĕнер: панулми çиме килчĕç, пĕрне Онтон тесе чĕнесçĕ, те мăшкăласа çапла йат хунă, кутамас çын, салтак тумтирĕпе пулсан та, çын кĕлетки çук хăйĕн. Çавă ĕнтĕ Харийаса урампа иртсе пынă чух курнă та, йуратса пăрахнă. Пайан ир, хайхине, арман вырăсĕ патне илсе кайса кĕлете те хупса хунă, пирĕн хуçа патне илсе килеççĕ. Чалтун, мĕнле калас ăна, ашшĕ вырăнĕнче ĕнтĕ, кин кўртет...

Тулли кăмăллă Пракуç сывлăшне çавăрса йараймасăр ўсĕрсе калаçма пўлĕннинчен шăла çыртса чăтрам. Вăл чыхăнма пуçласанах, пуçран çапнă пек, хушăран тухса вĕçрĕм. Шыв хĕррине чупап. Хама туратсевчен йарăм-йарăмăн çакăннă панулмисем çамкаран тўпелеççĕ, лăпкăн усăнса тама кавсĕрленĕшĕн çилевсе çĕре те патлатса ўкеççĕ. Шыв хĕрринче пĕччен кимĕ. Шăп ун çине сиксе ларма тытăнсан, хăва хушшинче темскер чăшăлтатнине илтрĕм—çын. Ман патах тухат. Хăранипе пĕр вырăнта хытса кайап, кимĕ çине ларма та хăват йулмарĕ.

Хăва ăшĕнчен тухакан çын Йакур иккенне курсан, тинех чунăм килсе кĕчĕ.

— Ăçтан ес, хуçа сана пусса çименни çеç, куç умне курăнсан, тен, чăвахах та мăйăнтан çĕçĕпе сĕрĕ,—тетĕп ерне ытла çухалса пурăннă Йакура.

Вăл Йухмана хĕрлисем çавăрса илнĕ тесен, хуçа хушнипе унăн çитерскен ăйăрне утланса йалтан тарнăччĕ. Чалтун хĕрлисем пирĕн йала та килсе вулăсĕпе чапа тухнă ăйăрне илсе кайасран шикленнĕ пулнă. Йакур ун сăмахне итлет (тарçиçке-ха). Сăран сумкăпа виç кунлăх çăкăр чикет те, ăйăра утланса вăрмана вĕçтерет. Сат пахчине сыхлама Пракуçпа иксĕмĕрех йултăмăр.

Хĕрлисем пирĕн йала çитеймерĕç, Йухмара та пĕр кун çеç тăнă, тет,—кайала чакнă пулат вара. Тĕплĕн никам та пĕлмест. „тет сăмахсем“ çеç çитеççĕ пирĕн пата.

Йал урлă Пăва йенне йараплан вĕçсе кайрĕ. Ун чухне епĕ Пракуçпа ранеткă суйлаттăмчĕ. Хурчăка пек çеç курăват. Темиçе пăван пĕрле пухăнса пулатнăн туйăнса ђулчĕ. Çĕр çине ансан, ăна—пўрт пысăкĕш пулат, тесе калаччĕ Йакур. Ытла та çўлтеччĕ пуљ вăл пирĕн йал урлă каçнă чух—питĕ пĕчĕккĕн курăнчĕ. Варçăра пулнă çынсем каламан пулсан, епĕ хам тĕллĕн пĕлес те çукчĕ çав пăван саслă чунсăр хурчăкана.

Сакăрвуншар, çĕршер çул пурăннă асаттесем те халиччен курман сывлăшри машинран тĕлĕнсе йулнă хыççăн, çавталăк лăпкă тăва туйăнсаччĕ. Чалтун Йакура шырама мана вăрмана йачĕ.

— Пайанах тарвăнтăр, нимле салтак та çук, те, йалта,—хушсаччĕ вăл мана,—пиллĕкĕмĕш кун ĕнтĕ ăйăр сĕлĕ çименни, хăвăрăлса кайрĕ пуљ.

Йаланях Чӗмпӗре ҫӳрекен ҫӳренпе ҫур тавлӑк вӑрмапта ҫӳресен, Йакура тупмасӑр таврӑнтӑм.

— Ҫук,—хуҫяна каласа кӑтартап хам ӑҫта-ӑҫта пулнн ҫинчен,—темле армак-чармак ҫырмана та ҫитрӗм, ӑйӑр тӗсӗ те, Йакур чунӗ те ҫук

— Ҫӳрене ҫиме пар та, ҫуран Йухмана кайса кил. Ҫул ҫинче ҫуран ҫынна никам та тивес ҫук, тен, унта ҫакланнӑ пуљ Йакур. Ҫитсен базар кассинчи хӑтасем патне кӗр. Вӗсем курман-и пирӗн ӑйӑрпа иртсе ҫӳрекене? Ей, карчӑк!—крыљца ҫинченех кӑшкӑрчӗ хуҫа,—Кируш Йухмана кайат, апатлантар-ха лайӑхрах, шӑртан тупса пар.

— Кам пӗлет кӑчухвехи саманара мӗн пулассине, тен, Йакура ӗнсерен туйӑнтарвӑ та, выртат пуљ таҫта хуртланса, ӑйӑрпа тахҫавах чунилев аптихриссем ҫӳреҫҫӗ пуљ. Ес пултаракавччӗ. йалтах пӗлсе кил,—мана мухтаса йулчӗ Чалтун.

Йухмана тепӗр кун кӗтӳ янна вӑхатра ҫитрӗм. Чалтувӑн базар кассинчи шатрун суртлӑ хурӑнташӗсем патне пырса кӗриччен кӗтӳҫсемпе сӑмахланса ирҫе кассине иртсе кайрӑм. Вӗсем еп каласа кӑтартнӑ хушка пуҫлӑ ӑйӑра курнине пӗлтерчӗҫ. Утланса ҫӳрекен ҫынни те,кӗтӳҫ ачи сӑмахне ӗненсен, Йакур сӑнлӑ.

— Ӑҫта пурӑнаҫҫӗ вӗсем?—ыйтатап кӑсенчен.

— Хӗрлисем-и? Хӗрлисем вӗсем Пӑла леш йенче, Кӗҫӗн-Патӑрйелӗнче пурӑнаҫҫӗ. Йухма та весен ирӗкӗнче шутланат. Шуррисем килсеччӗҫ кунта, анчах хӗрлисен шӑршине сиссессӗнех, кайала тапрӗҫ.

— Хӗрлисем никама та тимеҫҫӗ-и?

— Ҫук, вӑл—илтӗнмест-ха.

Ҫак сӑмахсемпе епӗ кӗтӳҫсенчен уйӑрӑлтӑм, вӗсем апат ҫиме кайрӗҫ. Манан темле сӑлтав тупса Кӗҫӗн-Патӑрйелне каҫмала, тен, унта чӑнах ӑйӑра курма пултарӑп.

Сарлака Пӑла урлӑ хывнӑ пысак кӗпер патне ҫитсе тӑтӑм. Винтовкӑлӑ салтак ҫула пӳлчӗ.

— Ӑҫта кайан, пӗчӗк йулташ?

Пӗртте хӑруш мар, „йулташ“ тет мана.

— Кӗҫӗн-Патӑрйелне,—ҫӗмилӗн таварап.

— Мӗн тума?

— Кирлӗ. Йакура шырап,—аса та илмен, тӳрӗренех персе йатӑм.

— Мӗнле Йакур?

Епӗ хам хӑш йалтан килнине пӗлтертӗм (пурнӗрех суйма пултараймастап).

— Ата манпа пӗрле,—терӗ салтак,—хам йертсе кайам.

Кӑшт ҫӳҫевсе илтӗм „Ӑҫта илсе кайат-ха ку мана?“—кӗперӗн тепӗр вӗҫӗнче тепӗр салтакран иртсен, тыткӑна ҫакланнӑ пултӑм

Кӗҫӗн-Патӑрйел, Пӑла урлӑ каҫсанах, карта тытнӑ пахчасемпе пуҫланат. Винтовкӑлӑ салтакпа пӗрле инҫе утма тивмерӗ. Урам йенчен виҫ кантаклӑ пӳрте илсе кӗчӗ. Унта—штаб пулнӑ мӗн. Сӗтел хушшинче ларакан типшӗмрех, пагонсӑр гимнаҫтӗркалӑ ҫын манпа калаҫма тытӑнчӗ.

— Йакура шыратӑп епӗ. Чалтун Матви патӗнче пӗрле тарҫӑра ӗҫленӗ Йакура,—чӗтресе калатӑп хам.—Ӑййӑр утланса кайрӗ те, пайанхипе пилӗк кун ӗнтӗ таврӑнмаст...

— А кам йачӗ кунта сана?

— Хамах килтӗм, хуҫа Йухмана кайса пӑх, ӑййӑра тӗл пулмӑн-и, терӗ те.

— Тӗнчере Йакур нумай, хушамачӗ мӗнле вара ун?—кулса ыйтат.

— Хӑшӗ ӑна Йатман Йакурӗ, хӑшӗ Чалтун тарҫи теҫҫӗ, хуҫа хут те хӑҫан та Йакур тесе ҫеҫ чӗнеччӗ.

— Ыванмарӑн-и?.. Лар.

— Ывӑнма а-ан.- хам ҫапах тӗнкел ҫине лартӑм.

Йакур, хуҫа ӑййӑрне вӑрман тӑрӑх тартса ҫӳрес вырӑнне, хӑйех кайса панӑ иккен Чалтун пек пуйансен пусмӑрне ҫӗмӗрсе тӑкакан ҫамрӑк отрйада, ҫавӑнтах хӑй те, хӗрлисен ӗретне хӑй ирӗкӗпе тӑрса. алливе винтовкӑ тытнӑ. Мана курсан—епӗ ӑна шыраса тупнинчен йӑлтах тӗлӗнчӗ.

— Йепле ҫитрӗн? Еп кунтине ӑҫтан пӗлтӗн?

Йакур хватерӗнче каҫхи апат тусан, ҫур талӑк ҫурран утнӑскер, епӗ, кутник ҫине выртса ҫийӗнчех сывӑрса кайрӑм. Ҫӗр варринче такшин лӑскама пикенче,—те нумай, те сахал ҫывӑрнӑ—ӑна-кӑна пӗлместӗп,—сиксе тӑрас пулчӗ.

— Йал- шуррисем ҫавӑрса илнӗ, халех пирӗнпе пӗрле нӳхрепе ата, Йакур пиччу каласа хӑварчӗ,—тет мана выртас умӗн апатлантарнӑ хӗрарӑм.

— Ӑҫта вӑл, Йакур ӑҫта кайрӗ?—хыпаланса ыйтап.

— Ата, ата часрах! Илтместним пӑшалпа переҫҫӗ!—тархасласа чӗнет мана хӑй инке.

Карташне чупса тухатпӑр.

Сывлӑшра пулемет сасси урапа хуппе шакканӑ пек илтӗнет.

— Нӳхрепе, нӳхрепе чӑм часрах!

— Йакур ӑҫта?

— Йакур хӑй лашипе шуррисене хирӗҫ тухнӑ,—шӑлӗсем чӗтреҫҫӗ мана сӗтӗрсе тухнӑ инкен..

Нӳхреп ҫурт хуҫин пӗтӗм ҫемйипе пӗрле тулнӑ Аслӑ кӗпер йенчен килекен шӑй-шаӑа итлесе ларатӑп. Кас-кас пирӗн ҫывӑхрах (лупас хыҫӗнче пулмала) ҫын лапӑстатса чупни илтӗнсе кайат.

Ҫурт хуҫи арӑмӗ час-час кӑкӑрӗ ҫине хӗрес хыват.

— Хӗрлисем ҫӗнтерччӗрех.

Ҫуталнӑ ҫӗре пӑшал сассисем сайраланчӗҫ, пулемет сасси те илтӗнми пулчӗ.

Хапхана шанлаттарма пикенчӗҫ. Ҫурт хуҫи арӑмӗ, пур-пӗрех тупаҫҫӗ пуљ тесе, нӳхрепрен тухса хапхине чӑрийех уҫса йачӗ. Кӑшкӑрса варҫакан хулӑн сас инкене хӑратса пӑрахрӗ.

— Ӑҫта кунта ес салтаксене пытарнӑ?

— Ай!—сухӑрчӗ инке,—нимле салтак та ҫук ман пӳртре, тупата туршан ҫук.

Саламатпа ҫурӑм тӑрӑх сӳни илтӗнет нӳхрепе. Инке тур йатне асӑнса вӗҫӗмсӗр сухӑрма пикенчӗ. Ӑна илтсе мана пытанса ларакан пӗчӗк хӗрӗ те йӗре пуҫларӗ.

— Нӳхрепре кам сан?

— Ачасем, хам ачасем.

Нӳхреп ҫине уҫсан, ҫийеле тухнине хам та сисмерӗм.

— Кӗлет айне кама пытартӑн? Халех кала!.. Ҫакӑнтах персе пӑрахап!—аллинчи револьвӗрӗпе инкене тӗллет урса кайнӑ салтак.

Ыттисем винтовкисене ик аллине тытса лупас айне тустарма тытӑнчӗҫ, кӗлет айне те темиҫе кӗрсе пӑхрӗҫ.

— Тӗпсакайне кама пытартӑн? Халех кала!.. Ҫакӑнтах персе пӑрахап!

— Никама та, никама та...

— Анне, анне!—кӑшкӑрат пӗчӗк хӗрӗ.

— Ывӑл ачуна вилнӗ салтаксене пытарма йар!—ман ҫине пӑхса ахӑрчӗ.

Епӗ урама тухрӑм.

Кашни хапха умӗнчех—салтак. Кашни карташӗнчех—такшине ҫухӑртаҫҫӗ. Манран инҫе те мар, тӗкме тытнӑ пахча ҫумӗнче суранланнӑ ҫын кӑшкӑрса выртат (пакунсӑр гимнаҫторкӑпа хӑй), пуҫӗ унӑн кӑкӑрӗ витӗр тухнӑ пулмала, ик аллипе те чӗрине йарса тытнӑ. Епӗ ун йенне йарса пуснӑ ҫӗре карташӗнчен сысна шӑрт сухаллӑ салтак тухрӗ.

— Хӗрлисем-и ес?!—вырӑсла ыйтат вӑл вилме патне ҫитнӗ ҫамрӑк салтакран.

— Вӗлер часрах...—тархасласа каларӗ суранли.

— Кайас пулман херлисем патне, заразӑ!—ахӑрат шуррисен салтакӗ,—ҫапла кирлӗ сана, сысна!

— Ҫӗҫӗ парӑр, — пусӑр мана... — каллех йӑнӑшни илтӗнчӗ. Ҫавӑнтах тепӗр май чул катӑкӗ ҫине ҫӗкленсе ӳкрӗ, урисене сиктерчӗ. Сасартӑк сылтӑм аллине кӑкӑрӗ ҫумӗнчен илсе чул катӑкне йарса тытрӗ,—хайӗн асапне текех тӑсасшӑн мар пулса, мӗн вӑйӗ ҫитнӗ таран чул чӑмӑрпа хӑй пуҫне хӑй кӳмкке пуҫларӗ.

Йал вӗҫӗнче, кӗпертен каҫсанах, шуррисен вилнӗ салтакӗсем выртаҫҫӗ, пире, вилнӗ салтаксене пӗр ҫӗре пухма тухнӑ йал ҫыннисене, вӗсем ҫывӑхне йамарӗҫ.

— Шуррисене пуппа масар ҫине пытараҫҫӗ, хӗрлисене пупсӑрах мур йамне кайса чиктереҫҫӗ, -хыпарлат манпа йунашар сӑртала утакан ҫамрӑк.

Ҫил-арман вӗҫӗнче винтовкипе тӑсӑлса ӳкнӗ салтака тӗл пулатпӑр. Епӗ ӑна палларам: ӗнер манпа сӑмахлаканни пулчӗ. Кӑкӑр ҫинчи кӑсйинчен вӑл кам иккенне пӗлтерекен документне пӑхрамар Унта: „Пӑвари гарнизонӑн Хӗрлӗ ҫар комиссарӗ“ тесе ҫырнӑ; хушамачӗ — Крепков.

— Пайан ҫапӑҫура хӗрлисем 28 вилнӗ, — терӗ шутласа пыракани

— Ҫирӗм сакӑр паттӑр, — ку сӑмаха пурте вӑрӑммӑн сывласа каларӗҫ.

— Шуррисен мӗн чул вилнӗ-ши, йун-ӗҫен...

— Йерипен, курмастӑна кам килнине, халех тыттарса йарат вӗт.

— Шуррисене хӑйсемех пуппа чаплӑ пытараҫҫӗ, — каллех илтӗнче манпа йунашар ҫӳрекен ҫамрӑкӑн сасси.

Епĕ кашни тăшман пуҫҫи парăнтарнă кашни хĕрлĕ салтак патне пырсах тĕрлĕ май ҫаврăнса пăхрăм, Йакур вилнисем хушшинче пуласран хăраса ҫӳрерĕм. Йакур ҫук. Ăйăр та курăнмаст. Тарса хăтăлнă пуҫ вăл. Хама-хам лăплантаратăп.

Кĕҫĕн-Патăрйел хресченĕсем хушшинче хыпар ҫӳрет. Нумайĕшĕ Тăрăнпа Шăнкăртам ҫине тăсса кăтартаҫҫĕ: „Тăрăн пуйанĕсемпе Шăнкăртам муллисем пулăшнă шуррисене. Кĕперсĕрех Тăрăн тĕлĕнче Пăла урлă каҫарнă та, пирĕн йала ҫаврăнса илме пулăшнă. Хăйсен ывăлĕсене те салтакла тумлантарса пăшал тыттарнă, тет",—вăрттăн, йерипен, шикленерех пĕлтереҫҫĕ кăна

Йухмари ҫапăҫу хыҫҫăн Чалтун Матви хуҫа патне, йепле тухса кайнă, ҫаплипех таврăнатăп: пĕр-пĕччен.

— Ăйăра та, Йакура та,—курмарăм, теп.

Пĕр-ик кунран шуррисем пирĕн йала, вăрман ҫывăхне куҫрĕҫ.

Йакур ҫук. Сат пахчинче Пракуҫпа иксĕмĕр кăштăртаттаратпăр. Салтаксем панулми ҫиме килеҫҫĕ. Чалтун тарават. Пурне те хăналат. Икĕ офицер ун патĕнчех туха та пĕлмеҫҫĕ, йаланах ӳсĕр. Вĕсем хуҫа ывăлне Тараса та, хăйсем пек чаплă ҫынна, офицере кăларчĕҫ. Чалтун пĕртен-пĕр ывăлĕ хĕрлисене хирĕҫ кĕрешме кайнине ырă сунса витери пăвăр хусахне йĕнерлерĕ. Тарас пекех хăйсеп лашисене утланса, офицер хурмипе арман вырăс ачисем те урампа иртсе ҫӳре пуҫларĕҫ. Каҫсеренех Чалтунăн урам йенне вунвиҫĕ кантăкла тухакан калай ҫивиттилĕ пӳртĕнчен аслă горницинче ĕҫкĕ ҫикĕ пулса иртет. Каҫсеренех унта чаплă салтаксем пыллă кĕрчеме сăхаҫҫĕ. Арман вырăсип аслă ывăлĕ хуҫа хĕрне ашшĕ-амăшĕ умĕнчех пилĕкĕнчен тытса пахчана сĕтĕрет.

Йакур ҫук.

Сат пахчинче Пракуҫпа иксĕмĕрех кăштăртататпăр.

Пайан—вунулт сулхи Харийаса ашкăннă офицер ваҫҫи вăрласа кайнă ир. Йакур пĕлĕт ҫинчен таталса аннă пек, ман ума тухса тăчĕ.

— Ăҫтан килсе?—аптăратап ăна,—асту, хуҫа куҫне ан курăн... Туй пулат пайан. Пиренпе карташлисен хĕрне, ҫула ҫитменскере вăрлавă.

— Сатра никам та ҫук-и?

— Пракуҫ кăна.

— Туйĕ пуҫланнă-и?

— Халĕ пурте арман вырăс патĕнче, хĕр йĕртеҫҫĕ. час кунта килмеле, пуҫланат туйĕ,—хăвăрттăн пĕлтерен.

— Салтаксем нумай-и?

Икҫĕр ҫын пулат, тăваттăмĕш сулхисене салтака илеҫҫĕ вĕсем, ĕнер пухура пĕлтернĕ, мобилизаци пуҫланмала, тет.

Йакур каллех хăва ăшне пытанчĕ. Епĕ вăл хушнă тăрăх хамар хыҫри кимĕсене пĕр ҫĕререх пухса хутăм.

Туй хăвисем урамра шавлама пуҫларĕҫ, пĕччен ех, пĕр харăс Пăла йенне чи тараннисене суйласа тăватă кимĕ каҫартам.

Çывран çӳлĕ хăмăшсем çилсĕрех тайкаланаççĕ. Ман пата хресчен тумлĕ, картуссăр çын упаленсе тухрĕ. Вăл: Йухма кĕперĕ çинчен мана штаба йертсе кайнă салтак.

Йакур ăçтине каласа парап.

Тепĕр çарамас салтак (алтуни таран кĕпе тăхăнса йанă хай) винтовкăсем сĕтĕрсе тухрĕ. Патвар хăмăш ăшĕнче тата та çынсем пуррине туйрăм еп.

Пĕр кимме хăмăш ăшнех кĕртсе кӳртсе, винтовкăсемпе çарамасланса йулакансен кĕпе-йĕмĕсене тийерĕмĕр те, йерипен хресчен тумлипе Йакур патне каçрăмăр. Пирĕн хыçран шыва чăмакансем те пур пĕр сасăсăр çыран патне çитсе пуçĕсене кăтартрĕç, унтан хăва ăшне тухса хăвăрттăн тумланчĕç, леш йенне хăварнă виçĕ кимĕпе çирĕм çынна йахăн умлă хыçлăн, пулă тытакансем пек, сереке аврисем тытса каçрĕç. Пурте хресчен тумĕпе, сăхман айне гранатсем çакнă.

Епĕ разведка кайрăм.

Хушăра викам та çук.

Карташне чупап Пракуç—туй ачи мĕн, ӳсĕр салтаксемпе сăра кӳпет. Нумайĕшĕ трантассем çинче, ыырăсла вăрçса выртаççĕ. Пӳртрисем те ташлама чарăнса: „Хĕве хупас“, тесе çеç кашкăраççĕ. Сĕтел хушшинче каччипе йунашар ларакан Харийас пĕркенчĕкне сирсе ман çине пăхса илчĕ—тытăннă сассипе ман йата асăнса, „хĕр йĕрри“ йурласшăн пулчĕ.

. . . . . . . . . . .

Хăмăр касра Кируш пур,
Епĕ савни Кируш пур...

Анчах пĕтереймерĕ, ĕсĕклесе йĕрсе йачĕ. Çывăхра сăвăласа ларакан икĕ хĕрарăм Харийас патне пырса пĕркенчĕке сирсе илчĕç те, тухйи ырăнне хушпу тăхăнтартрĕç.

Пирĕн йысна О—нтонăн
Хĕртен арăм тумала

Алăк патĕнче ларакансем савăнса сике пуçласан, епĕ кайала тухса Пăла хĕррине вĕçеп.

— Хĕве хупаççĕ,—сывлайми пулнă кам,—ӳсĕр пурте.

Пурсăмăр та çаран хӳттипе лупас хыçĕнчи хăмла ăшне куçатпăр.

Мана йулашки хут лашасене тăварса пăрахма (çиме парас сăлтавпа), хапхана питĕрсе хума кӳртсе йачĕç.

Кĕлет алăкĕ уçă.

Унта—вунулг çулхи хĕре, Харийаса арăм тума „хĕве хупаççĕ“.

Туй çыннисемпе пĕрле кĕлет урати çине хăпарса тăтăм. Харийаса хушпу тăхăнтаракан икĕ хĕрарăм текех армăçлаççĕ. Каччин атти ăшне ала пуслăх кĕмĕл укçа чиксе хучĕç. Харийасăн хывмала иккен пулас упăшкин аттине. Ик аллипе туртат-туртат—атти тухмаст. Мĕн пур вăйне хучĕ пулас Харийас—пӳлме арки çине ларнă кутамасăн урине меллĕрех тытса хытах туртрĕ. Атă ăшĕнчи ала пуслăх тенкĕ шăнкăртатса ӳкрĕ те, урай тавра сиксе ташласа çаврăннă май, хăма хушшинчен кĕлет айне анса кайрĕ. Армăçлакан икĕ хĕрарăмăн (йала тăрах)

вӑл укҫа хӑш май ӳкнине пӗлмелех: ӑмӑрт-кайӑкӗ ҫӳлеле ӳксен—мӑшӑрланакансем хут те хӑҫан та телейлӗ пулаҫҫӗ, тепӗр-май ӳксен—ӗмӗр-ӗмӗрех телейсӗр пулаҫҫӗ.

— Урай хӑмине илсе пӑхас.

Епӗ хапхана ҫеҫ питӗрме ӗлкӗртӗм. Лашасене тӑвармасӑрах хӑмла ӑшӗнче кӗтекенсем патне тухап.

Йакур виҫӗ хутчен винтовкипе ҫӳлеле персе йачӗ.

Ун хыҫҫӑн йулташӗсем Чалтун карташне тӗрӗслеме пикенчӗҫ.

Шыв арман йенче пулемет ӗҫле пуҫларӗ.

— Пирӗннисем тытӑнчӗҫ,—тет Йакур.

Карташӗнче кӑткӑрашу, тустару тапранчӗ, туй хӑнисем ниҫта кайса кӗреймеҫҫӗ. Хӳме витӗр хуҫа хапха патне чупса тухнине курап: уҫрӗ. Аллине пуљӑ лекрӗ мӗн, сулкаласа вӑкӑр пек кӑшкӑрса крыљца айне пытанчӗ.

— Кӗлет алӑкӗ те уҫах Кутамас каччӑ пусӑ умӗнче ҫӑварне карса выртат: авлантарнӑ.

Чалтун карташӗнче шуррисен мӗн пур пуҫлӑхӗсем пулнӑ. Вӗсене тыткӑна илсен, постри салтакӗсем штабран приказ кӗтсех ӗнтӗркенӗ, йе тарма пикеннӗ. Шыв арман патӗнчи пулемет шур бандитсене хут хӑш йенне тарсан та, аптраман — „ӑрмӑҫлавнӑ“..

— Харийас туйӗ Харийаса ҫеҫ качча кайасран хӑтарчӗ,— кулса каларӑм еп ӑна кӗлетрен пахчана йертсе тухсан.

Хушпуне пӳлмене ыватса хӑвартӑмӑр.

— Йепле киле кайса кӗрес ӗнтӗ?—терӗ вал, Пӑла хӗррине аиса питне ҫусан,—пӗреххутне... Пӑшал пени мана тивменшӗн савӑнмала, е, Кируш?.

— Ес кӗлетре пулнине епӗ те, Йакур та, ыттисем те пӗлнӗ ҫав. Сана мӗншӗн пемсле пирӗн?—Харийаса уҫӑлтарасшӑн тӑрӑшап хам.

— Ӑҫта вӑл Йакур?

— Штабра.

— Курасчӗ ҫке ӑна, мана хӑтарнӑшӑн тав тӑвасчӗ.

— Епӗ те хӑтартӑм сана,—мыхала, йӗркипе наступлени мӗнле пулни ҫинчен каласа парап.

Ик-виҫ панулми татса хушша кӗрсе лартӑмӑр. Питне ҫунӑ хыҫҫӑн Харийас сӑнӗ кӑшт улшӑнчӗ, куҫҫулне пиҫнӗ пичӗ те шуралчӗ.

— Есӗ те хӑтартӑн и мана?—пуҫласа шура шӑлӗсене кӑтартрӗ вӑл, тутисем те ҫӳхелчӗҫ.

— Епӗ те,—тетӗп,—никама та качча ан кай, ҫитӗнсен хам илӗп сана, тата пӑртак ҫеҫ ӳсмеле, кӑҫал Пукравра вунтӑватта кайап. Еп ҫитӗннӗ ҫӗре шуррисем те пӗтеҫҫӗ, вӑрҫӑ та чарӑнат.

Харийас мана ыталаса, темшӗн пӗр сас кӑлармасӑр йӗрсе йачӗ.

# ИККЁМЁШ СЫПĂК.

## XIV.

Ура сыппи таран ыраш анисем тăрăх тават уран упаленсе имшер те, сайра, ĕнне тырă пеккине тымарпа çăлса туксан, мĕн пухăннине карташве турттарса, шăналăк çинче шĕкĕлчеме тытăнчĕç Карачăм кўршисем. Унăн ку таранччен пурăнмалăх çăнăх пулнă та—çĕнниве çапман. Пĕлтĕрхи ыраш, сĕлĕ, пăри, хуратулă та Карачăмăн тăвагă йат çĕрĕнченĕх анкартине кўртсе пĕтерейми пулнăччĕ. Кăçалхи—çу каçиччен çăмăр пĕрчи ўксе курманвипе—вите маччи çинех вырнаçрĕ. Кун каçиччен виççĕн çулни те (кăçалхи ыраша вырма çук, çурлана кĕмест) урапа çине тийесен, лаша купарчи çўлли çеç пулса пычĕ. Иртнĕ çулсенче тăватшар ритван мăнтăр кĕлтесем, пĕкĕрен çўлĕ кĕлте паракан хура çĕрпе витĕннĕ çурпилĕк кăçал кутăнланчĕ. Кĕлтисем, тымарпа çăлнă пулсан та, кĕске, шўреке, савăл вĕçлĕ, ритван патакки хушшинчен те тухса ўкеççĕ. Карачăм, пучах ăшне сăвăс пек кĕрсе ларнă вĕтĕ пĕрчĕсене ывăç тупан çине тĕшĕкле-тĕшĕклех, çемйипе пĕрле ерне хушши уй тăрăх упаленчĕ Чĕлĕм тивертсе канма лармассеренех арăмĕпе Кирущ ывăлĕ çине пăхса даларĕ:

— Кăçалхи тырăшăн çурла туптави те ахалех пулчĕ.

Иртнĕ çулсенче вăл вырма тухман—профшкул тимрĕçĕнче ĕçленĕ. Кăçал, çук тырра çына тытса выртарма май килменнипе, хăйех, йури отпуск илсе вырма тухрĕ.

— Вăрлăхне çеç тавăрат пуљ, тетĕп те еп, кăçалхи тырă,— иккĕленчĕ Карачăм.

Арăмăпе ывăлĕ çăвар уçмарĕç.

— Пĕр çурпилĕке акма виçĕ пăт кайнă, тăвагă çурпилĕк иккен. Кашнийĕ виçшер пăт парсан—вуникĕ пăт... Çăнах шўрпи тукаласа пурăнăпăр çав, мĕн тăвас тен... Пурăнас пулат, пăрăс каштинчен çакăнаймăн. Анчах ку вуникĕ пăтпа тăвагă пыр тăрантса пурăнмалаçке-ха? Çĕнĕ тырăччен çăнăх шўрпипе çеç çисен те, вăтăр çичĕ пăта йахăн кирлĕ пулат. Пирĕн мĕн пурĕ вуникĕ пăт. Лаша пур ĕнтĕ. Икĕ сурăх. Пĕр така. Ĕнене, икĕ сурăха, такана пуссан, лаша сутсан...

— Сурăхсене хаљ пуссан вĕсен ашĕ йыт виллипе пĕрех пуљ,—упăшкине пўлчĕ Кируш амăшĕ.—Хирте пĕр курăк çук иккен те, тусан çинче çўресе мĕн пултăр вĕсен?

— Лашана та, хаљ сутсан, никам виçĕ пăт памĕ,—хутшăнчĕ Кируш.

— Çапах та ыран çапса пăхар çĕн тырра. Çапас.

— Ĕнер йулашки çăнăхпа кăвас хутăм, салмалăх та йулмарĕ. Кăçалхи тырă тухăçĕ пирки Карачăм çемйи йăнăшрĕ: чи аван çурпилĕкне çапсан та, вĕсен, вăтăр çичĕ кĕренке, шăшисем шĕкĕлчесе çĕртнĕ пек, вĕтĕ ыраш тухрĕ.

— Текех кăвас хурса çăкăр пĕçерессн пулмаст,—йăвăррăн сывласа илчĕ амăшĕ.

Карачăм çемйи шухăша кайрĕ. Арăмĕ, ывăлĕ, пĕчĕк хĕрĕ—пурте çăварне шыв сыпнăн хытса ларчĕç.

Чӗнмесӗр ларакан пӳрте Хӑритун арӑмӗ пырса кӗчӗ..

— Илтни есӗр, йе илтмен те-и?

— Мӗн тата?—шартах сикрӗ Кируш амӑшӗ.

— Ылттӑнту ҫырминче ҫимели тӑм тухнӑ, тет. Пурте лаша кӳлсе тӗрӗлтеттереҫҫӗ, еп те сирӗнпе йерсе пырас тетӗп, кайатӑр пулсан...

— Кайас, каймасӑр, ей, турӑ, мӑнтарӑн турри, хӗрхенчӗ пулат,—кӗлтума тапратрӗ Карачӑм арӑмӗ.—Выҫӑ вӗлерессӗн мар курӑнат.

— Кайса пӑхас еппин, ҫынсем кайаҫҫӗ тӗк,—килӗшрӗ Карачӑм.

Кируш, ашшӗ сӑмахне илтсенех, карташне лаша кӳлме чупса тухрӗ.

Пушар тухнӑ чухнехи хӑвӑртӑлхпа икӗ килрен икӗ лав, шӑвалӑксем, михӗсем, витресем тийенӗ лав, Ылттӑнту ҫулӗ ҫине тухрӗҫ. Малтанхин тилхепи Кирушра, унпа йунашар ашшӗ ларнӑ. Хыҫалти лав ҫинче—Хӑритун арӑмӗ, нимӗҫ вӑрҫинче упӑшкасӑр та, аслӑ хӗрӗсӗр—Харийассӑр та тӑрса йулнӑ арӑм. Ҫимели тӑм тийеме хӑйпе пуранакан пӗртен-пӗр пӗчӗк хӗрне ларгса тухнӑ.

Ылттӑнту патне ҫитсен, Карачӑм ишӗлекен ҫыран ҫине тӑсса кӑтартрӗ.

— Кунта ҫиме йурӑхли мар, кӑмака тума йурӑхлӑ тӑм та тупас ҫук, куратра—хуп-хура та, кӑн-кӑвак, ниме йурӑхсӑр тӑм ҫеҫ выртат.

— Леререх, леререх каймала,—кӑшкӑрат Хӑритун арӑмӗ.

— Чӑн та, ха!—пушӑ аврипе малала тӗллерӗ Кируш.—Мӗн чул ҫын пухӑннӑ унта..

Ылттӑнту текен ырӑна темиҫе май чӗрсе пӗтервӗ пӗчӗк ҫырмасенчен пӗринче чӑнахах та, сап-сарӑ тӑм сарӑлса выртат.

Кӗреҫе сухал Йӑкӑнат калана тӑрӑх, вумаҥ пулмаст кунта та кач-кӑвак ҫӗре кӑначчӗ—ҫак ернере саралса, ҫиме йурӑхла тӑм пулса тӑна.

— Туррӑнне ӑҫтан пӗлес тетӗн,—сӑхсӑхса илчӗ Хӑритун арӑмӗ,—тен, вӑл ҫӑмӑр памасӑр тарӑхтарнӑ етемсене хӗрхенчӗ пуҙ те, ытла та хӑйне мӑшкӑлакансене турӑ пуррипе ҫуккине асӑвтарчӗ пуҙ те, вара, тен, пӗр минут хушшинчех ҫак ҫырмана ҫӑкӑр туса хучӗ.

Маларах пынисем сар тӑма лашисем пӗкӗленсе мӗкӗрленичченех тийесе уттарчӗҫ. Вӗсем ӑсансан, Кирушпа ашшӗ, Хӑритун арӑме лавӗсене тӑратмашкӑн меллӗрех вырӑнсем тупрӗҫ.

Тимӗр кӗреҫепе ӑсса пӑтавкана тултарнӑ май, Кируш тӑм муклашкине пӗр-иккӗ кавлесен кайала сурса кӑларчӗ.

— Ес мӗн чӗрӗлех ҫийесшӗн-им?—такшин кашкӑрчӗ хыҫалтан.

— Ӑна пӗҫерсе, ҫӑнӑхпа варса, пашалу туса ҫийес пулат,—вӗрентрӗ тепри.

Тийесе таврӑнсан Кируш амӑшӗ йури кӑмака хутса сар тӑма пӗҫерсе, ҫӑнӑхпа варса пашалу туса пачӗ.

Шӑп апата тытӑнсан кӗреҫе сухал Йӑкӑнат кантӑкран пырса шакаррӗ.

— Килте-и? Молебĕна тух .. Ылттăнту çырминчи çăлра иккун тупнă, çара ылттăн иккун.

— Ай, васпати!—шартах сикрĕ Кируш амăшĕ.—Пĕлĕт çинчен аннă-ши вăл йе çăлранах тухнă-ши?

— Турра кĕлтăвиччен малтан пашалуна çисе пăх-ха,—тĕртрĕ Карачăм.

— Çур пашалу çăтрăм, тек вилсен те çисе пулмаст,—сĕтел хушшинчен тухса кутник çине кайса ларчĕ Кируш.

Арăмĕ молебĕна тухса кайсан Карачăм ерне ытла пулман маçтерскойне ăсанчĕ.

— Тырă парса тăраççĕ пулсан—ĕçлĕп, памаççĕ пулсан—урăхла çаврăнса пăхас пулĕ,—çул тăрăх шухăшласа пычĕ вăл.

Маçтерской кантурне ытти тимрĕçсем, çлесăрсем, стољарсем те пухăннă—мĕн пурĕ вуникĕ çын. Малашне ĕçлесси çинчен сăмахлаççĕ.

— Ку ернере пĕр заказ пулмарĕ,—каласа кăтартат пуçлăх.— Хьм та пĕлместĕп, тем тумала, пайок та памаççĕ.

— Пайок пулмаст-тăк епĕр урăх çĕреле, тырă пулнă çĕреле кайма шут тытрăмăр,—хыпарларĕ Карачăмпа пĕрле ĕçлекен тимрĕç.

— Çиме тупса памасан пулмаст ĕçлесе,—пуçне пăркаларĕ шур саппунлă стољар.

— Калаçса татăласах пулат, кирлĕ пулсан уйеза кайса килес пулĕ.

— Кайас пулат, пĕлес пулат,—харăсах ик-виç сас Карачăм хутне кĕчĕç.

— Уйезран ĕнер çеç килтĕм, ыран кайас тесен, мансăр та кайма пултаратăр.

— Пурпĕрех кайас пулат,—салхулă пуçлах йăлăнтарниччен харамарĕç.

— Кама йаратпăр?

— Карачăма йарас.

— Иккĕн кайас унта.

Вуникĕ çынлă канашлу Карачăмпа шур саппунлă стољара уйеза каймашкăн делегата суйларĕç.

— Мĕнле пулсан та, пайок парса тăмала туса килĕр.

— Кирлĕ пулсан, тухăр та, Шупашкарах та çитĕр. Прахутпа çул укçи хаклах ўкмĕ.

— Маçтерскойа ан хуптарăр

— Ĕç пулат тейĕр,—çапла пехиллесе маçтерскойра ĕçлекенсем хайсен делегацине уĕçтăвкома ăсатрĕç.

Кируш çынран йуласшăн пулмарĕ. Тăм пашалу çинĕ хыççăн виçĕ кун тула тухайми мĕкĕрленнипе бољницăна çитсе хвершăлсене асаплантарсан, ăш-чикĕ иратвине те пăхмарĕ, кўршĕаршисемпе çăка кăчăки пухма вăрмана кайрĕ.

Амăшĕ, тăм пашалăва пуринчен нумай çинĕ айван пĕчĕк хĕрĕ ăшпа аптранипе нисрта пăранаймарĕ. Кашни вунă-вуниллĕк минут хушшинченех шурса кайнă хĕрне карта хыçне çавăтса кайат, çиме йурăхлă тăм тупакана ылханат, турă йатне те сахалтарах асăнат. Ылттăнту çырминче çара ылттăн иккун

тупнине те ĕненсех пĕтермест. Кун каçиччен вăрманта çÿренĕ ывăлĕ пĕр хутаç çăка кăчăки тултарса килсен, пĕр сăмах хушмасăр кăмакине хутса йачĕ.

— Анне, ес мĕн?.. Çиленнĕ им?

— Çук, çиленмен, ывăлăм, çук пурнăçшăн кама çиленес м. н.

— Лайăхрах типĕт, анне, çак кăчăка. Лайăх типĕтсе вятсан, пăрçа çăвăх пек пулат, тет.

Амăшĕ чĕпмерĕ.

— Кăчăкă вăл мĕн каласан та тăм мар, тăм вăл çигмĕл хут çĕрсе, ситмĕл хут пăтраннă етем шăмминчен пулат, тет. Тăмр унта пĕр чĕрĕ йапала та çук. Кăчăкă апла мар, кăчăка чĕрĕ, ÿсен-тăран йăвăçра пулат. Хăнăхиччен йăвăр, тет, ăна çиме, пĕр хăнăхсан — пăрçа çăвăххи — пăрçа çăнăх, тет.

Кируш каланине амăшĕ ырламарĕ те, хурласа та пĕр сăмах хывмарĕ.

— Атте таврăннă çĕре пĕр михĕ кăчăкă çăнăх хатĕрлес-хе... Ыран мăйава кайап, мăйан та, типĕтсе кисеппе тÿсен, кантăр вăрра чусти пекех, тет. Ак хайхи, такки хĕл каçăпăр, такки вилмĕпĕр, е, анне?

— Аçу мĕн хыпар илсе килĕ?.. Аçăна тырă парса тăмала тусан, пурăнăпăр та çав.

Карачăм, килĕнчи çемйи пысăк ĕмĕтпе ăна кĕтсе тăнă чух, уĕçтăвком çуртĕнче пĕр пысăк пÿлĕмре канашлура ларнă.

Кун-йĕркинче — уйезри пĕртен-пĕр çăвавоа кăтартулă маçтерской ыйтăвĕ тăнă. Халăх хуçалăхпай пуçлăхĕ, Карачăм каласа кăтартнă хыççăн, маçтерскойа хупмала мар, ĕç тупанат, больницăсем çеç парса тăракан заказ та вуник çыншăн çителĕклĕ пулат, терĕ. Ку шухăшпа канашлури ытти етемсем те килĕшсе пычĕç. Уйезри продкомăн мĕн пур пек запасĕнчен вуникĕ çын валъьи пайок парса тăмали çинчен сăмах тапратсан, авторитетлă йулташ сиксе тăчĕ. Вăл авторитетлине Карачăм, сăмах ыйтнă май, канашлу председателĕ чĕтресе ÿкнинченех сисрĕ. „Ку мĕн калат—çавăн пек пулат"—шухăшларĕ ăшĕнче.

Авторитетлă йулташ кунчул пулса митинг-пухусенче пĕрре çеç тухса калаçман-тăр çав—тÿрех револьуци çинчен тапратрĕ.

— Револьуци вăл, йулташсем, — сăмахне каламассеренех пуçне пĕр йенчен тепĕр йенне пăрса, сĕтел йĕри-тавра ларса тухнă канашлуçăсене тĕллет докладçă.

— Вуник çын ĕçлекен маçтерской çеç мар. Автономилĕ Чăваш облăçĕ кăва та мар вăл револьуци. Револьуци вăл пĕтĕм Раççей. Халĕ Совет правителстви мĕн пур вăйĕ çитнĕ таран пысăк хапрăк-савăтсенче ĕçлекенсене пулăшат. Вĕсене пулăшмасан, револьуци пĕтет, хупланат. Револьуци ан пĕттĕр тесен, Чăваш автономин хăйĕн тĕ мĕн пур пек пурлăхне темиçе пин çын ĕçлекен хапрăк-савăтсене йарас пулат. Еп хам пултам Шупашкарта, Мускава та çитрĕм. Пирĕн уйеза виçта та пĕр кĕренке памаççĕ. Шупашкар пулăшма пултараймаст. Мускав пулăшмаçтех. Паçăрах каларăм, хаклă йулташсем, вырас... Совет правителствин халĕ рабочи класа çăлмала. Чăваш автономи выçă ларнăшăн хăрамали çук. Чăваш автономи вилсе

пĕтсен те, революци йулат...—Докладчик вырăсла калат пулсан та. Карачăм лайăхах тăвларĕ, президиум председателне хирĕç пăхса ларнă çĕртех макăрса йачĕ. Виçĕ çул çарта пурăннă, çапах макăрвине астумаст-- кунта пултараймарĕ, чĕрине хирсе, тертпе шăпăртатрĕç вĕри куççулĕсем. — Вăт çапла, йулташсем. Таçти вулăсри вуник çып ĕçлекен тимрĕç лаççине пулăшасси çинчен калаçмали те çук. Еп хам, — сассине хулăмлатрĕ докладчик,—еп хам упродком уполномочĕннăй пулса Чаплă вырăс революцин Чăваш автономинчен хаклăрах йапаласем пур. Чаплă вырăс революцин революцийех çăлас пулат... Чаплă вы...

— Замолчать, товарищ Свиревский!..—сĕтеле чĕтретрĕ Карачăм çумĕнче ларакан хĕрлĕ салтак.—Еп хам фронтра пулнă. Хусантан чехсене хуса кăларнă чухне Чăваш гарнизонĕпе кайнă. Манпа — вырăс хресченĕпе йуншар чăваш ачисем, ирçе хресченĕсем, тутар партизанĕсем çапăçнă. А есĕ пур—.чаплă вырăс" интеллигенчĕ, контрреволюци тăван!..

— Пастай, пастай, интеллигенци контрреволюци пулмаст, чухларах калаç, хаклă йулташăм,—хевти пĕтнĕ лашала пашкарĕ авторитеглă Свиревский.

— Йулташсем, — ура çине тăчĕ канашлу председателĕ.— Кунта епĕр халĕ интеллигенци ыйтуне те, наци ыйтуне те тивмĕпĕр, интеллигентсем епĕр уеçтăвкома суйласа лартнăранпа çеç пулвă. Чăвашсене вĕлерсе пĕтермели çинчен те калаçмастпăр, мĕншĕн тесен вырăссем кунта мĕн пурĕ те иккĕн çеç; постановлени йышăнма тытăнсан, пурпĕрех чăвашем çĕнтерĕç. Тавлашмăпăр ку ĕçпе. Маçтерской ыйтуне уеçтăвком президиумне парас, кунта сĕтсе-йавнă материалсемпе пĕрле..

Свиревскийе хирĕç тавлашнă хĕрлĕ салтак канашлу хыççăн Карачăмпа столъара хулĕнчен тытсах вăрăм коридоран тепĕр вĕçĕнчи алăк патне çавăтса кайрĕ.

## РК(б)П УКОМĔН
### ответлă çекретарĕ

Карачăм алăк çине çырниве вуласа, кĕнĕ-кĕменех сĕтел хушшинче Йатман Йакурĕ ларнине курчĕ

— Мĕн çăмăлпа çӳретĕр?

— Çăмăлĕ масарĕ, маçтерскойа хупасшăн мар та... Ес кунта ĕçлев иккен, епĕр сана Шупашкарта тесе пĕлнĕ-ха.

— Кунта .. Тата мĕн хыпар илсе килтĕр?

— Мĕнле калас оана .. Выçлăх... Çиме çук.

— Ыраш вăрлăхне те тавăрмарĕ, çуртырри шăтнă-çемĕнех типсе кайрĕ. Пахчара ĕлкĕрмен улма кĕлленет, — хушса хучĕ столъар,—çăмăр çук.

Кĕске калаçу хыççăнах Йатман ăнланчĕ: упродком пулăшмасан маçтерской, уеçри пĕртен-пĕр „предприйати" хупăнат.

Делегатсем уеçтăвком председателĕ патне кайрĕç. Йатман та весем хыççăнах пыма пулчĕ.

Карачăмпа стољара йертсе килнĕ хĕрлĕ салтак, пӳлĕме çекретарпе иккĕш çеç йулсан, гимнасторки кăсйинчен çырса тултарнă хут листисем туртса кăларчĕ.

— Куратна, пирĕн уйезра мĕн пуррине?.. Ним те çук вĕт. Ку икĕ тимрĕç килви - мĕн вăл, унта мĕн пурĕ вуникĕ çын Есĕ темиçе çĕр пин хресченсене, çĕрĕçле çеç пурăнакан хресченсене ил, вĕсем мĕн çисе пурăнĕç?

— Вара?—пуçне çĕклерĕ Йатман.

— Епĕ пулăшу ыйтасшăн. Тырă пулнă кĕпĕрнесем пулăшĕç ĕнтĕ, вĕсем пулăшви кирлех, анчах епĕ йут патшалăхри ĕçхалăхне те пулăштарасшăн. Çавăнпа ак пайан ирпе йури ларса çыртăм. Вуласи?

— Вула.

— Пĕтĕм Йевропăри тата Америкăри пролетариата... Чăваш ĕçхалăхĕнчен... Чĕнӳ...

Йатман вĕçне çитиччен ех итлесе ларчĕ. Чĕнĕве ун шучĕпе йапăх çырман. Çапах та уĕçтăвком йачĕпе халех телеграф агĕнствине кайса пама сĕнеймест, темĕскер сиксе йулнăн йе вырнаçулах мар пек туйăнат. Вулакансем тулти пулăшусăр револјуци пĕтет, тесе ăнланмала пуласран шухăшласа тăчĕ.

— Ну, мĕнле?—ыйтрĕ хĕрлĕ салтак—Еп куна латышла, полјакла, нимĕçле, французла, акăлчанла куçарса, хамăрăн йут патшалăхри йулташсем патне йамала тавасшăн.

— Кун пек ĕçре тĕплĕрех сӳтсе-йавни кирлĕ. Пайанлăха хăвар-ха, уĕçтăвкома ата, унта пире кĕтеççĕ пуљ,- хыпаланчĕ Йатман.

...Карачăмпа стољар уйезран хăйсен йалĕнчи маçтерской валљи пилĕк пăт ыраш çăнăхĕ илсе таврăнчĕç. Çиййĕнчех, ĕçлекенсене тата вуннăшне пухса маçтерскойа хупма хушманнине, ĕçшĕн тырран илсе пыма йураниве каласа кăтартрĕç. Уйез пулăшса тăрасси паллă маррипе малашне сăмахлакансем пулмарĕç, пăрахса кайас текен те—маçтерской пуçлăхĕ кăна Вара пилĕк пăт çăнăха вуникĕ пайа уйăрчĕç.

Килĕнче Карачăм çемйи. хăй уйезра пулнă чух, хирти мĕн пур йурăхсăр, выљах çимен майан-курăка астивсе пăхнă. Пĕри те етем ăш-чикне йурăхлă пулман. Арăмĕ—чĕрепе, ывăлĕ—пуçпа, хĕрĕ—ăшпа аптранă.

— Çынсем Çĕпĕре кайаççĕ,- йăнăшат арăмĕ.

— Пирĕн те Иваңук пичче патне, Грознăйа каймала мар-и?—сĕнет Кируш.

— Атте, анне çăкăр пĕçермест,—ӳпкелет пĕчĕк хĕрĕ.

Çĕпĕре кайăпăр та вĕт, унта кам кĕтсе тăрат пуљ-ха пире? Иваңук пиччу те нефтă кăларнă çĕре тин кĕнĕ-ха ĕçлеме, ĕç тупма пит йăвăр тесе çырнăччĕ...

— Мĕнле пурăнăпăр вара кунта? - çитĕннĕ çынлах калат Кируш.—Халĕ майан, тăм, йĕкел, çăка кăчăки çисе нăхкаларăмăр та, анчах ку пуçламĕш кăна вĕт ха Хĕлле мĕн курăпăр-ши? Çичĕçĕр алă килтен йала таватçĕр çеç тăрса йулчĕç. Нумайĕшĕ мĕн пур пурлăхне салатса, нихăçан таврăнас мар шухăшпа тухса кайрĕç. Теприсем чĕрĕ чунсăр тăрса йулакан пушă пӳрт

кантăкĕсеве хупса сывă пулсан, кайала килес ĕмĕтпе сывпуллашрĕç йалпа. Хăритун арăмĕ те, ик çултан-и, виç çултан-и— пурпĕрех тăван йала таврăнатăп вилме те пулсан таврăнатăп, тесе кайрĕ. Кантăкне вăл та хупса пăталарĕ. Харийасне асăнса, тахшин ваъъи вăрланă чухнехи пек тепĕр хут халтан кайиччен макăрчĕ те, кĕçĕн хĕрне лартса станцăна кайрĕ.

— Йалта йулсан пурпĕрех выçă вилетĕп. Чипер йулăр, йалйышăмсем!—урам тăрăх кăшкăрса пычĕ вăл.

Хăритунăн çурчĕ пушанниое кантăр вăрри тĕслĕ кушакки çеç килĕшмерĕ: хуçи пăрахса тарсан та, крыъци çинех ларса йулчĕ.

Кируш ашшĕ, куллен-кунах мастерскойа ĕçлеме çӳрет пулсан та, унта пайок парса тăрасси кĕркуннерен пуçласа раштава çитиччен те паллă пулманнипе, йала пăрахса кайас пирки тепĕр хут пуçне çавăрма пуçларĕ. Шăлах тата ун аллине хаçачĕ те ырă хыпарли лекрĕ „Ĕ ç ĕ к а й м а л а", тенĕ пĕчĕк пĕлтерӳ Карачăма çĕклентерсех йачĕ.

Ĕç комиссариачĕ пана тăрăх Чăваш облăçĕнчен нефтă кăларакан çĕре-Грознăй хулине 1418 çын каймала.

Çак шутран 10% килĕышепех кайма пултараççĕ Ĕçленĕшĕн уйăхне 480 000 тенкĕрен 1 300 000 тенке çитиччен тӳлеççе; 70 кĕренке çăнăх, 20 кĕренке аш, 10 кĕр. керпе, 40 кĕр. апата йамали çимĕççем, 2 1/2 кĕр. сахăр пареççĕ. Ĕçе кайакансем тахç ячĕенех, йаланах ĕçлеме пултараççĕ.

Мастерскойран таврăнна-таврăнманах Карачăм хăйĕн çемйине ăшă хыпар пĕлтерчĕ.

— Сывлăх пулсан, вилместпĕр

Арăмĕ ăна, ĕçрен таврăннăскере, апатлантарасшăн пулса, камакинчен улма шӳрпи чугунне туртса кăларчĕ, çăпала йевĕр пысăк кашăксем хатĕрлесе сĕтелли çине пырса хучĕ. Чугунри апатне тăм тирĕк çине антарса çиме тытăнмала чух, Карачăм тăруках сĕтел хушшинчен сиксе тăчĕ те, кислотапа тĕрĕленнĕ хулăн пиншакне хыпаланса тăхăнма пикенчĕ

— Ăçта кайан тата апат çимесĕрех?—йăвашшăн ыйтрĕ арăмĕ.

Кашăк тытса улма шӳрпине лĕрккеме ввăрланса ларнă Кирушпа йăмăкĕ те ашшĕ çине тĕлĕнсе пăхрĕç.

— Есĕр, çийĕр, епĕ совета кайса килем-ха. Май килсен, пурсăмăр та, ăшша хирĕç кăнтăр йенне ăсанăпăр. Хам слесар пулăп, Кируша механике вĕрентĕп,—çак сăмахсемпе Карачам йĕпенсе саралнă пӳрт алăкне тулала тапрĕ.

Шăнса пăрланнă кантăк витĕр Кируш ашшĕ мĕлки карташĕвчен тухса кайнине курса йулчĕ.

— Ăçтарах ĕнтĕ вăл нефтă кăларакан вырăн?—Кирушран ыйтат амăшĕ—Миçе çĕр çухрăм пулĕ кунтан?

Тирĕкри улма шӳрпине хăй хырăмне куçарма пикеннĕ Кируш çăварĕнчен вĕри сывлăш кăларса, амăшĕн куçне тĕллерĕ.

— Миçе çĕр, тетĕн есĕ, миçе пин, тесе ыйт. Грознăй хули вăл Кавказрах вĕт. Пысăк тинĕс хĕрринче. Унта пулăсем пирĕн

пўрт пысăкĕш пулаççĕ. Атте кайсан, епĕ те йулмастăп. Атте çлесăр пулат, епĕ механике вĕренеп.

— Есĕр пăрахса кайсан, епĕр йепле пурнăпăр-ши?.. Хайхи тинех Мелис Серафимĕ пек хытас пулĕ.

— Çук,—пуçнс суллат Кируш.—Епĕр аттепе иккĕн кайас пулсан, сирĕн пата кашни ернерех посылкă йарса тăратпăр.

Мелис Серафимĕ—йалти, выçăпа вилекенсенчен „леш тĕнчене“ чи малтан ăсатăннă старик, вăл кўршĕ касри кĕрўшĕ патне кайнă чух тин çунă çемçе йур çине тăсăлса ўксе вилнĕ. Ăна асăнса калаçма тытăнсан, Кируш йаланах пуçне суллат:—„Çук, ун пек вилместпĕр, вилместпĕр, епĕр пурăнатпăр, пирĕн вилес килмест“,—тет.

— Мĕлиун тенкĕ укçа, 70 кĕренке çăнăх, аш, сахăр, кĕрпе, çу парса тăрсан, ма кайас мар унта?—çитĕннĕ çынлах йумахлат Кируш.

— Есĕр кайăр, епĕр киле йулаканнисем мĕн тăвăпăр-ха вара?— хурланат амăшĕ.

Улма шўрпине виççĕмĕш тирĕк пушатнă çĕре совета кайнă Карачăм таврăнчĕ.

— Ĕç тухат пулмала. Пайанах Шупашкара йаратпăр; терĕç ман прошенийе.

— Пĕччен йе çемйипех кайатпăр-и?

— Хм...—çўçенсе илчĕ Карачăм,—тултан кĕнипе ăшăнса çитейместĕп, вăтăр градус пур тăр пайан, виç хĕвел, тухнă-тухманах сăмса тăррине чĕпĕтет... Шупашкартан мĕн калĕç ĕнтĕ. Çемйипе тесе çыртăм та, çемйипе май килмесен, пĕччен кайас пуль.. Лере çитсенех сирĕн пата посылкă йарăп.

— Вут пĕтсен, тем хутас пулат. Чылай та çунтарнă пек пултăм пайан, иттупи хам çирен кĕрĕк хывман. Ачасем те кунĕпе тумтир тăхăнса лараççĕ. Пăрăç йарса çи ес шўрпўне, пăрăç йарсан, сĕтеклĕ пулаканччĕ,—кăмака çине улăхса ларчĕ Кируш амăшĕ.

Ĕçе кайас пирки Шупашкартан хыпар кĕтнĕ май, Карачăм маçтерскойри ĕçĕсене—пĕр витре, ик чашăк йе виçĕ котелок улмала йусама килĕшнĕ болвицă савăт-саписене хыпаланарах йусама пикенчĕ. Облăçри Ĕç пайĕ пĕлтерсен, пайан-тăк пайан хатĕр вăл Грознăйа кайма. Çемйепе-тăк çемйепе, çемйепе май килмесен, пĕччен вĕçтерес кăмалĕ пур унăн, „йалта пурăнса пушшех выçă йулăп“,—хăйне хăй ӗнентерет вăл

Пилĕк кун хушшинче Шупашкар пĕлтерчĕ: Карачăм çемйесĕр кайакансен шутне лекнĕ.

— Пĕччен кайатăп,—терĕ вăл.

Карачăм хĕл варринче тухса кайнă куннех унăн килне йулнă çемйи пурăнма Митрахван старик патне куçрĕ.

— Пурлă çуклă вутпа икĕ кăмака хутиччен, пĕри ăшăрах пултăр,—çакна асра тытрĕç тахçантанпа килĕштерсе пурăнакан Митрахванпа Карачăм çемйи.

Çимели хатĕр тĕлĕшĕнчен икĕ килĕ те пĕр майлă пулнă. Карачăм çемйин те, Митрахванăн та—тĕпсакайĕнче вăтăршар пăта йахăн çĕрулми çеç. Çăкăр тĕсне курманни çур çул çитет; ăна

асăнма та пăрахнă. Тĕрлĕ май йўнеçтерсе, Мускава тырă илме кайакансенчен тăлăп, кĕрĕк, саратнă сурăх тирĕсем, çăмарта, йулашки ĕнине, йулашки сурăхне, йулашки хурне пара-пара йаркаласа, вунтăр, çирĕмшер, вăтăршар кĕренке сăсăлла çăнăх туптан, ăна аламасăр çĕрулмипе йурса çинĕ Митрахван кўршисем.

Анчах Митрахванăн та, Кирушсен те тăлăп тавраш сук. Мĕн пур пеккине те Карачăм пуçса кайнă. Шанчăк—Кируш ашшĕ посылкă йарассинче çеç пулнă.

Йалсоветне килекен хаçатсене Кируш кашни пуштă хыççăнах вулама хăй патне илсе таврăнат—çекретарпе туслă-çке вăл.

Хĕрлĕ фронт хыпарĕсем, хаçат номĕрĕ ўссе пынă-çемĕн, Хĕрлĕ çар çирĕпленсе, сарăлса, çĕнтерсе пынине пĕлтереççĕ.

Еç тума хевтесĕрленнĕ Митрахван та Кируш вуланине çеç итлет, йе инçетри çĕршывсем çинчен хăй курни-илтнисене каласа кăтартат (ĕлĕк вăл 25 çул патша службинче пулса, виçĕ пус пăхăр укçа пысăкĕш метал илнĕ).

Кируш та, шкулта вĕрентме пăрахнипе, вăхăтне Митрахван старикпех ирттерет. Хăш чух хаçат вуланă хыççăн карташне тухса вут татаççĕ. Выçăх тавраш йулманнипе килкартивче нимле ĕç те сук.

— Атте посылкă йарсан, пĕр майлă пурнăттăмăрччĕ...—ирĕн те каçан асăнат Кируш.

Ашшĕ Мускава çитсен пĕр çыру йачĕ те, тек çырмаст (те çырсан та çитмест).

Тĕпсакайĕнче улмисем те пĕтнипе аптăранă йалйыш тем те пĕр çисе шыçăнса кайни—Кируша вĕçĕмсĕр шухăшлаттарат.

— Атте посылкă йамасан, тĕпсакайĕнчи çĕрулми пирĕн те пĕтсен, мĕн çийес пулат-ха вара?

Куна хирĕç чĕрине лăплантаракан ăшă хыпар илтесшĕн пулса Кируш каллех, темиçе хут вуласа тухнă сарă хутлă „Канаш“ номĕрне йарса тытат.

„Хĕрлĕ фронт“—шултра саспаллисене суйлат вăл,—„Колчак йулашкисем пурте Манчжури йенне тапăннă. Хĕрлĕ çар паттăррăн кĕрешнипе, Урал тăвĕ пĕтĕмпех шур бандитсенчен тасалчĕ“.

„Йунсăр фронт“—тепĕр колонкă çине куçат Кируш,—„Мускав çывăхĕнчи Мыттишчĕ станцинче пурăнакан рабочисем субботник туса вагон тăвакан савăта хута йама пулăшаççĕ“.

Кируш вулат. Хаçатри хыпарсем ăна вăхăтлăха часрах çăнăх шўрпи пĕçерттерсе çийессинчен кăштах урăххи çине куçараççĕ. Еçе каймали çĕнĕ вырăнсем пуррине пĕлтерекен саспаллисем тĕл пулсан, ытларахах та шухăшлаттараççĕ. „Атте кайрĕ, атте кайман пулсан, хамах кайнă пулăттăм та вĕт“— пăшăрханнăн пулчĕ Кируш

„Канаш“ хаçатпа „Чувашский край“ хаçат çине чăвашла, вырăсла тата ытти чĕлхесемпе те

**пĕлтерўсем пичетлесе кăларма йышăнатпăр.**

Вăрçăччен хакпа йĕркишен (32 саспалли) 50 пус тўлемелле, йанвар уйăхĕнчи курспа шутласан—50 000 тенке. Кантур.

Вăрçăчченхипе хађхи укçа хакне танлаштарса ларакан Кируш хаçат çинчи пĕлтерӳсене вулама пикенчĕ. Пĕринче, кĕтмен çĕртенех, ăна çĕклентерекен хыпар пур.

> Тăван çырулăха йуратакансен Шупашкарти ушкăнĕ çĕнĕ çултан пуçласа
>
> **„Кăвак хуппи"**
>
> журнал кăларать.
>
> Журналăн мăн редакторĕ Хумма Çеменĕ (Чĕкеç Ç.)
> ~~Кĕçĕн редакторсем: Тимукка Хĕветĕрĕ,~~ [redacted]
> ~~сыруçи Миттаван Краçук~~.
>
> „Кăвак хуппи" журнал вађђи калавсем, сăвăсем, йурăсем, йумахсем йама ыйтатпăр.

— Тинех ман вађђи те ĕç тупăнчĕ, — савăнса кайрĕ Кируш.— Сăвăсемпе йумахсем йанăшăн укçа тӳлеççĕ вĕт вĕсем. Сывлăх пулсан, выçă вилместпĕр! — кутник çинче тĕлĕрсе ларакан Митрахвана шартах сиктерчĕ

— Мĕн тен? — тĕлĕнсе ыйтрĕ старик.

— Выçă вилместпĕр, тетĕп.

— Çук, çук, унччен мĕн каларăн есĕ?

— Йумах йарса кăтартнăшăн укçа тӳлетпĕр, тенĕ хаçатра. „Кăвак хуппи" йатлă журнал тухать.

— Кăвак хуппи пулнă чух телей ыйтаççĕ, апла, хаçатра та кăвак хуппи пулать пулсан, пĕрер пăт ыраш пулать сан! — шӳт тăвасшăн пулчĕ Митрахван.

— Ес, асатте, ан кул. Хаçатра çырнă-тăк, чăнах ĕнтĕ вăл.

— Еп сана кулса каламастăп ĕнтĕ.

— Пĕрер пăт çăнăх татăлса анми, тетĕп-çке сан тĕлĕнтен. Вара пĕрер чĕл çăкăр пире те, карчăкпа иксĕмĕре, парăн. Çапла-и ачам?

Кируш ватсупнă тĕртсе ларнинчен çиленсе урама тухрĕ.

Ура йарса пусмассерен кĕленче çĕмрĕлнĕн качăртатакан йур йала лаппипех шур йавлăкпа пĕркенĕ.

Пĕлтĕрхиле, карташĕнчи йурне кăларса хапха умне пĕр кил те салатса тикĕслемен урам варрипе Кируш йурийех Митрахван крыђци çинчен урам тăрăх пăхса тăчĕ. Ачасем те ĕлĕкхи пек пĕчĕк çунасемпе пĕрне-пĕри туртса çӳремеççĕ, çӳлĕ тусем купаласа та йарăнмаççĕ. Çынсем те сайра-хутран çеç урам урлă каçкалаççĕ Кируш хаçат çинчи пĕлтерĕве вуланă хыççăн, йăвăр шухăша кайрĕ: йумахсем пухса панăшăн „Кăвак хуппи" журналăн мăн редакторĕ укçа тӳлет-ши, тӳлемест-ши?

Вăл сисмен те—крыђца умне кӳрiшĕсен ачи пырса тăнă. Куçĕсем выçă. Ырхан. Питçăмартийĕсем пĕлĕт пек тĕссĕр. Тăташшăн сывлать. Темскертен хăранă — куççулне кăлармаст.

— Мĕн пулчĕ, Саңук?

Саңук Кируша хирĕç чĕнмест. Пĕр вырăнта пăталанă пек хытса тăнă çĕртен çĕмилĕн йарса пусрĕ те, пуçне усса крыђца тăрăх хăпарчĕ.

Иккĕш те умлă-хыçлăн пӳрте кĕчĕç.

— Асатте...— Саҥукăн хăмăр куҫĕнчен пичĕ ҫине икĕ тумлам вĕри куҫҫулĕ татăлса анчĕҫ,— анневе темскер пулчĕ...

Митрахван сăмах вакласа тăмарĕ, кĕрĕкне тӳмелемесĕрех Саҥука йертсе урама тухрĕ. Вĕсенчен Кируш та йулмаст.

Пахчалă кӳршĕ арăмĕ, ҫичĕ ҫулхи ывăлĕ Митрахван старике чĕнсе килнĕ ҫĕре, урай варринче пĕр сывламасăр выртнă.

— Аҫу ăҫта?

— Атте ыйткалама тесе Шăрттан йалне тухса кайрĕ те, пĕр ерне ҫитет ĕнтĕ, кайала таврăнмаст. Анне ĕнер чĕре татăлат, ăҫтан та пулин ҫăкăр тĕпренчĕкĕ тупса килеймĕн и?—терĕ. Епĕ килрен киле ҫӳреме тытăнтăм—никам та пĕр татăк памарĕ, пурте хамăр выҫă, теҫҫĕ.— лăпкăн каласа кăтартрĕ Саҥук.— Пайан пĕртте ыйтмарĕ ҫиме, калаҫмарĕ те, вырăн ҫинчех выртрĕ. Епĕ ҫелнĕкрен ҫĕмрĕк лар хăмисене пӳрте илсе кĕтĕм те, кăмака хутса йатăм. Чӳречерен хĕвел те кĕрсе анне витĕннĕ чаппан ҫине ӳкрĕ. Йушка хупсан пӳрт ăшăнсах кайрĕ. Анне чаппанĕ ҫине, хĕвел ăшшине, ысăк пыйтăсем тухрĕҫ. Анне вĕсене ывăҫĕпе пухса илчĕ те, ҫăварне пĕтĕрсе чикрĕ. Епĕ камакана чугунпа шыв лартнăччĕ. Тăра пулсан та, вĕренĕ тетĕп анне, нĕрер курка ĕҫмесне? Анне пуҫне сулларĕ. Вара епĕ хутаҫ йатса каллех ыйткалама тухса кайрăм. Кам та пулсан хĕрхенĕ, терĕм. Ҫул ăнчĕ темеле пайан Чиркӳ патĕнчи Сахар матки хама ҫăнăх шӳрпи ҫитерчĕ, анне ваҫҫи кĕлпе пĕҫерне икĕ улма парса йачĕ. Ку тĕрлĕ кучченеҫе хутаҫа чикетĕп те, анне патне чупса килетĕп. Вăл акă, урай варрине тăсăлса ӳкнĕ. Те тула тухасшăн пулнă?..— хутаҫҫинчи майăр пысăкĕш икĕ улмине анчăкла, хупписене шуратмасăр сăмах хушшинче хыпса ҫăтрĕ Саҥук.

— Пытарас пулат,—ҫак сăмахпа Митрахван икĕ ҫамрăка йертсе йалсоветне тухса утрĕ.

Йалйышсенчен шартлама сивĕ витĕр масар ҫине шăтăк чавма кайакансем пулмарĕҫ. Ҫавăнпа та, йалсовет председателĕ Саҥук амăшне чиркӳ кассинчи Мукаҫей кĕлетне куҫарса хуртарчĕ.

„Сивĕ ҫĕрте ҫĕрмĕ вĕт?—ăшĕнче урăхларах шухăшларĕ.— Пĕр ҫыншăн шăтăк чавма хал ҫитмĕ ҫав, вуннăран иртсен лашапа турттарса кайăпăр“.

Саҥука ĕлĕкхи управ кантурĕнче уҫăлнă тăлăх ачисен ҫуртне леҫсе пачĕҫ. Унта та кунне чĕрĕк ҫăкăр ҫеҫ параҫҫĕ. Таврари йалсенчен пухăнна 200 ачаран ҫурри ытла чирлĕ выртнă. Тухтăр ҫук, емелсен аптекĕ пушаннă, апат-ҫимĕҫ хатĕрĕсем те ернелĕхе ҫеҫ йулнă. Мĕн пур шанчăк та тырă пулнă районсенчен пулăшу пуласснинче пулнă.

Саҥук хыҫҫăн, ашшĕнчен посылкă кĕтсе пурăнакан Кируш та тăлăх ачасен ҫуртне тухса утрĕ.

Феликс Дзержински „Мускав—Шăхран“ маршрутлă состава халех Хусан вакзалĕнчен ăсатма кирлине кăтартса приказ пачĕ. Пур йевчен те плакатсем ҫыпăҫтарса тултарнă вагонсем Мускав пролетариачĕн сăмахне ҫынла кăшкăрса калаҫҫĕ:

— Ҫул пар!

— Выçă ларакансем патне тырă!
— Çул пар!
— Пире выçăхса вилме тытăннисем кĕтеççĕ.
— Çул пар!
— Пире вăхăтра çитерни темиçе çĕр çынна вилĕмрен хăтарать.
— Çул пар!
— Пире алăри ачасем кĕтеççĕ.
— Çул пар!
— Пире темиçе уйăх çăкăр тĕсĕ курман çынсем вуншарăн, çĕршерĕн, пиншерĕн кĕтеççĕ.
— Çул пар!
— Çул пар!
— Çул пар!

Çак вагонсене тырă тултарса Шăхрана леçмеле пуличчен Мускав Совечĕн президиуме тискер выçлăх тыткăнĕнчи Чăваш автономине, увти тўсĕмлĕ çынсене пулăшма пулса шефа илнĕ. Ку Совет Сойузĕнче мĕн пурĕ вăтăр икĕ мĕлйун çын выçăпа аптранă вăхăтра пулнă. Чăваш çĕршывĕнче, Атăл тăршшĕнчи ытти кĕпĕрнесенчи пекех, çынсем—йăлтах тĕкĕнсе çитнĕ. Хăшпĕр йалсенчи ашшĕ—ачине, ачи—амăшне, амăшĕ—ашшĕне пусса çиме тытăннисем те тĕл пулнă.

Мускав Совечĕ малтанхи пулăшупа Аççă Давыдăвнă Калининăпа ăсатат. Унпа пĕрле хапрăкра ĕçлекен икĕ хĕрарăм, виçтăват рабочи, хĕрле салтаксем.

Мускавпа Шăхран хушшинчи чугунçул тăршшĕ—експрессемшĕн 18 сехет. Дзержински приказĕ тăрăх, тавар вагонĕсене те експресран мансах хăвармала мар. Мĕнле пулсан та, Калининăна шанса панă состав пĕр талăкра йе талăк çурара вырана çитмелех. Çапла шухăшлана тырă вагонĕсене ăсатакан рабочисем.

1921/22-мĕш çулхи транспарт „Мускав—Шахрап" маршрутлă вагонсене çурран çын уттипе аран шутарнă. Аççă Давыдăвнă кашни чăрмантарса тăракан станцăрах выçă ларакан çынсем патне кайакан пойĕза вăхăтра çитерме кирлине астутарнă. ставцă пуçлăхĕсен умне хăйĕн документчĕсене каларса хунă. Йĕркеленсе çитеймен çулйĕр хуçалăхĕнчи çитменлĕхсемпе усă курма тăрашнă бўрократсене тĕл пулсан, чарапса тăнă вагонсене малала шутарасси шăнса ларнă çырма шывне хĕл варринче ирĕлтерессипе пĕрех пулнă.

Çынсем йалĕ-йалĕпе тĕпренчĕк çăкăрсăр ларнă, тырă пулвă районсенчен пулăшу кĕтнĕ. Аççă Давыдăвнăн ниçта чарăнса тăмасăр халех, халех Шăхрана çитмеле.

Темиçе ĕмĕр тăршшĕ хурлăх тўснĕ чăваш халăхĕн çулталăк çеç тултарнă автономилĕ, çулсеренех чылай тырă паракан çĕршывран—тискер выçлăх илсе килнĕ вилĕм çĕршывĕ пулса тăнă. Кунсеренех хытса ăвăсланса сайралакан çынсене пулăшма пикеннĕ. Мускав хуличчи пролетариат апат-çимĕç хатĕрĕсем хăй вайĕнчен пухса, ăна чăвашсем патне çитерме Калининăна шаннă. Çавăнпа та, унăн çул çинчи чăрмантарусене, пуртăсăр вак касассинчен кансĕр пулсан та—парăнтармалах пулнă. Мускав рабочисен малтанхи пулăшуне Шăхрана çитернех.

Аҫҫӑ Давыдӑвнӑ ҫиййӗнчех пирвайхи пулӑшу парас ӗҫе станцӑра йӗркелесен, автономин тӗп хулине—Шупашкара лашапа тухать. Шӑхранпа Шупашкар хушши сакӑрвун ҫухрӑм. Йалтан йала сӗтӗрттерекен лавӑҫ ырхан лашисене кангарма чарнӑ-ҫемӗн вӑл йал ҫыннисен пурнӑҫӗпе паллашать: выҫӑ, пур ҫӗрте те ҫакӑр, ҫакӑр, ҫакӑр ыйтаҫҫӗ.

Аҫҫӑ Давыдӑвнӑ хӗллехи ҫулпа 80 ҫухрӑм кайса, темиҫе ҫӗр пин ҫамрӑк ача ҫӑнӑх шӳрписӗр асапланнине курчӗ. Шӑхранта тӗл пулнӑ йут патшалӑх делегачӗсем те Калининӑпа пӗрле тухнӑ. Вӗсем Англи, Америка, Латви, Естони, Польшӑ ҫӗршывӗсенчен Атӑл тӑрӑх сӑрса илнӗ выҫлӑхран вилсе пӗтме пуҫланӑ ҫынсене пулӑшас кӑмӑлпа килнӗ, Аҫҫӑ Давыдӑвнӑ хыҫҫӑн чӑваш лапчӑк пӳрчӗсене кӗрсе ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирлӗ пӗчӗк ачасем—тархасласа ҫиме ыйтакан ачасем ҫине йӗрӗнсе пӑхаҫҫӗ. Нумай пулмаст, буржуази прессинче чаплӑ интервйу панӑ: „Вырӑс чаплӑ культурине большевиксем пӗтереҫҫӗ. Вӗсем Азиат тискер кайӑкӗсене Йевропӑран мала хураҫҫӗ. Часах Твер урамӗнче француз чӗлхипе ҫепӗҫҫӗн калаҫса пырас вырӑнне, йӗркесӗр чӑваш чӗлхине илтме пулӗ", тесе „Раннее утро" хаҫатра сӳпӗлтетнӗ журналиссен представителӗ, паллах. Мускаври чаплӑ урамра калаҫма аталанакан чӑваш ачисем ҫине йӗрӗнмесӗр пӑхайман. Кӑмӑлсем пӑтранасран шикленсе, ҫакӑр ыйтакан айван ачасене, анчӑк ҫури вырӑнне хурса, конфет пӑрахса пана.

Мускава таврӑнсан Аҫҫӑ Давыдӑвнӑ хула Совечӗн президиумӗ умне чӑваш ачисем ҫинчен уйрӑм ыйту лартать, Феликс Едмундович Дзержинский выҫлӑх тытӑкӗнчи темиҫе пин ача тертленнипе ҫул ҫинчи киревсӗрлӗхсем ҫинчен калаҫса кӑтартать. Ҫамрӑк республикӑн тӗрекне ҫирӗплетессишӗн кӗрешекен паттӑр Дзержински, ҫакӑрсӑр, килсӗр, ашшӗ-амӑшӗсӗр тӑрса йулнӑ тӑлӑх ачасен ашшӗ—Феликс Едмундович, Хусан ҫулӗ ҫинчи йӗркесӗрлӗхсем пирки кӳренни Калининӑ асӑнче ӗмӗрлӗхе йулчӗ.

„Питӗ те аптраса ҫитнӗ ачасене Чӑваш облӑҫӗнчен евакуацилес, Мускава куҫарас"—ҫак ҫӗнӗ постановлени хыҫҫӑн, Аҫҫӑ Давыдавнӑ выҫлӑх ыталаса тытнӑ ҫӗршыва, иккӗмӗш хут хӑйпе пӗрле апат-ҫимӗҫсем, тумтирсем илсе кайать.

Шӑхранта каллех йут патшалӑх делегаципе тӗл пулать. Халӗ вӗсем йышлӑнтарах та, пулӑшу ӗҫӗ ҫине урахларах пӑхаканнисем те пур. Ирланди ҫынни О'Крети хӑрушӑ выҫлӑх мӗлкисене курсе, общинӑ палатин членӗ—Клайнс патне ҫыру ҫырать.

Мускава илсе каймали ачасене пойез ҫине лартма тытӑнас умӗн, Аҫҫӑ Давыдӑвнӑ патне пӗр ҫамрӑкрах кӑна кивӗ кӗрӗклӗ хӗрарам пырса тӑчӗ те, „Помгол" пойӗзӗпе ӑна та Шӑхрантан илсе кайма тархасларӗ.

— Хам вилсен те, ача пурӑнтӑрччӗ, ача ан вилтӗрччӗ.

— Миҫере сан ачу?—ыйтрӗ Калининӑ.

— Виҫҫӗре.

— Ачана Мускава парса йарас шухӑшу пулсан, „Помгол" суртӗнчи Йалайкин патне кайса калаҫ.

Калининана пулӑшса ҫӳрекен О'Крети кӑрандашпа блок-нот кӑларса ҫак ачала хӗрарӑман йатне ыйтрӗ.

— Харийас еп, Харийас, тупата туршăн ачана вĕлерес марччĕ...—О'Крети тăлмачĕ Харийаса Шăхранти „Помгол" столовăйне ĕçе илме пултарнине пĕлтерчĕ.

Харийас Калининă пойĕзĕ патне умлă хыçлăн йĕркеленсе тăнă таврари йалсенчен пухăннă ачасем çине пăхса илчĕ. Ытла çамрăккисене ашшĕ-амăшĕсем килĕнче мĕн пур çĕтĕкпе, утийалпа, кивĕ сăхманпа чĕркесе килнĕ. Аççă Давыдăвнăна „Чăваш ачисен амăшĕ" тесе, темиçе çĕр пин ачана вилĕм аллинчен туртса илнĕшĕн тав тăваççĕ. Хăйсенчен уйăрасшăн мар туртăнакан ача ашшĕ-амăшĕсене Харийас тĕл пулмарĕ. О Крети тăлмачи ĕç тупса панишĕн савăнса, вăл тӳрех, пĕтĕм хевтине пухса, „Помгол" çуртне чупса кайрĕ.

— Ачана ăçта хурас?

„Помгол" çуртĕнчи кăвак шинел тăхăннă çын Харийаса, ĕçленĕ чух, ачи чăрмантарнине тавçăрса илчĕ.

— Мускава йамастнам?.. Унта хăвăнтан та лайăх пăхса усраççĕ вĕт?

Харийас килĕшрĕ, çавăнтах Аççă Давыдăвнă илсе кайакан пĕчĕк ачасен вагонĕ патне хăйĕн виçĕ çулхи ывăлне йатса кайрĕ.

Шăхрантан ăсанакан ачасене çул çинче пăхса пыракан çын кирлине Харийаса Калининă хыççăнах тепĕр пойĕзпа „Помгол" столовăйĕнче ĕçленĕ çĕртен Мускава ăсатрĕç Ку ăна савăнтарчĕ çеç. „Тинех ман телей çитрĕ",—çул тăрăх шухăшласа пычĕ вăл. „Малтан тархасласан та, илсе каймарĕç, халĕ тата хăйсемех йараççĕ".

Мускавра Харийас пĕрле килнĕ 500 ачапа Покровкă прийомникне кайрĕ. Унта ăна Шăхрана апат-çимĕç илсе кайакан пойĕзран кайа йуласран астутарса, Чăваш представительствин адрĕсне пачĕç. Харийас хăй ачине курасшăн пулчĕ.

— Сан ывăлу çул çинче ăшпа аптрарĕ те, Мускава çитсенех чĕртмешкĕн пĕр рабочи арăмĕ илсе кайрĕ. Марин-Рошчăра пурăнат вăл,—каласа кăтартрĕ прийомникри шур халатлă арăм.

„Усрама панă"—салхулланчĕ Харийас.

Чăваш представительствине вăл, ачине шыраса çӳренипе, тĕттĕм пулнă çĕре çеç çитрĕ. Заңати пĕтнĕ унта, пĕр çын та йулман. Çийесси килнĕ, Марин-Рошча та тупайман, представительствă та хупă. Харийас ниçта кайма аптрарĕ. Йавăррăн сывласа илчĕ. Мускав урамĕсем тăрăх пĕр тĕлсĕр çаврăнса çӳренĕ май ун хулĕвчен такшин тĕртрĕ.

— Аçта кайан?.. Еп сана паçăрах куртăм та, тăрукаx палламарăм. Те есĕ, те есĕ мар, терĕм,—пĕчĕк чухнехилех тутисене тирпейлĕ сиктерсе калаçат Кируш —Ес те Мускавра иккен? Килин нумай пулат-и?.. Епĕ пĕчченех килтĕм, ухмах пулна. Пăртак çеç кĕтмеле пулнă иккен. Халĕ уйрăм пойĕзпа илсе килеççĕ, тет. Епĕ аттене шыраса килтĕм. Вăл Грознăйа кайма тухнăччĕ те, Мускава çитсен чирлерĕм, малала кайаймастăп тесе çыру йачĕ.

Кируш Харийаса Хусан вакзалне йертсе кайрĕ. Унта хватерсĕр çынсем çĕр каçма çеç пухăннине пĕлсе çитнĕ вăл. Ш-мĕш

клас залĕнче иккĕш те, Кируш хугӑççинчи çăкӑрне тӑвар сапса çирĕç. Вӑхӑт çурçĕр йенне сулӑнсан, вĕсемпе йунашар урайне ларса тухнӑ етемсем çывӑрма пуçларĕç. Кируш та Харийаса ун çăкӑр хутаççи çине пуçне хума сĕнчĕ.

— Еп сыхлӑп.

— Мĕн сыхламали пур, çывӑр ес те.

Виçĕ çул хушши пĕрне-пĕри курманскерсем, иккĕшĕ те асаннӳ пылакĕсемпе тутӑ пулчĕç. Пуринчен ытла Кируш сӑмахларĕ. Харийас хай çинчен каласа кӑтартма тытӑнсан та, сӑмахне часах пĕр ĕç çинчен тепĕр ĕç çине куçарчĕ. Хӑйне вӑрласа кайнӑ офицертен ача çуратнине темиçе хут та пĕлтерме тӑчĕ— çемилĕхе çитмерĕ.

— Ыран иксĕмĕр те Мыттишче ĕç шырама кайӑпӑр, унта пирĕн йалсем ĕçлеççĕ,— ӑшӑн каларĕ йулашкинчен Кируш,— халĕ выртса çывӑрар.

Харийас кĕрĕкне хыврĕ, тĕттĕмрех кĕтесре пушӑ вырӑн шыраса тупрĕç. Кируш пиншакпе айала сарчĕç. Вӑрӑсенчен хӑрушӑ ан пултӑр тесе, Харийас хӑйсем çине витĕннĕ кĕрĕкне Кируш кĕпинчен çĕлен-çиппе çĕлерĕ. Ывӑннӑскерсем, иккĕшĕ те часах ӑшӑ ыйӑха парӑвчĕç. Хĕл сивви III-мĕш класра çĕр каçакансене ире хирĕç тӑрт-тӑр чуппи тыттарман пулсан, Кирушпа Харийас, тен, каçлех çывӑрса тӑраваччĕç. Чи малтан Харийас вӑранчĕ, куçне уçичченех аллипе хыпашласа пӑхрĕ: витĕннĕ кĕрĕкĕ çук. Вӑл кӑшкӑрса йĕнине илтсе, Кируш та вӑранчĕ.

— Керĕке, кĕрĕке сўсе кайрĕç!..

---

## ВИÇÇĔМĔШ СЫПӐК.

### XXI.

Уй виçураланчĕ[1].

Ылттӑнту çырминчен пуçласа йешĕл вӑрмана çитичченех хӑйсен тавра кĕшĕлтетекен пӑраçисемпе мухтанса çĕкленчĕç, виç урине те виç йенне сарса тĕрекленчĕç, пысӑк пӑрисене те тӳрĕлетрĕç.

Кашни виçуран—пĕрер пӑрасти.

Кашни пӑрастин—тӑватшар пӑраçӑ.

Тытӑнчĕç ĕçе—çĕре шӑтарма.

Ылттӑнту çырминчен пуçласа йешĕл вӑрмана çитичченех хурапус анисем тӑрӑх пӑраласçĕ çĕре.

Виçурансем утаççĕ. Малала та кайса кумаççĕ. Тӑваткӑл йĕр туса хӑйсен хыçне тарӑн та тӑвӑр шатӑксем хӑвараççĕ.

Уй виçураланчĕ.

Кашни виçуран—пĕрер пӑрасти.

Кашни виç пӑрастин—тӑватшар пӑраçӑ

* * *

Кируш кӑнтарлахи апата йала каймарĕ.

Çыран хĕррине пĕр пĕччен выртса йулчĕ.

Пулташĕсем йалтан çырткаламали илсе килме пулчĕç. Унчен Кируш канма шутларĕ. Икĕ çул хушши Гамбургри нимĕç

---

[1] Виçура—вырӑсла: тренога.

рабочипе çыхăну тытакансккер, вăл, ун патне çыру та, пăрасти блок-ночĕ çинех çырасшăн пулчĕ. Шăп çак вăхăтала Мускаври шăрăх çанталăк кăштах кĕр йенне кайсан, Профинтерн делегачĕпе паллашнăччĕ вăл. Сойузсен çуртĕнчи колонăлă залра Франциран килнĕ рабочи трибун çине тухса сăмах калаччĕ. Кируш французла пĕлмен. Унпа йунашар ларакан Гамбург сынни Кируша наушник тăхăнтартрĕ—трибун çинче французла калани ун тăрăх вырăсла илтĕнет. „Техникă"—шухăшларĕ Кируш.

Кунта, пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи халăхсенчен, патшалăхсенчен килнĕ тĕрлĕ чĕлхелĕ делегатсем ваҔҔи трибун çинче пĕр тĕрлĕ чĕлхепе калаçнине итлекенсемшĕн виç-тăват чĕлхене те пулин çийĕнчех куçарса тăни кирлĕ пулнă. Француз хыççăн Йапони делегачĕ тухрĕ—халĕ вăл каланине тăвата наушник: вырăсла, нимĕçле, французла тата агăлчанла ăнлантараççĕ. Йапони сынни хыççăн нимĕç тухрĕ. Ăна Кируш хăлхаран калакан тăлмачсăрах ăнланат. АхаҔ мар иртнĕ хĕлте нимĕç чĕлхине вĕреннĕ. Гамбург сынни те наушниксĕр итлет. „Техникă"—каллех вăл хăй ăшĕнче конгрес президиумĕ йенне пăхса каларĕ.—„Техника—техника та, анчах уншăн та чĕлхе пĕлни кирлĕ".

Конгрес хыççăн Гамбург сынни Мускавран Кируша адрĕсне парса хăй çĕршывне ăсанчĕ. Вара вагон саватĕнчи МОПР йачейкинче Кируш час-часах капитал пусмăрĕнчи рабочи йанă çырусене вуласа параччĕ.

Гамбургри йулташĕн йулашки çыруне Мускавран тухса киличчен илнĕччĕ. Ăна хирĕç Кируш хайĕн çĕнĕ адрĕсне пĕлтернĕ. Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ. Нимĕç почтамчĕ пуснă пичетлĕ çыру çитмелех. Анчах Гамбургри Георк çырман. Икĕ çул хушшинче кун пек пулнине, пĕрне-пĕри хыпарламасăр тăнине Кируш астумаст. Çавăнпах Чăваш республикĕнчи çĕнĕ адрĕсне тепĕр хут пĕлтересшĕн пулчĕ.

Сăран сумкинчен рапăрт çырса пыракан блок-вотне кăларсанах унăн шыв ĕçесси килнĕн туйăнчĕ. Презент сарса пăрахнă вырăнĕнчен тăрса Кируш ирĕксĕрех çырма тăрăх çăл патнеле утрĕ.

Тайăлса ларакан пĕр-пĕччен йăвăç хĕрес çывăхĕнче вăл пуртевке йышши кăвакарнă пир татăкĕ выртнине курчĕ. Ĕнер кунтан иртсе пынă чух ачасем шўт туса илнĕччĕ.

— Кам арăмĕ ку? Йĕм тĕпне çухатса хăварнă?
— Санăн мар-и?
— Пырса пăх!
— Паллаймăна!..

Ĕнер çак йăвăç хĕрес çывăхĕнче никам та пулман. Пайан—ку тăруках Кируш куçĕ умне сиксе тухрĕ—кукша пуçлă светуй чĕркуçленсе ларат, хĕвел çине пăхса пуççапат, тутисене хускатат, мăкăртатса тур кĕлли калат.

Çăла ўпĕнсе шыв ĕçсен Кируш çак светуйпа сăмахласшăн пулчĕ. Йурийех ун çине пăхса çăл шывĕшĕн киленнĕ пек пулса хырăмне сăтăркаларĕ. Кĕлтăвакан светуй хăй патĕнче сын пуррине асăрхасшăн та пулмарĕ.

Кăнтăрлахи апатран виçурансем патне утакан пăраçăсем те курчĕç ку светуйа—çав-çавах чĕркуçленсе ларат.

Каçпа ĕçрен тавраннă чух та вăл—чĕркуççи çинче, тепĕр кунне те—иртнĕ кунхилех кĕлтăват.

Пăраçăсем ăна кансĕрлемерĕç: ăс-пуç кашнийĕннех хăйле, ухмаха тухас пулсан кашнийех хăйне май ăссăрланат.

Кируш ку çветуйа ăссăрланнă çын вырăнне шутламан. „Ун ăсхакăлне çак йăвăç хĕрес тунă“,—тенĕ вăл. Çав вăхăтрах унпа сăмах хушса калаçасшăн пулнă.

Пăраçăсем хĕвел пĕлĕтре уралланнине курса виçуралланнă уйран таврăнма тытăнсан, Кируш йурийех кайа йулчĕ.

Йăвăç хĕрес çывăхĕнче хайхи çветуй вут чĕртсе йанă. Кируш иртсе пынă çĕре хутаçпа çурăм хыçне çакса килнĕ çĕрулмине суйласа ларат, пĕçерсе çийесшĕн пулмала. Çăл тĕлне çитсен Кируш ăшĕ çуннă пек пулса тўрех упĕнчĕ

— А-ах, ăш кансах кайрĕ, питĕ те ĕçес килнĕччĕ,—çĕрулми пĕçерекен çветуй çине пăхса ларĕ вăл.

Леш чĕнмест.

Кируш татах çăла ўпĕнет.

Пуçне çĕклесе татах шыв ĕçес килнине кантарнăшăн савăнна пек пулат.

Çветуй чĕнмест.

Кируш татах та ўпĕнет, татах та пуçне çĕклесе сăмах хыват.

Çветуй çав-çавах чĕнмест.

„Тур калашĕ—виççĕ“,—ăшĕнче кулса илчĕ Кируш.—„Виçĕ хутчен çăла пуççапса шыв ĕçрĕм, мĕн пулсан та пулĕ“,—çветуй çывăхнех пырса ларчĕ. Тапак тивертме шăрпăк çук тенĕ сăлтав уншăн чухах пулчĕ.

— Инçетрен-и?—çăварĕнчен тапак тĕтĕм кăларчĕ Кируш.

— Инçетрен, шăллăм,—тăсса ларĕ çветуй.

Кируш çĕрулми пĕçерекен çветуйа хирĕç меллĕн, урине хуçса ларчĕ. Çавăнтах вăл-ку çинчен сăмах тапратрĕ, хĕрес çывăхĕнче çăла тасатса тăманшăн çывăхри йалçыннисене вăрçса илчĕ.

— Ес ылттăн шыракан пулас, шăллăм,—Кируша пўлчĕ çветуй.

—Мĕнле?..—Тупса-и?

— Мĕнле ылттăн вара вăл? Еп ку таврарисем мар та, илтмен... Урал тăвĕ патĕнчисем еп, пушкăртсен çĕршывĕнче çуралса ўснĕ...—суйрĕ Кируш.

— Апла пулсан есĕ хăвăр мĕн шыранине те пĕлейместĕн-ске?.. Ылттăн шыратăр вĕт?

— Çук, ылттăн мар, епĕр кунти çĕр сийĕсене пĕлесшĕн пулса пăралатпăр, çапла каларĕç пире аслисем,—хăйне пим пĕлмен вырăнне хучĕ Кируш.

— Аслисем калаç пуљ те, анчах вĕсем сире ылттăн шыраттараççĕ, халăх ан пĕлтĕр тесе, темскер хаклă йышши тăпра шухăшласа кăларнă. Çапла, шăллăм.

— Чăнах та, ылттăн йур-ши вара кунта, Ылттăнту та Ылттăнту теççĕ?

Хĕвел анса ларнă май ĕпе тислĕкĕ те çунса кĕлленчĕ. Ун ăшĕнчи çĕрулмисем çеç пĕр тикĕс пăшăлтатса пиçеççĕ. Таврара никам та çук. Пĕр Кируш çеç пĕччен тайăлса ларакан йăвăç

хĕрес умĕнче светуй каласа кăтартниве хускалмасăр итлеме пуçларĕ.

— Ку сăрта Ылттăнту тесе ахаљ каламан,—кĕлтунă чухнехилех йанахне виçелĕ сиктерсе пуçларĕ светуй —Ахпÿртри çĕрме пуйан пурăннă вăхăтранпа Ылттăнту йат панă çак сăрта. Вăл питĕ те пуйан пулна, тахçантанпах вуникшер лаша усранă, кушаккисем те вăтăр тăватта çитнĕ. Чыкан йатлă пулнă вăл.

— Çулсеренех анкартне пиншер урапалă çĕкĕртсем çапмасăр хăварат. Сурăхĕсем пĕр кĕтÿ, уйрăм кĕтÿç тытаť, сыннисеннипе хутшăнтармаст, темиçе вăкăр, темиçе сысна, пурте лайăх ăрулисем, йут патшалăхран кÿртернĕ, тет. Ĕнисем те çак Чыканăн кашнийех куннe виçшер витре сĕт параççĕ. Çурт-йĕрĕсем хулари улпутсенни пек чаплă. Сакăр чÿречелĕ урам тăрăх илем кÿртсе ларакан пÿртне калайпа витнĕ, варринчен сÿлĕ картлашкалă крыљца тухат. Карташне йĕри-тавра хăмапа витнĕ. Виçĕ хапха. Пĕри—вырăсла, аслă урам йенне тухат, тепри—кĕтеслĕ урам йенне, виççĕмĕшĕ—хыçалта, пахчана тухат.

— Йунашарах лапка пур. Тем таварпа та суттăват.

— Йурийех пар кÿлсе Йухма, Упи, Нурăс, Пăва базарĕсем тăрăх тĕрĕлтеттерсе çÿрет. Тавар илме Хусана, Чĕмпĕре кайат. Шупашкарти „вăрман патшипе" туслă теççĕ. Унпа пĕрле Атăл тăрăшне тухасшăн, тет. Шупашкар йармăрккинче Чыкан лапкисем шăп вăта-çĕрте пулнă, тет. Кĕркунне Чулхулана кайма хатĕрленет.

— Унта пĕтĕм тĕнчери купцасем пухăнаççĕ вĕт: агăлчансем, тĕрĕксем, французсем, перссем, китайсем пулаççĕ.

Чыкан та чăваш халăхĕн чапне тĕнчери çынсем умне илсе тухасшăн мĕн, хăйĕн пуйанлăхĕпе çынсене тĕлĕнтересшĕн. Пакша, упа, кашкăр, пăлан, тилĕ тирĕсем хатĕрлет, тарçисене пăчăр, кăркка, кайăкхур тытма хушат.

— Аслă ывăлĕ ваљљи хĕр пăхма та çĕр çухрăмри пуйана шыраса кайат.

— Йепле пуйан пулсан та, Чыкан хăйĕн мĕн пуррипе çырлахман. Аслă ывăлĕн туйĕнче ылттăнпа та кĕмĕлпе йалкăшасшăн, тата Чулхула йармăрккинче Перçси, Йапони, Йармани купцисенчен ирттересшĕн пулса, вăл çимĕк каçхине „Çилçунат" йатлăăйăрне утланса тухат.

— Çак çырма тăрăх хăпарса, халљ ишĕлсе таракан çырма тĕлне çитет. Ун чух çырма тавраш пулман, тĕме çеç палăрса тăнă.

— Хĕвел ансанах туптанă аварсăр çавине хĕçĕ пек тăратат те, çăварлăхланă ăйăрĕ çинчен анмасăр çурçĕр çитессе кĕтет. Шăп çурçĕр тĕлĕнче Чыкан умĕнчи çĕр ик йенне çурăлса çырма пулса тăраť. Çилçунат ăйăр аран айăккине пăрăнса ĕлкĕрет. Çавăнтах пичкесем сикме тытăнаççĕ. Атăл шывĕнe йухса кайнă пулă пичкисем, хум вăхăтĕнче пĕрне-пĕри перĕнсе саланнă пек, çурăлма тытăнаççĕ. „Мен пулсан та пулĕ, пăрахса каймастăп", тет хăй ăшĕнче Чыкан, анчах ăйăрĕ сиксе ÿкесрен унăн куçне çурăм хыçĕнчи пир хутаççиве салтса сыхат.

— Пĕр вĕçĕмсĕр çĕр айĕнчен сиксе тухакан пичкесем саланнă-çемĕн ылттăн шăлтăртатат, çыран хĕррине купаланаť.

Чыкан сылтăм аллинчи çавине тăратса Çилçунат çинчен сиксе ансанах, ылттăн купине пĕр кĕтӳ кашкăр çавăрса илет. Пурте пĕр харăс çăварĕсене уçса Чыкана хирĕç шăлĕсене шаккама тытăнаççĕ.

Чыкан кăшт чакат, кашкăрĕсене ылттăн купи патĕнчен айăккинеле йарасшăн пулса, хăйĕн Çилçуначĕпе илĕртет. „Çийĕр, чармастăп, тытса çурăр ман ăйăра", тет. Ун сассине илтсенех ылттăн купине çулăм хыпат, кашкăрсем вут çуттинчен хăраса вăрман йенне тараççĕ. Чыкан часрах хыпаланса ылттăн укçа тенкисене пĕр çĕклем йатăрласа илесшĕн пĕшкĕнет те,—аран кутăн чакса ĕлкĕрет. кăшт çеç ылттăн купипе пĕрле кăвар пулса тăмаст. Темиçе пӳлмене тултармалăх ылттăн Чыкан куç умĕнчех пĕр самантра çунса кайат. Йал йенчен автансем авăтни илтĕнсен, кăвар пулнă ылттăн укçа кĕлленсе çӳле вĕçет, ик йенне çурăлса çыравланнă çĕр те тикĕсленет, кăшт çеç вар пулса йулат. Кайарахпа тин çуркуннехи шыва çийĕнсе, çулсеренех аслăланса „Ылттăн çырми" пулса тăрат.

— Çимĕк каçхине йаланах ун çывăхĕнче укçа çунат. Шăп хăш тĕлте çуннине хаљ те шыраса тупаймаççĕ. Чыкан тем те хăтланнă. Ик-виç тĕле пусă пек те чавса пăхнă—ылттăнне тупайман сунса кĕлленнĕ тăпра сийне çеç тупнă, кăвакарнă тĕслĕ, тет, тем аслĕш сарăлса выртат мĕн. мĕн чул ылттăн çунман-ши унта? Чыкан чĕлхине пĕлмен, ылттăнне тупмали чĕлхи пур, тет. Шăп кашкăрсем шăлĕсене йĕрсе пăрахсанах пĕр-ик сăмах шăппăн каламала та, вара çара ылттăн купи çеç тăрса йулат, кашкăрĕсем çĕр тĕпне анса кайаççĕ, тет; саспа каламала мар сăмахĕсене, çын сасси илтĕнсенех вут тивсе кайат имĕш. Анчах менле сăмах каламалине пĕлменни касат.

— Чыкан таçти чаплă йумăççем патне те çитнĕ, „железни хут" тăрантаспа весене Тăрăнвар тăрăх та турттарса çӳренĕ— пĕри те чĕлхине пĕлмен.

— Кун хыççăн вара Чыкан „Ылттăн çырми" таврашĕнче вунă деçетин çĕре темиçе хак парса сутăн илет. Вара Тарăнвар хĕррине пĕр пĕчĕк пӳрт, Çилçуначĕ валљи вите лартат. Ăйăрне витерен кăлармаст, хăй те пĕчĕк пӳртĕнчен тухмаст. Ăйăрĕ сĕлĕ çийет, хăй хуран пăтти çийет. Капла тума Чĕмпĕр çывăхĕнчи икунпа пăхакан йумăç хушнă, тет ава. „Ылттăн хăш тĕлтине пĕлес тесен, çав çырма хĕрринче ăшă пйăхпа çывăрас пулат, вара çывăрнă çĕре пирĕшти пырат те, ачашшăн калат: „ылттăн тупас тесен, ак çав тĕле чав", тет. Çапла каваш панă пулат Чĕмпĕр çывăхĕнчи йумăç.

— Чыкан йумăçа итлет, хуран пăтти çийет те, хĕвел ансан çыран хĕрне тухса выртат. Пĕр кун выртат, ик кун выртат, виççĕмĕшĕнче пирĕшти пыма çеç ĕлкĕрнĕççĕ тет, çамки тăрăх йăвалланакан калта кăтăкласа вăратат, пирĕштийĕ, Чыканĕ куçне уçсанах, пăрахса тарат. Кун хыççăн Чыкан тепĕр хут çыран хĕрне тухса выртма пикенет.

Вăрман лешйенчи вăрăсем унăн Çилçунат ăйăрĕ уй варринче хăйпе пĕрле пурăннине пĕлеççĕ те, шăп пирĕшти пыраса кĕтсе

выртнă чух, мăйĕнчен ҫивĕч кусарпа пусса хăвараҫҫĕ. Хăй те вилет, йăрĕ те варăсен аллине лекет.

— Тем чухлĕ асаплансан та, тăрăшсан та,—ҫĕрме пуйан Чыкан ылттăн купине шыраса тупайман... Тăпри ҫăмăл пултăр ĕнтĕ.

— Анчах ылттăн нумай унта. Йаланах ҫимĕк каҫхине Чыкан ширанă тĕлте вут ҫути курăнат, ылттăн ҫунат.

— Ҫавăнпа та ĕнтĕ ҫак сăрта Ылттăнту теҫҫĕ...

* * *

Ку йумаха Кируш пĕчĕклех Митрахфан аслашшĕнчен илтнĕччĕ. Ҫитменнине—вут хĕлхемĕ тухнине те ҫĕр варринче хăй куҫĕпе курнă. Хăранипе чирлесе те пăхнă. Чыкан пулнине ĕненнĕ, ҫĕр айĕнчи ылттăн укҫа сайа кайса выртнишĕн пăшăрханнă. Ҫавăнпа та халĕ каласа кăтартни уншăн пĕртте ҫĕнĕ пулмарĕ.

Старик кĕл ăшне хурса пĕҫерне улмисене ҫиме тытăнсан, Кирушăн тăрса йалала утас пулчĕ. Малали сăмахĕсем ҫыхăнмарĕҫ. Йумахри Чыкана курăннă вут ҫути мĕнрен пулнине ăнлантарма тăрăшни те ахалех пулчĕ. Старик вĕтлĕхри кукăр-макăр сукмаксем майлă йĕрленсе пĕтнĕ ҫамкине ҫеҫ сăмси ҫине антарса шăлне ҫыртрĕ.

Вăййа кайма хатĕрленнĕ ачасем кайа йулса таврăнакан Кируша хирĕҫ пулса, ҫветуй-старик кўршĕри йалтан килнине пĕлтерчĕҫ.

— Йакрав йатлă вăл. Еп ăна аванах пĕлетĕп. Пирĕн куккасемпе карташлă пурăнат.

— Ҫемйи пысăк-и ун?—ыйтрĕ Кируш.

— Арăмĕ те, качча каймасăр ватăлнă хĕрĕ пур—хăйпе виҫҫĕн.

— Темле сектăра тăрат мĕн вăл?.. Хĕрĕ те ашшĕ пек ҫветуйа тухасшăн пуљ, ырă кунтан лармĕ...

— Манашкă пуљ?

— Манашкă мар та, качча кайман ҫав, куҫран вăйсăртарах вăл,—малала пуҫларĕ Ерхип йатлă пăраҫă.—Ашшĕ унăн ҫав хĕрĕшĕнех ухмаха тухат пуљ ĕнтĕ, ерни-ернипе таҫта кайса кĕлтуса ҫўрет. Кашни каҫах шăп ҫурҫĕр тĕлĕнче тăрса хĕрне темле ăрмăҫлана шывпа питне ҫутарат...

— Тухтăр патне йертсе кайакан ҫук-им?

— Пуйан-и хăй?

— Хĕрĕ чип-чиперех тет?

— Кунта мĕн ҫăмăлпа килнĕ-ши?...

— Харăсах темиҫен ыйтнипе Ерхип аптраса тăчĕ.

— Арăмĕ йумăҫ мар-и ун?

Ҫывăхрах хуткупăс сасси илтĕнчĕ, Кируш тавра пухăнса тăнă ҫамрăксем, ҫветуй-старик ҫинчен манса, малала утса кайрĕҫ. Кируш та кураксем йавăнакан ватă йăмралă урампа килне кайрĕ.

Купсеренех йăвăҫ хĕрес умĕнче кĕлтуса ларакан старик патне пырса сăмахлакансем Кирушран урăх пулмарĕҫ.

Виҫурансемпе вырăнтан-вырана куҫса ҫўрекен пăраҫăсем вăл пуррине мансах кайнă теме пулаччĕ, анчах шăп Ылттăнту

умĕнчи варта Кируш бригади пăралакан вырăнтан шыв персе тухни астутарчĕ. Шыв пĕр кĕтмен çĕртен, сасартăк, шăп фосфорит сийĕ патне çитме ĕмĕтленсе ĕçленĕ чух сирпĕнме пуçларĕ вара. Ирĕксĕрех çирĕм виçĕ метр таран кĕнĕ пăрана кайала туртса кăларас пулчĕ. Кируш, вăйлă пушара сÿнтерме ларнă хăватлă насос кĕпçинчен тухакан шыв пек çÿлеле çĕкленекен фонтан çине пăхса, рапăрт кĕнекине туртса кăларчĕ.

— Çирĕм виç метр, — саспах каласа йĕрлĕ хут çине паллă турĕ вăл.

— Икĕ кун ĕçлени ахалех сайа кайрĕ, — те хурланса, те савăнса каларĕ Мики пăраç. Йулташĕсем ăна ăнланаймарĕç.

Халиччен лăпкăн кĕлтуса ларнă светуй çĕр айĕнчен шыв ыткăнса тухнине курсан йала чупат. Пăраçăсем, вăл васканине курса, шÿт туса илчĕç:

— Тĕнче пĕтет терĕ пулас ку!

— Ахаљ мар ĕнтĕ тăруках тăрса чупрĕ...

— Çитрĕ хайхиве тепĕр хут çĕнĕрен халап йарса çÿреме!

Кируш, ĕç харама кайнăшăн кÿренсе, вилсуранне тепĕр вырăва куçарса халех çĕнĕ скважинă пуçламалине пĕлтерчĕ.

— Шкулта вĕреннĕ чухне пирс артезиан пусси мĕнле пулни çинчен учитлĕсем çеç каласа кăтартаччĕç, кунта ак хамăр куçпах куртăмăр, — шăлĕсене кăтартрĕ Мики. Вăл тата та хушасшăнччĕ, йал йенчен çĕмĕрĕлсе килекен хĕрарăмсен сассине илтсе чарăнчĕ.

— Ав, камсене чĕнме кайнă хайхи светуй!

— Асту, Кируш, тарас мар-и? — хăраса ÿкрĕ Ваљук..

— Пирĕн пата, тÿрех пирĕн пата килеççĕ!

— Вăт, айвансем!..

— Кулă-кулă та, кулăран шÿт те пулмаÿпултарат, — çывхаракан хĕрарăмсен аллинче кĕреçе саступ-ухват тавраш çук пулсан та, пăраçăсем çÿçенсе илчĕç.

## XXIV.

Пĕтĕм Раççей Тĕпĕçтăвкомĕн кĕлевче галлерейĕнче милиционер кăтартса йанă хыççăн, Йатман тÿрех хăй шыраса килнĕ алăк патне пырса тăрăнчĕ:

| Чăваш Автономлă Социалисăмла Совет республикĕн представителстви |
|---|

Çутă саспалисене пĕр пăхамла вуласа шала кĕрсе кайрĕ. Представителе курасшăн килнине хыпарласан, хĕрарăм-секретар ун çине пăхса каштах кĕтсе ларма тивнине пĕлтерчĕ.

— Представителĕ Кремĕлте калаçат, пушă мар.

— Заместителĕ те пушă мар-и? —васкат вăл.

Алăкран кĕнĕ-кĕменех таравăт пулнă секретар Йатмана заместителĕ патне илсе кайрĕ.

Ун аллинче Чăваш республикĕн Халăх комиссарĕсен Канашĕне Сойузсланцă тата Фосфориттрест Ылттанту районĕнче рудниксем уçма йышăнса туна килĕшÿ екземпљарĕ пулнă.

— Фосфориттрестран йачĕç мана, ак çак договор çине алă пусмала,—терĕ хыпаланса Йатман.

— Кăштах кĕтсе тăр-ха, пирĕн пайан республикăран делегатсем килнĕ те, йубилей йачĕпе, Кремĕле кайаççĕ вĕсем, кăшт çеç кĕтес пулат.

Йатман йунашар ларакан чăваш хĕрарăмĕсем çине çаврăнса пăхрĕ. Пурте савăнăçлă, уçă, тулли кăмăллă, пĕрне-пĕри хăйсем килнĕ йал, колхоз, савăт, хапрăк, стройкă ĕçĕсем пирки каласа кăтартаççĕ.

Делегатсем Кремĕле тухса кайас умĕн республикăн полномочи представителĕ Йатман илсе килнĕ хут çинче чарăнса тăчĕ.

„Чăваш республик Халăх комиссарĕсен Канашĕ РСФСР Тĕпĕçтăвкомĕн президиуме çумĕнчи. представителĕ урлă, çўлте кăтартнă трестсемпе çак килĕшĕве тăват“, тенĕ йĕркесен айне пичетпе алă пуссан, Йатман Фосфориттрест управљайушчийĕ патне чупрĕ. Çурранах, електрицă вăйĕпе чупакан тимĕр лашасенчен (трамвайран) маларах çитесшĕн пулса, асфаљтлă тротуарсем тăрăх хумханакан халăха перĕне-перĕне чупрĕ.

Каçхи пойĕспа вăл Мускавран тухрĕ. Вакзалта илнĕ „Известия“ хаçатра РОСТа корреспонденчĕ Шупашкартан—Чăваш республикĕ вувă çул тултарнипе уйавлама хатĕрленсе çитнине пĕлтернĕ.

— Шăп йубилейе çитеп,—вакун кантăкĕнчен хыçа йулакан хула çине çаврăнса пăхрĕ Йатман.

Пĕр сутка Мускавпа Ылттăвту хушшинчи çул çине çителĕклĕ пулчĕ. Савăтра Йатман Сойузсланцпа „Фосфориттрест“ урлă сланцă кăларса пырас ĕçе те татса килнине пĕлтерчĕ. Директăр ăна çăмăл автомобилпе çак кунсенче рудник уçма хĕрсе хатĕрленекен шахтăрсем патне илсе кайрĕ. Партком ĕнерхи ларăвĕнче Христова рудник тытăм пуçлăхĕ тума йышăннине хыпарласа, директăр Йатман йенне çаврăнса ларчĕ. Автошофер-ударник пултарулăхне пула, вăрман урлă, çул чаплах пулмасан та, пĕр сийенсĕр сирпĕнсе тухрĕ.

— Хаљ сире—геолăгсене пирĕн сăрт-ту специалисĕсем улăштараççĕ. Христов Донбассри парторганизацисенче те ĕçленĕ çирĕп йулташ.

— Вичĕ çул çитет, тахçанах рудниксем уçмала пулнă. Йубилей хыççăн епĕ асăнатăп та ĕнтĕ,—директăрпа килĕшрĕ Йатман.

Вĕсем Ылттăвту руднике çитнĕ çĕре каç пулчĕ. Вăрман урлă курăнакан хĕвел кăтра пĕлĕтре йарăм-йарăм йун тымарĕ йачĕ.

Кăнтарлахи шăрăх карăнса килекен каçа парăнма хатĕр,—хăватсăрланчĕ.

Автомобил кĕпер урлă каçса рудник çурчĕсем патне сывхарсан çамрăксем йурлани илтĕнчĕ. Йатман Ерхип сассине авто чарăнса лăпланичченех уйăрчĕ.

— Сăвăç пур пирĕн, йăланах хăй йурăсем çырса йурлаттарса аппаланат,—авто кабинкинчен сиксе анчĕ вăл.

Большевиксен партиячен
Пире Обком саламларĕ...—
ҫывăхрах йурлаççĕ ҫамрăксем.

— Тĕлĕнсе кайăн унтан,—директăр йенне ҫавăрăнчĕ Йатман,—кашни кун ҫĕнĕ йурă ҫырат. Ел Мускава кайиччен марш йурлаттараччĕ, разведчиксен маршне, халĕ илтетне, каллех ҫĕнĕ йурă ҫырнă?

— Савăнăҫлă ĕç етеме йурлаттаратех, йурăсăр етем пурăнаймаст вăл,—афорисăмла каласшăн пулчĕ директăр, анчах тухмарĕ.

Большевиксен партиячен
Пире Обком саламларĕ,
Ылттăнтăвăн рудине
Ытларах тупма сунчĕ.

Йурлакан Ерхип йулташĕсем кантур умне чарăннă автопатне чупса пычĕç.

— Мĕнле марш ку?—пурне те алă парса тухрĕ Йатман.

— А, ес пĕлместĕн-ха... Пире пайан Обкомăн аслă секретарĕ Петров йулташ саламлă телеграм пачĕ. Ылттăнтуне ҫĕнтервĕшĕн—сана та тивет! Епĕр ушкăнпа йурă ҫыртăмăр, вăйă вăхăтĕнче хĕрипраççене вĕрентетпĕр. Рудник уҫнă кун тата хамăр хорпа клубра йурласа парас тетпĕр. Килĕшет-и?

Тата ҫур сехетрен каҫхи смена пуҫланмаллине пĕлтерекен пĕрремĕш сирена сасси шывсăр ҫырма тарăх вăрмана ҫитсе йантратрĕ. Ерхип ушкăнĕ ĕҫе кайма тăчĕ. Йатман Кируша чарса, вăл мĕншĕн салхуллă ҫӳренине ыйтрĕ

— Авланма шутларĕ те, анчах пулас арăмне качака таки сĕксе вĕлернĕ, тет,—култарчĕ Ерхип.—Теприн, тăка сĕкменнин, хăйĕнчен виҫĕ ҫул ҫеç аслă пулса та, 11 тулгарнă ачи пур, тет, иккĕмĕшĕ—проектра, тек куљанаť. Епĕ пĕтĕм чĕререн калап, ил, тетĕп, ик виҫ ачалине илсен схутнă, тетĕп, трукак ҫемйе пулат. Итлемест!

Кируш йăлтах питне усрĕ.

— Йе, ан ҫилен тата,—Кируш хулпуççинчен тĕртрĕ Ерхип, Епĕ шӳт туса ҫеç каларăм. Христов ҫитнĕ пуљ пирĕн, атăр, кайрăмăр, етсемĕрсем.

— Христов сирĕн бригадир-им?

— Бригадир.

— Есĕр ăна кунта, кантура килме калăр-ха,—Ерхипне Кируш ҫиве пăхса каларĕ директăр.

Хĕвеланăҫ пушшех катрамланчĕ. Урисем ҫĕр ҫинех пусрĕç. Вăл ҫын куҫĕнчен пытанас умĕн сирена иккĕмĕш хут мĕкĕрсе ĕҫе чĕнчĕ.

* * *

Ҫĕр айĕнче ĕҫлекенсене ҫанталăк мĕнле пулсан та пĕрех. Вĕсен—штољнăра, штрекра[1] хăйсен ҫанталăк, температурă та хăйсен. Ҫавăнпа та Ылттăнту умĕнчен иртекен ҫырма хĕрринчи

[1] Штољнă—шахтă, штрек—шахтăри ҫул.

спецтумтирлĕ шахтӑрсем хĕвеланăç йенне çаврăнсах пăхмаççĕ—пурте ĕçе кĕме хатĕрленсе, çакăлă ламписене хăшĕ чӳпĕкпе, хăшĕ çĕтĕкпе, хутпа тасатаççĕ.

Сменă инженерĕ кашни забойщчик хăш лавăна каймаливе пĕлтерчĕ.

Кируш шахтӑркине[1] тасатса пĕтернĕ май штоҙнă умĕнчи ушкăнра хăйĕн каттаҙне[2] шырарĕ. Сергей килмен.

— Манăн каттаҙ çук,—Кируш инженера пĕлтерчĕ,—Сергей пулса ман каттаҙ...

— Ун вырăнне тепĕр сменăран Сайанскине куçартăм, Сергей района кайнă.

Сменă инженерĕ штоҙнă пушаннине, кăнтăрла ĕçленĕ шахтӑрсем тухса пĕтнине астутарчĕ:

— Тытăнас!

— Епĕ икĕ кун çеç кайала вунтăххăрăмĕш лавăра пултăм...—хытах каларĕ сар сухаллă забойщчик.—Пайан та унтах каймала, шыв çинех каймала. Ман черет пайанах çитмен-ха, каймастăп унта.

— Шыв тухакан лавă пĕрре çеç мар, тата та пур,—сар сухала тин асăрханăн пăхса илчĕ инженер. —

— Пурпĕрех вунтăххăрăмĕшне каймастăп.

— Йе, пайан кай, тепринче...

— Кируш кайтăр!

— Кируш ахаҙ те шывлă çĕре кайат, çирĕм улттăмĕш лавăна кайат вăл.

— Кируш кайтăр, йаланах кăшкăрат: нормă та, нормă, тет, шыв тухакан çĕре кайса куртăр-ха вăл... нормă пули, кубометр пули...

Ĕçе кĕме вăхăт çитнипе инженер сар сухаллă забойщчике лăплантарат. Кируш шавласа тăма памарĕ.

— Йар мана! Вунтăххăрăмĕшне...—терĕ вăл инженер çине пăхса.

— Ес унта ĕнер кăна пулса,—килĕшесшĕн мар презент пиншаклă инженер.

— Ĕнер те пулнă, пайан та унтах кайатăп!

Сар сухаллă забойщчикĕн ирĕксĕрех Кируш вырăнне çирĕм улттăмĕш лавăна кайас пулчĕ.

— Ну, мучи,—ун çине пăхса кулчĕç штоҙнă ăшнеле утакан забойщчисем,—тинех Кирушпа ăмăртма тытăнас пулчĕ сан.

— Пасусĕ лайăх ĕçлет пулсан, ăмăртăп та,—кăшт кăмăлсăрланчĕ сар сухал.

Кăнтăр çуттинче палăрман шахторкăсем чĕрĕ сывлăшала йарса пусмассеренех реҙе сарнă çула кăтартса пыракан пулчĕç.

Хĕвеланăç йенчи пĕр штрек тĕлне çитсен Кируш хăй умĕнчен вагонеткă тĕртсе пыракан Сайански çине аллинчи лампин пĕр пайăркине ӳкерчĕ.

— Пирĕн купта каймала.

---

[1] Шахтӑркă—шахтӑр лампи.
[2] Каттаҙ—кăларнă рудана турттаракани.

— Вунтӑххӑрӑмӗш лавӑна пӗлетӗп-çке,—саснe пачӗ халиччен чӗнмесӗр пынӑ каттаҫ.

Лавӑна çитсе чарӑнсан вӗсем\хыççӑн тепӗр вагонеткӑ шӑлтӑртатса çывхарнине курчӗç.

— Епӗр те кунта

— Ес-им, Ерхип?—хуварне çӗрс лартрӗ Кируш.

— Епӗ, епӗ... йаланах пӗрле ӗçленӗ те, пайан та санран йулас мар терӗм.

Чи малтан лавӑна хырӑмпа шуса Кируш кӗчӗ, ун хыççӑн—Ерхип.

Сайанскипе тепӗр каттаҫ хӑйсен çунашкисене фосфорит руди туртса кӑлармa майларӗç.

Лавӑри шыв, насус çӑтса ӗлкӗрейменнипе, малтанлӑха забойшчиксене чӑрмантарчӗ, унтан, штрексем тӑрӑх çӳрекен техник пырса йусасан, руда сийне хӑйаккӑн выртса кайлӑпа кышлакансем текех ӗçлеме чарӑнмарӗç. Кашни ал лапки сарлакӑшӗнчен иртсенех хӑйсен çине пусакан лавӑ тӳпине хатӗр тӗрексемпе çирӗплетсе пыраççӗ. Сывлама йӑвӑр, нӳрлӗ, анчах темнçе çӗршер, пиншер çул пытанса выртнӑ çӗр айӗнчи пуйанлӑха парӑнтарса, пӗтӗм халпа кӳмккекен Кирушпа Ерхипе пӑчӑ та, хавас та.

Малтанхи вагонеткине тултарса штрек тӑрӑх штоҫнӑ патнеле тӗртсе кайнӑ чух Сайански унӑн забойщчикӗ мӗн чул руда пама пултарни çинчен шухӑша кайрӗ. Халиччен вӑл кӑнтӑрлахи сменӑра Сергач вырӑсӗсемпе ӗçленӗ те, Кируш хӑватне пӗлмест. „Шутласа пырас-ха, миçе вагонеткӑ пулӗ“—çавӑнтах кӑна тепӗр шухӑш путарчӗ.—„Забойшчик ӗçне вагонеткӑпа мар, кубометрпа шутлаççӗ“.

Çирӗм улттӑмӗш лавӑри сар сухаллӑ Караççа малтанхи забойпах кайлӑ аврине хуçса пӑрахрӗ.

— Йурамаст, йурамаст ытлашши кӑра пулма,—ӗхӗклетет унӑн тусӗ Пухвир,—чейе çынсем пуçпа паттӑр пулаççӗ, пуçпа паттӑр пулмала, тетӗп, Караççа хӑта, илтетне?.. Пуçра пулмасан, хут те мӗн чул ӗçле. Ӗç ухмаха йуратат теççӗ, хе-хе-хеее!—Пухвире сывлама йӑвӑр мар мӗн, текех Караççаран кулат. Ӗçлеме те чарӑнчӗ. Шыв сархӑннӑ тӳле тӑсӑлса выртрӗ те, каллех хайпе пӗрле ӗçлекен Караççана ӑса кӳртме тытӑнчӗ.

— Ӗç ухмаха йуратат, тетӗп, илтетне?

— Илтеп, илтеп, анчах мӗн тума çӳрен-ха, укçине кубометр тӑрӑх параççӗ вӗт?—тарӑхат Караççа.

— Ей, айван, хамран ыйтас пулат, кубометр та пулат, укçа та пулат,—лавӑ умӗнче каттаҫсем çук-и тесе пуçне çӗклесе пӑхрӗ Пухвир. Çывӑхрах сас-чӳ илтӗнмест. Хӑвӑрттӑн хӑй вырӑнне çаврӑнса сылтӑм чавси çине тайӑнчӗ те, Караççана тӗрек çине тӑсса кӑтартрӗ:

— Ак çакна çеç кайала куçарас пулат, вара малала чавмасӑрах малала кайнан курӑнат.

— Ишӗлсе анми?—куçне пысӑклатат Караççа.

— Ей, мулкач чӗри, хӑрасан нихçан та ӗç тухмаст, каттаҫсем çитиччен çакна пӗрер çур метр куçарар-ха.

— Асту, ишӗлсе анасран хӑруш, тӗм курса тӑрӑн...

Штрека пӑрӑнсанах икӗ каттаҙ чӗтресе ӳкрӗҫ, ҫирӗм улттӑмӗш лавӑ тӗлӗнче тӗрексем шӑтӑртатса хуҫӑлни илтӗнчӗ. Вӗсен куҫне тӑруках хӑрушӑ картин курӑнса кайрӗ: штрек икӗ айӑккипе тип-тикӗс шӑл пек ларакан йуман тӗрекӗсем пӗрин хыҫӗнчен тепри йӑванса пыраҫҫӗ. Хӑйсене чӗрӗлех тупӑк ӑшне хурса шӑтӑка чикнӗн туйӑвнӑ икӗ каттаҙ ҫухӑрса йанӑ ҫӗре ҫывӑх лавӑран хыпаланса тухнӑ забойщиксем чупса пычӗҫ. Вӗсене курсан икӗ каттаҙ та чун кӗнӗ пек пулса куҫӗсене уҫса пӑхрӗҫ—штрек ҫав-ҫавах йуман шӑлтунисене кӑтартат.

— Мӗн пулнӑ?—пӗр харӑс кӑшкӑрчӗҫ штоҙнӑ йенчен шахторкӑ ҫуттине хумхатса чупакансем.

— Ей, ҫул пар!—вагонеткине чуптарсах иртсе кайрӗ пӗри.

— Мӗн пулнӑ, кам ку?

— Ей, чарса ан тӑр, ҫын вилет кунта,—тата хайаррӑн кӑшкӑрчӗ Сайански.

— Караҫҫине туртса кӑлартӑм, Пухвирне ӗлкӗреймерӗм,—хыпарларӗ хулӑн сас.

— Ӑҫта вал?

— Караҫҫа ӑҫта?

— Вагонеткӑпа тухтӑр патне ӑсатрӑмӑр.

— Йушкӑн-и мӗн кунта?

— Пухвирне кӑларасчӗ ..

— Вӑл пурпӗрех чӗрӗ йулман ӗнтӗ...

Хунарӗсене ҫутатакан ушкӑн хушшинчен ишӗлнӗ лавӑ йенне Кирушпа техник йарса пусрӗҫ.

— Инженера чӗнсе килес.

— Ун патне паҫӑрах чупнӑ.

— Ей, кунта лавӑ пӗтӗмпех хупланнӑ, хунарсемпе килӗр-ха,—чӗнчӗ техник.

Айакра тӗрексем шатӑртатни илтӗнчӗ.

— Айала пулас тетрим, чупӑр часрах хам хыҫҫӑн,—штоҙнӑ йенне лапӑстатрӗ пӗри.

— Кирек-камӑн та вилес килмест,—йерипентерех каласа хӑвӑрттӑн утса кайрӗҫ ик-виҫ ҫын.

Ушкӑн сайралчӗ.

Тепӗр пилӗк минутран штрека Кирушпа техник ҫеҫ тӑрса йулчӗҫ.

Штоҙнӑран чупса тухнӑ шахторсем хӑйсем хушшинче кам пуррине суккине тӗрӗслеҫҫӗ.

— Караҫҫа ҫук.

— Пухвир ҫук.

— Техникпа Кируш ҫук ..

Шавласа вӑратнӑ ушкӑн патне сменӑ инженерӗ те ҫитрӗ.

Хуралҫӑсем йупа тарринчи хунарсене пурне те ҫутатрӗҫ. Вӑраннӑ-вӑранмапах ИТР ҫуртӗнчен сиксе тухрӗҫ. Общежитисенче ҫывӑракансем те вӑранчӗҫ.

— Тата кам ҫук?

— Сайански ҫук.

— Сайански тухтӑр патне чупнӑ...

— Технорука кайса чӗнӗр,—рудник пуҫлӑхӗн сасси штольнӑ умӗнче хумханакансене лӑплатрӗ.

— Еп кунта-ҫке,—терӗ ҫарамасах чупса килнӗ техноруk.

— Кунта шавланипе ним те тухмаст, чарӑнӑр-ха, йулташсем!..

Штольнӑ ӑшӗнчен тата икӗ хунар курӑнчӗ. Вӗсем Кирушпа техник пулчӗҫ.

— Лавӑ пӗтӗмпех пусӑрӑннӑ пулмала, те ҫын пулнӑ унта, те тухса ӗлкӗрнӗ, ним те пӗлме пултараймарӑмӑр,—йӗркелӗн каласа кӑтартрӗ Кируш.

— Пухвир пулнӑ унта.

— Раз кунта ҫук вӑл...

— Паллах...

— Тухма пултарайман вӑл...—харкашса илчӗ ушкӑн.

Катастрофӑ хӑш вырӑнта пулнине тӗпчесе пӗлнӗ техноруk хупланнӑ лавӑна уҫмашкӑн васкамалине пӗлтерчӗ. Рудник пуҫлӑхӗ кайлӑ вырӑнне кӗреҫесемпе лумсем йӑтса хӑй хыҫҫӑн утма каларӗ. Ун хыҫҫӑн штольнӑ ӑшнеле техноруk, Кируш, техник, сменӑ инженерӗ, Ерхип, Йатман, рудком председателӗ паттӑррӑн йарса пусрӗҫ.

— Ну, кайрӑмӑр-и?—ыйтнӑн турӗ штольнӑ умне тӑрса йулнӑ шахторсенчен пӗри.

— Вӑрманта йӑвӑҫ ҫапса вилейменнине, кунта хам ирӗкрен ҫӗр айне кӗрсе выртса вилеймӗп-ха,—мӑкӑртатрӗ тепри.

— Ылттӑн муклашки выртат, кӗрсе ил, хӑвнах пулӗ тесен те кӗрессӗм ҫук.

— Епӗр кӗместпӗр!—штольнӑ ӑшне утакансем хыҫҫӑн кӑшкӑрчӗ пӗчӗк ушкӑн.

— Кунтан йултӑр...

— Халь йалта та, колхозрах ӗҫлетӗп пӗрех хутне.

— Халех рашчут илетӗп!..

Хӗвел тухӑҫӗнче шурӑмпуҫ кӑвакарчӗ.

Сиренӑ ирхи смевӑра ӗҫлекенсене хатӗрленме астутарса Ылттӑнту хӗрринчи ҫырмана вӑрмана ҫитичченех йантратрӗ. Вӑхӑт пӗлӗте улалатса хӗвелтухӑҫнеле васкарӗ.

Ҫур сехетрен ҫав йанравлӑ сасах икӗ хутчен мӗкӗрчӗ. Рудник патне пыракансем курӑнмарӗҫ—пурте ҫӗрлехи хыпарпа хӑраса ӳкнӗ.

Ишӗлсе хупланнӑ лавӑна тасатнӑ ҫӗрте техноруk, Христов, Йатман, смена инженере, икӗ техник, рудком председателӗ тата Кирушпа Ерхип ӗҫлерӗҫ... Сайански йулашкинчен ҫеҫ ҫитрӗ – Караҫҫапа пӗрле тухтӑр патӗнче пулнӑ вӑл.

— Мӗнле?—лавӑна тасатакансем пурте ун ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗҫ.

— Тӑна кӗчӗ, вилмест, терӗ тухтӑр.

Пысӑк шахтӑсенчи катастрофӑран хӑтаракан командӑ вырӑнне ӗҫлекен пӗчӗк ушкӑн ишӗлнӗ лавӑна хӗвел тухнӑ ҫере тасатса пӗтерчӗ. Тӗрекӗсене те ҫӗнӗрен лартрӗҫ. Пухвир ҫук. Пухвир айала пулман. Ӑҫта-ши Пухвир?

1938 ҫ.

МРАҪККА МИКИХВЕРĔ.

# АВАН ПУРĂНАТПĂР.

5 АКТĂЛĂ ПЬЕСА.

Чăваш ĕçхалăхне ĕмĕрĕпе çыхлантарса тăракан кив хăнăхусене, кулаксене тата кулакла саботажа çапса салатса, иртен те ир тыр㸠акса хăварса, нихăçан пулман тырă тухăçне илсе, зажитăчнăй пурнаçпа пурăнма тытăннă социалисăмла уйхир паттăрĕсене—колхозниксене çак пьесăна халавлатăп.

**Автăр.**

**ВЫЛЯКАНСЕМ:**

1. **Кришша**—колхоз председателĕпе йалсовет председателĕ. Комунис.
2. **Ануи**—Кришша арăмĕ.
3. **Укçине**—Анукăн амăшĕ, ватăскер.
4. **Саҫук**—çамрăк хĕр. Комсомол йачейки секретарĕ. Бригадир.
5. **Татйана**—колхозницă.
6. **Çитăр** — хуралăç, колхозник
7. **Паљук** —йединоличник.
8. **Матĕрне** — активиска.
9. **Васухха** — Паљук арăмĕ.
10. **Петĕ** — комсомолĕс.
11. **Мансăм** — счетовод.
12. **Усăп** —ĕлĕкхи куштан.
13. **Усланкин** — милиционер.
14. **Таис** — Усланкин арăмĕ.
15. **1-мĕш çамрăк** — пуштăпа çÿрекен.
16. **1-мĕш хĕрĕ.**
17. **2-мĕш хĕрĕ.**

**Оркестр. Радио. Ваййари колхозниксем, йединоличниксем.**

## ПĔРРЕМĔШ АКТ.

Сценă пусăра. Йал йенче пусă хапхи. Тырă амбарĕсем курăнса ларaççĕ. Укăлча карти çумĕнче ирĕлсе пĕтеймен йур куписем курăнса выртаççĕ. Сакăлта çеремре вĕçне хăма çапнă йупа чăсăлса выртат. Айаккинерех сăхмансем выртаççĕ.

**1-мĕш курăнни.**

Инçетре радио тăрăх савăнăçлă кĕвĕ калавă сасă илтĕнет. Петĕ пĕчченех. Йупа çинче чăсăлса выртат. Ыйха кайнă. Сакăлтара чĕртнĕ вут ваисăррăн çунса выртат.

**2-мĕш курăнни.**

Васуххапа Укçине тухаççĕ.

Васухха. Вăт сире колхоз...

Укçине. Ырлăхах ма-а-р... Йĕрсе куççуљ тухмаст... Ей, пÿлĕхçĕ-ĕм...

Васухха. Мĕн тусан та Кришша тăват. Тупнă есĕ кĕрӳ, Укҫине. Савăн ĕнтĕ!

Укҫине. Кĕтмен, Васухха. Пултаракан ҫын терĕмĕр. Ырлăхах ма-а-р-р...

Васухха. Праҫникне, праҫник шутламаҫҫĕ. Ырă ҫынсем пайанхи кун ҫĕре йапала ӳксен илмеҫҫĕ. Есĕр ҫĕре хускататăр. Ăҫтан турă тӳсĕ? Тĕнче пĕтни ҫак пулчĕ ĕнтĕ.

Укҫине. Ей, пулĕхҫĕм, (сăхсăхса) мĕн калаҫасси пур вара... Выҫах йулатпăр ĕнтĕ кăҫал.

Васухха. Турă тавăрĕ-ха. Ыгла асса кайнă.

Укҫине. Ырлăха ма-ар... Ей, пӳлĕхҫĕм...

(Петăран иртсе кайса курăнми пулаҫҫĕ).

## 3-мĕш курăнни.

Петă ҫаплах выртса йулат. Сценă хыҫĕнче пăшал пенĕ сасса илтсе, шарт сикнипе вăранат те, пăхкаласа ларат. Асилсе хăй тĕллĕн кулат, йупа ҫине чăсăлса выртса хăма ҫине ҫырма тапратат. Ыйхăлă сассипе йурлат.

**Петă.** Пирĕн йалта хĕрсем пур,
Пирĕн йалта хĕрсем пур.
Пирĕн йалăн хĕрĕсене
Виличчен та ма-а-а-а... (анаслат).
Манас сук...
Сирĕн йалта хĕрсем ҫук,
Сирĕн йалта хĕрсем ҫук.
Сирĕн йалта хĕрсем ҫук та—
Ҫавăнпа йалăн илем ҫук.
Сирĕн йалта хĕрсем ҫук та—
Ҫавăнпа йалăн илем ҫук.

(Каллех анасласа ыйха кайса сĕнксе выртат).

## 4-мĕш курăнни.

Пĕр ушкăн йусав тумланнă хĕрачасем йалтан тухаҫҫĕ.

1-мĕш хĕрĕ. Атсемĕрсем! Петă мар-и ҫав?

2-мĕш хĕрĕ (кăшкăрса чĕнет). Петă!

Петă (хĕрсен сассипе ыйхăран вăранса). Мĕн?

1-мĕш хĕрĕ. Есĕ мĕн... йумăҫ пăхса выртатна?

Петă. Хашне чуптăвам-ши тесе шухăша кайнă ха. (Хăйпатне ҫывхарнă хĕрсене тытма хăтланат). Христос воскрес! (Хĕрсем тыттармаҫҫĕ). Еккай, есĕр... Ăҫта таратăр? Пайан чуптумали кун-ҫке! (Каллех тытма хăтланат). Христос воскрес!

1-мĕш хĕрĕ. Виҫ-тăват кăвас чĕрес! (Хĕрсем кула-кула чупаҫҫĕ).

2-мĕш хĕрĕ. Сире комсомолсене мункунта чуптума йурамаст.

Петă. Чуптумастăр-тăк, пит кирлĕ тата! Хăвăр чиркӳне кайатăр.

1-мĕш хĕрĕ (иртсе кайсан). Петă! Каҫ купăспа вăййа тух.

Петă. Чуптумарăр. Тухмастăп. (Хĕрсем кайаҫҫĕ).

## 5-мĕш курăнни.

(Петă пĕчченех йурласа хăй вырăнне таврăнат).
Пирĕн йалăн хĕрĕсене
Виличчен те манас ҫук.

### 6-мӗш курӑнни.

Ҫ и т ӑ р. Петӑ!

П е т ӑ. А-а... Ҫитӑр пичче? Ну, шартах сиктертӗн есӗ мана. Хӑватлӑ перет сан пӑшалу.

Ҫ и т ӑ р. Мӗн ырлӑхшӗн савӑнса йурлатӑн?

П е т ӑ. Ӑвран карӑм, Ҫитӑр пичче. Ирех акма тухассипе каҫ ҫывӑрайман та, тӑмана сӑхат те ҫӑхат. Йурлавинчен те хӑрамаст. Пите йурпа ҫуса та пӑхатӑп. Йурат есӗ пӑшал персе вӑратрӑн.

Ҫ и т ӑ р. Йурлама мар, макӑрса куҫҫуљ тухмаст пайан. Тур ҫырлахтӑр.

П е т ӑ. Макӑрмала? Ан тӗлӗнтер, Ҫитӑр пичче. Пайан савӑнмали кун. Тулӑ акатпӑр. Тулӑ!

Ҫ и т ӑ р. Кулач ҫитерсе савӑнтаратӑр ӗнтӗ кӑҫал.

П е т ӑ. Пуринчен малтан акса пӗтерсе преми илесчӗ-ха, Ҫитӑр пичче.

Ҫ и т ӑ р. Преми? Тур ҫырлахтӑр. Петӑ, ачам, ҫӳҫ тӗпӗсем ыратакан пулчӗҫ пайан. Выҫах йулатпӑр. Кам, хӑҫан ку вахӑтра тырӑ акни пулнӑ? Ӗлӗкхи ҫынсем нимӗн те пӗлмен, пӗлмеҫҫӗ, тесе шутлатӑр есӗр. Тырӑ акса курман-и епӗр? Вӑрлӑх ҫӗрсен ӑҫтан тупӑпӑр?

П е т ӑ. Ӗлӗкхи йӑлапа акса пӑхрӑмӑр та, пӗлтӗр гектартан хӗрӗх пӑтран мала тухмарӗ. Хӗрӗх пӑт илнипе хӑҫан пуйан пулма пултарӑпӑр епӗр? Тырӑ тухӑҫне хапартассипе кайа йулнӑ епӗр, Ҫитӑр пичче. Кайа йулнисене ҫапаҫҫӗ, тет Сталин йулташ. Пӗркунне Кришша ӑнлантарса папине маннӑ-и есӗ?

Ҫ и т ӑ р. Кришша? Пурте пӗр йышшисем есӗр. Кипке ӑшӗнчен тухман, вӗрентме хатланатӑр. Выҫӑ йулсан, ӑҫта кӗрсе кайатпӑр?

П е т ӑ. Чеснӑй словӑ, Ҫитӑр пичче. Тула во! пулат. Еп ҫеҫ мар, Кришша та ҫапла калат. Кришша ҫеҫ-и вара, районта... „Канаш" ҫине те ун ҫинчен пӗрмайах ҫыраҫҫӗ.

Ҫ и т ӑ р. Во пулат сав, во! Тур ҫырлахтӑр..

П е т ӑ. Ман васкамаля, Ҫитӑр пичче. Кришша йединоличниксен ҫӗрне валеҫнӗ ҫӗре пыма хушса хӑварнӑччӗ. Саљука, килсен, кала, ҫырса пӗтертӗм епӗ. Йупине хӑйсем шаккаса лартчӗр. Миҫе га, хӑҫан акма тухнине те палӑртса ҫыртӑм хӑма ҫине. (Ыйӑх килнипе аваслаcа, гимнастикӑ туса илсе, кайат).

### 7-мӗш курӑнни.

Ҫитӑр пӗчченех, табак кӑларса чӗлӗмӗ ҫине тултарат. Хӑй теллӗн ассӑн сывласа (Тур ҫырлахтӑр!..) вучахран кӑварпа чӗлӗмне чӗртсе, паклаттарса туртса ларат. Хӑй пӗрмайах пӗлӗт ҫине пӑхкалат.

### 8-мӗш курӑнни.

Пус хапхинчен тухса Паљук килет. Ӗҫне хӗреслесе улӑм ҫыхнӑ патак йӑтнӑ. Пиншак ҫинчен ҫыхнӑ пиҫихи хушшине пуртӑ хӗстернӗ. Хӗрӗнкӗрех.

П а љ у к (Ҫитӑр тӗлне ҫитсен). Йакунӑ-ванӑ... Ан ҫилен... Ҫитӑр ку-ум! Праҫник йачӗпе сыпрӑм-ха пайан.

Ҫ и т ӑ р. Тур ҫырлахтӑр. Мӗншӗн ҫиленес, Паљук кум.

Паҫук (Ҫитăра ал парса). Христос воскрес!

Ҫитăр. Воистин воскрес! (Иккӗшӗ ыталаса чуптăваҫҫӗ).

Паҫук. Йакунă-ванă... Есӗ мӗн пăшалсемпех ҫӳрен?

(Ҫитăр Паҫук сăмахне йуплемесӗр пӗлӗт ҫивеле пăхат. Пăшалне тӗлезе пӗр вырăнтах чарăнса пеме хатӗрленет).

Паҫук (хăраса). Ҫитăр кум! Ан ухмахлан!

Ҫитăр. Ҫапла епӗр, Паҫук кум, пусра та пăшалсемпе ҫӳреме пуҫларамăр. Есӗ те кӗместӗн-е колхоза? Кӗр!

Паҫук. Пăшал пеме-и? Йакунă-ванă... Пулмаст, кум! Епӗ Герман вăрҫинче те пайтах пенӗ.

Ҫитăр. Кулач... ҫиме... кулач...

Паҫук. Кулач ҫиме? Йакунă-ванă...

Ҫитăр. Курмастни мӗн,—епӗр кулач акатпăр, кула-а-ач .. Тур ҫырлахтăр.

Паҫук. Ман пуҫ мăй ҫинчех ларат-ха, шеллетӗп сире, Ҫитăр кум. Выҫах йулатăр кăҫал, йакунă-ванă...

Ҫитăр. Ăҫта кӗрсе кайас тен. Пӗтни пуҫӗ ҫак пулчӗ ӗнтӗ. Чун тăвăлланнипе пӗрре ӗҫем тенӗччӗ пайан. Ерехне-сăрине те хатӗрленӗ. Куҫăм ҫутҫанталăка ан куртăр тенӗччӗ.

Паҫук. Йакунă-ванă. Мана пуҫланă литра ӗҫсе йама памарӗҫ Пушар тухнă пек хăвалат Кришша.

Ҫитăр. Ăсран кайса айкашаҫҫӗ. Микулни ҫитмесӗр аксан хăҫан тырă пулни пур? Кулач ҫитерсех вӗлереҫҫӗ кăҫал. Каҫ хамăр пата пырса лар, кум. Пӗрех хутчен ӗҫсе йулас. Пурӗ-пӗрех пӗтетпӗр, тур ҫырлахтăр анчах.

Паҫук. Ху пыр, Ҫитăр кум. Тыр акасси тармаст. Мункун ҫулталăкра пӗррех килет, йакунă-ванă. Ху калашле, Микулниччен вăхăт пайтах.

Усăп сасси (сценă хыҫӗнче). Пăрахăр! (Ҫынсем шавлама пуҫланă сасă илтӗнме пуслат).

Паҫук. Кам ҫав? Мӗн кăшкăраҫҫӗ унта, йакунă-ванă!

Ҫитăр. Камӗ-мӗнни? Пирӗн бригадă... Тур ҫырлахтăр... Ăҫта кайаҫҫӗ кусем?

### 9-мӗш курăнни.

Сценă хыҫӗнчен Усăп, Татйана, вӗсен хыҫӗнчен тата 7—8 ҫын васкаса килеҫҫӗ. Тырă акакан пураксем йатнă.

Ҫитăр. Усăп, ăҫта кайатăр? Акса пӗтертӗр-и?

Паҫук. Хай кулача акса пӗтернӗ вӗт сирӗн колхоз, йакунă-ванă... Матур... Матур ӗҫлеҫҫӗ.

Усăп. Ҫак шăн ҫине акма раҫвӗ совет хушат? (Пуракне ывăтса йарат).

Ҫитăр. Мӗн калаҫасси пур вара...

Паҫук. Калап вӗт, йакунă-ванă. Урăх нихăш йалта та акма тухнине каламаҫҫӗ...

Усăп. Кришша тăм пуҫӗнчен урăх никам та шухăшласа кăларма пултарас ҫук ку ӗҫе, халăх.

Татйана. Кам шутласа кăларат̆ пулмасăр.

Усăп. Раҫӗ кайран выҫах вилмешкӗн колхоз тунă епӗр, йе?

Татйана. Вăрлăха сайа йани ҫеҫ пулат. Пӗтнӗ пуҫӗ ҫакă ентӗ.

Ҫ и т ӑ р. Тепӗр тесен... Кам хӗсӗрлесех актарать пире?

У ҫ ӑ п. Раҫҫӗ хамӑр ӗҫпе хамӑр хуҫа пулма пултараймастпӑр епӗр?

П а љ у к. Сирӗн пирки пире те хӑвалаҫҫӗ. Пирӗн мӗн ӗҫ пур, йакунӑ-ванӑ. Колхоз тунӑ тӑк, хуть те пуҫӑрсене ҫапса ҫӗмӗрӗр.

Ҫ и т ӑ р. Преми кирлӗ вӗсене... Преми...

У ҫ ӑ п. Вӗсене преми. Пире выҫлӑх!

Т а т й а н а. Йалӗпе праҫник тӑваҫҫӗ. Пайавхи кун тыр акма тухнине кам илтни пур? Акмастпӑр!

Ҫ и т ӑ р Ним те пулас ҫук...

**10-мӗш курӑнни.**

Матӗрнепе Саљук чупса килеҫҫӗ.

Саљук (тӑвӑлланса). Мӗншӗн акма чарӑнтӑр?

М а т ӗ р н е. Йӗркерен тухса айкашатпӑр ҫав вара.

Т а т й а н а. Кришша пуҫӗ ҫине кайса акӑр. Кришша пуҫӗ ҫине...

П а љ у к. Тӳсмеле мар сивӗ. Ҫӗр ҫинчи пӑр ӑшӑнса ҫитеймен. Есӗр тыр актаратӑр, йакунӑ-ванӑ.

Ҫ и т ӑ р. Тур ҫырлахтӑр. Йур та ирӗлсе пӗтмен... Ҫак ҫӗр ҫине аксан тырӑ пулать-и?

М а т ӗ р н е. Тупнӑ ҫав вара есӗр сӑлтав Тыр пулмасан кам актарать-ши? Ман хам участка акса пӗтересчӗ. Есӗр кирек-мӗн тӑвӑр. (Васкаса кайать).

С а љ у к. Есӗр, мӗн? Тата пумайччен тӑратра чӑркашса? Йе бригадӑ намӑса кӗтӗр тетӗр-и?

У ҫ ӑ п. Акасси акӑпӑр та, Саљук, тырӑсӑр йулсан кам тӑрантарӗ пире? Кам?

Т а т й а н а. Шӑркаљчӑк, есӗ тӑрантаратни? Кришша тирӗнчен ҫӑнӑх туса паратӑр-и? Тыр акасси комсомолра вӗлтлеттерсе ҫӳресси мар вӑл

У ҫ ӑ п. Хӑйсене вӑрлӑх вырӑнне сапаламала

П а љ у к. Пӑтратаҫҫӗ халӑха, йакунӑ-ванӑ

**11-мӗш курӑнни.**

Макҫӑм васкаса килет.

М а к ҫ ӑ м. Мӗншӗн акма чарӑнтӑр?

У ҫ ӑ п. Раҫҫӗ совет хушать ҫак шан ҫине акма?

П а љ у к. Макҫӑм! Есӗ ӑслӑ ҫын. Правлениче те ларан. Каласа пар тӗрӗссипе. Ман пилӗк ача. Тырӑсӑр йулсан кам тӑрантарӗ вӗсене, йакунӑ-ванӑ...

М а к ҫ ӑ м. Епӗ мӗн пӗлетӗп вара. Епӗ пӗчӗк ҫын, йулташсем. Манран ӑслӑраххисенчен ыйтӑр. Иккӗмӗш бригадӑ та акма чарӑннӑ.

С а љ у к. Макҫӑм?

М а к ҫ ӑ м. Конешнӑ акмала, Саљук. Епӗ хам икӗ ҫул Хӗрлӗ ҫарта страдал. Пӗлетӗн.

Т а т й а н а Иккӗмӗш бригадӑ салавнӑ. Епӗр мӗн туса тӑратпӑр тата?

Ҫ и т ӑ р. Киле каймала анчах...

Паҁук. Сирĕн хыҫран епĕр те.. йакунă-ванă.
Уҫăп. Саланăр! саланăр! (Каймa хатĕрленсе сăхманĕсене такăнма пуҫлаççĕ).

## 12-мĕш курăнни.

Ҫулпа васкаса Кришша килет. Кришшана курсан шав пăртак лăпланат. Хăшĕ акма кайаççĕ.

Кришша (ушкăн патне ҫитсе). Саҁук, мĕншĕн акма чарăнтăр?
Саҁук. Шăн тесе пăрахрĕҫ, Кришша.
Максăм. Иккĕмĕш бригадă та акма пăрахрĕ, Кĕркури Петровчă.
Кришша. Мĕншĕн пăрахнă?
Максăм. Каларăм акмала тесе.
Уҫăп. Раҫĕ ҫак шăнпа аксан тыр шăтат?
Татйана. Пăрахмасăр. Епĕр те пăрахатпăр. Выҫă йулсан есĕ тăрантарас ҫук пире!
Ҫитăр. Тур ҫырлахтăр, Кришша Тырасăр йулсан аҫта кĕрсе кайатпăр?
Кришша. Есĕр мĕн, шут тусах тыр акасса чăрмантарас тетĕр-и?
Паҁук. Кришша!
Кришша. Есĕ мĕншĕн ҫĕр валеҫнĕ ҫĕртре мар, Паҁук пичче?
Паҁук. Ан йатлаҫ-ха, йакунă-ванă. Лăплан. Епĕ совета хирĕҫ ҫын пулман. Пур заданисене вăхăтра тӳлесе пыратăп.
Кришша. Вара?
Паҁук. Тыр пулмасан кам ответ тытат, йакунă-ванă.
Татйана. Ăна мĕн?... Анукне лартрĕ те, вĕҫтерчĕ. Хăвала кайран.
Уҫăп. Шыра!.. (Халăх шавлама тапратат).
Кришша Кам калат тырă пулмаст тесе?
Уҫап. Кам акнă ку вăхăтра?
Ҫитăр. Тур ҫырлахтăр... те хăй нумай акса курнă ҫын ку!
Татйана. Епĕр халиччен тыр акса курман ҫынсем-и?
Уҫăп. Ĕлĕкхи йăласене пăсса тырă тăваймăпăр. Халăх! Микулниччен аксан тырă хăҫан пулни пур? Развĕ епĕр колхозĕпе Кришшаран ухмах? Акмастпăр. Киле кайатпăр! Саланăр!
Паҁук. Чимĕр-ха Ман сăмаха ан пӳлĕр есĕр, йакунă-ванă. Кришша, есĕ тырă пулат тетĕн. Йурат. Ун ҫинчен хĕл хутах илтнĕ епĕр. Ăнлантарни паха. Тырă пулмасан совет тăрантарат тесе ал пусса пама пултаратна, йакуна-ванă?
Ҫитăр. Йе? Совет тарантарат тесе ал пусса пар.
Татйана. Ачасене те тăрантаратăп тесе, ачасене те.
Максăм. Ковечнă ал пусса парат.
Саҁук. Ҫырса пар, ача. Вара акма кайĕ.
Кришша. Ним тесе те ал пусса памастăп.
Татйана. Харатăн-и? Тырă пулмассине ху та пĕлетĕн-и? Ҫавăнпа ал пусса пама хăран.
Уҫап. Куртăра, халăх? Мĕн пахса тăратăр? Саланас.

Татйана. Хут те кирек-мӗн калӑр Епе акмастӑп. (Кайат).

Сасасем. Айтӑр! Айтӑр!

Кришша. Саҫук, Татйанана пилӗк кун штраф! Тата кам? Кам партипе совет влаҫӗ хушнисене ӗненмест? (Халӑх пӑлханат).

Паҫук Ӗненмесӗр-и вара... йакунӑ-ванӑ..

Кришша. Есӗ, Паҫук пичче, каҫ йалсоветне пыратӑн Кирлех пулсан унта ал пусса парӑп.

Паҫук. Епӗ ҫӗр валеҫме кайатӑп терӗм-иҫ... (Кайат). Йаккунӑ-ванӑ.

Кришша. Сан ҫинчен, Мишуткин, правленинче уйрӑм сӑмах тапрататпӑр.

Уҫӑп. Правленипе ан хӑрат. Раҫӗ правленине хамӑра выҫӑ хӑварма суйланӑ епӗр? (Колхозниксем тырӑ акма кайнине астуса). Мана мӗн, епӗ йалпа пӗрле. (Васкаса кайат).

Кришша. Макҫӑм, епӗ тепӗр бригади патне чупатӑп. Есӗ васкаса сведени ҫырса хатӗрле. Акма тухни ҫинчен РИК-а пӗлтерес пулат.

Макҫӑм. Конечнӑ, Григорий Петрович. Веҫ пуштӑ килет. Хаҫат таврашӗсене те илсех кайам.

Кришша. Йурат.

## 13-мӗш курӑнни.

Ҫитӑрпа Кришша.

Ҫитӑр. Тур ҫырлахтӑр, Кришша. Тӗнче кулли пулатпӑр каҫал. Итле мана. Йачӗпе акатпӑр та, ҫитӗ. Есӗ те тасана йулӑн. Колхозшӑн та аван пулӗ.

Кришша. Ун ҫинчен калаҫса татӑлнӑ, Ҫитӑр пичче. Есӗ хӑв ӗҫне ан ман.

Ҫитӑр. Хут те тем ту. Епӗ пӗчӗк ачасем вырӑнне кураксене хаваласа ҫӳрессӗм ҫук. Пӗрех хутчен курансем ҫисе савӑнччӗр. Хӑтар мана ку ӗҫрен. Тур ҫырлахтӑр. Тата хам тулӑ ҫинче хамах таптаса ҫӳреме кимӑл ҫук ман.

Кришша. Сыхлан . Сыхлас килмест пулсан, каҫ правленине пырса кала. (Кайат).

(Ҫитӑр ним шарламасӑр пӑхса тарса сцени хыҫнеле кирсе кайат. Колхозниксене хирӗҫ ҫулпа пӗр ҫамрӑк пуштар сумкине йатса килет. Хаҫатсем, журналсем пур).

1-мӗш ҫамрӑк (ывӑннӑ сасӑпа). Пуштӑ... Пуштӑ. Тыр тухӑсӗшӗн кӗрешекенсем валҫи—„Канаш“. Савнисем валҫи—ҫыру. Йулхавсене—„Капкӑн“... „Сунтал“... „Трактӑр“ журналсем пур.

Матӗрне (тыр акнӑ ҫӗртен 1-мӗш ҫамрӑк умне чупса тухат). Мана валҫи ҫыру пур-и? (Ыттисем те пуштӑпа ҫӳрекене сӑранса илеҫҫӗ).

1-мӗш ҫамрӑк. Пур, пур, Матӗрне аппа. (Ҫыру кӑларса парат).

Матӗрне. „Ӗҫхӗрарӑмӗ“ ҫырӑнначчӗ епӗ ҫав вара.

1 мӗш ҫамрӑк. Ме акӑ „Ӗҫхӗрарӑмӗ“. (Матӗрне журналпа ҫырӑне илсе айаккинеле кайса вулама тытӑнат).

Саҫук. Мана „Канаш“ пар-ха, ача.

Паҫук. Мана „Капкӑн“.

Петӑ (сӑнчӑр сӗтӗрсе васкаса пырат). „Сунтал“ пур-и?

1-мěш ҫ а м р ă к. Чимěр-ха.. Есěр йěркелě пулăр. Ăҫта пурте харăс тăрăнатăр. Черет тăрса кайăр.

С а с ă с е м. Калаҫса вăхăт иртерсе тăратăн. Ěҫе ваcкамала пирěн.

1-мěш ҫ а м р ă к. Манран тухнă йăла мар... Малтан бригадиртен пама пуҫлатăп. Акă сана, Саҫук. „Канаш" тата савнинчен ҫыру. (Саҫук хаҫатпа ҫыруне илсе айаккин ле кайса тăрса вулат. 1-мěш ҫамрăк ыттисене те—хăшне хаҫат, хăшне журнал парат).

П е т ă. „Сунтал" ăҫта?

1-мěш ҫ а м р ă к. Пичетленет терěҫ...

П е т ă. Виҫ уйăхранпа пичетлеҫҫě ěнтě Ав йепле ударниксем вěсем...

П а ҫ у к „Капкăн" пар-ха мана.

1-мěш ҫ а м р ă к. „Капкăн" ҫук... „Капкăн" хуҫи пирěн районта „теҫонкăсене" тытма тухсан, Хура-ҫырмана кайса урине амантнă хыпар пур... (Кайат). Пуштă.. Пуштă... Тырă тухăҫěшěн кěрешекенсем ваҫҫи—„Канаш". Савнисене—ҫыру, йулхавсене—„Капкăн"...

М а т ě р н е (хавасланса). Иҫушран, Иҫушран. Кěркунне киле таврăнатăп тесе ҫырнă ҫав вара. (Ҫыруне хěвне чикет)

С а ҫ у к (хаҫатсене тěпке тусса). Акма кайас. Хаҫатсене кăнна чухне вулатпăр...

П е т ă Паҫук пичче! Айта часрах. Сăнчăр туртса сан йату тěлне ҫитрěмěр.

П а ҫ у к. „Капкăн" памарěҫ, йаккунă-ванă. (Петăпа иккěшě кайаҫҫě).

М а т ě р н е. Ман акмали нумайах йулмарě. Часрах пěтересчě ҫав вара. (Пуртса кайаҫҫě).

М а к ҫ ă м. Саҫук!

С а ҫ у к Мěн, ача?

М а к ҫ ă м. Ҫыру камран?

С а ҫ у к. Сава мěн ěҫ. Есě, счетовод тесе, пурне те пěлесчě... Савнинчен... хěрěн хěрěх тус тенине илтмен-и есě?

М а к ҫ ă м. Ан йěрле, Саҫук. Тўсеймест ман чун.

С а ҫ у к. Кăвěҫен мар-и есě, ача?

М а к ҫ ă м. Йуратса, Саҫук, йуратса..

С а ҫ у к. Епě кайам-ха, ача Васкамала. Каҫ куратпăр вěт?

М а к ҫ ă м. Урама тухатăн-и?

С а ҫ у к. Мěнле пулě. Сывă пул.. ача. (Чупса ыттисене хăвалат. Макҫăм пěчченех. Радио тăрăх калакан оркестрăн хаваслă сасси вăйланат).

**14-мěш курăнни.**

Самай вăхăт иртсен сценă хыҫěнчен Ҫитăр пěлěт ҫинелě пăхкаласа тухат.

Ҫ и т ă р (кураксем вěҫнине курса). Кша-а... Мурсем! Ха-а! Тур ҫырлахтăр Кăшкăрнинчен те хăрамаҫҫě-ҫке ěнтě. Еп сире! Кша-а!.. (Васкаса пăшалěпе тěллесе перет).

**Чаршав.**

## ИККЁМЁШ АКТ.

Сцена Кришшан пӗчӗк, ҫӗнӗ капăр пӳртӗнче. Пур кетесре те тасалăх палăрат. Кроват ҫинче вырăн та сарăлсах выртат. Стена ҫумӗнче сехет, куҫкӗски. Кăмака кӗтессинче шкап. Сӗтел кӗтессинче радио. Хуткупăс пур.

### 1-мӗш курăнни.

Вăхăт каҫ. Пӳртре електрицă ҫути. Кăмака умӗнче чей вӗретме лартнă сăмавар пур. Пӳрте Анук кӗрет. Аллинче ӗне савакан витре. Хурлăхлă. Пер шарламасăр сăхманне хывса, вырăн ҫине пăрахса, хăй те выртса пӗр-кана йӗрет.

### 2-мӗш курăнни.

Укҫине кӗрет.

Укҫине (сăхсăхса). Ей... пӳлӗхҫӗ-ӗм... (Анук ҫине пăхса тăрат). Мӗн пулчӗ, хӗрӗм?

Анук. Есӗ килвӗ-ҫке, анне. Питех кăмăл хуҫăлчӗ пайан. Фермăран ӗне суса килетӗп те... Татйана аппасем тӗл пулчӗҫ. Пӗр ушкăн хӗрарăм. Такам та пур унта... Тем те каласса йатлаҫса тăкрӗҫ. Пурринчен, ҫуккинчен хурласа пӗтерчӗҫ. Выҫах хăварат, теҫҫӗ. Ах, анне... (Йӗрет).

Укҫине. Ырлăхах мар... Ей, пӳлӗхҫӗм... Кăвакарнă ҫӳҫӗм тăпăлса тухрӗ пайан, хӗрӗм. Чиркӳри пӗтӗм халăх йӗрет.

Анук Ăҫта кайса кӗрем-ши?... Пурнăҫ та куҫа курăнмаст... Ҫутҫанталăк та йӗрӗнтерчӗ пайан...

Укҫине. Ылханӗ сан пуҫна ан тивтӗр, хӗрӗм. Сана ылханни мана та тивӗ. Кӗрӳпе пӗрле ҫылăха кӗрсе, ман чуна тамăка ан йар. Анук. Ман кăкăр сӗчӗпе ӳснӗ есӗ...

Анук. Кришшана председателтен кăларайрасчӗ... Мӗн мар пулӗччӗ пурнăҫ.. Итлес ҫук вăл ман сăмаха...

Укҫине. Итле мана, хӗрӗм. Пурнăҫ тамаша пулӗ. Айта хамăр пата. Ăслансан хайех пырса тилмӗрӗ.

Анук. Пыратăп, анне. Урăх тӳссе пулмаст. Мана хисеплесен ӗҫлеме пăрахӗ. Хисеплемесен кирек-мӗн тутăр

Укҫине. Ей.. пӳлӗхҫӗ-ӗм...

Анук. Арчана питӗрсе кӗрем-ха епӗ, анне. Сăмавара пăх есӗ. (Тухса кайат).

Укҫине. Питӗрсе кӗр, питӗрсе кӗр, хӗрӗм...

### 3-мӗш курăнни.

Радио (Укҫине пӗччене). Кăҫалхи ҫурта йалхуҫалăхӗнче тырпул тухăҫлăхне хăпартассинче татăклă улшăну пулмала, ҫакна тума колхозсене организаципе хуҫалăх тата...

Укҫине (радиона чарма тăрăшат. Чарма пӗлменнипе тăвăлланса хăй тӗллӗн сӳпӗлтетет). Ырлăхах ма-а-р-р. Ей, пӳлӗхҫӗ-ӗм .. (Ҫав вăхăтра урамра колхозниксем хаваслăн, шавласа йурласа иртсе кайнă сасă илтӗнет. Лашасене хăвалани, чарнă сасăсем илтӗнеҫҫӗ. Йуррин сăмахӗсене те анланмала).

Савăнсах пайан ӗҫлерӗм
Еп колхозăн хирӗнче, хирӗнче.
Ах, мӗн чухлӗ ҫӗнӗ йурă
Еп вӗрентӗм вӗсенчен, вӗсенчен.
. . . . . . . . . . . . . . . .

Уксине (йурри, йулашки самахӗсем илтӗнми пулсан, шав инҫетре лӑпланат). Ырлӑхах ма-а-р-р... Тӑп-тӑрӑ урӑлах ӳсӗр сынсем пек урамра йурласа ҫӳреҫҫӗ. Выҫах йулатпӑр ӗнтӗ кӑҫал... Выҫах. Ей, пӳлӗхҫӗ-ӗм. (Куҫҫулне кӗпе аркипе шӑлат).

Радио. Ҫуракине лайӑх организациле тата кӗске вӑхӑтра ирттерме хатӗрленес пулат. Ку ӗҫре колхозниксен хӑйсемпе пӗрле йединоличниксене те хутшӑнтарса, партипе правительствӑ хушнине пурнӑҫа...

Уксине (тӑвӑлланса тытах радиона чарма тӑрӑшат. Чараймаст). Ырлӑхах ма-а-р р.. Ей, пӳлӗхҫӗ-ӗм...

### 4-мӗш курӑнни.

Анук кӗрет

Уксине (тарӑхса). Анук, чарсам ҫак хӑйамата... Тархасшӑн...

Анук. Калатӑр.. Мӗн тӑвап ҫавӑнпа, анне.

Уксине Хӑлхана йӗрӗнтерчӗ, хӗрӗм. Сассине илтес килми пулчӗ. Ырлӑхах ма-ар. Ей, пӳлӗхҫӗ-ӗм..

Анук (шухӑша кайса хурлахлӑ саспа). Кам пӗлет? Те ырлӑха, те хурлӑха пулат ӗнтӗ?..

Уксине. Пуҫтарӑнтӑна?

Анук. Пуҫтарӑнтӑм та.. Мӗнле-ши, анне? Ытла та чӗре вырӑвта мар-ҫке.

Уксине Тамаша. Калаҫса тӑран тата.

Анук. Тӗппипе шухӑшласан чун хурланат.. Шухӑшланипех пурнӑҫ пулмарӗ.

Уксине. Пурнӑҫ пулмар-и? Хӑвах айӑплӑ Ҫынна ӳпкелемели ҫук. Ман сӑмаха пӑхмарӑн. Кайас Макҫӑма... Пурнӑҫ тамаша пулатчӗ. Хӑтана та пычӗ... Шутпа шутласах трудодни ҫапса пурӑнат. Йал ҫинче те хисеп.

Анук. Кришшава йуратататӑпҫке-ха, анне. Мӗн тӑвас?

Уксине. Йуратап... Йурата-ап. Епӗр йуратмасӑрах кайнӑ та пурӑвнӑ. Ей, пӳлӗхҫӗ-ӗм..

Анук Йал сӑмахӗ пулмасан манран телейлӗ ҫын та пулмӗччӗ те... (Сӑмавар вӗренине сиссе васкаса пырат, трубине илет). Чей те верерӗ. Кӑмакара йашка пиҫвӗччӗ. Ҫитӗр, ӗҫтӗр ҫав.

Уксине. Еп мӗн калапине итле, хӗрӗм. Пурнӑҫ пулат. Вырӑнне ан хӑвар. Арҫын вӑл вырӑнсӑр ним тума аптӑраг.

Анук (ирексӗрленсе сӑхмание тӑхӑнса крават ҫинчи вырӑна пуҫтарат). Те вырӑна хӑварсан килӗшӗ.. Те хӑвармасан авантарах ӗнтӗ... Ним те тавҫӑраймастӑп.

Уксине. Тамаша. Тавҫӑраймастӑп тесе лапӑртатса тӑран. Чухламаст тетӗн-и мана? Чухлатӑп, хӗрӗм... Чухлатӑп Хам та ҫамрак пулса курнӑ. Пуҫтар, пуҫтар. Сансӑр пуҫне ҫара ҫӗрте пӗр ҫӗр выртсан выртӗ Теприкче хӑйех веҫтерсе пырӗ. Хаҫ ӗлӗкхи ма-ар. Уйӑрлаҫҫӗ те, каллех пӗрлешеҫҫӗ. Ей, пӳлӗхҫӗ-ӗм...

### 5-мӗш курӑнни.

Кришша кӗрет.

Кришша (ывӑнниӑ сасӑпа) Ани те килнӗ-ҫке. Мӗншӗн ура синче тӑратӑн? Ларма вырӑн ҫук-и сана валҫи? Ну, Анук,

ака çу пекех пырат. Тĕрĕссипе каласан, кĕтменччĕ. Темĕскер мăнкунĕ çыхăнтарса хурасран хăранăччĕ. Матĕрне аппа икĕ сехетрех тухнă пайан акма.

Укçине (хай тĕллĕн). Ей, пÿлĕхçĕ-ĕм...

Кришша. Ĕлĕкхинчен пĕр уйăх малтан акма тухрăмăр... пĕр уйăх... Йединоличниксене те ыран суха патне кăлармассине луччă... (Паузă). Мĕн сăхманпах тăратăр есĕр? (Анук йĕрнине курса). Йĕретĕн мар-и есĕ? Мĕн пулнă сана?

Укçине. Чистах улшăннă есĕ, кĕрÿ. Ху савăнатăн... Арăмун çеç пурнăç çук

Анук. Пĕтĕм йалйыш курайми пулчĕ ĕнтĕ. Пуçа çисе йараççи, тен. Урама тухма çук. Кÿрĕш-тăван таврашсем пурте сивĕнсе çитрĕç. Пурнăç-и ку-у... (Йĕрет).

Кришша. Кам, мĕншĕн çисе йарат?

Анук. Камне ăçта каласа пĕтерен. Йалĕпе. Пур ĕçе те сан çине йăвантараççĕ. Выçах вĕлерет, тесе ÿкĕнеççĕ.

Кришша. Выçах?.. Ха-ха-ха...

Укçине Тамаша... Кулат тата. Кам йатлаçмĕ санпа? Кам ылханмĕ, кĕрÿ? Микулеиччен аксан хăçан тырă пулни пур?

Кришша Акман та пулман. Акатпăр та пулат.

Укçине. Шăн çине акса тăвайммăр... Ваттисен йăлисене пăсатăр, кĕрÿ. Ей, пÿлĕхçĕ-ĕм... Çын сăмахĕ çуллă пăтă мар, тенĕ ваттисем. Тура памаввине илеймер. Турăран аслă пулаймăр.

Анук. Йалĕпе сăра лартнă. Ĕçеççĕ, савăнаççĕ. Есĕ пур сĕм вăрманти пек лар килте.

Кришша. Анук, пĕтеретпĕр ака акса. Тăватпăр ака-туй. Сăрине те ларт. Çимĕçне те пĕçер. Анчах хĕрсе ĕç туна вăхăтра мар

Анук (шăртланса) Ытла та тĕлĕнтерет вĕт вăл. Мăнкун иртсен кампа ĕçсе ларат-ши ку?

Кришша. Кама саван—çавна хăнана чĕн, Анук. Ун çинчен текех калаçмăпăр. Кунĕпе ĕçре çÿресе столовăйра апат çиейменрĕм. Мĕн те пулин çук-и? Апатланасчĕ ман.

Анук. Мĕн качча килнĕренпех çапла есĕ. Ир тăрсан—чей вĕрет. Çын килсен—хăна ту Каç пулсан—вырăн хатĕрле. Сан арăму та—колхоз Тăванусем—йал... Йуратмастăн... Епĕ калапине хисеплеместĕн пулсан, мĕншĕн качча илсе сайа йатăн мана? (Йĕрет).

Укçине. Пăрчăкан пек чĕрĕ, уйăп пек илемлĕ хĕр патăм. Пăхма пĕлмесĕр йăлтах пĕтертĕн. Çÿрен йал тăрăх йытă пек чупса. Хисепĕ камран? Кам çын шутлат сана? Ей, пÿлĕхçĕ-ĕм.

Кришша Сирĕн шутпа мĕн тумалла ман?

Анук (йăланса). Тархасшăн, Кришша, пăрах. Председатĕлтен тух.

Укçине. Йалти ĕç сансăр пуçне те пулĕ, кĕрÿ.

Анук. Чăнах, Кришша. Иксĕмĕр ырми-канми ĕçлĕпĕр. Лартар сăра. Ратнепе ĕçке тухатпăр.

Укçине. Хамăр пата хăнава пырăр, кĕрÿ.

Анук. Ĕмĕрĕпе пĕр сив сăмах каласссăм çук. Шухашла-ха хăвах, Кришша. Мĕн чухлĕ айăп тийен есĕ хăв çине?

Укçине. Çын сăмахĕ çуллă пăтă ма-ар... Ей, пÿлĕхçĕ-ĕм...

Кришша (тарăхса). Чăнах итлес килми пулчĕ ман. Картран тухса калаҫма пуҫларăр есĕр..

Укҫине (шăртланса). Ҫапла пулмасăр ара? Есĕ ҫеҫ картран тухмаин вĕт!

Анук. Епĕ ухмах пулмасăр, кам ухмах? Арҫын шутламаст. Йал хĕрарăмĕсемпе, тăвансемпе йавăшса пурăнаймастăп.

Укҫине. Ăҫта тавлашан санпа? Ху—ҫалсовет. Хăвах—колхоз. Питех ан йĕрле, кĕрӳ. Ҫутҫанталăкра епĕр те пурăнса курнă.. Курнă, кĕрӳ... Ăшшине-сиввине те.. Ей, пӳлĕхҫĕ-ĕм...

Кришша Ăнланăр-ха. Епĕ председатĕл пулма тивĕҫшĕн савăнмала есĕр. Ех-х... мĕн калаҫасси пур вара!

Анук. Савăнмала тет-ха? Ытах та йĕрлемесен йурамаст-ши, Кришша? Йуратм стăн, хисеплеместĕн есĕ мана. (Йĕрет).

Кришша. Анук, ан ухмахлан. Тĕрĕссипе калатăп. Питĕ ывăннă епĕ пайан. Ҫырткаламали хатĕрле-ха мĕн те пулин.

Анук. Мана итлеместĕн, ман арҫын мар есе. Йал пăхтăр сана, колхоз вырăв сарса хатĕрлетĕр.

Кришша. Анук?.

Укҫине. Ей, пӳлĕхҫĕм. Капла йепле пурнăҫ пултăр. Кайар, хĕрĕм... Хут йĕр... Хут те йăлăн... Епĕр калапине пурĕ-пĕрех итлес ҫук.

Кришша. Ăҫта?

Укҫине. Тамаша. Ăҫта тет? Сана качча килнĕ тесе Анукăн ниҫта пурнăҫ ҫук тесе шутлатăн ĕнтĕ есĕ.. Хаҫ ĕлĕкхи ма ар.. Хам хĕр хама ытлашши пулмĕ. Кайар, Анук. Кăҫал халăха выҫах вĕлерет ĕнтĕ вăл. Ылханĕ сан пуҫа ан тивтĕр. Ей, пӳлĕхҫĕ ĕм...

Кришша Анук!

Анук (кайăлли ыгарса йапа ине йагат). Йалпа пуран савăнса. Сывă пул. (Укҫинепе тухса кайаҫҫĕ).

### 6-мĕш курăнии.

Кришша пĕччен ех.

Кришша (ним тума пĕлмесĕр аптăраса тăрат. Алăкран тухма тăрса каллех ҫаврăнат Васкаса с.. ав..р патне пырса чĕртсе йама тăрăшат. Чĕрĕлменнипе сăмавара тытса алли пеҫертет). Чорт возьми!

### 7-мĕш курăнии.

Пурге васкаса Татйана кĕрет.

Татйана (алăкран кĕресенех йатлаҫма тапратат). Есĕ мĕн, йаваша курса мăшкăларăн и? Мĕнле хăйса пилĕк трудоден штраф турăн есĕ?

Кришша. Штраф мар... Ыран ан тух-ха ĕҫе, колхозран хăвалатпăр.

Татйана Ай тур... ту-ур... Колхозран хăвалатпăр, тет. Ху пит ĕҫлетне вара есĕ? Тыр акна-и есĕ? Суха тун-и? Епĕр ĕҫлемен сын и? Лаша пулман и пирĕн? Ĕне ҫук-и? Сан мĕн пулнă? Мĕнпе кĕнĕ есĕ колхоза?!.

Кришша (тăвалланса). Вара?!.

Татйана. Йамăттипе тăрантас çине ларса йăрлаттарса çӳресси ĕçленийех мар-çке вăл. Çемйӳпе пурăнма пĕлместĕн, çынсене штраф тăван.

Кришша. Тухса кай. Йатлаçма правлени мар кунта.

Татйана. Кукша темерĕн .. Кайатăп... Хăваламасăрах. Патша пулаймăн. Пурне те йарса илеймĕн.

Кришша. Кайатна, каймастна, чорт возьми!

Татйана. Чых!.. Чых çын ĕçленине. Сана нумай кирлĕ. Епĕр пурăнкалăпăр-ха мĕнле те пулин... Ĕмĕрех председателте пулаймăн. Пит ан сик... (Йатлаçа-йатлаçа кайат).

### 8-мĕш курăнни.

Кришша пӳчченех. Тăвăлланса пĕр йапала патĕнчен тепри патне пырса тĕртĕнет. Радио тăрăх кăмăла хирĕçтеревен кĕвĕ илтĕнме пуçлат. Пĕр самант итлесе тăрсан, штепселе кăларса сирпĕтет. Васкамасăр йăрхахри пиншакне илсе пуç айне хывса кравать çине выртат.

### 9-мĕш курăнни.

Саңкапа Петă кĕреççĕ.

Петă (хаваccăн). Кришша, хуткупăс парса йар-ха. Вăйă тума шутлатпăр.

Кришша. Чорт возьми! Сирĕн мĕн пурĕ те вăйă шухăшĕ анчах. Ĕçре сĕнкетĕр. Ыран акма тухма канас пулат.

Саңук. Ху та ĕнертенпе çывăрман, ача. Çынна каламали çук

Кришша. Мана мĕн пăхатăр есĕр.

Петă. Ыран çĕре пурĕ-пĕрех валеçсе пĕтеретпĕр.

Саңук. Выљамасăр, кулмасăр. Ĕмĕр иккĕ килет-и мĕн?

Кришша. Ĕмĕр, ĕмĕр? Стена хаçатне хăçан кăларатăр?

Саңук. Хатĕр, ача. Сан статйана анчах кĕтетпĕр.

Кришша. Кĕçĕр çыратăп. Матĕрнене хĕрлĕ хăма çине куртес пулат.

Саңук Кӳртнĕ.

Кришша. Епĕ кĕçĕр правленине пыраймастăп. Завхоза калăр. Ыран апат бригадăпа пĕçерме хатĕрлетĕр.

Саңук. Йурат, йурат.

Кришша. Каллех помидора кăларса лартса пĕтерейменрĕмĕр. Купăста вăрлăхне те акма вăхăт çитнĕ.

Петă. Ыран лартса пĕтеретпĕр.

Кришша. Пĕтересси пĕтерĕпĕр Шаннисем чылай курăнкалаççĕ унта. Ыран лайăхрах тĕрĕслесе тух, Саңук. Напăх ĕçлекенсене пĕр шеллемесĕр хĕртес пулат. Пайанхи пек ĕçлесен Хыр-касси колхозĕпе ăмăртса ĕçленинче кайа йуласси инçех мар. Кайа йулсан ьамăс пире тивет. Йалти ĕçе пире шаннине манас пулмаст.

Саңук Мала тухасчĕ-çке, ача.

Петă. Лăпăртататпăр кирлĕ мара. Хыр-касси колхозĕнчен кайа йулатпăр-и вара? А, купăс парса йар-ха есĕ, Кришша. Пирĕн васкамала.

Кришша. Вăйна купăссăр кайма çук-и?

Петӗ. Купӑссӑр тухсан хӗрсем йуратмаҫҫӗ. Кирлӗ пулсан кӗҫӗрех леҫсе паратӑп.

Кришша. Илсе кайӑр. Илсе кайӑр. (Петӗ купӑса хӑйех илсе пӳртрех калама тапратать). Чарӑн. Урама тухсан сӗрлеттер пушалстӑ.

Петӗ (купӑса калама чарӑнса). Айта, Саҫук!

Саҫук. Есӗ кай-ха, Петӗ. Епӗ халех пыратӑп.

Петӗ. Йаланах ҫапла есӗ.

Саҫук. Ман Кришшапа пӗр сӑмах секрет ҫинчен каласмали пур, ача. Епӗ нумай тӑмастӑп Сан хыҫранах тухатӑп.

Петӗ. Еп чӗнсен пӗрмайах секрет сан. (Кӑмӑлсӑрланса тухса кайать. Алӑкран тухсавах купӑс каланӑ сасӑ илтӗнсе, йерипен инҫетре ҫухалать).

**10-мӗш курӑнни.**

Кришша. Мӗн секречӗ пур сан, Саҫук? Кала, итлетӗп.

Саҫук. Анук ӑҫта кайнӑ, ача?

Кришша. Мӗн тӑватӑн есӗ унпа?

Саҫук. Анукпа йулташланса ӳснӗ-ҫке епӗр, ача.

Кришша. Акӑ мӗн, Саҫук. Сирӗн секрет кирлӗ мар мана. Анукпа калаҫмали пулсан, хӑй патне кай.

Саҫук. Ӑҫта вӑл?

Кришша. Амӑшсем патне ӗҫ тума, ҫӗр выртмалах кайрӗ. (Кӑмака умӗнчен чугуна илсе сӗтел ҫине лартать).

Саҫук. Арҫын тени хӗрарӑмсӑр ытла та типтерсӗр ҫав. Йепле-ха ӗнтӗ чугуна таса сӗтел ҫинех лартнӑ?

Кришша. Итле, Саҫук. Каланӑ сана Анук патне кай тесе. Кай.

Саҫук. Калама ҫук йатлаҫса кайан вара есӗ. Епӗ сана пичче вырӑнче шутласа калаҫас тесе килнӗччӗ, ача.

Кришша. Кала хут пӗреххутчен, чорт возьми!

Саҫук. Никама та каламастӑп тесе сӑмах пар, ача. Вара калатӑп.

Кришша. Есӗ мӗн, Саҫук?

Саҫук. Никама та каламастӑп тесе сӑмах паратна?

Кришша. Йурать. Каламастӑп. Мен кирлӗ сана? Тархасшӑн кала часрах.

Саҫук (хӑйусӑрлансарах). Пӗр хусах... качча илесшӗн те мана, ача. Мӗнле ши, кайсан йурать-ши? . Каймасан аван-ши?

Кришша. Ох-х! Но секрет! Мана мӗн ӗҫ? Качагна, каймастна. Ман сан секретусӑр пуҫне те пуҫ ҫаврӑнат пайан.

Саҫук. Калат вӗт. Веҫ каллех йатлаҫма пуҫларӑн есӗ... Мӗн калаҫасси пур вара санпа.

Кришша. Йатлаҫан тетӗн, есӗ, Саҫук. Ан тарӑхтар есӗ те пулин. Качча кайассине кам ҫынтан ыйтса тӑрат? Пигех кайас килет пулсан, пушалстӑ кай. Йалсоветне пырӑр та, ҫырӑпӑр.

Саҫук. Уншӑн мар. Есӗр пурӑнса курна тесе шутлаттӑм епӗ, ача.

Кришша. Авӑ пӑх—мӗнле лайӑх пурӑнатпӑр епӗр?

Саҫук. Тем калаҫан есӗ, ача. Ним те ӑнланмастӑп.

Кришша. Вырӑнӗ-мӗннипех тасатса тухса кайрӗ.

Саҫук Кам?

Кришша. Сан савнӑ йулташу. Пирӗн пурнӑҫран пример илсе качча кайма пултаратӑн.

Саҫук. Ара, ача... Авук амӑшсем патне ларма кайнӑ терӗн-ҫке?

Кришша. Ларма-а... Пурте пӗр йышши есӗр. Качча кайиччен ҫеҫ кайас килет сирӗн. Кайсан арӑк ҫине лартса ачашламала сире. Ачашлама вӑхӑт ҫук пулсан мӗн тӑвас?

**11-мӗш курӑнни.**

Матӗрне кӗрет.

Матӗрне (хӑвӑлӑн Кришша патне пырса). Кришша чуптӑвамха сана, ачам.

Кришша (тӗлӗнсе). Акӑ тепри килчӗ. Есӗ мӗн, ухмаха йерни, Матӗрне аппа?

Матӗрне. Чунран йуратса, Кришша! Ан йӗрӗн-ха, ачам. (Кришшана чуптӑват). Есӗ те, Саҫук. (Саҫука та чуптӑват).

Саҫук. Праҫник йачӗпе-и ку, Матӗрне аппа? Христусне асӑнмасӑрах чуптӑватан-ҫке есӗ?

Матӗрне. Каҫарар, ачасем. Савӑннипе килтӗм. Вара ҫав пур комуниссене ӗречкипе тӑратса ыталаса тухса тав тӑвайрасчӗ.

Кришша. Акӑ мӗн, Матӗрне аппа. Йе сана мӑнкун шӑрши тивнӗ пайан? Йе хам ӑсран кайнӑ епӗ.

Матӗрне. Ҫирӗм ҫул...

Кришша. Ҫирӗм ҫул тӑлӑх пурӑннипе пӗлетпӗр. Анчах увшӑн ним саванмали те ҫук. Пӗр ҫер тӑлӑх пурӑнасси те мӑй таранах тултарат

Матӗрне. Ҫирӗм ҫул куҫсӑр пулнӑ епӗ, Кришша.

Кришша. Трахома чӗртекен пункта ҫӳремелеччӗ. Йалта сестра пур. Вара куҫлӑ пулӑттӑн.

Матӗрне. Чӗрӗлнӗ епӗ, Кришша Чӗрӗлнӗ.

Кришша. Чӗрӗлнӗ-и?

Матӗрне. Пайан тухтӑр пӑхрӗ те, трахомран тасалнӑ, терӗ ҫав вара.

Кришша. Фу! Пасӑрах ҫапла каламала есӗ, Матӗрне аппа.

Саҫук. Мӗн пулнӑ ку Матӗрне аппана, тесе, шухӑшласа аиран кайнӑ епӗ.

Матӗрне. Акӑ, хут ҫине те ҫырса пачӗ. (Хӗвӗнчен хут татӑкки кӑларса парат).

Кришша (хута вуласа пӑхса). Хавас.. Хавас, Матӗрне аппа.

Матӗрне Ӗмӗр Хутаҫ Матӗрнипе суккар Матерверен урӑхла чӗнмен мана. Халӗ епӗ те чипер куҫлӑ ҫынах пултӑм. Хама ҫӗнӗрен ҫуралса ситӗннӗ ҫын пек сунатӑп ҫав вара. Тем таранах спасибӑ, Кришша Сана та, Саҫук. Ырми-канми тӑрӑшатӑр ҫав пирӗншӗн.

Саҫук. Еп мӗнех вара, Матӗрне аппа Айван-и?

Кришша. Трахомран тасалманнисем татах пур. Вӗсене емелломе ҫӳреттерме тӑрӑшас пулат, Матӗрне аппа.

Матӗрне. Вӑй ҫитнӗ таран, Кришша. Чуна пама та хатӗр ҫав вара. Шел... Радио тӑрӑх Шупашкарпа калаҫма май ҫук.

Хӑйсем каланине итлетпӗр. Вара ҫав пире ҫул кӑтартса пыракансене хам чӗлхепех тав тӑвӑттӑм.

Саҫук. Есӗ хут ҫине ҫырса пӗлтер, Матӗрне аппа.

Матӗрне. Тасах ҫырма вӗренеймерӗм-ҫке ҫав вара. Ӗнтӗ вӗренетӗп те-ха.

Кришша. Саҫук, хӑвах ҫырса пар Матӗрне аппана

Саҫук. Ҫырса паратӑп. Ҫырса паратӑп.

Матӗрне. Иҫуш патне те ҫырасчӗ ҫав вара. Ман куҫ тасалнине пӗлсен мӗн таран савӑнӗ-ши ман Иҫуш?

Кришша. Кули ан савӑнтӑр.

Матӗрне. Килте хут ҫукчӗ мап. Сан ҫук-и, Кришша? Пулсан пар-ха.

Кришша. Парас, Матӗрне аппа. (Пӗр листа парат). Ҫитет-и?

Матӗрне. Тата пар, Кришша. Ҫырмали нумай. Иҫуш йулташсене вуласа кӑтарттӑр. Суккӑр Матӗрне куҫлӑ пулнине пӗтӗм Хӗрлӗ ҫар пӗлтӗр ҫав вара.

Кришша. Парас, парас, Матӗрне аппа.

Матӗрне. Ҫӗн ҫула кив тырах ҫитессине те пӗлтересчӗ ҫав вара. Килнӗ ҫӗре свеши улма, пӑмидор, хӑйар тавраш усрӑтӑп. Пӗр сысние ҫитерсе самӑртап.

Кришша (хут парса). Ҫитет-и?

Матӗрне. Ҫитӗ. Чим-ха, Кришша Тата тепӗр листа пар. Ӗне илни ҫинчен пӗлтермеле ҫав вара. Хутаҫ Матӗрни ӗнелӗ пулнине Иҫуш йулташӗсем те пӗлччӗр. Колхозӗпе ҫӗнӗ пӳрт лартса пани ҫинчен те ҫырса пӗлтерес ҫав вара.

Кришша (тата тепӗр листа парса) Пурин ҫинчен те ҫыр, Матӗрне аппа. Ҫыр.

Саҫук. Ку хут ҫине тем ҫырма та ҫитет ӗнтӗ.

Матӗрне. Ҫитмесен татах килсе илетӗп ҫав вара.

Кришша. Йурат, йурат, Матӗрне аппа.

Матӗрне. Кришша, праҫник йачӗпе мар, хисеплесе пырса лар-ха, сӑрине-ҫимине те хатӗрленӗччӗ ҫав вара.

Кришша. Хисеплесе чӗннӗшӗн тавах, Матӗрне аппа. Анчах пыраймастӑп Ӗҫ нумай, часрах акса пӗтересчӗ.

Матӗрне. Ҫапла та ҫав вара. Айта-ха, айта. Начаслӑха ҫеҫ. Анук ӑҫта? Иксӗр те пырӑр.

Кришша. Пыраймастӑп, Матӗрне аппа. Есӗ те выртса кан. Кунӗпе ӗҫлесе супрап пулӗ.

Матӗрне. Шел... Питех кӑмӑлпа чӗнетӗп ҫав вара.

Кришша. Тепӗр чухне, Матӗрне аппа.

Матӗрне. Пыраймасан, ним тума та ҫук. Урӑхла каласа чӗнме пултараймастӑп ҫав вара.

Саҫук Айта. Матӗрне аппа. Кӗҫӗрех ҫырса паратӑп.

Кришша. Тепре килсе ларӑр.

Матӗрне Ырӑ каҫ пултӑр. Шел. Пымарӑн. Сӑри те пурччӗ, ҫимине те хатӗрленӗччӗ ҫав вара.

Кришша Саҫук, аса илнӗ чух, Ҫитӑра килти хурала тӑратас Хирте тӑрасшан мар вӑл.

Саҫук. Йурат, йурат. (Кришша Саҫукпа Матӗрнене алӑкранах ӑсатса йӑларса йарат).

**12-мĕш курăнни.**

Пÿртре никам та çук.

Радио: Партизан. Текст Алымовăн. Кĕвви Атуров хĕрлĕ çар командирĕн. Александров гармонилеиĕ. Йурласа параканĕ Чăваш республикĕн хорĕ. Дирижорĕ Воробйов.

По долинам и по взгорьям
Шла дивизия вперед,
Чтобы с бою взять приморье (2 хут).
Белой армии оплот.

**13-мĕш курăнни.**

Кришша кĕрсе йурă итлет.

Залиралися знамена
Кумачом последних ран.
Шли лихие эскадроны
Приамурских партизан.

Этих лет не смолкнет слава,
Не померкнет никогда.
Партизанские отряды
Занимали города.

(Йурă Кришшан кăмăлне татах та çĕкленипе, вăл та радио хыççăн йурлама тапратат. Шкап пеккинчен хутпа чернилсем илсе сĕтел çине хурат).

И припомнятся не раз нам,
Как маячные огни,
Штурмовые ночи Спасска,
Волочаевские дни.

Разгромили атаманов,
Разогнали воевод,
И на тихом океане
Свой закончили поход.

Кришша (радио чарăнсан та йуррăн вĕçне хăй тĕллĕн тепĕр хут йурласа пĕтерет):

И на тихом океане
Свой закончили поход.

(Радио чарăнсан кĕвĕ çырма тапратат. Пĕр сас та çук. Самай вăхăт иртсен, сасартăк чÿречерен ывăтнă пысăк чул сĕтел урлă ывтăнса çĕре ÿкет. Кришша ура çине сиксе тăрса ним тума аптăраса пăхса тарат).

**Чаршав.**

## ВИÇÇĔМĔШ АКТ.

Сцена колхоз правленинче. Стена хаçачĕ çакăнса тăни курăнат.

**1-мĕш курăнни.**

Пÿртре Максăм пĕччен, сĕтел хушшинче ларат. Умĕнче шчут. Кĕнекесем пур. Çыркаласа шчутпа шутлакаласа ларат.

**2-мĕш курăнни.**

Кришша кĕрет.

Кришша Сведенисене РИК-а йатăн-и?
Максăм. Йарайнарăм, Григорий Петрович.

Кришша. Есӗ мӗн, чӑвах калатна йе суйатна?

Макҫӑм. Ӗлкӗреймерӗм, Григорий Петрович.

Кришша. Кӑнтӑрлаччен пӗр сведени ҫырма ӗлкӗреймен. Ӗнер, ӗнер вӑхӑтра йараймарӑмӑр. Есӗ мӗн ача вӑййи куртӑна кунта?

Макҫӑм. Питех ан йатлаҫ, Григорий Петрович. Халӗ те ҫӗрне-кунне пӗлми ӗҫлетӗп. Канма та вӑхӑт ҫук.

Кришша. Асту, Макҫӑм! Тата тепӗр ӗҫе вӑхӑтра туса памасан, счетоводран тухса сирпӗнни сисӗнмӗ

Макҫӑм. Кӑлар. Питех хӑрамастӑп. Йалпа пӗрле пусӑри ӗҫе тума пултараймастӑп тетни есӗ мана? Конечнӑ ӗҫлетӗп.

### 3-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех. Шӗвӗнсерех Уҫӑп кӗрет. Йанах урлӑ тутӑр ҫыхнӑ.

Уҫап. Ой-й... ой-й...

Кришша. А-а... Таварищ Мишуткин. Киҕах, киҕах. Мӗншӗн ӗҫе тухмарӑн пайан? Сантӑн Микула охотник акса парат-и?

Макҫӑм Конешнӑ ӗҫрен пӑрӑнса ҫӳрени аван мар, Уҫӑп пичче. Ху пӗлмеле. Вӑхӑт—вут.

Уҫӑп. Раҫӗ ҫавна пӗлмен ҫын епӗ. Пӗлетӗп. Анчах мӗн тӑвас тетӗр есӗр? Шӑл туни тӑпӑлса тухат и, тен. Ой-й! Веҫ калаҫма та хут ҫук. Мӑй таврашсем хампу пек шыҫса кайнӑ.

Кришша. Салат тутӑра, кӑтарт!

Уҫӑп. Йурамаст, Григорий Петровчӑ. Тухтӑр ҫыхса йанӑ. Салтма хушмарӗ.

Кришша. Тухтӑр хушмарӗ и? (Пӗр самантра Уҫӑп тутӑрне сӳсе илет. Пичӗ шыҫманнине курса). Мӑй тавраш шыҫнӑ епин?

Уҫӑп. Шалтан ыратат, Григорий Петровчӑ. Шалтан.

Кришша. Сволӑч. Ӗнер кӑшкӑрса тыр акасса чарма тӑрашнӑ чухне ыратмарӗ-и?

Макҫӑм. Аван мар, аван мар, Уҫӑп пичче.

Кришша. Ан май, ырӑнтан колхозра пулмастӑн есӗ!

Уҫӑп. Мава? Бедҕака и?

Кришша Тухса кай правлениччен.

Уҫӑп. Кайатӑп. Кайатӑп, Григорий Петрович. (Тухса кайат).

### 4-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех, Уҫӑпсӑр.

Кришша. Ӗнер кӑнтӑрла иртсен тухман. Виҫӗмкун парник ваҕҕи хӑма илме йарсан ҫӗтрӗ.

Макҫӑм. Уҫӑп пеккисем конечнӑ колхоз йатне анчах ҫӗртсе пурӑнаҫҫӗ.

Кришша. Ӗнерхипе пайан кӑнтӑрлаччен акнине перле ҫыр. Планпа шутланиччен тулӑ ҫичӗ га, сӗлӗ вунӑ га акрӑмар.

Макҫӑм. Апла пулсан тулӑ ҫирӗм пилӗк га...

Кришша. Сӗлӗ хӗрӗх га пулат. Ҫырса пӗтер те, лав черечӗпе часрах РИК-а леҫтерес.

Макҫӑм. Йурат, йурат, Кӗркури Петровӑч.

**6-мӗш курӑнни.**

Петӑ кӗрет.

Кришша. Ҫӗр валеҫсе кӗтӗр-и?

Петӑ. Пӗтрӗ. Ывӑнтӑм вара пайан. Сӑнчӑр туртасшӑн мар ӗнтӗ, мур илесшӗсем.

Кришша. Пӗтнӗ тӗк аван, ыран еуха патне кӑларатпӑр.

Петӑ. Шупашкартан килнӗ артиссем спектакӑљ лартма хатӗрлевеҫҫӗ. Айта, Кришша, кайса куратпӑр.

Кришша. Кайӑпӑр. Макҫӑм, милици килес пулсан, пӗлтер есӗ мана Айта, Петӑ.

Макҫӑм. Калатӑп, калатӑп, Кӗркури Петровчӑ. (Алӑк патнеле кайаҫҫӗ).

Петӑ. Сан ваљљи ҫӗнӗ арӑм сӑнарӑм епӗ пайан, Кришша. Авланатӑн-и?

Кришша. Парам сана акӑ арӑм. (Петӑпа калаҫа-калаҫах тухса кайаҫҫӗ).

**7-мӗш курӑнни.**

Пӳртре Макҫӑм пӗччевех. Сӗтел хушшинче васкаса шутпа шутласа сырат. Тӑвӑлланса кӗнеке ӑшӗнчи хутсене ҫурса илсе чӗркелесе пӑрахат.

**8-мӗш курӑнни.**

Татйана кӗрет. Аллинче пӗр тӗрке ситцӑ пур. Пысӑк пакетпа сахӑр йатнӑ.

Татйана (васкаса). Макҫӑм, укҫа ҫук-и сан? Пар-ха часрах. Киле кайса иличчен илсе пӗтересрен хӑрагӑп. Икӗ кило анчах илсе йултӑм.

Макҫӑм. Ҫук-ҫке, инке. Пулсан конечнӑ парӑттӑм.

Татйана. Ах, ты? Сӑра тутлантарма кирлӗччӗ. Ратнепе ӗҫке тухас теттӗмӗр. Чӑнах, пулсан пар-ха?

Макҫӑм. Ҫук терӗм-иҫ.

Татйана. Ҫук тӑк мӗн тӑвас теп? Мӗн пурринпе ҫитӗ. Ытла пӗр татӑк сукчӗ. Ачасем ваљљи кӗпелӗх те пулчӗ. Йалах килсе сутаҫҫӗ те...

Макҫӑм Ратнепе тухасси тухатӑр... Каллех хура хӑма ҫине ӳкесрен хӑрамасна?

Татйана Хура хӑма ҫине? Хӑҫан ӳкернӗ мана?

Макҫӑм. Веҫ... Стена хаҫатне вуласа пӑх.

Татйана. Ӑҫта? (Пӑхкаласа). Ху вуласа пар-ха. Макҫӑм?

Макҫӑм. Конечнӑ начар ӗҫлене тесе

Татйана. Кам? Епӗ начар ӗҫлени? Епӗ пайан та тӑватӑ пин тӗп пӑмидур кӑларса лартнӑ. Шӳт тӑватӑн есӗ-ӗ?

Макҫӑм. Конечнӑ шӳт туса мар. Аллӑ проччӑн трудоденне чакарни ҫинчен ҫырни те пур.

Татйана.. Алла проччӑн? Пилӗк трудоден чыхни ҫитмест, тата аллӑ проччӑн. Айтуру-у... Пӗтрӗм-ҫке? Мӗн тӑвас? Кришшах пӗтерет ӗнтӗ. Чӳречине ватна, амма чулпа пуҫӗнчен пемен ӑна-а...

Макҫӑм. Ытлашши калаҫан, инке?

Татйана. Ытлашши? Хӑрамастап. Кайса хупчӗр. Касчӑр. Хут те тӑварласа ҫиччӗр.

### 9-мӗш курӑнни.

Саҗук кӗрет.

Саҗук. Мӗн пулнӑ?

Татйана. Мӗнле хӑйатӑр есӗр мана хура хӑма ҫине ӳкерме? Кам пур ман пек ӗҫлекенни, кам? Кала, кам? Епӗ пайан та тӑватӑ пин тӗп кӑларса лартнӑ..

Саҗук. Кайса пӑх-ха. Тӑватӑ пинрен миҫе тӗп чӗрӗлнӗ. Аллӑ прочӑн ҫеҫ мар, пӑмидор тӗпне сайа йанине те шыраса илмеле санран...

Татйана. Чыхӑр ҫын ӗҫленине... Чыхӑр. Сире нумай кирлӗ... (Йатлаҫсах тухса кайат).

### 10-мӗш курӑнни.

Пӳртре Саҗукпа Макҫӑм.

Саҗук. Тӗлӗнмеле ку Татйанапа. Тымарне татса ан тӑпӑлтар тесе мӗн чухлӗ каларӑм. Кайран хӑйех йатлаҫат.

Макҫӑм. Социалисӑм тӑвасси ҫӑмӑл мар, Саҗук. Епӗ хам икӗ ҫул Хӗрлӗ ҫарта страдал. Пӗтӗмпех пӗлетӗп.

Саҗук (сӗтел ҫине хут татӑккисем кӑларса хурса). Ача, ҫак нарйадсем ҫинчен тӗп кӗнеке ҫине ӳкерсе ҫыр-ха. Пайан иккӗмӗш бригадӑран иртсе кайрӑмӑр. Ну, тапалапчӗҫ... Ҫитеймерӗҫ пире ҫапах...

Макҫӑм. Конечна сыратӑп. Комсомол бригади мала тухни савӑнтарат мана. Анчах лар-ха ҫакӑнта, Саҗук. Еиертенпе курман иксӗмӗр

Саҗук.Васкамала, ача. Ыран ваҗҗи вӑрлӑхсем хатӗрлесе ҫитерейменччӗ.

Макҫӑм. Пӗр-икӗ сӑмах ҫех каласа илетпӗр, Саҗук. Лар-ха.

Саҗук. Тепӗр чухне, ача. Ҫынсем те килме пултараҫҫӗ. Аван мар.

Макҫӑм. Каҫ та улталарӑн. Кӗтрӗм-кӗтрӗм.. Тухмарӑн.

Саҗук. Улталаса мар, ача. Еҫ пулчӗ. Кришша патӗнче нумайччен калаҫса лартӑмӑр.

Макҫӑм. Мӗн ҫинчен калаҫрӑр?

Саҗук. Так, тырӑ акса пӗтересси ҫинчен калаҫса лартӑмӑр. Вара есӗ кӗрсе кайнӑ пулӗ тесе кӗрсе ҫывӑртӑм.

Макҫӑм. Шӑп тул ҫутӑличчен кӗтрӗм, Саҗук Сансӑр пуҫне пӗр минут та пурӑнас килмест ман Ан чӑс, Саҗук. Кала татса. Ответ пар... Мӗншӗн каламастӑн? Мӗншӗн нимӗн те шарламастӑн?

Саҗук. Тем... Хам тӗллӗн шухӑша каймарӑм-и, ача.

Макҫӑм. Мӗн шухӑш-ши? Пӗлейресчӗ.

Саҗук. Анукпа Кришша йӗкӗр-мӑйӑр пек пурӑначчӗҫ. Кам шухӑшланӑ вӗсем уйӑрлаҫҫӗ тесе. Чӑнах пулсан, ытла та ухмах ҫав Анук. Кришшаран луччӑ ҫын ӑҫта пулӗ-ши?

Макҫӑм. Кришша? Кришша... Йурийех урӑх сӑмах ҫине куҫатӑн ес. Пайанхи ҫыру конечнӑ манран чистах сивӗннине кӑтартат.

Саҗук. Есӗ хаҗ те манман-и ӑна?

Макҫӑм. Сана йуратмастӑп пулсан, манӑттӑм-и тен, Саҗук. Есӗ йаланах ман чӗререпе манаймастӑп. Сансӑр пуҫне пурнӑҫ ҫук ман.

Сањук. Уншăн пулсан кăмăлна ан хуç. Ињушсем комсомол йачейкине йанă çыру вăл. Пирĕн кучченеçсене илвине пĕлтерсе çыраççĕ. Питшăлисемпе хĕрлĕ кĕтесе илемлетнĕ тет те, пулккипе пăхса савăнаççĕ тесе çырнă. Ĕненетĕн-и ĕнтĕ?

Максăм. Ĕненетĕп, Сањук. Ĕненетĕп. (Тытма хăтланат).

Сањук. Ĕç пĕтсен урама тухатпăр вĕт, ача?

Максăм. Тухатпăр, тухатпăр. (Сањук тухса кайат).

**11-мĕш курăнни.**

Максăм пĕччөнех, сĕтел çинчи хутсене илсе вулат, шутласа кĕнеке çине çырат.

**12-мĕш курăнни.**

Сыхлансарах Уçăп кĕрет. Йавах урлă тутăр çыхнă.

Уçăп. Карĕç-и?

Максăм. Никам та çук.

Уçăп. Епĕ татах кам та пулин çук-ши тесе сыхланса кĕретĕп.

Максăм. Хăш вăхăтра çÿремелине чухламастăн, Уçăп пичче!

Уçăп. Кришша пуррине кĕтмен епĕ. Васкамала пулчĕ.

Максăм. Кала часрах. мĕн хыпар илсе килтĕн, Уçăп пичче?

Уçăп. Сывлăш çаварса йарам. Чупса анчăхсăр пултăм.

Максăм. Кам ывăнмав? Епĕ ывăнмав тетни мĕн? Шухăшласа пуç çăпан пек ыратакан пулчĕ, Уçăп пичче. Хам пÿртре хам хуçа мар. Çиллеме ăша йарса тÿсни йăлăхтарчĕ. Малала çул çук. Пĕтесси анчах куç умĕнче. Акма чарăннăскерсене салатаймарăн Начар ĕçлетĕн.

Уçăп. Кришша çитсе кансĕрлерĕ. Петĕмпех пулса çитнĕччĕ.

Максăм. Ыран иртен те ир акана пĕтереççĕ Пĕлетне есĕ çавна?

Уçăп Питех тăвăлланмали çук. Милици килет.

Максăм. Килет-и? кам?

Уçăп. Уçланкин. Епĕ тÿр сукмакпа мала тухрăм.

Максăм. Килет пулсан йурат. Мян пурте хатĕр. Кришша пĕлесрен анчах сыхланас пулат. Вахăт кĕске. Пайан сана... Ыран мана та манми пулĕç. Пер кун йулса акни вунпилĕк процент. Икĕ кун вăтăр. Вăтăр процент пирĕн йал умне çеç ултă пин пăт тивет.

Уçăп. Ăнланатăп, Максăм. Ăнлаватăп.

Максăм. Вара.. ав анатăп, Уçăп пичче. Туй тăватпăр.

Уçăп. Мана ĕçки пултăр.

Максăм. Йалĕпе ĕçсе савăнччĕр. Матка хÿхĕм пулат вĕт, Уçăп пичче?

Уçăп. Такам çинчен калатăн есĕ, Максăм, чухлаймарăм епĕ.

Максăм. Чухлаймарăн-и? Ха ха-ха! Йалта пĕр хĕр.. Колхозра паллă паттăр. Комсомол йачейки секретарĕ. (Ура сасси илтĕнет).

Уçăп. Тăс-с-с.. Такам килет..

Максăм. Лăплан. Мĕн кушак пек пĕтĕрнетĕн?

**13-мĕш курăнни.**

Уçланкин кĕрет. Аллинче портфел.

Уçланкин. Здрасте! (Ал пырса тытат).

Максăм. Килĕрех, йулташ Уçланкин.

Уҫăп. Ҫакăнта ларăр-ха, йулташ Уҫланкин. Пирĕн колхозра хисеплĕ хăна пулăр.

Уҫланкин. Фу! Йăлтах ывăнтăм. Милиционера кĕни раштавра ҫулталăк тулат, канса курăймарăм. Ăна тумала, кăна йĕрлемеле. Упăшкипе арăмĕ уйăрлаҫҫĕ—есĕ кай. Алимент шырама Уҫланкин кай. Чӳречене ҫапса ватсан—каллех мана хăвалаҫҫĕ. Ҫитменнине, васкатаҫҫĕ-ха. Чӳрече мĕнех-ши вăл? Револуци чӳрече ҫинче тăрат-ши? Колхоз пурлăхне вăрлакансене тытма тесен, пархатарлă ĕҫчĕ. Сире мĕн мар пĕр йалта ĕҫлеме. Ман вырăнта пулса пăхасчĕ есĕр!

Макҫăм. Мĕн каласси пур вара Конешнă милицинче ĕҫлеме йăвăр. Ҫавăнпăн ĕҫĕ те хисеплĕ. Есĕ, йулташ Уҫланкин, социалисăмăн тытăмлăхне ҫирĕп сыхлакан вырăнта.

Уҫăп. Кашнă сынах пултарас ҫук сан ĕҫре, йулташ Уҫланкин.

Уҫланкин Факт! Анчах ман пайан вашнă делăпа киле ҫитмелеччĕ. Председатĕле кайса чĕпĕр-ха часрах. Ĕҫе туса пĕтерес те, мунча кĕме кайас.

Уҫăп. Тем ĕҫпеччĕ, йулташ Уҫланкин?

Уҫланкин. Мошĕт, есĕр пĕлетĕр?

Макҫăм. Мĕн ĕҫ ҫинчен-ши, йулташ Уҫланкин?

Уҫланкин Председатĕл чӳречиве кам ватнă? Илтмен-и?

Уҫăп. Кĕркури Петровăч чӳречин кантăкне-и?

Уҫланкин. Факт!

Уҫăп. Калама хăрушă, йулташ Уҫланкин.

Уҫланкин. Есĕр пĕлетĕр-и мĕн?

Уҫăп. Кам пĕлмест? Йалĕпе пĕлеҫҫĕ.

Уҫланкин. Калатăп вĕт тупатăп тесе...

Уҫăп. Калама чĕлхе ҫаврăнмаст, йулташ Уҫланкин. Пире йăлтах хăратса пĕтерне ĕнтĕ колхозра.

Уҫланкин. Хăратса пĕтерчĕ? Кам?

Уҫăп. Акă пăх. Хама тиверсе пĕтерчĕ...

Уҫланкин. Факт. Кам тиверчĕ?

Уҫăп. Аллă тенкĕ укҫа илмели пурччĕ Кришшаран. Ыйтма тесе кайрăм та, тиверсе пĕтерчĕ. Кайран хăй чӳречине хăйех ҫапса ҫĕмĕрсе тăкрĕ.

Уҫланкин. Как? Как? Йăнăшмастăр-и есĕр? Мĕн сăлтавпа хăй чӳречине хăйех ҫĕмĕрнĕ вăл?

Макҫăм. Тĕрĕсех, йулташ Уҫланкин. Чӳрече ватсан кулаксем тапăннă пулат-ҫке... Герой пулас килет. Вăл каҫ арăмне те килтен хăваласа йанă Кришша. Пире ĕненмесен, арăмне хăйне чĕнтерсе ыйтма пултаратăр.

Уҫланкин. Герой пулас килет? Гражданин Уҫланкин, гражданин Уҫланкин милицине кĕни раштавра ҫулталăк ҫитет, ҫавна аса илейместĕн. Тĕрĕссипе калатăп, йулташсем. Ку таранччен тавҫăрса илеймен ĕҫ пулманччĕ ман. Активиссене чăнах та кулаксем тапăнаканччĕ. Акă чийе ҫын ăҫта вăл? Ҫĕнĕ ĕҫ, ҫавăнпа малтанах чухлаймарăм епĕ. Епĕ ҫеҫ мар, кирек-кам пулсан та тавҫăрса илес ҫукчĕ ку ĕҫе. Спасибă, спасибă сире пулăшу кăтартнăшăн.

Уҫӑп. Сӑмах калама ҫук. Колхозран кӑларассипе хӑратат.

Макҫӑм. Пӗтӗм активиссене ҫисе йарат. Акӑ, Татйана Иванӑвнӑран ыйтӑр есӗр, ку хӗрарӑм пек лайӑх ӗҫлекен пирӗн колхозра урӑх никам та ҫук.

Уҫӑп. Раҫӗ, комунис тесе вара, тем пулсан та ответ тыттармала мар? Мӑшкӑл вӑл, йулташ Уҫланкин... Йепле тӳсес ку мӑшкӑла?

Уҫланкин. Тӗрӗсех, йулташсем. Саккун никама та йӗркесӗр ӗҫсем тума хушмаст. Анчах есӗр фактсем ытларах тупса парӑр. Ахалӗн ӗненме май ҫук.

Макҫӑм. Фактсем тем чул та, йулташ Уҫланкин. Акӑ, пӑхӑр-ха: ку ведомӑҫе куратӑр-и?

Уҫланкин. Факт.

Макҫӑм. Ултӑ ҫӗр тенкӗ приходра пур, расход туни ҫук. Ӑна та хӑй кӑсйине чикнӗ. Ҫапла вӑрласан мӗнле социалисӑм пултӑр?

Уҫланкин. Факт. Вот негоднӑй. Чӳречене ватрӗҫ тесе ҫӳрет. (Уҫӑпа). Есӗ кайса чӗн-ха часрах свидетӗлсене.

Уҫӑп. Халех, йулташ Уҫланкин. (Васкаса тухса кайат).

### 14-мӗш курӑнни.

Пӳртре Макҫӑмпа Уҫланкин анчах.

Уҫланкин. Тавай формаљнӑй протокол ҫырар, йулташ. (Хут сине ҫырма хатӗрленет). Мӗн йатлӑччӗ-ха есӗр?

Макҫӑм. Макҫӑм.

Уҫланкин. Аҫу йачӗ?

Макҫӑм. Михайлович.

Уҫланкин. Хушамат?

Макҫӑм. Колпаков.

Уҫланкин. Как, как?

Макҫӑм. Ко-олпа-аков

Уҫланкин. Факт! Анчах кӗскерех кала есӗ. Мунча сивӗнесрен хӑратӑп.

Макҫӑм. Йурат, йурат, йулташ Уҫланкин. Конешнӑ васкамалла.

Уҫланкин. Миҫе ҫулта?

Макҫӑм. Ҫирӗм улттӑра. Икӗ ҫул хӗрлӗ ҫарта пулнӑ.

Уҫланкин. Та-ак. Парти была?

Макҫӑм. Конечнӑ беспартейнӑй...

Уҫланкин. Факт! Епӗ хам милицине кӗни раштавра ҫулталӑк ҫитет. Парти не была.

Макҫӑм. Зайавлени пама шутлатӑп.

Уҫланкин. Та-ак... Социаљнӑй положени?

Макҫӑм. Конечнӑ самӑй бедњак. Ҫири ҫӗтӗк шинелтен урӑх ним те ҫук ман.

Уҫланкин. Факт! Под судом была?

Макҫӑм. Мӗнле ҫын шутлатӑр есӗр мана, йулташ Уҫланкин?

Уҫланкин. Факт! Григорий Петров тӑван тивмест-и сире?

Макҫӑм. Конечнӑ ҫук.

Уҫланкин. Т-а-а-ак. Ку ӗҫпе тата мӗн хушса калама пултаран?

Макҫӑм. Конечнӑ хам каланисене тӗрӗс тесе ал пусма пултаратӑп.

Уҫланкин Та-а-к..

Макҫӑм. Хӗлле пӗрене турттарнӑ укҫа пулнӑ.

Уҫланкин Факт!

Макҫӑм Кассӑ кӗнеки ҫине кӳртмен.

Уҫланкин. Пӗрене турттарнӑ укҫа-и, мӗн-и,—тӗрӗслесе тухӑп. Ку хутне мана парса йар-ха есӗ.

Макҫӑм. Конечнӑ... Сирӗн ваљљий х хатӗрленӗ епӗ. (Кӗнеке ӑшӗнчен ҫурса илсе Уҫланкина парат).

Уҫланкин. Мӗн ҫӑвӑ тума килеймерӗҫ ҫавсем. Арӑм кӗтсе ывӑнчӗ пулӗ. Хурӑн милӗк тупайрӗ-ши?

Макҫӑм Халех ҫитӗҫ, йулташ Уҫланкин. Тата ҫакна каласшӑнччӗ епӗ.

Уҫланкин Кала, кала.

Макҫӑм Пытарма ҫук, йулташ Уҫланкин. Григорий Петровчӑ конечнӑ тӑрӑшса ӗҫлекен ҫын. Хам та хисеплетӗп. Социалисӑм тата хаклӑрах. Ахалӗн мар икӗ ҫул хӗрлӗ ҫарта страдал епӗ

Уҫланкин Факт!

Макҫӑм. Колхоз пурлӑхне сыхӑ усрассишӗн никама та шеллеместӗп епӗ

Уҫланкин Кӗскерех кала есӗ.

Макҫӑм. Питӗ ӗҫке йуратат.

Уҫланкин. Факт.

Макҫӑм. Тӗрӗссипе каласан, йалта первӑй кулак пулнӑ.

Уҫланкин. Кула-ак? Та-а-ак... Так... Известный факт. Кӑна ҫырасах пулат. Председатӗл кулак? Здорӑвӑ!

Макҫӑм. Тем чул йӑвӑҫпа сутӑ тунӑ.

Уҫланкин. Факт! Граждавин Уҫланкин. Акӑ ӑҫта вӑл пытавса, вӑрттӑн ӗҫлекен елемент. Тек начар ӗҫлен тесе йатлаҫаччӗҫ-ха.

Макҫӑм. Партине кӗнӗ те... Конечнӑ калама хӑраса пурӑнаҫҫӗ.

Уҫланкин Тата мӗн? Кала, кала.

Макҫӑм Урӑх ним те калама пултараймастӑп.

Уҫланкин Факт! Калатӑп вӗт тупатӑп тесе. Нет, мана улталаймав. Ал пус

Макҫӑм. Фактсем ҫителӗклӗ патӑм. Ман шутпа ал пусмасан та йурамала пек, йулташ Уҫланкин.

Уҫланкин. Как, как? Ал пус! Саккун вӑл тӗрӗслӗхе йуратат.

Макҫӑм. Ҫаплах пулӗ те, йулташ Уҫланкин. Кӗркури Петровчӑ пӗлесрен хӑратӑп.

Уҫланкин. Хӑрас пулсан мӗншӗн каларӑн? Алӑ пус!

Макҫӑм. Пусатӑп, пусатӑп, йулташ Уҫланкин. Социалисӑм тӑвасшӑн хама та шеллеместӗп. (Ал пусат).

Уҫланкин. Факт! Капла законнӑй протокол пулчӗ ӗвтӗ.

### 15-мӗш курӑнни.

Васкаса Татйана кӗрет.

Максӑм. Йулташ Уҫланкин, Татйана Иванӑвнӑ килчӗ.

Уҫланкин. Так-так. Нуккӑ, инке, каласа пар. Кӗркури Петров ҫинчен мӗн пӗлен есӗ?

Татйана. Кришша ҫьнчен-и?

Уҫланкин. Факт!

Татйана. Тем те пӗлетӗп. Кришшаран усал ҫын ҫук. Пуҫа ҫирӗ ҫавах.

Уҫланкин. Так... так...

Татйана. Лайӑх ӗҫлесен штраф тӑват. Калама ҫук усал. Каҫ хӑй патне кайсан тӗксе чикелентерсе кӑларса йачӗ Ҫирӗм ҫул пурӑнса хам арҫынран ҫимен патака ҫирӗм. Мӗнле ҫапла колхоз пулат вӑл, йе?

Уҫланкин. Та-ак.. Интереслӑ факт.

Татйана. Мана ҫеҫ-и? Арӑмне те хӑваласа кӑларса йанӑ. Хӑй рысакпе ҫеҫ саркаланса кататҫӑ туса ҫӳрет.

Уҫланкин. Так... та-ак..

Татйана. Тӳсме ҫук. Кун пекех пулсан колхозран та тухма шухӑш пур.

Уҫланкин. Ҫук, ҫук, инке. Колхозран тухма йурамаст. Хамӑрах майлаштаратпӑр Тата мӗн пӗлен?

Татйана Урӑх мӗн?

Уҫӑп (алӑкран уҫса пӑхса). Кӗме йурат-и?

Уҫланкин. Факт. Пӑртак кӗтӗр-ха.

Уҫӑп. Кӗтетпӗр.. Кӗтетпӗр. (Кайала тухса алӑка хупаҫҫӗ).

Уҫланкин. Ал пус.

Татйана. Максӑм, маншӑн есӗ ал пус-ха...

Максӑм. Ковечнӑ, инке. (Ал пусат).

Татйана. Кайма йурат-и?

Уҫланкин. Факт.

Татйана. Ах-ти! Васкамалаччӗ ман. Хӑнасем пуҫтарӑннӑччӗ. Хамӑр пата ҫитсе курӑр.

Уҫланкин. Неккӑлӗ. Арӑм кӗтсе ырчӗ пулӗ. (Татйана тухса кайат).

### 16-мӗш курӑнни.

Уҫланкин. Кала, кам килнӗ ҫавӑнта?

Максӑм. Халех, йулташ Уҫланкин. (Васкаса пырса алӑка уҫат). Кӗрӗр.

### 17-мӗш курӑнни.

Уҫӑп, Анук тата Укҫине кереҫҫӗ.

Максӑм. Кришша арӑмӗ Анна Петровнӑ килчӗ, йулташ Уҫланкин.

Уҫланкин. Так... так...

Уҫӑп. Малаларах иртӗр.

Укҫине. Епӗ те килтӗм.

Уҫланкин. Есӗ кам пулатӑн?

Укҫине. Анук ман хӗр пулат.
Уҫланкин. Та-ак.
Укҫине. Ҫамрӑкӑн чӗлхе ҫыхланат унӑн.
Уҫланкин. Факт.
Укҫине. Ҫавӑнпа хам та килес терӗм.
Уҫланкин. Та-ак, килӗр-ха кунтарах.
Уҫӑп. Пырӑр, пырӑр.
Уҫланкин (Анукпа Укҫине Уҫланкин патнерех пырсан). Ку ӗҫпе есӗр мӗн пӗлетӗр? Тӗрӗссипе калӑр.
Укҫине. Тамаша! Каламасӑр, ӑмма каламастпӑр.
Уҫланкин. Та-ак, Аннӑ Петровнӑ!
Анук. Епӗ..
Уҫланкин. Кӗркури сана мӗнле хӑваласа кӑларса йачӗ? Каласа пар-ха
Анук. Хӑваласси-мӗнни?..
Укҫине (Анук сӑмахне тытса илсе). Тамаша! Хӑваласси-мӗнни тесе тӑрат! Хайне пӗр йапаласӑр кӑларса йанӑ.
Уҫланкин. Та-ак!
Укҫине. Айван темерӗн Хам каласа парам, ачам.
Уҫланкин. Кала, кала!
Укҫине. Пирӗн кӗрӳ ҫын вӗҫтерлӗ мар вӑл. Ҫӗр хута йал тӑрӑх ҫӳрет. Киле килсен йатлаҫат. Тӳснӗ ман хӗр нуштине... Ей... пӳлӗхҫӗ-ӗм...
Уҫланкин. Факт!
Анук. Качча пынӑранпах Кришшапа лӑлкӑ пурӑнса курайморӑм епӗ.
Уҫланкин. Так .. Так... Интереснӑй факт.
Укҫине. Тем пулсан та, пирӗн кӗрӳ председатӗл пулмала ҫын мар.
Анук Кӑлармала ӑна председатӗлтен...
Укҫине. Ҫапла кала ҫав, хӗрӗм, ҫапла кала.
Уҫланкин Чӳрече кантӑкне мӗнле ватрӗ вӑл?
Укҫине. Ӑ-ӑ... Путсӗр ҫывнӑн кантӑка ватасси те пулӗ. Тем тума та пултарӗ.
Уҫланкин. Факт. Есӗ таса шыв ҫинчи пекех паллӑ.
Уҫӑп. Татӑклӑрах кала есӗ, Укҫине.
Укҫине. Тамаша! Хаҧ те каларӑм-иҫ
Анук. Урах ним те мар та... Председатӗлтен кӑларӑрах ӑна.
Уҫланкин. Ал пусӑр...
Укҫине. Йата ҫырма пӗлӗпӗр ҫке ӑна... (Анукпа иккӗшӗ те ал пусаҫҫӗ).
Уҫланкин. Халӗ кайма пултаратӑр.
Анук. Йулташ милици, тархасшӑн Кришшана председатӗлтен кӑларӑрччӗ...
Уҫланкин. Факт!
Макҫам. Конечнӑ кӑлараҫҫӗ.
Укҫине. Тавах ырӑ сӑмахна, Макҫӑм ачам. (Тухса кайаҫҫӗ).
Уҫӑп. Куртӑр-и ӗнтӗ, йулташ Уҫланкин? Раҫӗ ҫав ҫын колхоз председатӗлӗ пулма пултарат? Мана самай бедҧака правленинчен хӑваласа кӑларса йачӗ. Ыранран колхозра пулмастӑн, терӗ.

Максӑм. Сирӗн ирӗкре саккун, йулташ Усланкин. Социалисӑм интересӗшӗн....

Усӑп. За што боролись?

Усланкин. Лӑпланӑр, йулташсем. Ӗҫе хамӑрах майлаштарӑпӑр. Сана та колхозран кӑлармаҫҫӗ. Пурӑнӑр, ӗҫлӗр.

**18-мӗш курӑнни.**

Кришша, Петӑ, Саҥук кӗреҫҫӗ.

Кришша. Йулташ Уҫланкин, нумай пулат-и есӗр килни? Мӗншӗн пӗлтермен мана? Паҫӑрах кӗтетӗп сире.

Уҫланкин (хучӗсене пуҫтарса). Пришо-ол?

Кришша. Лайӑх пурнатӑр-и? (Ал тытма тӑрат).

Уҫланкин (ал тытса). Здрасте! Здрасте!

Кришша. Ман ӗҫпе-и есӗр, йулташ Уҫланкин?

Уҫланкин. Факт. Анчах ман вӑхӑт ҫук. Ҫак хутпа управлениве пыр. Сывӑ пулса тӑрӑр-ха.

Уҫап. Чипер кай, йулташ Уҫланкин. (Хӑй те милици хыҫӗнчен шӗвӗнсе тухса кайат).

Петӑ. Мӗн хучӗ вӑл, Кришша?

Кришша. Сегодня... Явиться в управление милиции.

Саҥук. Мӗн ӗҫпе?

Кришша. Максӑм, есӗ пӗлмерӗн-и?

Максӑм. Нимӗн те пӗлместӗп, Григорий Петровчӑ.

**Чаршав.**

## ТӐВАТТӐМӖШ АКТ

Сценӑ ҫинче униче карти. Шал йенче ларакан тырӑ амбарӗсем курӑнаҫҫӗ. Йали кӗрекен пус хапхи пур.

**1-мӗш курӑнни.**

Тӗксӗм каҫ. Малтанах сценӑ ҫинче никам та ҫук. Йалта ӳсӗр ҫын сассисем, хуткупӑс калани сасӑ, радио тӑрӑх илтӗнекен илемлӗ савӑнӑҫлӑ сасса хирӗҫекен шав илтӗнет.

**2-мӗш курӑнни.**

Йалтан Паҥукпа арӑмӗ ыткӑнса тухаҫҫӗ. Паҥук ватрепе сӑра йатнӑ. Арӑмӗ тутӑрпа куҫҫинеҫ ҫӗкленӗ. Иккӗше те ӳсӗр. Йурлаҫҫӗ.

Чейе ҫынна—
Чейе курки.
Тӑмсай ҫынна—
Тӑм курки.
Пире йурӗ алтӑр та,
Сӑри пултӑр ҫӑрарах.

**3-мӗш курӑнни.**

Пус хапхинчен Татйана васкаса кӗрет.

Ваҫухха. Тавсийӗ, Татйана!

Татйана. Тавах... Есӗр ӑҫтала кайатӑр?

Ваҫухха. Аттесем патне кайма тухрӑмӑр.

Паҥук. Ирӗк пек чух хуҥӑмсем патне кайса ӗҫес... Йакунӑванӑ...

Татйана. Епĕ те ҫавăнпа пиччесене кайса чĕнтĕм. Лашасăрах кайатăр-ҫке есĕр?

Ваҫухха. Инҫе мар терĕм³р те, ҫулĕ такăр

ПаҌук. Ман колхозăн мар лаша. Хамăн, йакунă-ванă.

Татйана. Пире те кайала таварса парĕҫ. Кришшана илсе кайнă ĕнтĕ...

Ваҫухха. Чăннипе мĕншĕн тытса кайнă ҫавна?

ПаҌук. Мĕншĕн? Ир акма хăваланăшăн. Уҫăп калат, совет хушнипе ĕҫлемест Кришша, тесе. Йакунă-ванă.

Татйана. Укҫа та вăрланă вал Мана та тивернĕ. Анука та хăваланă. Пуриншĕн те айăплĕҫ. Кришшана илсе кайнăранпа чун уҫăлсах карĕ. Пуҫа ҫийеччĕ.

ПаҌук. Пĕтĕм йала тыткалама хăтланатчĕ, йакунă-ванă. Йал аслă вăл. Тыткалайман.

Ваҫухха. Кайас, ПаҌук. Кĕтсе ырчĕҫ пуҌ. Ҫитес ҫĕре ҫитмелех.

Татйана. Чипер ĕҫсе килĕр. (Татйана йалала кĕрсе кайат. ПаҌукпа арăмĕ пус хапхинчен тухса кайсан йурлама тапратаҫҫĕ).

Айта, карчăк,
Ĕҫке кайар.
Чим-ха, старик,
Ача чĕркем.
Ес ачине чĕрке-ха,
Еп чĕлĕмне чĕртем-ха.

(Хăйсем курăнми пулсан сассисем те илтĕнми пулаҫҫĕ. Йалти шав ҫаплах илтĕнет).

**4-мĕш курăнни.**

Тĕксĕм каҫ. Инҫетренех Ҫитăр йурласа килет. Ӳсĕр. Малтанхи тумĕпех. Пăшалĕ те пур.

Ҫитăр.
Сынсем суха тăваҫҫĕ, ман ани ҫук.
Мĕн тăвас?
Ани колхозра,
Хам советра.
Сынсем ĕҫке кайаҫҫĕ, ман лаши ҫук.
Мĕн тăвас?
Лаши колхозра,
Хам советра.

Ҫитăр (йурлама чарăнса). Тпру-у... Тур ҫырлах... ПаҌук кум... Тавсийе! (Йурлат)

Лаши колховра,
Хам советра...

Ҫитăр (йурлама чарăнса). Воотĕ, Кришша... Макҫăм—Кришша мар. Ĕҫтерет те... Кар-рчăк... Кулач ҫиме тăр-р... Кулач акма каймала... Тур ҫырла-а.. Хик... Тăр-р... Тур ҫырлах... Кша-а-а... мур куракĕсем!. (Пăшалĕнчен перет). Ет сире-е.. Кша-а! (Йурăпа антрашкаласа амбар пусми патнеле ырат).

Лаши колхозра,
Хам советра-а-а...

Ша а-а... Хик... А-а-а...

(Пусма тăрăх амбар умне хăпарма тăрăшат. Пăшалĕ аллинчен ӳкет. Хăй ҫаплах йурăпа антрашат).

Лаши советра,
Хам колхозра а...

Кша-а-а... мур... хаҫ... Кура...а-а... ша-а-а... (Пусма тӑрӑх хӑпараймасӑр амбар умне тӑсӑлса выртать). Ша-а а... (Лӑпланать).

### 5-мӗш курӑнни.

Пусӑран пӗр ушкӑн хӗрупраҫ, ача-пӑча, ҫамрӑксем хуткупӑспа йурласа тырӑ аквӑ ҫӗртен таврӑнаҫҫӗ.

Савӑнсах пайан ӗҫлерӗм
Еп колхозӑн хирӗнче, хирӗнче.
Ех, мӗн чухлӗ ҫӗнӗ йурӑ
Еп вӗрентӗм вӗсенчен, вӗсенчен.

### 6-мӗш курӑнни.

Матӗрне тата 5—6 ҫын хиртен тырӑ акса килеҫҫӗ. Вӗсен хушшинче Анук та пур.

Анук. Пӗтрех пулӗ Кришша. Кӑлармӗҫ ӗнтӗ нихҫан та.

1-мӗш сасӑ. Чӑнах пулсан, мӗншӗн хупрӗҫ-ши Кришшана? Акма ир кӑларнӑшӑн тесе сӑмах сарӑлнӑ йал ҫине. Ултӑ ҫӗр тенкӗ укҫа пытарнӑ, теҫҫӗ.

Матӗрне. Ҫынсем тем каласан та, ӗненместӗп епӗ. Кришша колхоз укҫине пытармала ҫын мар. Санпа та питех йатлаҫас килет, Анук. Мӗн ӑспа тухса кайнӑ ҫав вара есӗ Кришша панчен? Мӗн ҫитмен сана?

Анук. Ытла ҫын сӑмаххине тӳсесси ҫке, Матӗрне аппа.

Матӗрне. Ей, ачам. Аннӳ сӑмахне сахалтарах итле есӗ. Епӗр, карчӑксем, пӗлни килӗшмест ӗнтӗ. Пурнӑҫа ҫамрӑксем тӑваҫҫӗ ҫав вара.

Анук. Тем каламала ӗнтӗ, Матӗрне аппа.

Матӗрне. Ним шухӑшламали те ҫук, ачам. Веҫ, итле-ха, йепле савӑнаҫҫӗ ҫамрӑксем. Кунӗпе ӗҫлесе те ывӑнман. Йурлаҫҫӗ.

Анук. Таврӑнсан Саҥукран ыйтса пӗлес те, ыран хамӑн кайса килес пулӗ РИК-а.

Матӗрне. Кай, ачам, кай. Кӗҫӗр таврӑнмасан епӗ те пырӑп.

1-мӗш сасӑ. Колхозӗпе кайатпӑр.

Матӗрне. Йалӗпе ал пустарса кайатпӑр.

1-мӗш сасӑ. Питех ывӑнтӑм пайан. Акасса та каҫа йуличченех акрӑмӑр та.

Матӗрне. Ывӑнни нимех те мар. Пирӗн ҫинче тӑрас ҫук. Акса пӗтерни паха ҫав вара. (Иртсе кайаҫҫӗ).

### 7-мӗш курӑнни.

Петӑпа Саҥук килеҫҫӗ. Иккӗшӗ те пурак йӑтнӑ.

Саҥук. Ну, райкомра тустарчӗҫ, ача. Тӳсетӗн тӳс, тӳсмесен ҫавӑнтах йӗрсе йарӑн.

Петӑ. Кришша хирӗҫ мӗн те пулин ответ парайрат-и?

Саҥук. Мӗн калӑн, ача. Тӗрӗсех йатлаҫҫӗ вӗсем. Мӗн пӑхнӑ есӗр, ӑҫта сирӗн класлӑ сисӗмлӗх тесе тустараҫҫӗ.

Петӑ. Хамӑр та ҫав? Пӗркунне райком секретарӗ йала килсен йатарласах хамӑртан ыйтса ларать. Епӗр ҫине-тӑрса шантаратпӑр. Ех-х!

Саҫук. Ашшӗнчен раскулачӑт тӑвачченех уйӑрӑлса хӗрлӗ ҫара кайса килнипе шантӑмӑр-ҫке.

Петӑ. Ун чухне те маххӑ патӑмӑр. Йатлама мар пире, комсомолран та кӑларса сирпӗтме пултараҫҫӗ.

Саҫук. Райкомра ҫаплах каларӗҫ. Колхоза мала кӑларнипе анчах комсомолра йулма тивӗҫ пултӑр, тесе каласа йачӗҫ.

Петӑ. Ну-и, лекрӗмӗр. Вӑйлӑ ҫапса хучӗҫ. Ҫитменнине пайан йединоличниксене пурне те кӑларайманни шухӑшлаттарат. Паҫук пичче ирпе чиперех тухнӑччӗ хире. Тепре ҫаврӑнса пӑхаччен кӗрсе те кайнӑ. Апла ҫеҫ-и-ха. Хӑшӗ-пӗрисем пӗрер ҫаврӑнаҫҫӗ те, ана пуҫӗнче выртаҫҫӗ. Кришша час таврӑнат-ши? Банкран справкӑсем илсе милицине кайса леҫетӗп те, таврӑнатӑп тесе йулчӗ манран

Петӑ. Пыр та калаҫ. Йалта Кришшана хупнӑ тесе ҫӗр ҫӗмӗрлет.

Саҫук. Кришша киличчен никама та ан шарла. Хупнӑ-хупнах пултӑр. Пӗтӗм колхозниксем умӗнче таса шыв ҫине кӑларатпӑр.

Петӑ. Тупнӑ есӗ, Саҫук, савни!?

Саҫук. Ан калаҫ, ача. Шухӑшласан кӑмӑл хуҫӑлат. Кам шухӑшлама пултарнӑ?

Петӑ. Ех, ес те... Тиркерӗн мава. Вӑт сана Макҫӑ-ам...

Саҫук. Есӗ йӗрлемесӗр те туллийех, Петӑ. Ача, амбарсем панче хурал тӑрат-ши пирӗн? Тӗрӗслер-ха.

Петӑ. Айта... Айта... (Амбарсем патне ҫывхарсан кӑшкӑрат). Ҫитӑр пичче!

Саҫук. Мӗншӗн чӗнмест вӑл, ача?

Петӑ. Ҫитӑр пичче! Ҫук, чӗнмест!

Саҫук. Ӑҫта кайнӑ вӑл, ача, ха? (Шыраҫҫӗ).

Петӑ. Ҫитӑр пичче!

Саҫук. Ак йапала! Хуралӑҫа хӑйне шыраса тупаймастпӑр. Килне кайни ку?

Петӑ (Ҫитӑр выртнине тӗл пулса) Саҫук... Акӑ кунта чӑсӑлса выртат. (Сӑхмавӗнчен турткаласа). Ҫитӑр пичче, Ҫитӑр пичче! Еккай, а!.. Ӳсӗр-и ку-у?

Саҫук. Ҫитӑр пичче, тӑр! Ҫитӑр пичче!

Ҫитӑр. Ша-а-а.. (Каллех лӑпланса выртат).

Саҫук. Ӳсӗр ҫке ку, ача? Акӑ, пӑшалӗ те кунта выртат. (Пӑшалне илет)

Петӑ. Шайттан... Йурат тӗрӗслеме аса илтӗмӗр. Тырпул хуралҫӑсӑрах йулатчӗ.

Саҫук Мӗн тӑвӑпӑр, ача? Урӑх никама тӑратма ҫук кӗҫӗр, акма тухнисем ывӑннӑ. Тухманнисем ӳсӗр. Ирччен хам тӑрӑп. Есӗ кайса ҫывӑр.

Петӑ. Есӗ мӗн машкӑлатни мана? Ҫук, хам тӑратӑп Санӑн бригадӑ ӗҫленине сӑвас пулат. Кришша выранне те ӗҫленӗ есӗ пайан. Района кайса килсе те ывӑннӑ есӗ. Кайса ҫывӑр. Хам хураллатӑп.

Саҫук. Сан тумтир ҫӳхе, Петӑ. Есӗ шӑнма пултаран, ача.

Петӑ. Кайса улӑштарса тӑхӑнма ҫук-и?

Саҫук. Йурат еппин... Кайса тумланса кил, ача. Ҫĕр сивĕ.
Петĕ. Халех! халех! (Васкаса кайат).
Саҫук. Ех, Ҫитăр пичче. Ĕҫеймесĕр тÿсеймерĕн. (Ҫитăр панчен пăхса амбар ҫăраççине тĕрĕслесе хыҫалала утса кайат).

### 8-мĕш курăнни.

Максăмпа Уҫăп сыхланарах килеççĕ.

Максăм. Саҫук района кайнă пайан. Пурте таса шыв ҫине тухма пултарат. Кĕсĕр йулашки тапкăҫ... тасатас пулат.
Уҫăп. Ҫаплине ҫаплах... Тем, ҫан-ҫурăм сăрлатат. Пĕлестăвас пулсан—сăхеăх, Максăм.
Максăм. Хăравҫă. Халĕ чĕрĕ вилĕм мар-и епĕр? Кăҫалхи ака пирĕн тупăка хуплĕ. Йе ĕлĕк ҫак ҫурт хÿтлĕхпе начар пурăннă есĕ? Кам пулнă йалта пуҫлăх? Есĕ мар-и? Санран йал чĕтресе пурăнман-и? Халĕ кама пăхăнан есĕ? Кам сан пуҫу ҫине таптат?
Уҫăп. Вăл ҫаплах... Ĕлĕк пулсан Кришша пеккисене чăмăрласа ҫеҫ кăтартаттăм. Халăх ҫинче шăрш кăларма хăранă вĕсем.
Максăм. Атте тахҫанах тăпра пулнă. Анчах унăн йунĕ вихҫан та ман чĕрере тапма чарăнман. Ку амбарсем ман пулас ҫук ĕмĕрпе те, савăнтарас ҫук сана та, Уҫăп пичче. Мăнкун пулăшаймарĕ. Чан ĕлĕкхи пек йанрамаст. Сасси пăнчăхнă. Кайала чакма ҫул ҫук. Ыранхи кушăн, хĕвел ÿпне ҫаврăнсан та, ÿкĕнместĕп.
Уҫăп. Ҫаплах та, Максăм. Урăхларах тусан авантарах пулмĕ-ши? Кришшана чăнах та хупрĕҫ-и, тен. Правленине хамăр алла ҫавăрса илсен авантарах пулĕ. Шухăшла.
Максăм. Кришшана чăнах хупнă пулсан ҫапла пулĕччĕ те. Анчах суйа, Уҫăп пичче. Ĕненместĕп. Часрах! Кĕлпе акаймĕҫ. (Васкаса амбар патнелле пыраççĕ).
Уҫăп (Саҫук кĕтесрен ҫаврăнса тухнине кура). Чим халĕ, Максăм. Такам пур мар и унта? (Хÿтлĕхе тăраççе. Саҫук кĕтесрен ҫаврăнса тухат).
Уҫăп. Саҫук мар-и вăл?
Максăм. Есĕ тăр-ха. Уҫăп пичче Пĕр сас та ан кăларнă пултăр. Епĕ пĕчченех майлаштаратăп. (Хăйулăн Саҫук патнелле пырат).
Саҫук (Максăма курса, палламасăр). Кам ҫÿрет унта? (Пăшалне ал вĕççĕн тытат).
Максăм (кăмăллă пулма тăрăшса). Епĕ, Саҫук.
Саҫук. Мĕн шыраса ҫÿрен вăхăтсăр?
Максăм. Хуралăҫ вырăнта-и тесе тĕрĕслеме тухрăм. Сана тĕл пуласса кĕтмен. Мĕн тăван есĕ кунта?
Саҫук. Хурал тăратăп.
Максăм. Ҫитăр ăҫта?
Саҫук. Ана, пĕлми ÿсĕр выртат.
Максăм. Ÿсĕр сурăх. Ҫапла хуралласан мĕнле социалисăм тăвăпăр. Ку амбарсенче йалăн мĕн пур вăрлăхĕ выртат. Есĕ, Саҫук, кунĕпе ĕҫлесе ывăнтăн пулĕ. Шăвма та пултаран. Киле кайса ҫывăр. Кан, Саҫук. Хам хураллатăп.

Саҫук. Шанма мар, кӗпе витӗр тар тапсе тухнӑ ман.

Максӑм Чунран йуратвипе хӗрхенсе калатӑп, Саҫук. Канса, ыран ҫӗнӗ вӑйпа ӗҫе тытӑнни пушшех те савӑнтарат ман кӑмӑла. Кай, Саҫук, киле. Кан. Хам хураллатӑп.

Саҫук Ҫыврасси тармӗ, Максӑм. Есӗ те ӗҫсӗрех ларман пулӗ-ха. Хамах хураллатӑп. Ҫӗрӗ те питех илемлӗ. Ҫӑлтӑрсем кӑвак пӗлӗт тӳпивче йарӑннине курса савӑнас килет

Максӑм. Каймасан иксӗмӗр пӗрле хурал тӑратпӑр. Ҫер иртни сисӗнмӗ. Чӑвах та, кӗҫӗрхи ҫӗр питех илемлӗ Есӗ ман умра тӑни пушшех те ҫанталӑка илемлетет. Кил-ха, йунашар лар.

Саҫук. Ура ҫинчен те итлетӗп өлӗ.

Максӑм. Халиччен курман пек турткаланса тӑран, Саҫук! Иртнӗ кас ҫес ӗмӗр пӗр-пӗринчен сивӗнес мар пек калаҫрӑмӑр. Пайан сан кӑмӑлу улшӑнни палӑрат. Чӑнах, епӗ хӗрхенсе анчах каларӑм. Тӗрӗссипе каласан, хамӑн вуҫех та сана киле йарас шухӑш пулман. Кил-ха, лар. Кӑмӑлпа калаҫар иксӗмӗр. Кришша-час таврӑнат-и?

Саҫук. Пӗлеймерӗм.

Максӑм. Епӗ сана районтан пӗлсе килет тесе кӗтетӗп.

Саҫук. Пӗлме мар, кӑтартмарӗҫ те.

Максӑм. Неуштӑ Григорий Петровча чӑннипех хупнӑ? Йалта калаҫҫӗ, ӗненес килмерӗ ман.

Саҫук Виҫӗ кунтан суд пулат, терӗҫ. Вунӑ ҫултан кайа хупмаҫҫӗ тесе калаҫаҫҫӗ. Кришша пысӑк айӑпа кӗнӗ пулмала. Ех, Кришша, Кришша. Кам шухӑшлама пултарнӑ сана хупаҫҫӗ тесе?

Максӑм. Кӗтмен, Саҫук, Кӗркурирен таса ҫын ҫук темелеччӗ. Шел... Мӗн тӑвас тен? Социалисӑм тӑвасси тата хаклӑрах.

Саҫук Хупни тата нимех те марччӗ вӑл. Тивӗҫсӗрех хупмарӗҫ пулӗ. Анчах кама председателе лартапӑр. Ҫав шухӑшлаттарат, Максӑм.

Максӑм. Саҫук, есӗ пулӑн председатӗл. Санран урӑх тивӗҫли кам пултӑр? Пушшех те йуратап сана. Мӑшӑрланапӑр. Пӗтӗм кӑмӑлпа сана йуратма, пулӑшма тӑрӑшӑп.

Саҫук. Ҫук, Максӑм Епӗ ҫынрӑк, пултараймӑп. Председатӗл пуласси ытла пысӑк, ответлӑ ӗҫ. Хам тӗллӗн ҫул тӑрӑшӗпех шухӑшласа килтӗм те, санран, урӑх пултарма та ҫын ҫук тесе шут турӑм.

Максӑм. Мана шанчӑшӑн тем таран хавас епӗ, Саҫук. Анчах Кришшаран ытларах пӗлес пулсан та, мана председатӗл пулма йурамаст, ху пӗлен. Кам ачи пулнӑскер вӑл, тесе тӑрӑнма пултарӗҫ.

Саҫук. Ун ҫинчен ан та шухӑшла, ача. Кӗҫӗрех пуҫтарӑвса сӳтсе-йавӑпӑр. Комсомолӗссем ҫине-тӑрсан, тума пултаратпӑр Хӑвах шухӑшла, санран урӑх кама суйлапӑр. Счетоводра ӗҫлесе ӗҫ йӗркине те вӗренсе ҫитнӗ есӗ. Вӗренни те пур сан. Сана председатӗл тӑватпӑр, Максӑм. Петӑ та ҫаплах каларӗ.

М а к ç ă м. Неушта епĕ председатĕл пулма тивĕç çын пулăп, Саңук, ĕненес килмест. Мĕн таран иксĕмĕр савăнса ĕçлеттĕмĕр. Епĕ председатĕл. Тĕрĕссипе каласан, Кришшана таса шыв çине епĕ кăларнă, Саңук. Хăйне... çиллевсе мар, социалисăм интересне сыхă усрасшăн. Ху пĕлен. Епĕ икĕ çул хушши хĕрлĕ çарта страдал. (Саңука тытма хатланат).

С а ң у к (Макçăмран айакрах сиксе тăрса). Страдал çав есĕ! Майĕ пултăр, Макçăм.

## 9-мĕш курăнни.

Уçăп хўтлĕхрен тухса пырат

У ç ă п. Тĕрĕс, Саңук. Çамрăк пулсан та, сан ăса никамăн та çитес çук. Макçăмран лайăх çын тупас çук епĕр. Развĕ Кришша председатĕл пулмала çын пулнă? Саңук, комсомолĕс сен пухăвĕнче ман çинчен те пĕр-икĕ сăмах хушсам Кришшан пўтсĕр ĕçĕсене палăртасшăн епĕ те тăрăшнă.

С а ң у к. Кришша мĕн айăпа кĕчĕ-ши çав, чăннипе?

У ç ă п. Колхозăнне ултă çĕр тенкĕ таран укçа вăрланă.

М а к ç ă м. Пăрах, Саңук, текех çав Кришша çинчен асăнма. Вăл хăйне тивĕçлине тупнă Епĕр Кришшаран та лайăх ĕçлĕпĕр. Айта, Саңук, киле... Уçăп пичче хураллат.

У ç ă п. Хураллатăп, хураллатăп. Кайăр пушалстă.

С а ң у к. Ан тăрăшăр!

У ç ă п. Тўрех Макçăм патне вĕстерĕр

М а к ç ă м. Ыран ĕçкине туса иртерĕпĕр, Саңук. Килĕштеретни?

С а ң у к. Епĕ сана пĕччене ĕçленĕ тесе. Мишуткин та пĕрле пулнă иккен?

М а к ç ă м. Ăçта пĕччене пулман?

С а ң у к. Пăрах, Макçăм, пĕлмен пек калаçма. Пайан сан кăмăлна тĕппипех пĕлсе çитрĕм епĕ.

М а к ç ă м. Мĕн пĕлетĕн?

С а ң у к. Ан çывхар. Шухăшласан питрен-куçран вут тухат. Сана йуратнă вĕт епĕ? Пĕтĕм çамрăк кăмăлпа савăнса хам пурнăçа сан ирĕкна пама хатĕрленнĕ. Йытă пичĕ! Районта та пирĕн пек ухмахсем лараççĕ тесе шутларăна? Сысна! (Çав хушăра Уçăп шăвăнса тарат).

М а к ç ă м. Хупла сăварна! (Саңука тытса пăвма тăрăшат, Саңукĕ мĕн пур вăйĕпе Макçăмран çăлăнса сулпа чупат).

С а ң у к. Тепĕр утăм утсанах перетĕп.

М а к ç ă м. Пер, мĕншĕн васкаса пеместĕн. (Саңук çинеле тапанат. Саңук пăшалпа перет. Пăшалĕ пемест. Макçăм Саңука йарса тытса пăвма тытăнат). Хуп сăварна!

С а ң у к. Крау-ул!.. Петă-ă...

М а к ç ă м (пăшалĕпе пемех хăтланат). Тарăймăн! (Пăшалĕ пеменнипе, пăшала çĕре çапса Саңук хыçĕнчен чупат).

С а ң у к с а с с и. Кришша-а... (Макçăм Кришшана курсан кайăла чупат).

П е т ă (Макçăма хирĕç тухса). Ăçта таран? (Иккĕшĕ тытăçса кайаççĕ).

**10-мӗш курӑнни.**

Кришша чупса килет. Васкаса Макҫӑма ӑарса тытать.

Кришша. Сволӑч! Параттӑм сана. Анчах алла варалама тивӗҫсӗр есӗ!

Саҫук (Макҫӑмсем патне ҫитсе). Бандит!

**Чаршав.**

---

# ПИЛЛӖКӖМӖШ АКТ.

Сцена уиичере. Малалах ҫулҫӑ сарӑлнӑ йӑвӑҫсем лараҫҫӗ. Пӗр кӗтесре выставкӑ. Выставкӑра симӗс калча кӗлтисем тӑраҫҫӗ. Кашни кӗлте ҫинчех хӑш вӑхӑтра акниве, хӑш колхозӑн калчине пӑлӑртса ҫырса ҫапнӑ хутсем пур. Йӳнашарах колхозӑн столовоӗ. Хамаран тунӑ вӑрӑм сӗтелсем лараҫҫе. Сӗтел ҫинче тӗрлӗ ҫимӗҫ. Сӑра. Айаккинче тата пичкесем лараҫҫӗ. Пӗр сӗтелӗ ҫинче хуткупӑс та пур.

**1-мӗш курӑнни.**

Анукпа Татйана чӗвенсе пӑхса тӑраҫҫӗ.

Сценӑ хыҫӗнчи сасӑ. Епӗр ҫуракинче татӑклах ҫӗнтертӗмӗр. Чӑваш ӗҫхалӑхне ҫыхӑнтарса тӑракан ӗмӗрхи хӑнӑхусене салатрӑмӑр. Ӗлӗкхи ҫулсенчен пӗр уйӑх малтан акса пӗтерсе, нихҫан курман, илемлӗ вӑйлӑ калча куртӑмӑр...

Анук. Итле, Татйана.. Йепле ҫивӗч, ӑслӑ калаҫать ман Кришша.

Татйана. Ӑслӑ та, хӑвӑр ҫаплах уйрӑм пурӑнатӑр. (Кулать).

Анук (шӑртланса). Есӗ йатлаҫман-и Кришшапа? Тӗксе чикӗлентерсе йачӗ тесе кам калана милицине? Пурте пӗлеҫҫӗ вӗт халь.

Татйана. Ху... ху суйман-и?

Анук. Ан сӳпӗлтет... Итлеме чаран...

Сценӑ хыҫӗнчи сасӑ. Кӑҫалхи ҫураки историне пысӑк паллӑсемпе кӗрӗ. Ҫавӑнпа савӑнатпӑр епӗр пайан. Ҫавӑнпа ..Чи паттӑр геройсене комунистсен партипе правителствӑ парнепе чыслать пайан. Епӗ „Ҫӑлкуҫ“ колхозникӗсен йачӗпе малала та тырӑ тухӑҫӗшӗн пӗтӗм вӑйа хурса кӗрешме сӑмах паратӑп. Сывӑ пултӑр колхозниксен зажитӑчнайла пурнӑҫӗ. Урра, йулташсем!..

Харӑс, вӑйлӑн шавланӑ сасӑсем: Урра! Урра! Урра!

**2-мӗш курӑнни.**

Петӑпа Саҫук алӑран алӑ тытса кӑмӑллӑ выҫаса кулса килеҫҫӗ.

Петӑ. Сӑра парӑр-ха пире. Ӑш пит хыпрӗ.

Татйана. Хӑна-и мӗн есӗр? Хӑвӑр тултарса ӗҫӗр.

Саҫук. Тултаратпӑр, тултаратпӑр. Хам тултарса парӑп.

Анук. Ытла халӑх нумай пуҫтарӑннӑ пайан.

Петӑ. Ҫирӗм пин ытла теҫҫӗ.

Саҫук (сӑра тултарса пырса). Ӗҫ-ха, ача. Сӑри тутлӑ.

Анук. Хӑйма пекех.

Петӑ (сӑра ӗҫсен). Пыл тутиех калать-ҫке ку сӑра.

Саңук. Тата парас-и?

Петĕ. Пар-ха, Саңук. (Çав вăхăтра оркестăр савăнăçлă марш калама тапратать). Парад пуçланчĕ. (Кайма пуçтарăнать).

Саңук. Тепрер курка ĕçместни?

Петĕ. Вăхăт çук. Кайран ĕçетпĕр. Айта, Саңук, часрах.

Саңук. Пыратăп, пыратăп. (Тултарнă курка сăрана сĕтел çине лартса кайаççĕ).

**3-мĕш курăнни.**

Çавсемех, Петăпа Саңуксăр.

Татйана. Саңук Петăна качча тухать теççĕ, те чăнах?

Анук. Халь те мăшăрланнипе пĕрех çӳреççĕ вĕсем. Савăнаççĕ.

Татйана. Пăх-ха пăх, Анук. Ушкăнпе утма пуçларĕç. (Инçетре хуткупăспа барабан çапса калакан хаваслă кĕвĕ сасси илтĕнме пуçлать. Хуткупăс, барабан сассипе харăс утса килекен ура сассисем те илтĕнеççĕ).

1-мĕш сасă. Социалисăмла уй-хир геройĕсене хĕрӳлĕ салам! Урра!

Кар кăшкăрнă сасă. Урра! Урра! Урра! (Каллех оркестăр сасси, харăс утакан ура сассисем илтĕнеççĕ).

2-мĕш сасă. Сывă пултăр ĕçхалăхĕн хисеплĕ праçникĕ Хĕрлĕ ака-туй! Урра!

Сасăсем. Урра! Урра! Урра!

1-мĕш сасă. Сывă пултăр Чăваш комуниссен организацийĕпе ăна йертсе пыракан Обкомĕ! Урра!

Сасăсем. Урра! Урра! Урра! (Оркестăр сассипе пионерсен барабанĕ хутшăнать).

Анук. Пăх.. пăх... Татйана. Пионерсем килеççĕ. Ытла илемлĕ харăс утма пĕлеççĕ тата хăйсем.

Татйана. Веç... Ман Ваçук пырать. Ах-ти! Аллисемпе сирпĕтет анчах...

1-мĕш сасă. Пионеры, будьте готовы!

Пионерсен сасси. Всегда готов! Урра! Урра! Урра! (Пионерсен барабанĕ çухалнă çемĕн оркестăр сасси вăйланать).

Татйана. Ай-туру... Сиккипех килеççĕ.

Анук. Пирĕн Вихтăра пăх-ха, Татйана. Малта ташласа çеç пырать.

Татйана. Петĕ çав ăйăрпа чупма тепле хăрамаст?

Анук. Пăх-ха, пăх-ха, автобуссем килеççĕ.

Татйана. Хыçалтан трактăрсем... Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть. (Оркестăр сасси лăпланать. Машинсем иртсе кайнă шав вăйланать. Инçетре хуткупăспа барабан çапса калавă кĕвĕ сассисем çаплах илтĕнеççĕ).

**2-мĕш курăнни.**

Матĕрне васкаса килет. Аллинче пушмак, ситцă тавраш, çур листа хут.

Матĕрне. Премии пачĕç. Преми! Ах, Анук, Татйана, чун тем пекех савăнать çав вара. (Анукпа Татйана Матĕрне йăпалисене тытса кураççĕ).

Анук (хута пăхса). Ку мĕн хучĕ, Матĕрне аппа?

Матĕрне. Хисеплĕ хут терĕç. Комуниссем парнелерĕç. Мĕн таран савăнĕ-ши çав вара ман Ильуш, пайанах çырса пĕлтеретĕп.

(Хута типтерлӗн тӑваткалласа хӗвне чикет). Сире те паратчӗҫ. Ӗҫлес вырӑнне мӑнкун туса иртертӗр ҫав вара... Пайан акӑ хамӑр праҫник. Йурла... Ташла... Савӑн...

Татйана. Нихҫан та ӗҫрен йулмастӑп ӗнтӗ...

Анук. Епӗ те...

Матӗрне. Колхоза—вырса хӑйех кӗлтине ҫыхакан машинӑ!

Анук. Чӑнах-и?

Матӗрне. Тата ахтобус.

Татйана. Ак савӑнӑҫ! Базара та машинпа кайӑпӑр-и ӗвтӗ?

Матӗрне. Кришшапа Петӑна коҫтум терӗҫ. Саҥука шулкӑ кӗпе, пушмак.

### 4-мӗш курӑнни.

Ҫамрӑк килет. Пуштӑ сумкине ҫакнӑ Хаҫат-журнал нумай тултарнипе арам йӑтса пырат.

Ҫамрӑкӗ (ывӑнса пӑчланнӑ сасӑ). Пуштӑ! пуштӑ... пуштӑ... Ҫурхи акара малта тухнисем ваҥҥи—„Канаш“. Кайа йулса акнисеве—йӗплӗ ҫӑмах.

Матӗрне. Хаҫат пур-и?

Ҫамрӑкӗ. Интереслӑ хаҫат пайан.

Анук. Чӑнах-и?

Матӗрне Мана та пар-ха апла пулсан

Ҫамрӑкӗ. Пирӗн колхоз хӗрлӗ хӑма ҫине ӳкнӗ.

Матӗрне. Саванӑҫ ҫав вара..

Ҫамрӑкӗ. Кришша, Петӑ Саҥук сӑнӗсене ӳкернӗ. Матӗрне аппа, есӗ те пур хушӑра. (Хаҫат саланат).

Матӗрне. Пайанах Иҥуша пӗлтеретӗп.

Татйана. Рам ӑшнех тирпейлесе хывса усратӑп ку хаҫата.

Анук. Епӗ те...

Татйана. Тата тепӗр хаҫатне пар.

Самрӑкӗ. Урӑх памастӑп.

Сасӑсем. Ку хаҫата пӑчах хамӑр йала салатмала.

Ҫамрӑкӗ. Ай-ай.. Шурча колхозӗ хура хӑма ҫине ӳкни те пур унта. Вӗсене кайса намӑслантарас-ха. (Кайат.) Пуштӑ, пуштӑ! ҫуракинче мала тухнисене—„Канаш“; кайа йулнисене—йӗплӗ ҫамах.

### 5-мӗш курӑнни.

Саҥук чупса килет.

Саҥук. Ача-пӑча, хӗрупраҫ! Лашасемпе чупма тухаҫҫӗ. Петӑ пирӗн Вихӗрпа[1] тухат. Айтӑр кайса куратпӑр.

Сасӑсем. Айтӑр, айтӑр!

Матӗрне. Саҥук, Петӑна кала,—маххӑ ан патӑр.

Саҥук. Йурат... йурат, Матӗрне аппа. (Ҫамрӑксем кайаҫҫӗ).

### 6-мӗш курӑнни.

Анук, Татйана тата Матерне.

Анук. Ара, Кришшасем таврӑнаҫҫӗ те пулӗ. Епӗр ҫимӗҫсене хатӗрлемен-ха.

[1] Лаша йачӗ.

Матĕрне. Килĕç те çав вара. Хатĕрлесе хурар, ачасем... (Сĕтел çине çимĕçсем каса-каса хурасçĕ. Кăкшăмсем çине сăра тултарса лартаççĕ).

### 7-мĕш курăнни.

Кришша килет. Аллинче коçтум.

Матĕрне (Кришшана курса йапалисене кăтартса). Мана та пачĕç, Кришша. Пăх-ха, хаçат çине те ÿкерне.

Кришша. Тивĕçшĕн панă, Матĕрне аппа. Ĕçки, çими хатĕр-и? Епĕ „Хурăнвар“ колхозне хăнана чĕнтĕм.

Анук. Хатĕр, Кришша.

Матĕрне. Иаçăрах.

Татйана (сăра тултарса насе пырат). Ĕç-ха, Кришша. (Анук та, Матĕрне те сăра тултарса пырса ĕçме сĕнеççĕ).

Кришша. Чпмĕр-ха есĕр, майĕ пултăр.

Татйана. Малтан манне ĕç-ха, Кришша. Пирĕн иксĕмĕрĕн каçарттармала. Çуркунне санпа йатлаçнишĕн хам тĕллĕн те нумай шухăшласа кулђанатăп.

Кришша (Татйана куркине тыса). Ун çинчен кам аса илет пайанхи кун. Епĕ тахçанах манна. Татйана. Хам та пăртак çеç çаклаваймарăм. Ашшĕнчен уйрăлса икĕ çул хĕрлĕ çарта пурăннине шанна, ăшчикне курман. (Анук куркине тытса). Коçтума пуçтар есĕ, Анук. (Ĕçет)

Анук (хавасланса). Киле пыратни, Кришша?

Кришша (куркине Анука парса). Те пырас ĕнтĕ?

Матĕрне. Ман куркари сарапа ĕç!

Кришша. Ну, Матĕрне аппа, сан прахут çине ларса кататçă туса çÿрес килет-и?

Матĕрне. Ăçта кайас-ха вара çав ман. Иђуш патне кайса курас шухăш пурччĕ те...

Кришша. Иђуш Горйкийĕнчеччĕ-и çав сан?

Матĕрне. Çавăнта та... Ĕç нумай-ха çав вара. Кайса пулмаст.

Кришша. Халĕ ĕнтĕ есĕ Иђуша кайса курма пултаран.

Матĕрне Пулайми, Кришша.

Кришша. Кайан Сава Горйкийĕнче пулакан крайри ударниксен сђотне делегата суйларăмăр.

Матĕрне. Чăнах-и?

Кришша. Иђуша та куран унта... Хăв пурнăçу çинчен те каласа пар..

Матĕрне. Мĕн тăвам-ши? Ах, савăнăç... (Васкаса хуткупăс кайса илет). Кришша, тыт-ха.. кала.. Амма ташлас мар ман! Ывăлăм начар-и? Пурнăç çителĕклĕ мар-и?

Кришша. Хуткупăс калама манна пулĕ епĕ, Матĕрне аппа.

Анук. Кала ĕнтĕ, Кришша.

Татйана. Халччен калаканччĕ çке.

Кришша. Кайран... Ĕçки пуçлансан, Матĕрне аппа. Анук... Айта лашана чупнине кайса куратпăр.

Анук (хавасланса). Пыратăп, пыратăп, Кришша

Матĕрне. Ташлам тенĕччĕ пĕрре...

### 8-мӗш куранни.

**Анукпа Кришшана хирӗҫ Ваҫуххапа Укҫине килеҫҫӗ.**

Укҫине. Ваҫухха.. Пăх-халĕ... Ман куҫ тĕтрелĕрех кăтартат. Анукпа кĕрӳ пулмарĕҫ-и ҫавсем?

Ваҫухха. Ҫавсем, ҫавсем, Укҫине

Укҫине. Тамаша! Кăмăллах калаҫса пыраҫҫĕ-и?

Ваҫухха. Хĕрпе каччă пек пăшăлтатса калаҫса карĕҫ.

Укҫине. Хăлха хытăрах та ман.

Ваҫухха. Мĕнле хăйса уйăрнă есĕ ҫавсене?

Укҫине. Ват-супнă мар-и! Йатлăран кăларассипе ҫуннă. Хаҫ ĕнтĕ хам хĕр те хамă йатлакан пулчĕ. Айта пĕрер курка сăра ĕҫер.

Ваҫухха. Ĕҫесси... мĕнни...

Укҫине. Тамаша! Мĕн ĕҫесси-мĕнни тесе тăран. Алă витре сăра тунă тенине илтнĕччĕ епĕ. Пылпа тутлантарнă терĕҫ.

Ваҫухха. Ҫапла пулĕ те.. Хăвăр ваҫҫи хатĕрленĕ ăна.

Укҫине. Калаҫса таран. Колхоза кĕр, сачăн та пулат.

Матĕрне (Паҫук арăмĕпе Укҫинене курсi). Ара, сăра ĕҫме килместĕр-ҫке есĕр. Килер-ха, килĕр.

Укҫине. Айта, Ваҫухха. Епĕр ăна-кăна шутламастпăр. (Ҫавăтса сĕтел хушшине лартса, сăра параҫҫĕ, ҫимĕҫ касса хураҫҫĕ).

Укҫине. Вăт... Колхоз ҫав епĕр...

### 9-мĕш куранни.

**Выставка патнеле Уҫланкинпа Таис килеҫҫĕ. Калчисене пăхкалаҫҫĕ.**

Таис. Пăх-ха, пăх, Павăл. Ытла та хӳхĕм сĕлĕ калчи.

Уҫланкин. Тула та йулмаст.

Таис. Хăй ĕмĕрĕнче кам курни пур кун пек хӳхĕм калчана. Пăх-ха, ак ку тата вăйлăрах.

Уҫланкин. Факт! „Ҫăлкуҫ" колхозĕ. Апрелĕн таваттăмĕш числинче акнă тулă калчи. Здорăвă!

Таис. Сан хыҫран сĕтĕрĕнсе ҫӳресе колхозра ĕҫлеймерĕм Пăх-халĕ, йепле савăнаҫҫĕ пайан вĕсем.

Уҫланкин. Факт! Анчах есĕ те пулин ан йатлаҫ, Таис Киле ҫитсенех колхоза зайавлени паратпăр.

Матĕрне. Пăхăр-ха, хай Уҫланкин текенни мар-и ҫав?

Укҫине. Ăҫта? Ман куҫ витĕрех курмаст те, паллаймастăп.

Татйана. Ҫавă, ҫавă! Йулташ, есĕ мĕн милици тумне хывса килнĕ пайан?

Матĕрне. Сăра ĕҫсе кайăр. Ытла палламан ҫынах мар-ҫке ҫак есер.

Таис. Павăл, сана палласҫĕ-ҫке вĕсем?

Уҫланкин. Факт! Ҫавсен колхозĕпе ҫыхланса милицинчен тухса ӳкрĕм.

Укҫине. Уҫланкин, сăра ĕҫме кил, сăри тутлă

Уҫланкин. Спасибă! Айта часрах, Таис.

Таис. Санпа таҫта пырсан та намăса кĕрсе ҫӳре... (Кайаҫҫĕ).

Матĕрне. Милицирен кăларнă терĕ ăна.

Укҫине. Тамаша! тахҫанах ҫапла кирлĕ пулнă.

Т а т й а н а. Ха! Ҫитӑрпа Паҍук килеҫҫӗ.

В а ҫ у х х а. Иккӗшӗ пӗрле ӑҫтан тупӑнна вӗсем?

**10-мӗш курӑнни.**

Ҫитӑрпа Паҍук килеҫҫӗ. Паҍук хӑй ани ҫинче шӑтнӑ калчана йатнӑ.

Ҫ и т ӑ р. Тур ҫырлахтӑр, мӗн туса тӑран унта хыҫалта? Айтаха, танаштарса пӑхар. Сан калча лайӑх ҫитӗнни... Пирӗн-и?

П а ҍ у к. Анваскат есӗ, йакунӑ-ванӑ.

М а т ӗ р н е. Ӗненмерӗн ҫав вара... Пӑх-халӗ ӗнтӗ.

П а ҍ у к (арӑмне курса). Карчӑк... Мӗн туса ларатӑн есӗ кунта?

В а ҫ у х х а. Сӑра ӗҫетӗп. Колхоз сӑри ту-утлӑ.

Ҫ и т ӑ р. Паҍук кума ҫуркуннех кулач ҫиме колхоза кӗр тесе каланӑ епӗ.

П а ҍ у к. Йакунӑ-ванӑ, темерӗн... Лӑпӑртатат тата. Вӑрлӑха сайа йаратпӑр тесе хурланакании камччӗ вӑл?

Ҫ и т ӑ р. Манпа ан калаҫ есӗ, кум... Епӗ икӗ ҫул колхозра. (Пӑрӑнса кайат). Икӗ ҫул...

Т а т й а н а. Калчине колхозсенне йунашар кайса ларт, Паҍук. Пирӗнне ҫеҫ мар, санне те курччӗр.

М а т ӗ р н е. Паҍук йединоличниксӗн калчи тесе ҫырса пӗлтерӗпӗр ҫав вара.

В а ҫ у х х а. Паҍук, йунашар лартса намӑса ан кӗр.

П а ҍ у к. Йакунӑ ванӑ... Есӗр ҫӗнтертӗр (Калчине ҫӗре пӑрахат).

М а т ӗ р н е (сӑра тулгарса пырса). Сӑра тыт та, колхоза кӗр ҫав вара.

Ҫ и т ӑ р. Тур ҫырлахтӑр... Пурӑнатӑн кӗтӳҫҫӗр сурӑх пек ҫапкаланса. Калап сана ҫуркуннех кулач ҫиме кер тесе...

Т а т й а н а (сӑра тултарса пырса). Манне те ӗҫ-ха... Пӗрле ӗҫлесе пурӑнатпӑр, Паҍук.

П а ҍ у к. Пуҫа ан ҫавӑрӑр есӗр, йакунӑ-ванӑ. (Икӗ куркине те тытса). Инкек мӑшӑрпа килет тетчӗҫ ӗлӗк, телей те мӑшӑрпа ҫурет мӗн? Пӗрле пурӑнмала пултӑр еппин. Расна вилмеле пултӑр! (Ӗҫет).

**Ч а р ш а в.**

**МАРК АТТАЙ.**

# С Ă В Ă С Е М.

## Йалти пуçлăхсем.

Й у п т а р у.

Пĕр йалти хурелĕ выљăхсем
Сысвана пуçлăха кўртсе лартнă.
Çавăнпа та вара ĕçĕсем
Малала шăвăнмашкăн пуçлапă.

—Телей çитрĕ тинех, тет сысна,
Сахал-им йалта хаљ пуйанлăх?
Машкăлтăк шыв. лачака...
А заместителĕ ман пулĕ качака!

Хай сысна васкаса, пуçлăх май,
Заковсем те кăларчĕ нумай:
Кашниввех пылчăкра выртмала,
Тата çаксене тумала:

Исполвитĕл пултăр ĕне,
Ĕçсене вăл тăвĕ хăйĕнне.
Секретаре лартрĕ ашака,
Куљтçутăн ĕçне—кушака.

—Вот! терĕ сысна.—Во-оо!!
Пăру, ес пулăн счетовод
Сăмах йумах пулмĕ тек урăх—
Делегаткă пултăр мăкль сурăх.

Вот и вçо! Пурăнаççĕ.
Пăрувĕ чăмлат хутсене,
Ашак кăларат кайашне.
Епĕр-епĕрех! тет пуçлăхĕ—сысна.

Кам пултарĕ пире хурлама?
—Тăхта, терĕ качаки,—йысна!
Нуккă, тытăнар йурлама.
Пылчăк варрине кĕрсе ларчĕç.

Паттăрсем хăйсене кура
Шăршă-марша тем чухлĕ
кăларчĕç.
Мĕкĕреççĕ, кумаççĕ йурра.

Кăтмен çĕртен çакăнта
Пĕр кĕтўç васкаса чупса пынă.
Çиленнĕ вăл çака сыснана —
Вăрăм пушăпа тăсса хунă.

—Мĕншĕн çапатăн, йысна?
Тет сăмсине каçăртса сысна.—
Епĕр вĕт ĕçлетпĕр ударлă—
Ав, çурăм та пирĕн хура тарлă!

* * *

Суд тума епĕ судйе мар,
Çакна çеç калама манас мар:
Мăшкăлтăк шывĕнче сыснана
Хура тар йухтарма парас мар!

15/V 33 ç.

---

## Ч ă х ă.

Хăтпĕр колхозрӑ чăхчĕп
усрас ĕç йоркелĕ мар.

Чăхă амбар айĕнче ларнă,
Вăл унта виç чĕпĕ кăларнă.
—Ха! тет, чăхă чĕппине —
Итле-ха, хĕрĕм Укçине,
Ак çак амбарăн айĕнче
Ыгла та ырă-çке тĕнче,
Йĕри-тавралах ав тусан!
Тата мĕн кирлĕ ку пулсан?
Ну, простă, пурнăç пыл та çу!
Анчах айван пит сан аçу...

Текех таста вăл ав чупат,
Урама тухмашкăн йуратат.
Паллах, кун пек ĕç латлă мар,
Ăçта-ши уншăн пĕр чукмар!
Мĕн пур автан, тет, мĕн пур чăх
Пĕрлешсе, тет, пурăнсан аван
Уксине хĕрĕм, кĕл ту, сăх-сăх,
Açу ытла та сан болван.—
Шăртланнă чăхă закоча
Савмаст ытла та, ку кува.
—Вилес! тет луччă, пĕрех май...
Инкекĕм манан пит нумай.
Чĕппийĕ—хайхи Укçине
Каларĕ хăйĕн амăшне:
—Анне, ăс-хак латусăр сан,
Инкек вăл пирĕншĕн—тусан!
Айта, тухар-ха тулала,
Колхоз мĕнне курса паллар...
—Как-как-как!? терĕ хайхи чăх,
Ытла та улшăнчĕ тĕнче!
Мĕскер калат ав, илтрĕр-и—
Ачи хăй амĕш умĕнче!
—Вилеп... тет чăхă.—пĕрех хут.
Ав-ав, курăр-ха ăна:
(Колхоз чăхсемшĕн чăн та йут)
Спокойнă чăмрĕ лаххана.

1933 ç.

---

## Мулкачсем.

Йуптару.

Мулкачсем вăрманпа пынă чух
Кашкăр çурине хирĕç пулнă.
—Ха! теççĕ мулкачсем.—ха!
Çакăн ашшĕ ĕнтĕ пиртен кулнă.

—Ех, йăттуртаашшĕ.
Ытла та усал-çке ун ашшĕ!
Манăн чип-чипер тахлача
Çакăн ашшĕ, тет, çирĕ пĕр
мулкач.

—Тытас! тет пĕри.—Тытас!
Тытрĕç. Пăхкалаççĕ.
—Ей, чимĕр-ха... Шăлне катас!
Кашкăр çури тавра чупкалаççĕ.

Кашкăр çурийĕ ачашшăн
Сăмах каларĕ çаксене:
—Ан тивĕр мана тархашшăн.
Сирĕншĕн еп тăрăп малашне!

—Жалкă! терĕç мулкачсем,—
Шăлсăр пĕчĕкскер выçса йулĕ.
Ахаъ те, кассассăн ун шăлне,
Чăтма çук ытла та çылăх пулĕ.

—Йарас ăна, терĕç,—чăтлăха,
Унта хайех вăл çĕтсе кайĕ.
Ачашшăн йатрĕç те, тăлăха
Вăрман варрине кайса йачĕç.

* * *

Сахал мар çакнашкал мулкачсем
Упа-кашкăра хĕрхенеççĕ.
—Ан тивĕр,—теççĕ,—вĕсене,
Хăйсемех, курăр акă, пĕтеççĕ!

1932 ç.

---

## Тĕлĕнмеле тĕлĕк.

Тĕлĕк куртăм—интерес!
Тĕлĕнсе йăлт ăвран карăм.
Ей, Татйан, итле-ха ес,
Халиччен сана суймарăм!

Куç умчех тăрат ара,
Ну, пулат как чаплă тĕлĕк!
Еп пурнап пек хулара,
Ман пуçра волшебнăй çĕлĕк.

Чĕлĕм чĕртрĕм пек вăр-вар,
Райала часрах вĕçтертĕм.
Ман умра райри буљвар,
Ангĕла хулран хĕстертĕм.

Ну, пыратпăр чанккаса!
Кинона кайма шутларăм.
Ман кĕсйемĕм тап-таса...
Ангĕл пулчĕ пек хĕрарăм.

Шоколад ыйтат манран
Тутине хĕретнĕ ангĕл.
Укҫа вакки пулманран
Кивҫен пачĕ пĕр архангĕл.

Лавкара ларат ҫветуй,
Куҫĕ хайĕн пĕтсе ларнă.
Мĕскерле герой-ши ку?
Чăтма ҫук шăрш-парш кăларнă.

—Здравствуй!—терĕм еп ăна,
Хушамат мĕнле-ха санăн?
Ну, йепле-ха ĕҫ ăнат?
Ку ĕҫре... паллах, йусанăн!

—Еп—Ишекри Микул.. терĕ,
Нăшт! ђуххи туртса йăвашшăн.
Еп шутлатăп: тен, ĕҫтерĕ,—
Чĕлхене кăштах ҫăвасшăн.

—Шоколад ҫийесшĕн арăм,
Пĕр кило турттар-ха. . тетĕп.
Взйаткă ыйтрĕ, тупаймарăм.
Малала часрах вĕҫетĕп.

Хай хĕрарăм тăрса йулнă,
Уншăн мăшт та куђђанмарăм.
Шоколад ҫийесшĕн пулнă...
Кĕҫ ҫакланчĕ тепĕр арăм.

—Еп—Марийă Магдалинă!
Тесе хайпе паллаштарчĕ.
Сăн-сăпатăм ман -малинă,
Ҫавах старик прахса тарчĕ.

—Ха, апла иккен, Маруҫҫă.
Упăшку кам пулнă?—тетĕп.
Ну, паллах, вĕт хађ ҫул уҫă...
Хайхинчен ответ кĕтетĕп.

—Упăшкам ман—Иоанччĕ,
Йăвангĕли ҫыраканĕ
Улталарĕ, мана манчĕ...
Алимент памаст, кайаннăй...

Тавкăшса утса пыратпăр.
Тепĕр мужик хирĕҫ пулчĕ.
Йĕмĕ ҫĕтĕк... аҫа ҫаптăр!
Магдалинă хыҫа йулчĕ.

—Ну, кала-ха, кам пулатăн?
Йĕмва ма кăшт сапламарăн?
Намăса ес ăҫта йатăн?—
Хай ҫынпа сăмах пуҫларăм.

Хăшт! сывларĕ ку ҫын манăн,
Куҫне-пуҫне шăлкаларĕ.
Хăй темскершĕн хыткандланнă.
Ҫакнашкал ответ каларĕ:

—Еп—Исус Христос, йулташăм,
Алимевт мана хупларĕ.
Микул турăн хĕрĕ—Машшă
Кĕсйене тĕппех ҫулларĕ!

Шалавар клесшĕн пултăм,
Райра ордĕр тупаймарăм...
Унпа йĕмсĕр тăрса йултăм.
Машшă, чорт, пит те хупларĕ...

Икĕ хыткан лаша кӳлнĕ,
Вĕҫтерет пĕр шур сухалĕ.
Мĕнлескер-ши ку ҫын? тетĕп,
Йумахлам-ха унпа халĕ.

Ку—Илле пророк мĕн пулнă.
Сăмсине вăл шăлкаларĕ.
Ăшĕ хайĕн темшĕн тулнă,
Ку вара ҫапла каларĕ:

Райа шыв еп турттаратăп,
Лашасем пит хыткандланчĕҫ.
Мĕнле пурнас? Шалт аптратăп,
Чăн-чăнах та пит начар ĕҫ.

Райра пурнăҫ начарланчĕ:
Ҫветуйсем пит те асаҫҫĕ...
Темĕн чухлĕ инкек анчĕ,
Йĕркене текех пăсаҫҫĕ.

Ав, куҫҫуђ еп кăларатăп,
Хуйхă манан пит те тарăн.
Ҫакăрсăр пайан ларатăп,
Выҫăпа вилеп, мăнтарăн.

Атте турă ав, йӳтерĕ...
Тăнран тухса ентĕ карăм.
Хуйăха хăҫан пĕтерĕп—
Турăпа туслашрĕ арăм.

Илле пророк хайхи манăн
Чĕлĕм часрах чĕртсе йачĕ.
Хăвăртрах вара, кайаннăй,
Шыв патнеле йара-пачĕ.

Малала вĕçсе пыратпăр,
Гриша Кели хирĕç пулчĕ.
Сăмахсем кумма пуçлатпăр:
„Сунтал" хаљ, тет, мĕнпе тулчĕ?

—„Сунтал" пит те вăйлă теççĕ...
Хайхине еп ответлетĕп.
Вулакансем пит кĕтеççĕ,
Анчах леш калат:—пĕтетĕп.

Шăпчăк-Папай ача турĕ:
„Фосфорит" тесе чĕнеççĕ.
Çапла вара ун кулђтурĕ...
Ничево пайан ӳсеççĕ.

Сăвăсем аван çыраччĕ...
Пайан темшĕн ĕç ăнмарĕ.
Темĕн чухлĕ чаваланчĕ—
Латлă сăвă параймарĕ.

Васанккан сасси çухалчĕ,—
Простудицă пулчĕ штолĕ?
„Капкăн"-ра пит пултараччĕ,
Шарламаст вăл темшĕн халĕ...

Леш Митта Васлейĕ хастарлă,
„Сĕрĕмре" выртмаст текех вăл.
Советпа пурнасшăн варлă;
Ку çуратрĕ сборник „Кăмăл".

Хусанкай Петти те урăх,
Еççыншĕн ал çĕклерĕ.
Елĕк пулнă—мăклă сурăх...
Пайан:—еп ударник! терĕ.

Йăнăшсемшĕн ăна есĕ
Сахалах мар парkаларăн.
Кирлине туйса илсессĕн—
Петук çул тупа пуçларĕ.

„Хури", „Марш" йе „Çирĕм улттă"
Чăн-чăнах та çирĕп тирлĕ,
Шыв пекех йухаç хăйулă.
Кунашкал ĕççем пит кирлĕ.

Хăйпеле вăл ĕлĕк вĕçрĕ:
–Ман пекки çук урăх! тетчĕ.
Йеçенинпа йурă ĕçрĕ,
Чут-чут-чут ун чух пĕтетчĕ.

Аттай—хĕрлĕ... терĕ Петĕр,
Ну, паллах, куласшăн пулнă.
Епиграм та хатĕрлерĕ,
Анчах лешĕ таçта йулнă?

Хусанкай—герой поет вăл,
Шухăшĕ çеç пăтранулă.
Пырса çапсан хĕрлĕ тăвăл
Тин йусавма манер пулнă.

Халĕ вăл—çĕр йĕркелерĕ,
Тыррине йал çынĕ вырĕ.
Мишавай—ку паттăр, терĕм,
Малашне тӳп-тӳрĕ пырĕ.

Алагĕр Васлейĕ сĕкленчĕ.
Драмăсем çырма пуçларĕ.
Чĕлхи те чылай çĕнелчĕ,
Романсем те, тен, каларĕ.

Иван Мучи те пит паттăр.
Унпа туслă пурăнатпăр.
Ун пек çын сайра тупаттăр;
„Капкăн"-па зверсем тытатпăр.

Чĕлхи унăн—пысăк тупă,
Упа-кашкăрпа вăрçат вăл.
Мучипе еп етем пултăм,
Иван Мучи сывă пултăр!—

Кели çӳçне уçкаларĕ,
Çакнашкал сăмах каларĕ:
—Рай тавраш тĕл пулмарăм,
Турăна та еп курмарăм.

Ну, паллах, вĕт çук вăл турă,
Етем хăй турра пултарнă.
Тĕлĕк есĕ пысăк куртăн,
Ак кĕçех кунтан вăранăн.

Келипе калаçнă хыççăн:
Сывă пул, тетĕп... ал патăм...
Хырăм манăн, шелмă, выçнă.
Хусанта выртап. Вăрантăм.

Еккей, пулат майсăр тĕлĕк!
Славни унтан тĕлĕнетĕп.
Пуçа лартрăм çĕгĕк çĕлĕк,
Института вĕçтерстĕп..

1933 ç., Хусан. Мединститут.

# Поет.

Çитăр Иванч сăвă çырнă
Пĕр ула кушак çинчен.
Куçне хупнă, шăлне çыртнă—
Вулат мачча тăрринче.

Тăпăрст-тăпăрст! сиккелет,
Епĕ—поет! текелет.
—Мĕн пур тĕнче ĕнтĕ халĕ
Ку сăвва манне пахалĕ!

Сăввине вулат те паттăр,
Хăйне хăй савса мухтат:
Ман пек сын сайра тупаттăр,
Пултаратăп... хăйамат!

Сăвă çырма йăвăр теççĕ,
Ах, суйаççĕ мĕн мана!
Ман ăссем йейбох çитеççĕ,
Манăн—хамăн самана.

Манăн сăвă, акă курăр,
Йачĕ ун „Ула кушак".
Пуç мими ман пăт та çурă,
Унпа ăслăн шухăшлап.

Кăç мана ак хытă мухтĕç,
Лартĕç памятнĕк чипли
Шаранат кăна маттур ĕç;
Пурăнатăп вот çапла!..

Берлин, Лондон хастарланĕ
Вулĕç манăн „Кушака".
Кунран-кун ман йат тăрланĕ.
Канлĕх килĕ шăмшака.

Çӳç-пуçне „поет" ӳстерчĕ
Шăп та шăп пĕç кăк таран.
Йулташне чышса систерчĕ:
—Пĕлетчи, еп кам ара?

—Есĕ-и? тет хай йулташĕ,—
Есĕ—Çитăр. Ним те мар.
Тĕппипех ак калăп дажĕ,—
Мĕнщĕн йăтрăн ес чукмар?

Есĕ простă—Иван Çитукĕ,
Малограмăтнăй мужик.
Ара, мĕн каласшăн пултăн?
Сан пуçу кăшт пушă-шим?

„Поет"-рян ав тĕлĕнеççĕ,
Тĕлĕнет хаљ пĕтĕм йал.
Ухмаха ку тухрĕ... теççĕ,
Ăсĕ штолĕ çухалат.

Картара та, урамра та
Çитăр вулат сăввине.
Йумахламаст çынпала вăл,
Манна тытат вĕт хăйне.

„Ула кушак" сăвви унăн
Кĕнĕ пуштă йешчĕкне.
Уттил ваљљи кăна пулнă,
„Поет" хыçат ĕнсине.

С. ЛАШМАН.

# СОВЕТСЕН ТĔП ХУЛИ — СОЦИАЛИСĂМЛА МУСКАВ.

Дневник тетрадĕсенчен.

## МУСКАВ — ЛЕНИН ХУЛИ.

### 1-МĔШ ÇЫРУ[1].

...Мускав! Мускав! Револÿуци ăс-тăнĕ, револÿуцин вĕресе таракан вăй-хăват çăлкуçĕ. Капитал пусмăрĕнчи етемлĕхĕн çĕнĕ пурнăç шанчăкĕ, ĕмĕчĕ. Патша кун-çулĕнче тертленсе хăрса кайнă, Октябĕр тивлечĕпе çĕнĕрен чĕрĕлсе çеçкеленнĕ халăхсен йуратнă хули, вĕсен кĕрешÿ йалавĕ, вĕсен çул кăтартакан çутă çăлтăрĕ. Тĕнчене кисрентерекен социалисăм строитĕлствин штабĕ. Çĕнтерне пролетариатăн тĕп хули.

...Мускав! Мускав! Мĕнле кăна сăмах тупам, мĕнле кăна чĕлхепе ÿкерем хут çине сан паттăрлăхна, сан илемна, сан вĕресе таракан пурнăçна, сан чĕнÿлĕ сассуна, социалисамла хула — пĕтĕм тĕнчери советсен тĕп хули

1933-мĕш çул. Ийуль уйăхĕ. Тăрна куçĕ пек кăн-кăвак пĕлĕт чатăрĕ. Тÿпере шăратнă ылттăн пек çап-çутă хĕвел.

Умра Кремĕл.

Темле тĕлĕнмеле йумахран тухса тăнăн туйăнат ватăлса кăвакарнă Кремĕл. Инçетрен, таçтан курăнса ларат вăл хăйĕн паттăр та илемлĕ сăнĕпе Мускав шывĕ хĕрринчи сăрт çинче. Тĕреклĕ, çÿлĕ, ватăлса кăвакарнă чул стенасем хупăрласа тăраççĕăна йĕри-таврах. Таçта çÿле, пĕлĕтеле ыткăнна башнĕ-сем. Хĕвел çуттипе çуталса ларат мăннăн дворец — правитĕлства çурчĕ. Çĕнтерне револÿуцин палли — хĕрлĕ йалав çĕнтерÿлĕн çилпе ишет ун çинче, пĕтĕм Кремĕл çинче. Авалхи чиркÿсен ылттăвланă тăррисем тĕксĕмĕн çунаççĕ кăвак пĕлĕтре. Пусмăрлă, ирĕксĕр патша йĕрки çинчен астутараççĕ вĕсем совет çыннисене. Çавăн пекех Кремĕл башнисем çинче халаçланса ларакан ике пуçла ылттăн ăмарткайаксем те пĕтнĕ патшан пĕтнĕ купĕсем çинчен калаççĕ.

Капăррăн ларат Кремĕл Мускав варринче Таçтан инçетрен курăнат вăл пăхакана. Айалта, ун стенисем çумĕпе, çырансене чулпа тумлантарнă Мускав шывĕ хĕррипе пĕр вĕçĕмсĕр йанăраса чупаççĕ вĕр-çĕнĕ трамвайсем, çап-çутă, йăлтăркка

[1] Мускавра пирĕн 1933-мĕш çул ийульпе август уйăхĕсенче пулмала пулчĕ. 1933-мĕш çулхи Мускав хăйĕн ңысăклăхĕпе (виçе мелйун çура йыхăн пуранакансем) пĕтĕм Чăваш республикĕнчи халăх йышĕнчен 3–4 хут ытларах; хулани пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне урлă каçма 35—40 километр), хăйĕн пйатилеткă гиганчĕсемпе, хăйĕн социалисăмла культурипе, хăйĕн пурăнакан ĕçхалăхĕн çĕнĕ сан сăпачĕпе пире калама çук телĕнтерчĕ. Мускавра эпир социалисăмла тĕнчен пĕр кĕтессиве куртăмăр. Çакăн çинчен те ĕнтĕ эпĕр „Трактăр" урлă вулакансене каласа парасшăн. Мен пурĕ епĕр пирен Мускав пурнăçĕнчен 6—7 очĕрк хатĕрлене. С. Л

автомобилсем, пĕр вĕçĕмсĕр иртеççĕ çынсем, çынсем, çынсем... Йанăру. Каласа анлантарма хĕн пысăк хула шавĕ.

А Кремĕл хăйне ларат сăрт çинче, тĕреклĕ стенасемпе башњăсем хўттинче, пĕр шавсăр, пĕр кĕрлевсĕр—паттăрран та мăннăн.

Кремĕл хапхисем йар уçă. Хапха умĕнче хуралта тăракан хĕрлĕ салтаксем умĕпе шалала автомобилсем кĕреççĕ, васкавлăн тухаççĕ çăмăл автомобилсем хуланала. Çăмăллăн шуса иртеççĕ вĕсем çап çутă асфаљт тăрăх сан умăнтах.

Куçпа курман ăспа çеç туйан—ĕç вĕрет Кремĕлте. Çакăнта-мĕн çыраççĕ докладсем, çакăнта-мĕн татаççĕ йут пагшалăхсемпе килĕшўсем. Çакăнтан-мĕн йертсе пыраççĕ револљуцине Ленин паттăрĕсем.

Çакăнтан ĕнтĕ. Кремĕлтен, çулăмлă кунсенче йанăранă Владимир Илйичăн тевчене кисрентерекен чĕнўлĕ, хушулă хучĕсем.

— Хавăртрах, хăвăртрах, çывăхрах, чĕрем, Кремĕл стенисем патне, Хĕрлĕ плошчăте—Владимир Илйич патнеле...

Малтанхи шухăш, малтанхи туртăну—çакăнта—Хĕрлĕ плошчăте, мавзолей патне...

Историлĕ Хĕрлĕ плошчăт.. Икĕ тăрăлă мăн хĕрлĕ çурт—Истори музейĕ. Плошчăт тăршшипех тухса ларнă пĕр йенне Мускав купцисем лартнă суту-илў ĕречĕсем—кĕленче тăрăлă чул корпуссем, тепĕр вĕçĕнче, инçетре, вумай тăрăлă Васили Блаженнăй чиркĕвĕпе Мининпа Пожарски памятникĕ. Ку йенче—Кремĕл стени тулашĕпе лартса тухнă çăка ĕречĕсем Çакăнтах Спаски башњă çывăхĕнче Ленин мавзолейĕ.

Хĕрлĕ гранитран. тĕксĕмĕн çуталса тăракан йăвăр чул плиттисенчен тунă ăна. Увăн тăрри Кремĕл стенисенчен те çўлĕ. Тахçан авал йумахри циклонсем тунă пирамидăн туйăнат вăл хăйĕн архитектурипе. Ирĕксĕрех куçсем Хĕрлĕ плошчăтре мавзолей çине чăрăнаççĕ. урасем хăйсемех ун йенеле утаççĕ.

Тăрăх тухнă черет. Тăсăлнă черет Кремĕлĕн сехетлĕ Спаски башни патнех. Икшерĕн, йĕркелĕн. хуркайăк карти пек карталаннă пролетарисем. Ленин патне килнĕ рабочисем, колхозниксем, служăшчисем. Тăрса тухнă арçынсем, хĕрарăмсем, ачапăчасем. Тăрса тухнă Кавказ çыннисем. Вăтам Азирен килнĕ чалмалă çынсем Атăлтан, Уралтан. Сибиртен, тĕрлĕ вак халăх çĕршывĕнчен килне çынсем. Пурте вĕсем мавзолейе кĕрсе Ленина курасшăн, ун патĕнче пулса. унăн йуратнă санне курса социалисăм строителстви валљи çĕнĕ вăй, çĕнĕ кăмал илесшĕн.

Мавзолей алăкĕ уçă. Алăк умĕнче хисеплĕ хуралта икĕ йенелле икĕ хĕрлĕ салтак. Çавăнтах хурал пуçлăхĕ çамрăк командир Вăл мавзолейе кĕрекенсене икшерĕн тăратса мавзолейе кĕртсе пырат.

Васкамасăр, шăппăн, пĕр шавламасăр кĕретпĕр мавзолейе. Сулахайала алăк. Пусмасем айалала. Пăрăнатпăр сылтăмала. Çĕнĕрен пусмасем айалала.

Кун çутти кĕмест ĕнтĕ кунта. Мачча çинчен пĕр електричествă хунарĕсем çеç çутатаççĕ кунта.

Çул сылтăмала

Епĕр Ленин выртакан пўлĕмре.

Хуллен, шăппăн, Ленин çинчен куçа илмесĕр унăн тупăкĕ тавра çаврăнатпăр.

Владимир Ильич кĕленче тупăкра выртать. Унăн ўтне емелсемпе емеллесе çĕрмеле мар тунă.

Унăн тупăкĕ хĕрлĕ гранитран тунă тăват кĕтеслĕ пиедестал çинче ларать.

Унăн пуçĕ вĕçĕнче те, ури вĕçĕнче те хисеплĕ хурал.

Емĕрлĕхе куçне хупнă аслă вĕрентекен хăйĕн тупăкĕнче чĕрĕ çын йевĕрлех выртать. Калăн, лăпкăн çывăрса кайнă вăл. Калăн, пăртак кансан вăл тăрать те, хăй патне килнĕ халăхпа чĕррĕн калаçма пуçлать, килнĕ халăха чĕрĕ чухнехи пекех хĕрўлĕн çĕнĕ сăмахсем калама пуçлать. .

Пуçĕ унăн хĕрлĕ çытар çивче. Аллисене хăйне витнĕ пустав çине хунă.

Йешĕл тумĕ çинче, шăп чĕре тĕлĕнче орден.

Куçĕсене хупнă вăл. Унăн пысăк çамки çўлтен ўкекен електричествапа çуталса тăрать. Сарăрах, касса йанă майăхĕ, пĕчĕкрех сарăрах сухалĕ те, унăн характерлă тутисем те, унăн паларса тăракан пит шăммисем те, пĕтĕм унăн кĕлетки чĕррĕнех курăнать.

Аслă революционер, пролетарисен революцине йертсе пыракан, пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн йуратнă аслă вĕрентекенĕ çине вилĕм хăй аллине хума хăйайман.

— Чĕрĕ вăл, чĕрĕ пирĕн йуратнă учитĕл. Ўчĕпе вăл пиртен уйрăлнă пулсан та, унан ĕçĕ, вăл вĕрентни пирĕнпе. Ленин чĕрĕ. Епĕр пурте—ĕççынвисем Ленинăн аслă ĕçне туса пыратпăр. Ленинисăм, Ленин ĕçĕ пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерсе пырать. Авă, халĕ унăн нумай мĕлйунлă çарĕсем кăнтарта та, хĕвеланăçĕнче те, хĕвелтухăçĕнче те тронсене, ĕмĕрхи никĕссене кисрентереççĕ. Ун йалавĕ айне çĕнĕрен çĕнĕ мĕлйунсем хутшăнаççĕ, вĕсем кĕрешĕве кайаççĕ, кĕрешеççĕ... Çĕнтерў сан йалаву айĕнче... Лăпкă çывăр. Ильич... Санăн ĕçў—ĕмĕрлĕхе, ĕçхалахшĕн есĕ çул кăтартакан çалтăр. . Санăн ученикўсем пире ес каланă çулпа йертсе пыраççĕ... Епĕр хăйулăн та çирĕппĕн çĕнтерўрен çĕнтерĕве пыратпăр...

Çирĕп чĕре, паттăр кăмăл, большевикла пиçлĕх кирлĕ кунта—мавзолейре йуратнă учитлĕ тупакĕ тавра кăмăла хуçмасар утса тухма. Нумайĕшĕн кунта ирĕксĕрех куçĕсем куççульпе шывланаççе, черисем хуйхăла тулаççе.

Хуллен, тупăк çинчен куçа илмесĕр утса тухатпăр Ленин патĕнчен.

Пусмасем çўлеле, унтан каллех çўлеле—тепĕр алăкран Хĕрлĕ плошчăте, Кремĕл стенисем патне тухатпăр.

Лăпкă ку вырăнта. Хула шавĕ кунтан инçе, вăл инçетрен çеç илтĕнет. Трибунăсем хыçĕнче лăпкăн кашлаççĕ çăкасем. Суту-илў ĕречĕсен йенĕпе пĕр сассăр ирте-ирте кайаççĕ автомобилсем.

Плошчăт салхулă. Чĕрере хуйхăлă.

Хĕвел суртсем хыçне сулăнна. Хĕрлĕ плошчăт Кремĕл стенисенчен ўкнĕ мĕлкепе витĕннĕ. Хĕвел çутти Истори музейĕн

ылттăнланă тăрринче тата суту-илӳ ĕречĕсен кĕленчелĕ тăрринче çеç йăлтăртатса çунат.

Лăпкă. Пĕтĕм аслă площчăт шухăшра, тарăн шухăшра. Пĕр ытлашши хытă сасă та ун шухăшне кансĕрлемест.

Нумайччен тăрат саланмасăр Кремĕл стенисем çумĕнчи трибунăсем патĕнче Ленин патĕнчен тухнă халăх. Вăл та площчăтпе пĕрле шухăшлă. Шухăшлат вăл аслă вĕрентекен çинчен, унăн паттăр ĕçĕсене астăват. вăл вилнĕ хыççăн вăл пуçарса йанă тĕнчери революци ĕçĕ ӳссе пынине çĕнĕрен астуса илет...

— Чу. Мĕн сасси ку? Çӳлте пĕлĕтре сасă. Мотор сассисем сывлăша çурса, хĕвел çуттипе йăлтăртатса площчăт урлă хурçă кайăксем—йероплансем иртеççĕ. Нумай моторлă йеропланссем площчăтри лăпкăлăха хумхатса йараççĕ. Паттăррăн, çивĕччĕн, хăйулăн вĕçсе иртеççĕ вĕсем площчăт çинченех...

Чĕре тĕрĕссĕн, уççăн тапма пуçлат.

---

Революци площчăчĕ. Пĕрин хыççăн тепри, пĕр вĕçĕмсĕр, виçшер вагон пĕрле касхи çутăпа иртеççĕ сан куçу умăнтах йанăраса трамвайсем. Урай пек йака, çап-çутă асфальт тăрăх пĕринчен тепри капăртарах, кĕленчепе те, никкĕлпе те йăлтăртатса, вĕçĕмсĕр иртеççĕ çăмăл автомобилсем. Ахăраççĕ йăвăр пилĕк тоннăлă грузовиксем. Хăйсен çутă полировкипе те, тĕкĕрлĕ кĕленчисемпе те йăлтăртатса çăмăллăн, пĕр сассăр шуса иртеççĕ слонтан та çӳлĕ тата ӳнтан та сарлака хĕрĕх-аллă вырăнлă автобуссем.

Çурхи шыв татса кайнă пĕве шывĕ пек площчăтеле пĕр вĕçĕмсĕр тапса тăраççĕ урамсенчен халăх массисем...

Вĕçĕмсĕр çын, вĕçĕмсĕр движени, вĕçĕмсĕр шав, йанăру...

Тапса вĕресе тăрат хула. Ленин ӳтне упраса, унăн ĕçĕсене пĕтĕм тĕнчипех саракан хула...

Ывăнма пĕлмесĕр, кунне-касне туймасăр, çурран та, трамвайсемпе те, автобуссемпе те епĕ, чăваш уйхирĕсемпе чăваш катисен шăплăхĕсен çынни, аслă. Мускав урамĕсем, площчăтсем, бульварсем, рабочисен хулисем тăрăх, пйатилеткă гиганчĕсем— çĕнĕрен ӳссе ларнă савăтсемпе çĕнĕрен туса лартнă çара хурçăпа кĕленчерен тупă двоpецсем умĕпе иртетĕп.

Нумай хутлă, пĕр кĕрхи кунсенчи хура вăрманпа çеç танлаштарма май пур, суртсен ушкăнĕсем Хапха пек пысăк чӳречесем. Тӳп-тӳрĕ урам—просек. Асфальт. Савăт трубисем. Мускав шывĕ тăрăх прахутсем. Шăрçа пек çутă електричествă фонарĕсен чуппи. Театăрсем. Музейсем... Çĕре чаваççĕ машинсемпе шавлăн урам айĕнче. Метрополитен тăваççĕ... Çăкасем, кавраç йăвăççисем шавлаççĕ скверсенче. Çуртсен çумĕпе аса тунă курăксем симĕс кавирĕ... Памĕтниксем... Историлĕ çуртсем, урамсем..

Халăх... Халăх... Вĕçĕмсĕр халăх... Кĕрлев... Шав.. Йанăру... Електричествă тинĕсĕ...

Пурнăç вĕрет, гейзертан çӳлеле тапакан шыв тапни пек вăл паттăр та илемлĕ, савăнăçлă та çутă, чечеклĕ...

Умра Кремĕл— тĕнчеве кисрентерекен социалисăм строительствин тĕп штабĕ, Октабĕр тивлечĕпе, Ленин генийĕпе чĕрĕлсе çеçкеленнĕ халăхсен кĕрешӳ йалавĕ, вĕсен çул кăтартакан çутă çалтăрĕ, çĕнтернĕ пролетариатăн тĕп хулин чĕрийĕ...

Историлĕ Хĕрлĕ плошчăт. Йĕкĕреш тăрăлă çурт—Истори музейĕ. Суту-илӳ ĕречĕсем. Мининпа Пожарски аваллăхĕ. Кремĕл стенисем çумĕпе çаксем. Башңă. Мавзолей. Кунта—ЛЕНИН. Кунта çĕнтерӳ. Кунта—СТАЛИН.

---

## ПЙАТИЛЕТКĂ ЙУМАХĔ.

### 2-МĔШ ÇЫРУ.

Ленин районĕ—индустрилĕ Мускав чĕрийĕ. Кунĕн-çĕрĕн кунта индустри симфонийĕ. И пе ирех, кăнтăрла, çĕрле—електрицă çуттинче, урамра, общчежитинче, хапрăк-кухңара, трамвай çинче—пур çĕрте те есĕр индустрилĕ шавра, индустрилĕ кĕрлевре. Ирпе ирех тĕтрелĕ сывлăшра гудоксем—паттăр та йанравлă сасă, ун хыççăн пĕр квинтă çӳлерех тепĕр гудок йанăрат, пĕр самантран виç-тăват гудок пĕрле гамма тонĕсемпе пĕри теприн-чен паттăртарах кăшкăртаççĕ, йулашкинчен çывăхрах, сан çумăнтах чашкăракан пăс витĕр сывлăша вăраммăн, хулăнăн, мăннăн хулăн саса çĕкленет, хăйен сассипе вăл пĕтĕм таврана тултарат; вăраммăн, вĕçĕмсĕр тасăлат, унтан пĕр самантa чарăнат те, тепре кăшкăрса йарат.

Уçса пăрахнă чӳрече кĕленчисем çинче, урам тăрăх васкаса кĕмсĕртетсе иртекен трамвай кĕленчисем, унăн çуталса таракан пăхăр пайĕсем çинче çуртсем урлă хĕвел выңат. Ушкăнăн-ушкăнăн васкаса кĕреççĕ савăт хапхисенчен савăтала рабочисем. Çăмăл автомобилсем, грузовиксем кăшкăра-кăшкăра пырса тăраççĕ савăт хапхисем тĕлне. Хапхаран урамала тухаççĕ тийевлĕ лавсем. Çинçен, хăлхапа çурмала хыттăн кăшкăртса савăт карташ нчен 3—4 вакунпа савăт пăравусĕ тухат Урам урла хунă релсăсем тăрăх урама кăçса пăравус кукăра кĕрсе куçран çухалат Вăраммăн шăхăртса, çил-тăвăл пек кĕрлесе саватсем çумĕпе пĕрин хыççăн тепри çере чегретсе кашни 10—15 минутра иртсе кайаççĕ вакзал йенне те, вакзалтан та пойăссем.

Вĕçĕ-хĕррисĕр чупаççĕ грузовиксем.

Савăтра, хапрăкра уçса пăрахнă чӳречесенче ĕç шавĕ, машин шавĕ кĕрлесе сывлăша чĕтретсе тăрат.

Шыв сикки пек шав, кĕрлев пĕр вĕçĕмсĕр йантраса тăрат урамра.

Илемлĕ те паттăр çак шав, çак индустриле симфони. Вăл шава, вăл кĕрлеве пĕр вăрман шавĕпе çеç танлаштарма пулат.

Акă, есĕр тивĕс пек чикĕсĕр вăрманта. Çӳлĕ йăвăçсем. Курăк. Çап çутă йешĕл илем. Тӳпери тăрăсем хушшипе хĕвел выңат. Кăшт çеç çил вĕрет. Есĕр йăвăçсем хушшинче тăратăр. Есĕр итлетĕр... Вăрман кашлат. Кашни çулçă, кашни йăвăç, кашни турат кунта сасă парат: вĕçĕ-хĕррисĕр чăшăлтатупа пăшăлтату санăн пĕтĕм ӳт пӳне кĕрсе тулаççĕ. Пĕр чарăнмасăр,

пĕр канусăр вересе тăрат çак вăрман сасси. Лăпкăлăх, сывлăшра ирĕлсе çухаласлăх сĕнет çак вăрман йурри. Пĕр çĕнĕ шухăш та çуратаймаст ку шав пуçра.

Хăйĕн пысăклăхĕпе çак шава индустрилĕ хула шавĕпе танлаштарма пулат. Анчах та индустрилĕ шав вăрман шавĕ пек пĕртте лăпкăлăх сĕнмест, çук, вăл етеме паттăрлăх, çĕнтерӳ, çĕнĕ шухăшсем сĕнет. Индустриле хула сасси паттăр та вăйла. Хăйĕн паттăрлăхĕпе, илемлĕхĕпе вăл етем ăс-пуçне, унăн кăмăлне пĕтĕмĕшпех хăйне парăнтарат. Индустри шавĕнче етем çĕнĕле сывлама пуçлат, вăл хăвăртлăх илет, чĕри унăн урăхла, хыгăрах тапма пуçлат, пуçĕ те унăн çĕнĕле шухăшлат.

Ленин районĕнче тата Мускав шывĕ херринче йунашар Пролетарски районта ку шав, ку кĕрлев пĕр самант та—çĕрле те, кантăрла та халхаран çухалмаст.

Çухрăмшар тăсăлнă пилĕк-улт хутлă хĕрлĕ корпуссем, пĕлĕтеле тăрăннă чул трубасем, рабочисен хулисен çурчĕсем, магазинсем, тӳп-тӳрĕ урамсем, скверсем, пралуксем, урам тăрăх симĕс йăвăççем, çуртсем; мĕн чул çуртсем, движени, кĕрлесе таракан хула симфонийĕ ăна çаксем пурте халиччен уйхирпе вăрман шавне çеç илтнĕ етемшен калама çук çĕне, илемлĕ, паттăр йумахлăх пулса тăраççĕ.

Ку йумахлăхра етем ирĕксĕрех çамрăкланат, вăл ăна хапрăксавăт паттăрлăхĕпе пĕрлештерет, унăн пуçĕ çулерех çĕкленет, таврана вăл уççăн, савăнăçлан пахма тытанат.

Çак шавра, çак кĕрлевре есĕр тепĕр хут туйса илетĕр 1917-мĕш çулта влаçа буржуазинчен хăй аллине илнĕ пролетариатăн вай-халне, унăн иксĕлми вăйне, парти вăйне...

Перремĕш пйатилеткăра Мускав –советсен тĕп хули—етем каласа ĕненме çук кĕске срукхенче тĕнчипе пĕртен-пĕр пысăк, социалисăмла, чăннипех тивĕçлĕ хапрăк-савăтсем туса лартса ĕçе йачĕ. Акă, кунта Мускав мухтавлăхĕ—гигант—автомобил тăвакан Сталин савăчĕ. 38 гектар çине ларнă кĕленчепе бетонтан тунă тĕнче гиганчĕ шарикоподшипниксем[1] тăвакан Кагановичч савăчĕ—вĕр-çĕнескер, кавак пелĕтлех пек улăпланса ларат. Кунтах „Динамо" савăт Кунтах „Çурлапа Мăлатук"—темисе деçетке гектар çине сарăлса ларнăскер, кунĕн-çĕрĕн çулăмпа çутă таврана пĕрĕхсе шавласа лараканскер. Станоксем тăвакан савăт

Мускав шывĕ тăрăх вĕçĕмсĕр савăтсем, хапрăксем ларса тухнă. Кашни савăт хăйне хула, хăйне тĕнче. Калинин йачĕпе таракан хапрăксем. Даниловскайă мануфактурă. Фрунзĕ хапрăкĕ. Кусенчен пайтахăшĕ авалтанпах лараççĕ, анчах пйатилеткă алли вĕсене тĕпренех çĕнетнĕ. Çĕнĕ цехсем, çĕнĕ корпуссем, çĕне паллăсем...

Индустрилĕ Мускав шавĕнче, унăн пĕр самант та чарăнман йурринче ирĕксĕрех пĕтĕм тĕнчипе пулас социалисăмла пурнăç паллисене туйатăр. Ку çеç мар, индустриле Мускавра есĕр

[1] Шарикоподшипник—вăл машинсенче çаврнакан урапа тĕнĕлĕ çине тăхăнтартакан ункăпа ун ăшĕнчи шариксем (пĕчĕк чăмăрсем).

куҫпах социалисӑмла пурнӑҫ вӗресе тапса танине куратӑр. Ҫӗнӗ етем, малта таракан техника, ҫӗнӗ культура, ҫӗвӗ пурнӑҫ-йӑла—ҫаксем пурте ӗнтӗ куҫа кӗрекен паллӑсем.

Мускавра чухне епӗр Каганович йачӗпе лартнӑ шарикоподшипниксем тӑвакан ҫӗнӗ савӑтра пулма телейлӗ пултӑмӑр. Ку савӑта тунин историйӗ те, унти техника та, унти рабочисем хӑйсем те, вӗсен пурнӑҫ-йӑли те—пурте кунта ҫак халӑхи ҫӗнӗ, паттӑр кунҫулсене кӑтартакан, вӗрентекен ӗҫсем. Ҫаксем пирки те епӗр вӗсем ҫинчен ҫырса, хамӑрӑн малта пыракан республикӑна тата та мала кайма усӑ пулӗ, тесе шутлатпӑр.

Ҫӗмӗрлере, Куславкара пур пирӗн йӑвӑҫ-ӗҫ комбиначӗсем. Комбинатсенче ҫӗнӗ машинсем. Ҫӗнӗ рабочисем Ҫӗнӗ ҫуртсем. Мӗн чухлӗ ырлӑх, мӗн чухлӗ пуйанлӑх. Ҫак пуйанлӑхпа епӗр усӑ курма вӗренсе ҫитеймен-ха, ытла та вӑраххӑн вӗренетпӗр. Ӗҫленӗ ҫӗрте ӗҫ дисциплини ҫук, ӗҫе лайӑхлатас тесе тӑрӑшни, культурӑлӑ пурнӑҫшӑн кӗрешни сахал. Ҫӗмӗрлере епӗр механически цехра ӗҫленӗ ҫӗртех унти рабочисем ӗҫсӗр шавласа ларнине, базар тувипе пӗр кун хушшинчех темиҫе те курнӑ. Хӑнтӑлала ҫуртсем кунта тата илем кӳреҫҫӗ-им-ха комбината?

Куҫа уҫса ытларах пӑхас пулат таврана. Вӗренес пулат. Ӗҫлес пулат. Унсӑрӑн кайа йулатпӑр. „Кайа йулакансене ҫапаҫҫӗ".

Мускав чапӗ, Мускав мухтавлӑхӗ вӑл ҫӗнӗ савӑтсенче, ҫӗнӗ хапрӑксенче. Ҫӗнӗ савӑт вӑл ҫӗнӗ тӗнче, курман-илтмен йумахла тӗнче. Ҫӗнӗ савӑт вӑл тӗнчипе малта пыракан техникӑна, малта пыракан рабочи ударниксемпе, рабочисен малта пыракан пурнӑҫ-йӑлипе, культурипе—пӗтӗм тӗнчипе кӑтартулӑ йӗркесемпе авӑрланнӑ комбинат.

Шарикоподшипниксен савӑчӗ Мускав тулашне, Мускав тавра тунӑ чугунҫул хӗррине вырӑнаҫнӑ.

Пӗлекенсем каланӑ тӑрӑх, савӑт вырӑнӗнче 2—3 ҫул маларах пушӑ, шурлӑ вырӑн пулнӑ. Кунта хуларан тӗрлӗ тасамарлӑхсем тӑкнӑ. Ку вырӑна авалтанпах „Йатӑ шурӗ" тесе каланӑ.

Савӑт пуҫланасла кунта, инҫетри катасем хӗрринче пӗр-ик пӗчӗк киве савӑт ҫеҫ тӗгӗм каларса ларнӑ. Мускав ку вырӑнтан инҫетре тӗтрелӗн курӑнса тӑнӑ, трамвай тавраш кунта ҫӳремен Шӑп хула тулашӗ, шӑп пӳшӑ вырӑн пулнӑ.

1931-мӗш ҫулта йанвар уйӑхӗнче, савӑта пуҫланӑ вӑхӑтра, ҫакӑн пек пулнӑ...

— Сивӗ кунсемччӗ. Куҫ умӗнче пӗр шурӑ йур ҫеҫчӗ. Хамӑр умма икӗ шалҫа ҫине ҫакса хӗрлӗ хӑмаҫ ҫиҫе сакӑн пек лозунг ҫырса хунӑччӗ: „Пӗтӗм тӗнче Совет подшипникӗсем ҫинче ҫавӑрӑнӗ!" тенӗччӗ. Тытӑнтӑмӑр ӗҫлеме, фундамӗнтсем чавма, материалсем хатӗрлеме... Йӑвӑрччӗ малтанах ӗҫлеме, вӑл та, ку та ҫитмест... Анчах ҫуллана тухсан, ӗҫсем лайӑхланчӗҫ... Бетон хатӗрлеме лайӑх вӗрентӗмӗр... Вӑл вӑхӑтра Харкӑври трактӑр савӑчӗ тунӑ ҫӗрте Маруҫкин бригади кунне 300 ӑстрӑм бетон унаса параччӗ, Магнитогорскинче Галиулин бригади 420 ӑстрӑм уначчӗ. Пуҫласа йатӑмӑр епӗр вӗсемпе ӑмӑрту. Кайрӗ хайхи ӗҫ! Бетон тӑвас ӗҫре тӗнчипех рекорд ҫапрӑмӑр. Кунне 1196 унав бетон пама пуҫларӑмӑр! Бригадир Ҫелеҫнов йӗртсе пычӗ...

Ваттисем те, комсомолĕссем те арăслан пек ĕçлеççĕ.. Савăт халапри пек ÿсет. Çав çулах, август уйăхĕнче, комсомолĕс Кузмин бригади, рабочисем ваҫҫи çуртсем тунă çĕрте кашни рабочи кунне 1000 кирпĕч купалас вырăнне, 2000 кирпĕч купаласа пычĕ...

— 17-мĕш МЮД кунĕ ыран тенĕ каç эпĕр комсомолĕссем субботник турăмăр. Субботнике „АМО", „Çурлапа Мăлатук", „Динамо" савачĕсенчен пур комсомолĕссем те пычĕç Çĕрĕпе ĕçлеремĕр. Çĕрĕпе духовой оркестр йанăраса тăчĕ, прожектăрсем субботникре ĕçлекенсене ĕçлемешкĕн хура каça хăваласа çутă кун çутти парса тăчĕç.

— Калама кăна çăмăл халĕ.

— Ĕçленĕ çав, ĕçлемесĕр пулман...

— Çулталăк та виçе уйăхран—1932-мĕш çулта мартра савăтăн малтанхи черетне ĕçе кĕртрĕмĕр... Рабочисем ваҫҫи 10 пин çын пурăнмашкăн чул çуртсем, çĕнĕ хула туса лартрăмăр... Хамăр тавра пĕр пушă вырăн хăвармарăмăр... Хаҫ мĕн ĕнтĕ. Хула турăмăр.

Трамвайра ирхи сменăна кайакан рабочисем. Весем пурте тенĕ пекех çамрăк Калаçулă, савăнăçлă. Капăр тумланнă, лайăх йышши тумтирпе, атă-пушмакпа, галстуксемпе. Хĕрĕ-хĕрарăмĕ çуталса çех тăрат.

Вата рабочи, куçлăхлăскер, танлавĕсенче çÿçĕ шуралнăскер, кепкине çамрăкла пуç тÿпи çине лартса йанăскер, пире савăт туни çинчен каласа парат. Унăн куçĕсем йăлтăртатаççĕ, вăл калаçнă чухне çамрăкланат. Хăйĕн ĕçне, хăйĕн савăтне вăл ытарайми йуратат. Çамрăксем те савăт çинчен ăшшăн калаçаççĕ.

— Хула турăмăр, хула пулчĕ.

— Хаҫ мĕн ĕнтĕ.

Трамвай чÿречинчен пахма пуçларĕ старик-рабочи урамала. Урам икĕ йенĕпе 5—6 хутлă çуртсем. Çап-çутă чÿречисем. Балконсем. Асфаҫтпа витнĕ урам тăрăх трамвай чупат... Скверсем. Чечек клумбисем.

Трамвай пырса чарăнат Каганович савăчĕ умне. Рабочисем, работницăсем васкаса утаççĕ савăта...

Тул йенчен савăта курма çук. Унăн территорине çÿлĕ хÿмесемпе тытса тухнă. Урамала савăт управленин бетонран тунă 4 хутлă кăвак çурчĕ çеç тухса тăнă. Савăтăн корпусĕсем, цехĕсем шалта. Урамран вĕсен кĕленчелĕ тăррисем çеç курăнаççĕ.

Сылтăмра, савăта хирĕç, рабочисем пурăнакан хула Ĕречĕпе ларса тухнă темиçе хутлă çÿлĕ те вăрăм чул корпуссем. Еретĕн-ĕретĕн. Геометриле тикĕслĕхпе вырнаçса планланă çуртсем, урамсем, пăралуксем... Пысăк подйезд. 3—4 кĕленчелĕ алăк.

Савăта кĕрсенех пин çынсем çÿремелĕх карташ пек пысăк вестибÿл. Маччи унăн çÿлĕ те йаштака бетон йупасем çинче тытăнса тăрат. Çÿлтен пысăк чÿречесенчен вестибÿле çутă ÿкет. Тип-тикĕс урай. Пропуск паракан бÿросенчен иртсен,

çӳлеле иккĕмĕш хута сарлака, урам сарлакăшĕ, чул пусмасем хăпараççĕ. Çак çутă та çӳлĕ тата таса вестибӳлӗ пире Волхонкăри Илемлĕх искусствисен музейĕн вестибӳлӗне астутарат. Кунта та Искусствăсен музейĕн вестибӳлĕнчи пек ирĕклĕх те нумай сывлăшлăх.

Вестибӳлӗре рабочисем ĕçе кĕриччен, патефон йе радио итлеççĕ. Кĕме вăхăт çитсен, музăка чараççĕ те, пурте йĕркелĕн ĕçлеме цехсене саланаççĕ. Нумай пинлĕ рабочисен массисем ку пысăк вестибӳлре палăрмаççĕ те.

Йулташпа иккĕн сарлака пусмасем тăрăх çӳлеле хăпаратпăр. Охранăна хамăр пропусксене паратпăр

Халĕ ĕнтĕ епĕр савăтра. Вăрăм, пĕр километр тăрăш те пулĕ, сарлака коридор. Маччи те, витти те савăт цехĕн çара кĕленче. Шутласа пăхрăмăр епĕр хамăр йулташпа—коридоре пĕртте пирĕн Шупашкарти Карл Маркс урамĕнчен—вăрăмăшĕ те, сарлакăшĕ те, кайа мар. Ытараймасăр йулташпа коридор вĕçне çитиччен утса тухатпăр.

Тулти пек çутă. Пуç çинче пĕлĕт. Анчах пĕлĕте кĕленче мачча уйăрса тăрат. Коридор тăршшипе, икĕ йенĕпех, рабочисем ĕçленĕ чухне хăйсен тумтирĕсене хывса çакмали гардеробсем. Кунтах ĕçрен тухсан çăвăнмали, тасалмали пӳлĕмсем, пысăк куçкĕскисем. Кунтах, коридорăн икĕ йенĕпе, кĕнеке сутти, тин çеç пичетрен тухнă кĕнекесен йăлтăртатса тăракан выставки, плакатсем, тĕрлĕ лозунгсем. Вăрăм сĕтелсем çине илемлетсе сарса хунă Ленин, Сталин, Горйки, Шолохов, Панферăв кĕнекисене.

Аслă коридорăн икĕ йенĕпе кашни 100 метртан сылтăмала та, сулахайала та хĕреслĕ коридор кайаççĕ. Кусенчен айалала цехсене пусмасем анаççĕ. Айалта чикĕсĕр çутăра, чикĕсĕр сывлăшлăхра тухтăрсен лабораторийĕ пек тап-таса цехсем: шлифовка цехĕ, автоматно-токарнăй, пуçтару цехĕ тата ытти те...

2-мĕш секцире (хĕреслĕ коридор тенинче) хамăра кирлĕ çĕре тупса, кирлĕ йулташа курах кайатпăр. Унпа пĕрле хамăр ĕç пирки калаçатпăр.

Ĕçе пĕтерпĕ хыççăн, йулташа цехсене кăтартса çӳреме ыйтатпăр.

Йулташ, епĕр ыйтнине кăмăллăн йышăнса, пире цехсене илсе анат.

— Мĕн ку? Мĕнле тĕнче? Мĕнле йумахра илтнĕ есĕр кун пекки çинчен?

Епĕр курнă картинă чăн-чăнах грандиозлă, вăл картина пысăк фантазилĕ, пысăк вăй-хăватлă, легендарлă художник ĕçĕ.

30—40 ана пӳ талкăшĕ чухлĕ ик-виç етаж çӳлĕшĕ кĕленче тĕнче. Тĕнчене таçта инçетре сăрăпа сăрланă стенасем тытса тăраççĕ. Кĕтеслĕ çӳлĕ йупасем. Сывлăш, çутă кунта! Сывлăшпа çутта пĕр çуллахи ир шывĕпе те, сывлăшĕпе те йăлтăртатса çуталса тăракан тинĕс хĕррипе çеç танлаштарма пулат. Ниçта, никам курман етем ăсталăхĕ, йумахри картив! Шутласассăн, ку савăтăн кĕленче тăрăлă цехсене пĕр-пĕр Патирек йалне мĕн пур пурăнакан çынĕсемпе, çурчĕсемпе, колхозĕпе, выльăх-чĕрлĕхĕпе, чăххи-

чĕппипе, çывăхри вăрманĕпе, шыв-шурĕпе, çаранĕсемпе—пĕтĕм йалĕпех вырнаçтармала. Çитменнине тата сывлăшра йероплан вĕçме те вырăн йулмала. Акă мĕн пысăкĕш вĕсем—пйатилеткă тунă савăт цехĕсем!

Айалта—шахмăт хăми пек таса та шыв пек тикĕс урайсем çинче ĕретĕн ĕретĕн, çумма-суммăн, асанне çŭпçисем пек те ларнă, шур упасем пек те тăсăлса выртнă, слонсем пек те тăнă йут патшалăхсенчен кŭнĕ вĕр-çĕнĕ станоксен кĕтĕвĕсем.

Çŭлтен, кĕленче маччасем йенчен айалала станоксем çинеле кукăрла-кукăрла çăварĕсене карнă вентиљатăр трубисем.

Тап-таса, уçă сывлăш цехра. Пер пĕрче тусан та çук. Станоксем çинче, урайĕнче, сывлăшра призмăн пур сăррисемпе те хĕвел выљат.

Савăнăçлă та илемлĕ цехра

Хапрăк-савăт, тесен, пире йаланах тĕтĕмпе хуралса ларнă, тĕксĕм корпуссем, маховиксем, трансмиçисем, тĕрлĕ пысăк шĕтĕрнесем çавăрăнни, кивĕ çавăт сасси, чул мостовой тăрăх пур винтисемпе те шинисем пушаннă тăрантассем кĕмсĕртетсе иртсе çŭренĕ пек аса килеççĕ.

Анчах кунта, çĕнĕ савăтра, кун пек кивви ним те çук. Пăс чашкăрни те, хуралса ларнă стена, пысăк маховик те, тискер сасă та çук кунта. Кунта бољницăри пек шăплăх, бољницăри пек тасалăх. Станоксем кунта електрицăпа ĕçлеççĕ, кашни станокăн кунта хăйне мотор. Станок ĕçленине кунта илтес те çук—çав тĕрлĕ тĕрĕс çавăрнаççĕ механисăмсем. Тăрăшса итлесен çеç кунта цехра станоксем шăна пек сĕрлесе тăрса ĕçленине илтетĕн. Тĕрĕсрех каласан, çăмăл „бьюик“ автомашина сассине илтетĕн. 3000—4000 станокран мĕн пурĕ те çак сасă çеç!

Кашни станок çумĕнче рабочи йе работница. Рабочисем кăвак комбинезонсемпе, работницăсем пуçĕсене хĕрлĕ тутăрсем çыхнă, çине вăрăм кăвак халатсем тăхăннă. Пурте çамрăк, пурте пŭллĕскерсем, пăхма савăнăçлă, станоксем çумĕнче ĕçлеççĕ: таса кипкесемпе станокне тусан ларасран шăлаççĕ, вăрăм сăмсалă маçленкăсенчен станокне çу сĕреççĕ, вăхăтран вăхăта станок тыткăçне пăрса, подшипник ваљљи шлифовкă тăвакан кĕмĕл пек йалтăркка чăмăрсене пăхаççĕ.

Нимĕнле каласу, пуш барабан çапни, вырăнтан вырăна çŭрени çук кунта. Кашни рабочи, кашни работницă кунта хуралти хĕрлĕ салтакăн курăнат.

Ашшăн каласса кайатпăр савăтри хамăр йулташпа ĕçри çакăн пек чаплă йĕркелĕх çинчен, рабочисем ĕçре чăнниех бољшевикла ĕçлени çинчен, ĕç çине вĕсем хуçала пăхни çинчен.

Рабочисем хăйсен савăтне йуратаççĕ: вăхăтчен ĕçлеме килсе, станоксене йĕркелесе тасатса хураççĕ, кайнă чухне каллех тасатаççĕ, ĕçленĕ чухне станоксене куç пек пăхаççĕ.

Савăт—социалисăм куљтурĕ, шкулĕ. Коллективлă ĕçре, социалисăмла ăмăртупа ударничĕствă урлă, кашни рабочийĕн, кашни работницăн кунта пултарулăхĕпе таланчĕ чечек пек сарăлат. Çĕнĕ çынсем çуралса ŭсеççĕ. Комсомолĕс Йурин Капитон Ленин орденĕ илет.

Савăта хута йани нумайах пулмасан та, рабочисенчен нумайĕшĕ хăйсен ĕçĕпе йут патшалăхсенчи нормăсенчен те иртерекеннисем пур. Акă, савăт туна çĕрте кирпĕч йатнă Савоçкин рабочи халĕ хăйĕн станокĕ çинче сменăра 2 пинункă тăват. Ку нормă Италири нормăсемпе танах танлашат. Автоматно-токарнăй цехра Свишчĕв бригади чăннипех комунисла ĕçлет. Константиновски, Степанав, Свиркн, Бергер станковшчиксен йачĕсем хисеплĕ хăма çинче. Фидукинă, Голубевă, Тихоновă, Йанулис работницăсем те хăйсен болшевикла ĕçĕсемпе савăтра уйрамах палăрса тăраççĕ.

Рабочисем те, работницăсем те йут патшалăхсенчен кўртернĕ станоксене алла çавăрса илессишĕн кĕрешеççĕ. Ĕç хыççăн вĕсем кружоксенче хăйсен ĕçне вĕренеççĕ, вĕсене инженерсем вĕрентеççĕ. Кайран хăйсен вĕренĕвĕ, ĕçĕ тăрăх техекзамĕн тытаççĕ. „Айакс“, „Хилд“, „Ван Норман“, „Алте“, „Слиппер“, „Шой“ автомачĕсене хăйсен пилĕк пўрнине пĕлнĕ пек пĕлсе çитеççĕ.

Рабочисен хушшинче нумайĕшĕ тĕрлĕ искусствăна, çар ĕçне, физкултурăна вĕренеççĕ. Пустовойтовă комсомолкă Иванов-Ипполитăв музтехникумĕнче вĕренет. Прохорова—чи лайах планеристкă. 35 хĕрача йĕнерпе йуналутпа çўреме вĕренеççĕ. Художниксем пур. Литкружок пур. Музо. Драмкружок. Политкружоксем.

Мен пурĕ савăтра 12 пин рабочи ĕçлет—нумай та мар, сахал та мар Шупашкар халăхне пăртак çеç çитмест.

Савăтан хăйĕн хапрăк-кухнă, клуб, библиотека, болницă, радиоузĕл, хаçат, парикмахерскайă, планĕрсем тата ытти те пур.

1932-мĕш çулăн I-мĕш кварталĕнче савăт 8 мĕлйун тенкĕлĕх, 2-мĕш кварталта 13 мĕлйун тенкĕлĕх продукци кăларнă. Август уйăхĕнче (епĕр савăтра пулнă уйăхра) савăт мĕн пурĕ 530 пин шарикоподшипник ĕçлесе кăларнă.

Цехран цеха çўресе савăтри производствăпа паллашатпăр, тĕрлĕ йышши калама çук сложнăй машинсем куратпăр, ударник рабочисем ĕçленине куратпăр.

Цехран цеха електрокарасем нăрă пек ишсе çўреççĕ.

Пĕр цехра рабочисем радио тăрăх хăйсен узелĕнчен паракан музакăпа 5 минутлăха гимнастикă тунине куратпăр.

2—3 сехет савăт цехĕсенче пĕр самант пек иртет. Пире кайма та вăхăт çитет. Савăта тата унти ĕçлекенсене ытараймасăр, тухма тăнă çул çинчен темиçе хут та кайала цехсене çавăрăнса, çапах урамала аран-аран тухкалатпăр...

Ленин районĕпе Пролетарски районĕ—индустрилĕ Мускав чĕрийĕ пулса тăраççĕ. Кунĕн-çĕрĕн кунта индустри симфонийĕ. Кунĕн-çĕрĕн кунта машин шавĕ, ĕç кĕрлевĕ. Вĕçĕмсĕр кунта вĕресе тăрат пролетариатăн вăй-хăвачĕ, Совет сойузĕн сыхлăх ĕçĕ. Ирĕксĕрех ку шавпа ку кĕрлевре, ку симфонире тĕнчипе пулас революципе социалисăмла çутă пурнăçа куçпах куратăн.

**В. ХУДАР.**

# ТĂВАН ВĔЛЛЕ.

ЕСКИЗ.

Çырма-çатралă вырăнта сарăлса ларакан Пурунтук йалĕнчен тухсан, çĕлен пек авкаланса выртакан çулпа пĕр километра йахăн кайсан—сем хура вăрман пуçланат.

Вăхăт ĕç çинеле сулăннă. Кунсем кăвăрч пек, çу пăчăртатса тухат, тейĕн.

Уççăн сывласа ларакан вăрман витĕр симĕс курăк пусса илнĕ çулпа пыратăп. Ывăннă урасем вăрман курăкĕ çинче канаççĕ. Хам тăр пĕччен, пĕчченех, нихçан курман вăрман витĕр тухатăп; вăл те пĕчĕккĕ, те тем пекех пысăк,– ним те ун çинчен пĕлмеле мар. Пĕр алăмра—çуллахи паљто, анчах ăна та пăрахас килет, ăна та виç-тăват кун ĕнтĕ тăхăнман; тепринче—сысна тирĕнчен тунă, кивелсе кайнă çĕтĕк портфел.

Çӳлте пĕлĕт тăп тăрă. Шăнкăр-шăнкăр уйар. Сарă хĕвел саркаланса ларнă та, ылтăн пучаххисене пĕтĕм çĕр çине тăкат. Пăхатăн та,—пĕрре те ĕнер кăна йара куна çунă çăмăр çĕр питне лӳшкетнĕ пек туйăнмаст,—çĕр анчах пиçнĕ çăкăр пек çемçе те вĕри.

Вăрман кăна ĕнерхи çăмăр лăмне усрат. Хĕвелпе аптрайман, çăмăрпа тăранайман вата йумансем çӳлеле кармашса, хăрăк тураттисемпе хĕвел çинеле тĕллесе лараççĕ. Айалти турачĕсем çинче тĕрлĕ тĕрлĕ кайăксем сиксе çӳреççĕ, хайсен вĕçĕмсĕр илемлĕ йуррисене йанратаççĕ. Тӳпере шывсăр аптăранă шаланкă „вĕлтĕрен, вĕлтĕрен!" тесе, таçтала макăрса вĕçет. Урăх сасчĕв çук кунта.

Кăтра çӳçлĕ, шур уралă хурăнсемпе кĕмĕл тумлă ăвăс йăвăççисем кукша пуçлă йумансем çывăхĕнче ачашланаççĕ, ветĕветĕ шĕшкĕ тĕмĕсем ретĕн ретĕн çул çине чупса тухнă пек курăнаççĕ. Çулăн ик айаккинчи хунав йумансем чăлтă-чалтă пăхса лараççĕ.

Васкамасăр утатăп, хушăран симĕс пĕркенчĕклĕ шĕшкĕсен çулçисене татса илсе чĕркелесе пыратăп.

Хунав йумансем айĕн хыçалала пăхрăм та, пĕр вата хĕрарăма курах кайрăм. Çӳçĕсем унăн кăвакарна. Пичĕ пĕркеленнĕ. Хыпаланса утат.

— Сана çитес тесе, çурăм çине тар кăлартăм. Çав çут тӳмелĕ портфел йатнă сынна çитем-хв, терĕм... Печчен хăратăп...— тет хăй васкаса.

— Камран? –терĕм епе.

— Кам пулĕ кунта...—терĕ вăл хирĕç, анчах темшĕн хăйĕн сăмахне пĕтермерĕ.

— Манран тата хăрамастăн-и? Епĕ сирĕн йалсем мар вĕт, йутри ҫын пулатăп...

— Ҫук. епĕ портфел йăтнă ҫынран хăрамастăп. Есĕ те ГПУ-ха, те райкомски, ҫавăнпа сана, есĕ йутри ҫын пулсан та, хамăр ҫынах, тесе шутлатăп...

Карчăк ҫурăм хыҫĕнчи кутамкине йусарĕ те, тем ҫинчен кăшт шутларĕ; унтан хăй камран хăрани, камсем уншăн сивĕ, тискер ҫынсем пулни ҫинчен вăраххăн, ватă ҫын йĕркипе калама тытăнчĕ.

— Сирĕн пек ҫынсенчен ма хăрас-ха. Есĕр влаҫ вĕт, хаљхи влаҫ—пирĕн влаҫ, епĕр хамăр влаҫ ҫыннисенчен хăрамастпăр ĕнтĕ. Ҫак пурнăҫа епĕр влаҫран хăраса тăватпăр пулсан, пирĕн нимле колхоз та тухмĕччĕ. Колхоз ĕҫĕ питĕ хăйулă ĕҫ пек туйăнат... Вăл хăйулăха пире хамăра сыхлакан влаҫ пана пулĕ тетĕп. Йăнăшатăп пулсан, есĕ тӳрлет...

— Йăнăшмастăн, кинемей.

— Йăнăшмастăп пулсан, татах калам-ха еппин. Елĕк пирĕн мар пулнă влаҫ... Йала мĕнле те пулсан чинавник пырса кĕрсенех, епĕр, тĕттĕм хĕрарăмсем, сурăхсем пек кăррр!—тараттăмăрччĕ, таҫтах кайса пытаваттăмăрччĕ. Вĕсем те вĕт влаҫ ҫыннисемех пулнă, есĕ те влаҫ ҫыннийех пулĕ тетĕп. Елĕкхисенчен ҫул ҫинче те хăранă, килте те харанă... Мĕншĕн тесен, влаҫ пирĕн пулман, пирĕн мар пулнă вăл. Халĕ ĕнтĕ йалтах урăх.

— Тĕрĕс калатăн, кинемей, тĕрĕс,—тетĕп епĕ алăри шĕшкĕ ҫулҫисене вылљатса. Хам ватă карчăк ҫав-тери ăслă сăмахсем каланинчен тĕлĕнетĕп.

— Акă, хура вăрман, епĕ унта темшĕн шикленетĕп,—тет карчăк ватă йумансем ҫине ĕҫре хытнă аллисемпе тĕллесе,—хура вăрман, анчах ес пур чух унта хăрамастăп. Калам, ваҫка, хăратăп епĕ урăххисенчен, колхоза хирĕҫ пыраканнисенчен шикленетĕп. Епĕ кулаксем ҫинчен каласшăн, ывлăм. Пирĕн йалтисенчен хăш-пĕрисем раскулачит тунă хыҫҫăн вăрманала тарчĕҫ, таркăнра ҫӳреҫҫĕ, ҫынсем ҫак вăрмантах вĕсене кураҫҫĕ. Пĕрне иртнĕ ерне ре тытса Елĕке илсе кайрĕҫ-ха. Комсомолĕссем тытрĕҫ, каҫпа утсемпе кайсан лашасем патне тухнă. Вăрă ĕҫĕпе пурăнаҫҫĕ, шелмăсем, колхоз лашисене ҫавăтма шутланă. —Урăх епĕ никамран та хăрамастăп.—терĕ вăл нумай-нумай каланă хыҫҫăн, каллех йăвăр кутамкине тӳрлетрĕ, тӳрлетрĕ те хăвăртрах утма тытăнчĕ.

Сăмах пуҫлансан, самах хыҫҫăн сăмах пулат. Паллашса кайатăн вара.

— Есĕ апла Вăрнар районĕсем, вăрман ҫынни,—тет утнă май кинемей.—Пирĕн унта хĕрача пурăнат. „Волонторта", комунăра вăл... Тен, шăллăм, есĕ ăна паллатăн та пулĕ. Ăна таҫта та палласҫĕ. Ударницăна тухнă вăл... хăй шатрарах питлĕ хĕр, Ката йатлăскер...

— Паллатăп, палламасăр,—тесе хутăм епĕ Катăна хам палламастăп пулсан та.

Кун хыҫҫăн вăл „Волонтор" комунăна Ака-туй курма кайни ҫинчен ăшă хаваслăхпа каласа пачĕ.

— Ун пек туй епӗ нихҫан та тел пулман, 68 ҫула ҫитнӗ пулсан та, илтмен те, курман та... Питӗ аван турӗҫ,—тесе пӗтерчӗ вӑл хайӗн сӑмахне.

— Есӗ апла, кинемей, нумай пурнӑҫ курнӑ ҫын-ҫке... Тӗнчере 68 ҫул пурӑнатӑн, манран виҫӗ хут нумай пурӑннӑ...

— Ватӑ... ватӑ... —терӗ манӑн кинемей ватӑ ҫын йӗркипе,— тахҫанах ача-пӑчаллӑ пултӑм, ывӑлсене авлантарса, хӗрсене качча парса пӗтертӗм... Халӗ килте старикпе иксӗмӗрех пурӑнатпӑр...

Унтан сӑмах хӑй ӑссӗнех колхоз ҫинчен тапранчӗ. Кинемей колхоз ҫинчен каларӗ, хайсен йалӗнчи колхоз ҫинчен.

— Колхоза тахҫанах кӗтӗмӗр —терӗ вӑл уҫҫӑн та тӳррӗн,— ара, хаљхи саманара тӑнлӑ-пуҫлӑ ҫын колхоза кӗмесӗр йулма пултарат-и? Епӗ ватӑ пулсан та, ҫавӑн пек шутлатӑп...

— Ҫавӑн пек,—тетӗп епӗ унпала килӗшсе,—ҫавӑн пек, кинемей, ӗҫхресченӗсен пурин те колхозра пулмала.

Ман сӑмахсем унӑн кӑмӑллӑ пулчӗҫ пулмала. Ман сӑмахсем вӑл каланипе епӗ килӗшнине кӑтартрӗҫ. Кинемейӗн хӑвачӗ татах ҫӗкленчӗ. Вӑл хайӗн ҫак ҫул пек вӑрӑм пурнӑҫӗ ҫинчен каласа пачӗ. Унӑн пурнӑҫӗ ытла та нушаллӑ пулнӑ, вӑл темиҫе ҫул ашшӗпе кӗтӳ кӗтнӗ, унӑн сӑмахӗсенчен вӑл тарҫӑра ҫӳрени, выҫни, шӑнни курӑнчӗ. Киввине, катари пурнӑҫа аса илнӗ май:

— Сатту, халӗ шӑнмастпӑр, выҫмастпӑр...—тет вӑл ҫирӗппӗн

Уйа тухрӑмӑр. Уйра ҫанталӑк татах та уйар пек. Кассӑн-кас сӑн ҫил килет. Ыраш пучаххисем шӑркаланнӑ. Вӗсен таса тусанӗ тӗтӗм пек вӗҫет.

— Кӑҫал кӗр мӑнтӑр пулат... Арӑмсем те шатах хӗрачаҫем ҫуратаҫ, ав, шӗшкӗсем ҫинче те мӑйӑрсем нумай, йуман сен йӗкелӗсем сахал вара,—тыр пулнӑ ҫул йаланах ҫапла. Колхозсем, ывлӑм, татах ҫирӗпленӗҫ...—тет манӑн кинемей, хӑй питне умӗнчи саппанӗпе шӑлса илет.—Стариксем иртен те ирхи акана та лайӑх иртерчӗҫ-ха. Сӗлӗсем те аван хӑпараҫҫӗ. Ҫӑмӑрӗ те вӑхатра пулчӗ. Евтӗ епӗр тутӑ тырӑ пур ҫинчех вилес ҫук кӑҫал. Епӗ хота ватӑ та, колхоз пурнӑҫне лайӑх астивеймен те-ха. Анчах лайӑхрах пуранса, лайӑхрах астивесчӗ... Вилме шутлас мар ха. Ӗлӗк шутламаннине халь шутлас-и?

Кинемей ку самахсене хӗпӗртесех калат. Епӗ те ватӑ ҫын сӑмахӗсене савӑнса итлетӗп. Вӗсем хайсемех: „ваттисен сӑмахӗсене ҫӗлӗке хул хушшине хурса итлеме хушнӑ“ вӗт. Ватӑ ҫынсен ӑслӑ сӑмахӗсене итлес килет, пӗлес килет вӗсем каланисене. Акӑ, пӗтӗм уйри ыраш та ӑна итлет, чечекленсе, мухтав йурри йурласа итлет. Ҫемҫе хумӗсем ҫинче сиктерсе ачашлат. Йусаса такӑрлатнӑ ҫулӑн ик айаккинче шӑрчӑксем хайсен кӗсливе хӗпӗртесе йантратаҫҫӗ. Ҫӳлте тӑрри хайӗн шыв пек йухакан йуррине шарантарат. Инҫе те мар, вар пуҫӗнче путене такамран пытанса йурлат. Карӑшӗ те йурлат. Лере тата ҫул йусама тухнӑ комсомолӗссем ҫӗнӗ пурнӑҫӑн ҫӗнӗ йуррисене пур кайӑксенчен те лайӑх шӑрантараҫҫӗ. Вӗсен ҫамрӑк сассисем ыраш хумӗсем хыҫҫӑн выљанса чупса пирӗн ума тухаҫҫӗ. Ман

кусçем умĕнче пĕрремĕш пйатилеткăра кăна йурату çинчен шутла пуçланă хĕрсемпе каччăсем курăнса кайаççĕ. Вĕсем пурнăç карти патне çамрăклах çитнĕ, пайан хаваслăн та паттăррăн такăр çулсем тăваççĕ, шывсем çине кĕперсем хываççĕ.

— Ĕлĕк епĕр çавăн пек йурлайман. Пирĕншĕн çамрăклăх та пулман. Халĥи çамрăксен ма пурăнас мар, епĕр хĕсĕнсе-тĕкĕнсе пурăннă. Пайан пурнас-и, ыран вилес-и?—тенĕ пек тĕккеленсе пурăннă епĕр. Çавсене аса илсен, колхоза татах та йуратас килет. Хам чĕре пекех сывăх вăл.

Йулашки сăмахсене вăл пĕтĕм кăмăлĕпе каларĕ, чĕререн илсе вĕсене ĕçпе хытнă ывăçтупанĕ çине кăларса хунă пек туйăнчĕç вĕсем. Сарă хĕвел çуттинче унăн ăслă сăмахĕсем ылттăн пек курăнса йăлтăртатса илчĕç те, каллех 68 çул пĕрре чарăнмасăр тапакан чĕрене кĕрсе вырнаçрĕç,—çакăн пек туйăнчĕç те курăнчĕç кинемейĕн сăмахĕсем мана.

Кинемейĕн шухăшĕсене манăн татах та пĕлес килет. Çавăнпа та епĕ пĕр çырма синчи çĕнĕ кĕпер урлă каçса, сурăх кĕтĕвĕ витĕр тăвайкки тӳпине хăпарса çитсен, карчăк умне „туратлă“ ыйту лартрăм.

— Есĕ, кинемей, мана влаç çинчен, колхоз çинчен калатăн,— терĕм епĕ хуллен, хам ăшăмра мĕнле те пулса кăна çиллентерес марччĕ, тесе шутлатăп.

— Ну? — терĕ вăл, епĕ мĕн калассине пĕлмесĕр.

— Вăт, сăмахран, калăпăр, ыранах влаç пире „халĕ ĕнтĕ колхозсем туса çитĕ, колхозсене салатса йарсан та йурат, есĕр хăт колхозрах йулăр, хăт колхозран тухăр“, тесе калат тейĕпĕр. Мĕн тăвăн-ши есĕ, кинемей, сăмахран, çавăн пек йапала пулсан?

Кинемей шутласа тăмарĕ. Унăн сăмахĕ часах тупăнчĕ.

— Вăл ĕненӳсĕр йапала...

— Ĕненӳсĕр та-ха, анчах, епĕ ăна сăмахран кăна калатăп, кăна есĕ ан ман...

— Совет влаçĕ ун пек тумаст... Çук, çук, тумастех! Колхозсене вăл кирлĕшĕн тума хушат. А епĕ, хам старикпе, мĕн пулсан та, колхозрах йулатăп, тем парсан та колхозран тухмастăпах. Колхозсăр пирĕн мĕнле пуравас? — йулашки сăмахне каланă чух вăл хăйĕн сасне вăйлатрĕ.

— Ĕлĕк тата мĕнле пурăннă?

— Ĕлĕкхипе мĕн калаçатăн. Ун чух ăнланмасăр пурăннă, халĕ ăнланса пурăнатпăр. Правитĕлстваă, хамăр влаç халăха суймастех, тесе калас килет. Малтан епĕ хам та колхоза кĕресшĕн марччĕ. Халĕ вăл шухăшсем пуçра çук, таçта кайса кĕчĕç вĕсем. Кам колхозра мар, çавă—ухмах, тесе калас килет манăн. Колхоз вăл—тăван вĕлле, епĕ малашне унсăр пурăнма пултараймастăп ĕнтĕ, ывлăм. Епĕр—пылхурчĕсем, пылхурчĕсене вĕлле кирлех.

— Да, кинемей, есĕ тĕрĕсрен те тĕрĕс калатăн: чăнах та, колхоз ĕçхресченĕсемшĕн тăван вĕллепе пĕрех. Пылхурчĕсен пурнăçĕ вĕллесĕр мĕнле—çавăн пекех, ĕçхресченсен пурнăçĕ те колхоз пулмасан, çавăн пекех.

Çул йуппи патне çитрĕмĕр. Манăн кинемейрен, ăслă карчăкран, колхозницăран, ăнланса пурăнакан ватă хĕрарăмран уйрăлмала.

— Есĕ Елĕке кайатăн апла, епĕ самушкинсем, Тоторох карчăкĕ пулатăп. ĕçкунĕсен кĕнекисем çине Тодорова Праски, тесе çыраççĕ. Çăмарта çиме кĕр, кăшт сăра та пур. Ачасем манăн та сан пекех вĕреннĕ çынсем. Пĕри халĕ Шупашкарта Пединститутра вĕренет. Вĕсем вĕревнĕ май, хам та вулама, çырма вĕрентĕм-ха.

— Халĕ, кинемей, сан патна кĕрейместĕп. Каçчен Елĕке çитмеле вĕт. Райкома васкатăп. Ну, кинемей, сывă пул! Ху сăмахна ан ман: колхоз—вăл тăван вĕлле! Хусамăр çирĕп пулсан, вĕлле те çирĕп пулĕ.

— Çук, çук! манмастăп, манас мар!—пулчĕ унăн йулашки сăмахĕ.

* * *

Акă, епĕ тăван йалта. Мĕн чухлĕ вăл улшăнвă. мĕн чухлĕ кайна малала,—вал халĕ çĕнĕ пурнăçпа, çĕнĕ ĕмĕтпе пурăнат,—тет Тимухха та.

Ман тăван йалăн та паттăр колхоз пур, вăл „Иљкушар“ йатлă пулнă, халĕ Токсин йачĕпе тăракан паттар колхоз ӳсет. Вăл колхоза 120 хуçалăх кĕрсе вырнаçнă; вырнаçнă та, пĕр чăмăр пулнă.

- Çĕр çирĕм чăмăртан пĕр чăмăр. анчах пысăк та вăйлă чăмăр,—тет пылхурчĕсем патĕнче ĕçлекен Тимухха старик.

- Çирĕп чăмăра аркатма хĕн.—тетĕп епĕ ана хирĕç

Хамăр колхоз утарĕ умĕнче чечекленнĕ çăкасем умĕнче ларатпăр. Тĕрлĕ тĕсле, илемлĕ чечексем хушшинчен вĕллесем куранаççĕ Пылхурчĕсем пĕрмай ĕçлеççĕ: пĕррисем çăка чечекĕсем çинчен, теприсем ытти темиçе тĕслĕ, ырă шăршăлă чечексем çинчен пыл ĕçсе, урисем çиве чечексен таса тусанĕсене сырса килеççĕ, теприсем тата вĕллесенчен тухса хĕвеллĕ ирĕке васкаççĕ. Ирĕксĕрех:

— Вĕсем кашни техник, кашни инженер, вĕсем хăйсен çепĕç алли-урисемпе çын тăвайми караccем туса, вĕсен шăтăкĕсене атăмăн-атăмăн пухнă тутлă пылпа питĕрсе лартаççĕ,—тесе калас килет. Чăнах та, вĕсем шĕвĕртерех техника сăмса тăрăх та пăхтарма пултараççĕ, анчах вĕсем хăйсен ĕçхĕлне техниксемпе инженерсем пек тавçăрса илсе тăваймаççĕ, тенĕ вĕт-ха Карл Маркс,—тесе пӳлетĕп хама хам.

Тимухха утар картине кĕрсе кайрĕ. Вăл хуртсене пăхса, хуртсемпе калаçса çӳрет.

— Ĕçлетĕр?.. Ĕçлĕр, ĕçлер! Ĕçлемесĕр кам пурăнат: О, ĕçлемесĕр пурăнма çук,—тесе ачашлат вăл пылхурчĕсене.

Ман пуçа шухăшсем ыталаса илчĕç. Манăн пуç пĕтĕмпех шухăшсем аллинче. Пурунтукпа Самушкин патĕнчи вăрман аса килчĕ. Утмăл сакăр çулхи кинемейĕн ăслă сăмахĕсем те аса килчĕç.

— Кинемей колхоза: „тăван вĕлле“, терĕ; акă, ĕнтĕ пăх халĕ, колхозпа танлаштар,—тетĕп хам тĕллĕн хам.

— Пылхурчĕсем ĕççĕр пурăнаймаççĕ, вĕсен пурнăçĕ—пĕтĕмпех ĕç,—тет Тимухха та.—Вĕсем, колхозниксем пекех, ĕçлеменнисене хăйсен ĕретĕнче тытмаççĕ. Кахаллисемшĕн вĕллере вырăн çук, ĕçлекен хуртсем çеç тутлă пыла вĕллери карассем çинчи лакăмсенчен ĕçме тивĕçлĕ.

Пылхурчĕсем, уссăр сăрĕсене хăваласа кăларсан, вĕллере пĕр çемйе пек пурăнаççĕ. Кун пек вĕлле—вăл пĕр çемйе, ăна таса колхозпа танаштарни те тĕрĕс, унта хăйсен ĕçченĕсем, хăйсен ударникĕсем пур; вĕлле пылхурчĕсемшĕн тăван кил-çурт пулсан, колхоз та ĕçчен колхозниксемшĕн—тăван вĕлле... Паллах, пирĕн хуртсем пулмала мар, колхозниксем хуртсенчен пин хут, мĕлйун хут малта, вĕçĕмсĕр малта вĕсем. Анчах вĕсен те хуртсем пекех ĕçе йуратмала,—шутлат пуçăм каллех.

Вĕлле хурчĕсем чечек çинчен чечек çине вĕçеççĕ, йара куна ĕçлеççĕ; колхозниксем те çавах, хĕвелпе тăрса хĕвелпе кĕреççĕ, лайăх ĕçлесе лайăх та пуйан пурнăç тăвасшăн кĕрешеççĕ.

Пылхурчĕсем ĕçлеççĕ. Пĕри ĕçрен килет, тепри ĕçе кайат. Вĕсен вĕлле умĕнче хуралçăсем те пур, сăпсасемпе сăрĕсене пыл вăрлама тытăнсан чикме сăннисем те çивĕч. Вĕсен килĕ—хăмаран тунă арча кăна, анчах уншăн кашни çапăçса вилме хатĕр, мĕншĕн тесен, вăл—тăван вĕлле!

1933 çул.

Ив. ИВНИК.

# УТĂ ÇИНЧЕ.

Сывлăш тăрă. Пр ирех
Кăкăра пит уçă.
Хапăл турĕ-çке пире
Хăмач шурăмпуçĕ.

Йешĕл улăх—чăн сăпка,
Мĕнешкел шăршийĕ.
Чăпăллат, пире лăпкат
Сывлăм—ун шăрçийĕ.

Ех, çулатпăр йарăнса,
Йешĕл курăк—пурçăн.
Чăвваăшт! чăвваăшт! тарăн сас
Йанăрат çеç хурçăн.

Савăк, савăк, пит хавас,
Кашни, кашни вăйлă.
Кунта йут кахал-канас
Вăл хаљ—татăк майлă.

Колхозра хаљ виçĕ кас
Амăртăва тухнă.
Çавăнпа кашни хавас,
Çирĕп вăйхал пухнă.

Йашă, хĕрĕ, йе ватти...—
Кунта веç пĕр шутлă.
Пĕччен çыннăн мĕн латти?—
Тет мучи те тутлăн.

Ав, умрах çулат, çунат
Комсомолка Дашă.
Уншăн хушăннă çунат
Комсомолĕс йашшăн...

Çавапала лапаткан
Кăччăн! сасси савăк.
„Хыçран паккус салатма—
Пионерсем, авă“...

Ес пăхатăн, мăйĕнче
Кашнин хĕрлĕ галстăк...
Паккус йулчĕ пит инçе—
Çухрăм пуљ шутлас-тăк.

Нўрĕ çил, килсем, кастар!
Ав, хĕвел те кулчĕ.
Паккусĕсем пит хастар
Кашнин хыçра йулчĕç.

Пурте тухсан тепрешер—
Кăнтăрла апачĕ.
Ав, тăри те йепресе
Йурра йара пачĕ.

Ех, çулатпăр йарăнса,
Йешĕл курăк--пурçăн
Чăвваăшт! чăвваăшт! тарăн сас
Йанăрат çеç хурçăн...

20/VI—1930 ç., Çавал-Мăрат.

---

# КАÇХИНЕ.

Пĕлĕт йернĕ шатра-кĕсене.
Уйăх—тутăхнă пăхăр укçа пек.
Кам-ха, кам-ха, пайан пуççапĕ
Увашкал укçа-тенкĕсене?

Хăратмаст хаљ пире киремет те,
Таçтах çĕтрĕ усал, арçури.
Ан хăрат йумахпа, кинемей, теп,
Пулас çук еп кив пурнăç чури.

Хаљ динамă та хурăç çак тапхăр;
Ав, Илйичăн çутти пăлтăрта та.
Йаш чĕрем! Хуйхă-суйхăсăр хаљ,
Пархатар ан кĕт сив çăлтăртан.

1931, Самар.

М. КАЛАЙ.

# СĂР ÇИЙĔ ХУМХАНСАН[1].

КАЛАВ.

## I.

Тавра уçăмсăр. Таçтан, çĕр хыçĕнчен йăсăрланса тухса хăмăр тачка пĕлĕтсем тӳпенеле кармашса хăпарнă-çемĕн ӳсеççĕ; капансем пек сарăлаççĕ; ваҫамăн-ваҫамăн уйăрăлса татăлса, тăсăмăн тăсăлса Хĕрлĕ-Чутай çинеле туртăнаççĕ.

Кăвак шуçăм çапсанах, çын пичĕ палăра пуçласан, Кахвун анкарти хыçĕнчи карта урлă каçса ыраш уйне тухрĕ. Ыраш уйĕ тăрлавсăр. Иртнĕ каç çил ăна тăлпаса пăтратнă. Пĕтĕрĕнчĕк, тĕммĕн-тĕммĕн, вырăнăн йăвалончăк, кассăн-кассăн кĕпер пек ӳкнĕ çĕр çине. Ыраш хушшинче çул нӳрĕ. Иртнĕ каçхи тăвăллă çăмăр лачкаса ислентерсе кайнă ăна. Тапхăрăн çил вашлатат. Шăмшак çӳçенет. Уй хашкаса пăшăлтатса илет. Кахвун çулпала пырат. Нӳрĕ тăпра çине унăн аттисем йĕр хурса хăвараççĕ.

Сылтăм хулпуççи урлă чĕн çакăпа çакнă винтовкă ложи утнă май сиксе пырат. 9 сехет тĕлне Кахвунăн Кăрмăша çитмеле. Утмалăх пур. Кахвунсен йалĕнчен Кăрмăш 15 километртра ларат. Вăрман урлă каçмала. Сăр çийĕнче, каçăра пором йе лудка ку айаккинче пулсан, каçăра „становкă“ пулмасан, икĕ сехет хушши тăрăшарах утсан, Кăрмăша çитме пулат. Кахвун утат... Утнă чух вăл пуçа чиксе утма вĕреннĕ. Урисем унăн урлăрах пусса йĕрсем хурса хăвараççĕ. Ку утăмшăн вăл салтакра та сăмах илткеленĕ. Взводнăй командир пĕрре хытах та йаглана.

Кашни çыннăн хăйĕн утă, хăйне май кĕлетке çурăма утнă чух тытас манер. Утă та çынăн йăлана кĕрет. Кахвунăн та хăйĕн утă, утнă чух кĕлетке-çурăма тытас манер.

Çийĕнче унăн салтакран тăхăнса килнĕ кăвак шинел, çурăм хыçĕнче пăшал, пуçĕнче туллийех шухăш. Салтакран таврăнсан, йалта пĕр уйăх ытларах пурăнсан, вăл Кăрмăша кайса Хĕрлĕ гвардийе кĕнĕ.

— Кĕрешӳ пĕтмен-ха, вăрçă вăрçмасăр çав йалти кивхатан тунисене—пуйансене тăпăлтармасăр, йал çинчен çĕрĕк шăршă кайас çук. Паллах, ку ĕç вăрçăсăр, кĕрешӳсĕр пулас çук, — тенĕ те Кахвун, винтовкăна аларан йарас çуккине аванах курнă.

Ĕлĕк. Маҫук Павăлĕ патĕнче Кахвун тарçăра пурăннă чух апла марччĕ. Калаçасса та такамран именсе, хăраса калаçнă пек калаçаччĕ; çурри-çуртми сасăпа çăварланаччĕ. Темле вара ирĕке тухсан, вăрманта-мĕнте пĕччен пулсан, пĕтĕм сассипе йурласа йе кăшкăрса йарсан, йантăраччĕ вăрман. Сарлака патвар кĕлетки чĕтренеччĕ, таçтан вăй пырса кĕрсе тимĕре те татса йарассăнах туйăначчĕ. Йалта вăл йăпшăнарах, хăйĕн патвар ӳснĕ кĕлеткине пытарма тăрăшнă пек çӳретчĕ.

[1] Граждан вăрçи историйĕ ваҫҫи пухакан материалсенчен.

Маҫук Павăлĕ патĕнче темле сивĕ сăмах та илтме тивнĕ Кахвунăн. Павăла никам та майне кӳрсе йӳнеҫтерсе ҫитереймен.

— Нӳрем кĕлетке, кĕсел...—тенĕ йата Кахвун кун каҫиччен темиҫе те илтнĕ. Ҫамрăклах Кахвун йăвăр шухăша кайма вĕреннĕ. Вăрман кукринчи анасем ҫине, Павăл тара илнĕ ҫĕр ҫине пăрҫа акма кайнине, Кахвун хаљ те аванах астăват.

Кунĕпе сӳре хыҫҫăн утса ывăннăскер, киле тавăрăннă чух урапа ҫине хурса йанă йулашки йулнă вăрлăх пăрҫана пĕр пăтавка йахăн ҫухатнине вăл нихăҫан та манас ҫук.

Киле ҫитсен, урапа ҫинче пăрҫа михĕ ҫуккине курсанах, тепĕр хут ана патне ҫитиччен йĕрлесе чупнă пулин те, михе тупайман.

— Ҫук, такам тупса хурса кайнă,—тере́ те Кахвун, пуҫне усса тăчĕ.

— Пăрҫа пăчĕ пĕр тенкĕ тăрат... Ҫичĕ пуслăх ĕҫлетĕн, пĕр тенкĕлĕх шар тăватăн, акă йепле усă тăватăн есĕ мана,—тесе Кахвуна ĕнсинчен чышни аса килчĕ.

Астăват Кахвун. Йăвăр кунсенче ытла кӳтсе ҫитсен: Ма ҫуралнă-ши епĕ... Ҫĕр пичĕ ҫийĕнче ма таптаса ҫĕре хытаратăп-ши? тесе, вилнĕ ашшĕ-амăшĕсене ӳпкелетчĕ.

— Ҫуратса йанă та мана, такам алли ҫине пăрахса хăварнă. Кун пек пулаччен манăн анне варĕнчех ҫĕрмеле мĕн. Ашшĕ-амĕшлĕ ачасем ав, шкула ҫӳреҫҫĕ, хут вĕренеҫҫĕ. Маншăн шкулга та вырăн ҫук,—тесе ашшĕсем вилнĕ хыҫҫăн шкултан вĕренме пăрахсан кĕтӳ патне кĕрĕшни, унтан хĕл каҫма тесе, Павăл патне тарҫа кĕни аса килчĕ ăна.

Ҫичĕ ҫул хушши Павăл патĕнче тарҫăра пурăннă хыҫҫăн, Кахвунăн йат тухрĕ, салтака каймала пулчĕ. Австри ҫине плена лексе, таҫти йут ҫĕршывра шахгăра асапланса пурăнмала пулнă. Мĕн ҫамрăкранпах вутла-хĕмлĕ нушара пиҫĕхнĕ кĕлетке тӳснĕ. Плентан та Керенски вăхăгĕнче тарса тухса, Раҫҫейри свободăна курас тесе ĕмĕтленнĕ. Анчах, Кахвун Мускава ҫитсен каллех, киле килес вырăнне, Керенски ҫарне лекнĕ, тепĕр хут Карпат тăвĕ ҫине кайса йун тăкмала пулнă.

Кахвун утат. Ак, умрах Пантăк вăрманĕ курăнат. Шухăша кайса утса пынă ҫĕртенех Кахвун пуҫне кăшт ҫĕклерĕ те, „йăл“ кулнă пек пулчĕ; ҫавăрăнса тăрса йал ҫинеле пăхрĕ.

— Ах, Паҫҫа... Маннă-ха вĕт епĕ сана калама...—тесе пуҫланă сăмаххисем аса килчĕҫ ăна.

Иртнĕ каҫ Паҫҫасен кĕлечĕ умĕнче, Паҫҫана хулпуҫҫинчен тытса ҫапла пуҫланăччĕ вăл хăйĕн сăмаххине.

Кăсйинчен тапакпа хут кăларса пирус ҫавăрса тивертрĕ те, Кахвун вăрманала кĕрсе кайрĕ.

Ула-чăла пĕлĕтсем сапаланса кайрĕҫ. Тӳпере хĕвел те палăрчĕ. Вăрман витĕр мăн ҫулпа анса, „Пантăк пристăнĕ“ каҫҫине, сăрт ҫине ҫитрĕ Кахвун.

Кахвун ҫӳлте, сăрт ҫийĕнче. Айалта—Сăр шывĕ.

— Ей, давай лодкă... Хăвăртрах пар!..—кăшкăрсан—Сăр улăхĕ йанраса кайрĕ. Вăрман икĕ хутчен „Давай, давай, пар, пар!“, кăшкăрса йанларĕ. Сăр леш айакки—сарлака улăх, ҫаранлăх. Инҫех те мар курăнат Кăрмăш.

Тўлеккĕн, канлĕн йухат ку тĕлте Сăр. Шавламаст, çыр хĕррине çапса чашкăрса чўхенмест. Йăвашшăн, тўлеккĕн йалкаса выртат Сăр. Йухат вăл тахçанах. Йуплĕ йĕкĕр вартан пуçланат унăн пуçламĕш тымарри. Хĕсĕк, чуллă тăвăр çырăкран палкаса сирпĕнет унăн пуçламĕш çăлкуçĕ. Ирĕке сирпĕнет. Çĕр пичĕ çине йухса тухса сăрхăнса çырма тĕпне анат; шăкăртатса йухма пуçăнат.

Çăлкуçĕсем пĕрре мар. Варсем, çырмасем те Сăр тăрăх сахал мар. Сăр йухат; пуçхĕрлĕ вырăнсенче выђаса сиксе кăпăк кăларса ыткăнат малала. Сăр тăрăх сарлака ытамлă улăх, уйхир. вăрманлăх... Сăр ытамĕ анлă. Вырăсĕ, тутарĕ, чăваш, мăкшă (ирçе-мордва)—таврари Сăр çийĕ халăхĕ.

Тĕрлĕрен чĕлхе, тĕрлĕрен сăн-сăпатлă тумлă халăх Сăр çийĕнче. Арпа лаççи пек ванчăк çурт-йĕрлĕ йалсем, саласем, станцăсем сахал мар Сăр ытамĕнче. Çўренĕ чух тĕслинчен курма пулат...

...Ырхан лаша йе тыхалă кĕсре урам хуш шинчи курăка шăлне йĕрсе йĕрĕнсе кăшлат. Çатан йе уртмахсенчен вĕрлĕк хурса килкарти каркаклană улăм айне путнă çург-йĕрлĕ хуçалăхсем. Çургсем çумĕнче сухапуçсем, йăвăç шăллă сўресем тăраччĕç, хытнă пиншак, çĕтĕк-çурăк сăхман йе кĕрĕк—йалта пуриншĕн те пулнă паллă тум. Ырханччĕ йалсенче пурнăç...

Темчул ырхан пулсан та, çавăнгах пулнă чаплă „ырă" пуйансем, „ырçынсем". Сĕлĕ çине пухрасем шăтса тухнă пек, çутăлса лараччĕç пуйансен çурт-йĕрĕсем. Тĕрлĕрен сутăçсем, арман хуçисем, тарçă тытса пурăннă кулаксем, вăрман сутти туса халăха улталаса пурăнакан вак-тĕвек сутăçсем...

Çутăмрах кĕлеткелĕ, сарлака çамкалă Мађук Павăлĕ аса килчĕ Кахвуна. Камшăн ырă çи-пуç та калуш, теприсемшĕн выçăлă-тутăлă пурнăç... Хытнă пиншак, çĕтĕк-çурăк тумтир, уринче шăтăк пуçлă çăпата.

...Пўртў тайлăк, йĕмў санăн 90 саплăк, сарай тăрри витĕр çăлтăрсем пăхаççĕ, а есĕ?

— Ку хамăн, леш манăн, ку санăн,—тесе пурнăçра уйăратăн. Йулашкинчен арăму та санăн выђăхла,—йе сутăн, йе вăрласа туйаннă собчаннăй арăм.

— Хамăн!

Çук... Çитĕ, ку капла пулнă, хађ вăл пулас çук.

Сăр йухнă, йухнă вăл тахçанах. Сăр урлă каççан, Кахвун çўлеле улăхрĕ: шăлан тĕмми хыçнеле пулса куçран çухалчĕ; штык вĕçĕ выђанса çĕклєнсе пыни курăнса йулчĕ.

II.

— Ма пайан хађчен кĕтў каймаст?

— Кĕтў апачĕ камра пулнă?

— Кĕтўççене вăхăтра апат пĕçерсе çитерейместĕ... Çын-и вĕсем!—тесе кĕтў хĕрринче арăмсем пăтранаççĕ.

— Апат парасшăн мар калаçаççĕ.

— Тăрăхлаççĕ... Сутă çине чыхăннă вĕсем. Иртнĕ каç çĕрĕпех анкартинче сăмакун йухтарчĕç.

— Лавĕ-лавĕпе тырă турттарса сутаççĕ, кĕтўççене апат памаççĕ. Пыччи-и!.. Ăçта кайатăн?—тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ.

— Уçăр алăкне... Мĕн çăварăрсене карса чана пулкки пек такăлтататăр?—терĕ Пархи кĕтӳçĕ.—Епĕр „штолĕ“ айăплă! „Чай“ епĕр те çын, уйра пирĕн выçă çӳрес çук,—тесе вăрăм пушине сӳтсе йачĕ.

Кĕтӳ пралука кĕрсе кайсан, арăмсем кăшт лăпланчĕç. Пулккăн-пулккăн пухăнса ирхи новăçсем çинчен черетлĕ калаçу тапранса кайрĕ.

Маҫук Павăлĕн хăйне йата илнĕ шăлсăр карчăкĕ те виççĕн калаçса тăнă çĕре пырса тăчĕ. Унтри арăмĕ те Хветĕр арăмĕ калаçнине çăварĕнченех пăхса тăрат.

— Килнĕ тет çав... Иртнĕ каç та Паççапа иккĕшĕ урамра ларсах тул çутăлтарнă.

— Е-е... кин... Ахаҫтен пулас çук. Ахалех пурăнмаççĕ вĕсем. Паççана йернĕ К хвун. Йермен пулсан çав-тери çула Кахвун ма килсе çӳретĕр ара?

— Йерсен йермесен те, сире мĕн ĕç вĕсен хушшинче?—терĕ Унтри арăмĕ.—Кахвун авланман, урçа та мар... Паççа та çамҫăках мар. Çырлана вăхăтра тataççĕ, типсе ларсан, çырлана та пăхмаççĕ,—терĕ те, саппанне йусакаласа утма тытăнчĕ.

— Шапла шаплах ĕнтĕ вăл,—терĕ те Павăл арăмĕ те, тăвалла туналарĕ.—Аршиншене йака кирлĕ, йакана йуратат аршин,—терĕ те, тутине шалса илчĕ.

— Питсĕр... Халăх куç умне тухма намăс сана...

— Мĕншĕн... Камăнне мĕн çаратрăм?

Анат йенче пĕр пулккă арăм. Такăшĕ тепĕрне çӳçренех йарса илнĕ. „Караул!.. Караул!..“ сухăрат урам.

Ав, арçынсем чупаççĕ.

— Чарăр-ха, чарăр...—тесе хыпкаланса арăмсем йĕри-таврах хускалаççĕ.

— Мĕн çитмен сире?.. Ма вăрçатăр?..

— Чар арăмна... Арăм-и вăл хăйĕн упăшкине çын çумне хушакан!—тесе пĕри çӳçĕсене тăмалангарса айаккала пăрăнчĕ.

— Ут киле.. Мĕн çитмерĕ сана?—тесе арăмне чышса-тапса илчĕ Хветĕр.

— Питсĕр... Йăгă ами!—тесе йанласа йулчĕ урам.

Тем те пулат йалта. Харкашу-тавлашу часах пулат арăмсен. Кĕтӳ хуса йарсан, пӳрт ăшчиккисене пуçтарсан, пайан та арăмсем, ытти кунсенчи пекех, пӳртумсене тухса ларса çĕвĕсем çĕлеççĕ. Ăçта иккĕн, ăçта виççĕн пухăнкаласа ларнă.

— Еç çине тухсан йерçу пулмаст... Елĕ икĕ арçын кĕпи, пĕр йĕм касрăм-ха,—тет пĕри.

— Ниçтан та алă-ура ĕç патне пымаст... Те çире пуртан... Нимле ĕç патĕнче те хул-çурăм хăпарса пымаст,—тет тепри.

— Çапла вăл, кин... Ку хушăра сирĕн те хуйхă çине хуйхă пулса пычĕ-ха... Çитмеиннине тата ĕнӳ ӳксе вилчĕ... Сĕт-турăхсăр йултăр...

— Мĕнтен пуçăнса кайрĕ пулат Аҫукпа Хветĕр арăмĕн хушшинчи тавлашу?

— Аҫукăн сăмакункă пулнă. Иртнĕ каç Хветĕрсем унта ерех ĕçнĕ... Ну, ĕçнĕ хушăра кăшт çăмăлланнă пулас.

— Е-е... апла пулнă еппин... Ĕçкĕ хуçшинче пулат çав вăл...

— Ахаљ, Аңукĕ те ытла капăрланса çӳреме пуçларĕ... Шанмалийех те çук,—текелесе калаçнă хыççăн, вăрăххăнах сăмах-халапсем йалти йашсем çине çитрĕç. Çав авланат, ку качча кайма хатĕрленет, теме пуçларĕç.

Паллах, калаçу хушшинче Паççапа Кахвуна та асăнмасăр хăвармарĕç. Ку лайăх, вăл йаптăх... Паççан кĕлетки-çурăмĕ аван, качча кайма топри çук. Кĕпи аркинчи сарлака чăнтăрне те Кахвун Кăрмăшран илсе килсе панă,—текелесе çĕввисене çĕлекелерĕç.

— Кахвун Паççана илетех пулсан, пырат тата. Шупашкине—хупăлчи,—текелерĕç çăварсем.

— Калаçчĕр... Çын çăварĕ çине никамăнне те çăварлăх хуман, тенĕ таçтан вĕçе-вĕççĕн сăмах Паççа хăлхине пырса кĕрсен,—ман çумра никамăн та ĕç çук. Çынсем мана кăшланăшăн епĕ ни пĕчĕкленес çук, ни кунтан ытла ӳсес çук,—тенĕ те, калаçма та пăрахнă.

Маңук Павăл карчăкĕ, кĕтӳ хуса йарса таврăннă хыççăн, килкартинче уткаласа çӳрерĕ. Нӳхреп çине пичкесем кĕртсе лартса сасă тукаласа çӳренĕ хыççăн анкартинеле тухрĕ. Çенĕхре, тимĕр кроват çинче, амăшĕ уткаласа сасă туса çӳренине илтнĕ пулсан та, Ваççа ним чĕнмесĕрех йăшаланкаласа выртнă. Вăл амăшĕ картаран сурăхсене кăларнă вăхăтрах вăраннă пулин те, пайан вырăн çинчен тăман-ха. Темле тĕлĕк курнă, анчах вăраннă вăхăтрах тĕлĕкне манса кайнă. Унтан вăрансанах темле шухăшсем, шутлас мар тенĕ çĕртенех, унăн пуçне тăвăрлама пуçланă. Шутлат Ваççа. Шухăшĕсем ниçтан та пĕр вырăна пырса пĕтĕçеймеççĕ.

Таçтан ĕлĕк вгорокласнăй шкулта вĕреннисем аса килсе тухрĕç унăн пуç хăвăлне. Салтака кайсан прапăрсен шкулне кĕрсе вĕреннисем, унтан тухса çутă пагунсемпе хула хушшинче çӳренисем, салтаксем чеçт панисем.

— Ех, епĕ вĕт çынччĕ... Епĕ куљтурлă етемччĕ,—терĕ те, пуç айĕнчи çытаррине хутлатса пуçне çӳлерех çĕклесе выртрĕ. Пагунсем çинчи çăлтăрсем аса килчĕç... Халь ĕнгĕ çук. Ак, пагун вырăнне çытартан тухнă шурă тĕк çыпăçнă.

Ваçли кун пек пурнăçа кĕтмен. Унăн шухăшĕнче татах аслăрах чын илсе, мăн хулара улпутла пурнăç тăвассиччĕ.

— Мана киле ан кĕтĕр. Чăваш йалĕ маншăн тискер. Ман патăма çыру мĕн йарас пулсан, чăвашла ан çырăр. Чăваш чĕлхине мана пуçларăм ĕнтĕ,—тесе çыраччĕ офицер Ваççа.

Ак, халĕ ĕнтĕ тĕппипех, йăлтах харама кайнăн туйăнчĕ Ваççана пурнăç. Шухăшламан-кĕтмен çĕртен каллех йала таврăнмала пулчĕ унăн. Те вĕреннĕ çын, те офицер, те тата урăх чынлă начаљник пулнăскер—Ваççан халь ĕнтĕ ним палли те çук. Салтакран тăхăнса килнĕ çи-пуçĕ те кунтан-кунах кивелсе пырат. Йалта ăна ним чыс та çук... Ваççа! тенинчен пуçне ун чĕнмели урăх йат та çук йал çăварĕнче.

— Кахвуна чысласçĕ йалта... Çав Кахвунпа танашма тивĕçлĕ-и епĕ?—тесе Ваççа сиксе тăчĕ.—Çав çĕрĕк çăпата—кахвун халапписене итлеме пурăнатăп-и çĕр çинче...

Шухăшланă май Ваççа тарăхсах пырат. Ниçтан çăлăнăç çуккине кура, Ваççа хăйне хăй тăвăрланса кӳтсех çитет.

Иртнӗ каҫхине кӳтнӗ чӗрине кӑштах та пулин лӑплантарма йалти йашсем хушшине тухнӑччӗ вӑл. Анчах лӑпланас выранне, Кахвунпа тӗл пулсан, вӗресе каймала пулнӑ унӑн...

— Кай умран, пӑрӑн... Хӑнкӑлана пусса лапчӑтнӑ пек епӗ сана хӗстерӗп, шӑл-ҫӑварна пӗтӗм свочӗпе кӑларса ҫырмана утӑп!— терӗ Кахвун.

Сисет Ваҫҫа. Ку пурнӑҫран Ваҫҫан ним кӗтмели те ҫук.

Килйышӗсем те Ваҫҫан кӑмӑлсӑр. Ӑҫтан кӑмӑллӑ пулччӗр вӗсем? Пытарнӑ тырра Кахвун Кӑрмӑшран килсе тийеттерсе тухнӑ.

— Ҫав Кахвунах пӗтерет. Ма намӑса пӗлмест-ши? Сахал ҫинӗ-ши Кахвун Павӑл ҫӑкрине?—теҫҫӗ хӑшӗсем.

— Павӑлӑнне, тепӗр тесен, тийесе тухни те ҫылӑх мар. Павӑл та Кахвуна ҫаратман мар,—теҫҫӗ теприсем.

Кун пек пуласса пурнӑҫран кӗтменччӗ Ваҫҫа. Ку капла пуласса пӗлнӗ пулсан, Кахвуна Маҕук Павӑлӗсем тахҫанах тирпейлесе те хунӑ пулӗччӗ. Кахвун шӑмми витӗр тахҫанах курӑк та шӑтса тухнӑ пулӗччӗ. Хаҕ ӗнтӗ Кахвун ӗлӗкхи мар, тарҫӑ та мар.

— Ех, пурӗпӗр, алла лексен, стай килсен...—терӗ те Ваҫҫа, вырӑн ҫинчен тӑрса пӳртеле кӗчӗ.

... Кӑнтӑр иртсен Ваҫҫасен сат картинче, ҫаврака сӗтел хушшинче икӗ ҫын ларнӑ. Тӗкӗл-турасем, сӑпсасем, сусланкем чарӑнма пӗлмесӗр нӑйланӑ. Сӗтел ҫийӗнче икӗ стакан ерехпе пӗр бутылкӑ ларнӑ. Пӗри Ваҫҫа, тепри Илле (йут йалсем) ларнӑ.

Ерех ӗҫнӗ, ӗҫнӗ май сӑмах-йумахсем хускатса йанӑ.

— Ыглах пуҫна ан ус-ха... Кахвунсен ирӗкӗ нумайах пырас ҫук,—терӗ Илле.

— Совет влаҫӗ кунтан-кун ҫирӗпленет-ха вӗт. Ӑҫта ҫитсен йепле ҫӑлӑнасси палли те ҫук,—терӗ Ваҫҫа.

— Тухат... Ӗҫ, калас пулат, каплипех пулас ҫук. Вӑрҫма хатӗрленмеле... Мӗне кӗтсе тӑмала? Шурӑ ҫар йантлама тытӑнмала. Салтакран илсе таврӑннӑ вӑрҫӑ хатӗрӗсене пухма тытӑнмала. Шуррисем кунтан-кун вӑйланаҫҫӗ. Кунтала ҫывхара пуҫласан, шалтан „взрыв" парса, Хӗрлӗ гвардийе тӗк вӗҫтернӗ пек аркатса йамала.

— Калама ҫӑмӑл та ..—терӗ Ваҫҫа.

— Пирӗн ӗҫсем, калас пулат, йатламала мар. Ку таврари пӗтӗм офицерсем хаҕ ӗҫе тытӑннӑ. Санӑн та айакка пӑрӑнса йулмала мар. Кам пӗлет, тен, ҫак кунсенчех ӗҫсем ҫаврӑнса ӳкӗҫ,— терӗ те Илле, кӑсйинчен хут татки кӑларса Ваҫҫана пачӗ.

Ваҫҫа, хутне вуланӑ хыҫҫӑн, Илле ҫине пӑхса ларчӗ.

„Норенберг, Саверкин, Ҫтепанӑв"...—Ӑҫта ку комитет?

— Кӑрмӑшра. Ҫынсем вӗт тожӗ ним ӗҫсӗрех пурӑнмаҫҫӗ.

— Ним мар, епӗ ҫав Кахвуна хам аллӑмпах персе пӑрахӑттӑм,—терӗ Ваҫҫа.

— Тӗрӗс мар... Ку шухӑш санӑн вырӑнлӑ мар. Пӗр Кахвуна вӗлернипе ӗҫ пулмаст. Кунта пӗтӗм Совет влаҫне аркатса, влаҫа хамӑр алла илесси малта тӑмала,—терӗ Илле.

— Ата, кӑшт пӳрте кӗрсе апат ҫикелӗпӗр, ӗҫ ҫинчен те тӗплӗрех каламӑпӑр,—терӗ Ваҫҫа.

Пушӑ бутылкӑ, йунашарах ерех стаканӗсем, икӗ стакан сӗтел ҫине ларса йулчӗҫ. Йӑвӑҫсем хушшипе сӗтел ҫине хӗвел ӳкет.

Сарă-шурă лĕпĕшсем сĕтел çине пырса ларса вĕçсе ўкрĕç. Суслан иртрĕ найласа. Сĕтел айĕпе шăши чупса kaçса улмуççи хăвăлне кĕрсе çухалчĕ.

III.

— Самани ĕнтĕ çавнашкал кайрĕ, Павăл хăта... Самани çаврăнса пăтранат, çынсене те йатлама-вăрçма пĕлес çук,—терĕ Таньук Хветĕрĕ —Большевиксем, ав, турра та ĕненмеççĕ, тет. Ăçтан самана лăплантăр?.. Халăх хушшине шуйган аннă — вăл саманана пăтратат, халăха çылăха кўртет. Кĕнеке çине çырнă халапсем çите пуçларĕç,—терĕ те, çырмача тăрăх пăхса тăчĕ.

— Самани вăл нимрен те айăплă мар.. Хамăрăннисемех пĕтереççĕ пире... Шутла-ха, Кахвуна епĕ çăкăр çигермен-и?.. 14 çулхи ачана пăхса çитĕнтерсе салтака йурăхлă çын турăм. Йулашкинчен вăл халь мĕн туса хучĕ манпа?.. Темле тольккă çĕр тўсет, çĕр çăтман унăн кĕлеткине, 200 пăт тырра макăртса тийесе тухса кайрĕ, йытă...—терĕ те, сăмакун аппарачĕсене майласа çитерсе, ерех йухтарма тесе йўçĕтнĕ пăракана пичкене тултарма тытăнчĕ.

— Вутне чĕртме тăхта-ха, хăта... Епĕ, сăрт çинеле хăпарса, анкарти хыçнеле тухса пăхам... Сас-чў çук-и... Çын мĕн курăнмаст-и,—терĕ те, мунча çумĕпе хăпарса, сăртра ларакан вĕрене кутне пычĕ. Тўлек ăшă каç. Сахал пулат кун пек ырă каç. Тĕттĕм.. Таньук Хветĕрĕ аллине çамки çумне тытса анкарти хыçнеле пăхрĕ те, вăрахăнах утса, карта çумне пырса уртăнса тăчĕ.

Хветĕр куçран çĕтсессĕн Павăл çăлтан пĕр витре шыв кăларчĕ те, аппарат холодилникĕ çине пырса йачĕ. Ĕнсине хыçса тем шухăша кайса тăнă хыççăн, турпас таткисене суйласа илсе, вут чĕртме ларчĕ.

— Турă пар, ырă пар... Хатĕрленĕ ырлăха тĕлне кўр, сайа ан йар,—терĕ те, спичкă сутса тивертсе йачĕ. Вут чăлтлатса çунма пуçларĕ. Павăл çăка вуттине майлаштарса аппарат айне хума тытăнчĕ. Çырмаранах тытăнса сарайсем хыçнех çитет Павăлăн сат... Хăмла вырăчĕ сарай хыçĕнче. Хăмла вырăнĕпе йунашар пĕр лав пек вырăт çĕрĕк улăм купи.. Ку купа вырăнĕнче ĕлек нўхрепчĕ.. Павăлăн пуçĕнче çав нўхреп.. Ку халь те пушă мар, анчах унта пич и-пичкипе сăра мар, но, прахăç шăтăк мар.

Анкарти хыçĕпе йунашарах иртет çул, анчах мăн çул мар... Çула тăрăх лаша ури сасси илтĕннĕ пек туйăнса кайрĕ Хветĕре. Карта çумне кукленсе ларса, карта шăтăкĕ витĕр пăхма пуçларĕ.

— Сăмакун йухтарма чарма пуçларĕç... Титан аллине лексен ахалех вĕçерĕнме хĕн вара... Лутăркат, штрав туничен виçĕ хут ытларах шăйăрат.—Сасă илтĕнет... Тарантас сасси уççăнах Хветĕр хăлхине пырса çапăнат. Ĕмĕлке çыхарнă май тарантас çинчи çынсем калаçни те хăлхана кĕрет.

— Ĕç тухат... Вăхăта тăсма йурамаст... Мобилизаци пулатех. Çак кунсенче Штанаша, Пантăка тепрер çитмелех.—тенине аванах илтрĕ Хветĕр.

Тарантас сасси илтĕнми пулсан, Хветĕр Павăл патне вăрахăн утса пычĕ.

— Иккĕн, лашапа иртрĕç... тарантас кўлнĕ... Тем çинчен пуплеççĕ, Штанашпа Пантăка çитмелех тесе асăнаççĕ.

— Пулĕ, çӳреççĕ пулĕ... Темле шухăшлакан етем те пулĕ хаљхи вăхăтра,—терĕ те Павăл, аппараг айне вĕçерме тытăнчĕ.

— Тем, хăта, вăрçă пулатех пулĕ. Тем, ыгла вăрçă çинчен калаçма пуçлатĕç... Шуррисем хытă килеççĕ, текелеççĕ

— Вăрçă пулат мар... вăрçине хытă вăрçаççĕ... Хамăр патра вăрçассине кĕтеççĕ,—терĕ Павăл.

— Каллех пăтранаççĕ ĕнтĕ... Ку хушă вăрçăпах тăн тухрĕ ĕнтĕ... Пурте вăрçаççĕ, пурте халăха лайăх тăвасшăн тăрăшатпăр, теççĕ, анчах лайăххи ниçтан та çук... Лáпланса пурăнсан хаљ каплипе пыраччĕ-ха, çĕрсем кăштах хушăнчĕç, çарансем те пур.

— Пар-ха кĕленче. . Скорă йухма пуçлат,—терĕ Павăл.

— Лайăх... калама та çук лайăх.

— Ак, тăхта... Улпутсен именисене аркатрĕç, пуйансен тыррисене çаратрĕç, есĕ лайăх пыраччĕ-ха, тетĕн... Ăçтан пурăнма пулат Советпа?

— Ара, апла та...

— Çапла çав вăл... Камăн айак чикмест — вăл ахлатмаст... Неччу та калас уш лайăхне. Пулат ак, çитеççĕ кунсем — çын çакма пăйав та çигмĕ йалта.

— Кама, тата ма çакас йалти çынна?..

— Улпут çĕрĕсене ма туртса илтĕр?

— Кам илнĕ... Ăна влаç илнĕ. Влаçран урлă кайса хăтланман, законсăрах туман,—терĕ Хветĕр.

— Парĕç ак закон! —терĕ те, кашăк çине йухтарса ерехне сыпса пăхрĕ... Ну пулат... Калама çук вăйлă пулат .. На, сыпса пăх,—тесе кашăкне Хветĕре тыттарчĕ.

Йăваçсем хушшипе пăштăн утса Павăл арăмĕ çитрĕ.

— Павăл, Вашша çитрĕ... Киле чĕнет.

— Пĕччен-и?..

— Пĕччен мар... Вишшĕн .. Темлешкершем. Чăвашшемех пулаш та...

— Пыратăп... Ут киле!—терĕ те, вут хĕрринчен ан пăрăн, тесе, Хветĕре лартса хăварчĕ.

Павăл анкартинчен килеле хăпарнă çĕре иккĕн тапаçланса йатса тухрĕç темĕскер арчи.

— Мĕн-ке?--терĕ Павăл.

— Уç часрах... Улăмне кăшт сир,—тесенех, Павăл хăмла çумпе чупса пырса, улăм купине сирчĕ. Аллипе хыпаласа хăлăп тупрĕ, те, рычакпа тăхăнтартса хирчĕ. Ваççапа Илле тăрхала арчана вĕренпеункăласа шăтăк патне çитерчĕç.

— Ыран ир çинче йусаса пуçтаркаласа хур,—терĕ те Ваççа, Иллене хулĕнчен çаклатса сарай çумнеле пăрăнчĕ.

Павăлăн пӳрчĕ икĕ покойлă: пĕри хăйсен çемйине пурăнма тесе тунăскер, тепри хăнасене пăхса ĕçкĕ çикĕ тумали покой.

— Иртĕр, ларăр çывхăрах.. Кунта пурте хамăрăн,—тесе Титана сĕтел хушшине ларгрĕ.—Куна кăшт каргласах пулат.—Чӳрече занавескине картласа хучĕç.

Ваççасем тулта хăтланнă вăхăтра амăшĕ шăрган ăшаланă, сенĕксем те хурса йантланă...

— Еш ши... килмен курман шин мар,—тесе Титана çиме сĕнет... Е, ара, пурте шан пек шын пулшан...

— Есĕ, анне...—терĕ Ваçça.

— Еп тухатăп...—Халь йанглаша патăм,—терĕ те Ваçça амăшĕ, тепĕр пӳлĕмне тухрĕ.

— Малтанласа кăшт çырткалăр, кайран кăшт сыпăпăр,—терĕ Ваçça.

— Стой, нумайах ларма йурамаст... Тумали ĕçе хăвăртрах калаçса татăлмала,—терĕ Илле. Унтан Титан патне çавăрăнса: Халь анчах епĕр Кăрмăшран çитрĕмĕр.. Есĕ йалтине пĕлсенех, сана курса систерес терĕмĕр. Çак кунсенче хамăр уйезра мобилизаци пулат... Хĕрлĕ çар тума шутлаççĕ... Кантурта ку тĕлĕшрен мĕнле?.. Арзамасра Тухачевский çар-пухса Хусан йенеле тухат... Вăрçă хĕрсе кайнă... Шуррисем вăйлăн килеççĕ.

— Çăмăл ĕç мар ку... Ку ĕçе тытăначчен тытăнманни аванрах пулĕ, тетĕп,—терĕ Титан.

— Санăн ĕç йăвăр мар. Понимайĕш... Сансăрăн пирĕн ĕç тухмаст. Кăрмăшран вăрçă ĕçне йепле тата ăçтан пуçартмали ĕçсемпе, плансемпе паллашса килтĕмĕр. Чи малтан вăрçă хатĕрĕсен складне туртса илмеле, унтан влаçа арĕслесе хумала. Ку ĕçсене призыва пухăнакан халăх вăйĕпе туса иртермеле. Призыв вăхăтĕнче ку тăрăхри офицерсен çурри йалсенче, çурри Кăрмăш хулинче хватерсенче пулмала. Вăрçă пулсан та—пулат Кăрмăшра. Вулăссем кайран хăйсемех йăванса анаççĕ,—терĕ Илле.

— Нумай шутласа пуçа çĕмĕрме те кирлĕ мар... Мĕн пуласси пулмала, айакка пăрăнса тăма йурамаст.

— Вăл çаплах та-ха. Ĕçе тума тытăннă чух хăрамасăр тапранни тепĕр чух май килет, анчах пур чухне те мар... Мобилизаци пулатех. Шуррисем кунтала çывхараççĕ... Арзамас.. Кăрмăш... та чортла пултăр!—терĕ Ваçça та.

Павăл ерех йăтса кĕчĕ те, сĕтел çине лартрĕ.

— Ĕçмесĕр ĕç тухмаст... Иглĕр... Пирĕн мужиксен çапла сăмах пур: кам ĕçме пĕлет—унăн ăс та çитет... Ĕçлеме ухмах та ĕçлет, а ĕçме пурте чухлаймаççĕ,—терĕ те, пĕр чашăк тултарса ӳпĕнтерчĕ.

— Тухачевский çар пухса Арзамасран Хусана тухасшăн... Шумĕрле станцине, вăрмана пирĕн дозор тăратмала.

Калаçнă май хĕрсех пыраççĕ. Çатма çинче шăрган та нумайах йулмарĕ...

— Тӳсме çук, тӳсме-чăтма йăвăр пула пуçларĕ... Шар кĕрте пуçларĕç. Кахвун пире чылайах шăнкартса илчĕ-ха,—терĕ те Павăл, Титан çине пăхса илчĕ.

— Но, ним мар—Паçça пĕтрĕ... Аван хĕрччĕ, ĕçлеме мастаччĕ. Кахвуна марччĕ те вăл хĕр, кăшт хăйех ухмах пулчĕ.

— Хĕрĕсем тупăнĕç-ха вĕсем... Çутçанталăкра пĕр Паçça анчах мар,—терĕ Ваçça.

— Каплипех пурăнсан Паççаран луччă хĕр тупаймастăн. Совет влаçĕ тытăнсах тăрсан, мужик мужиком пулатăр. Ĕлĕк вăл, йа кто?—офицер!—тесе çӳренĕ есĕр. Халь стой!... Халь сире мужик вырăнне хумаççĕ.

— Есĕ, агте, пăрах. Паçça çинчен мана урăх çăвар та ан уç... Курнă епĕ, Паçça пек мар хĕрсем пур.

— Çук теместĕп... Но Паççана пĕчĕкрен хам кин тăвас ĕмĕтĕм пурччĕ.

— Илсе кил Кахвуна... Кахвун та санăннах вĕт.

— Çук, çук... Кахвун ман кил таврашне те ан килтĕр, ман таврашра шăрши те ан пултăр.

— Мĕн пуплетĕр... Вырăнти влаç—Титан... Понимайĕш, Титан... На-кай чорт сана Паçça?—терĕ ÿсĕр Титан.

— Ытлашши пула пуçларĕ,—терĕ Илле Титан çине пăхса.

— Мы влаç, мы закон... Кто против нас, тому магила, тому мат сыра земља... Павăл, ты йавăл... Дайош Кахвун арăмне. . За что баролиç, за что кров проливали!..

— Тăхта, вĕт сана капла йурамаст,—терĕ Илле Титана тытса.

— За что баррролиç...

— Тăхта-ха .. Паçça Кăрмăшра... Паçça çук йалта... Хош, Варука илсе килетĕп... Хай леш расхине.

— За что бароли,!—Тепĕр çур сехетрен Павăл Титана тытса:

— Ыгла ан шавла... Шавлама йурамаст.. Упăшки анкартинче... Ата, тух... Çенĕхре вырăн сарнă, унта пурте йантă,—тесе Титана çавăтса тухрĕ.

— Çук, ытлашши ÿсĕр!—тенĕ сасă илтĕнчĕ...

— Ан хирĕç... Лăплантарса çыврат, унсăрăн йурамаст,—терĕ те çенĕхрен Павăл кĕчĕ.

— Кам унта?..

— Хветĕр арăмĕ... ăна килĕштеркелеççĕ вĕсем,—терĕ Павăл Иллене.

— Пирĕн Титаншăн йаланах „Прийатное с веçелым" пулат...

— А Хветĕр?..

— Ан шавлăр...

Анкартинче çырма... Çырма хĕрринче мунчапа йунашар сăмакун йухат... Хайар ерех йухат. Хветĕр кашăк çине тумлатса часчас сыпса пăхса пуçне пăркалат.

Тĕттĕм .. Йĕри-таврах пĕлĕтсем купаланса йала хупăрлаççĕ...

Сĕтел çинче виçĕ пакет .. „Штанаша", „Пантăка", „Кăрмăша" тесе çырнă пакетсем çине.

IV.

Хĕрлĕ-Чутай варринче чиркÿпе йунашар икĕ хутлă мăнă çурт ларат. Чуспа обшит тунă, кăвак сăрпа сăрланă. Тăрри унăн çÿлĕ, таçтанах хĕрлĕн курăнат. Ку Хĕрлĕ-Чутайри хĕрлĕ гăрăлă второкласнăй шкул.

— Чутайри мăнă шкул... Чутайри кăвак шкул,—тесе тĕрлĕрен калаçнă ку шкул çинчен ку тăрăхри йалсенче.

Сахал мар çын вĕреннĕ ку шкулта, çамрăк халăх кашни кĕркунне екзамена килсе ку шкула кĕресшĕн тапаçланнă. 100-шер, 150-шер зайавлени панă, анчах вĕренме кашни çул 30—35 ачаран мала илмен. Паллах, пуп тавраш ачисем, кулаксем чи хисеплĕ вырăнта—малта тăнă. Кÿсемшĕн ку шкула кĕме питех те çăмăл пулнă. Чухăн хресченсен ачисемшĕн ку шкулăн алăкĕсем тăвăр пулнă. . асра-питре темлерен кĕме пултарнă. Маљук Павăлĕ те хăйĕн Васлине çак шкулă вĕренме йанă Тарçă Кахвун та лашапа Маљук Ваççине темиçе хутчен те çак шкула кÿре-кÿре хăварнă...

— За што боролись... Тăвас çав Чутайри шкула аслă шкул... Тăвас семинари... Камшăн?..—хамăршăн, хамăр ачасем шĕн,—тенĕ йалсем.

— Совет влаçĕ—хамăр влаç... ыйтас... Уçтарас...

— Нумай пуранна тĕттĕмре... Çитĕ...—тенĕ йал пухăвĕсенче.

Сăмах тухсан ĕç пуçăнат. Хĕрлĕ-Чутай вулăс кантурне кунсерен йалти çырусем, протоколсем пырса председатĕл Долгов сĕтеллисине купаланаççĕ.

— Чутайри второкласнăй шкултан тăвас... Мăнă шкул уçас!—тесе кăшкăрнă хутсем.

— Чим-ха... Кайас Дохтурăв патне, канашласа пăхас ку ĕç синчен,—тесе Долгов Дохтурăв патне утрĕ. Алăкне пырса шаккасанах, Дохтурăв ăна уçса кĕртрĕ.

— Ырăран та ырă, куçпах кĕтнĕ савнă çын çитрĕ,—тесе Долгов аллине Маңук Ваççи те Дохтурăв хыççăн пырса тытрĕ.

— Ну, ĕççем пирĕн тикĕсех мар, Кăрмăшран савăнăçлăнах çырмаççĕ,—терĕ те, кăсйинчен пирус кăларса Долгова тыттарчĕ.

— Тавай иртĕр, ларăр... васканă арăмĕнчен савăнман, тенĕ чăвашсем,—тесе Дохтурăв Долгова малти пӳлĕмеле кăтартрĕ.

— Мĕн çыраççе?.. Мĕн хыпар пур?

— Арĕслеççĕ... Степанова хупнă... Пирĕн те çăварсене ытлах та урлă йама йурамаст. Кахвун хурчка пекех ку тăрăха çавăрнат... Титан, калас пулат, пире йурăхлă çын мар... Ерехшĕн... арăмсемшĕн çунакан çын—ĕç тунă çĕрте ниме йурăхсăр етем... Панимайĕш, пирĕн йалти Хветĕр арăмĕ мĕн калат...—Кăрмăшран кӳнĕ темеççĕ-и? Пĕрне пирĕн Хветĕре те парăр,—тет. Мĕн тума Хветĕр арăмне калана?..

— Çук, Кăрмăшран нимĕн те кӳмен, тесен те ĕненмест.

— Пĕлетĕп, Титан шăтса кăтартрĕ мана, тет.

— Мобилизаци иртересси паллах мар, тесе çыраççĕ...

— Йурат, ĕççене вăл чармаст,—терĕ Долгов.—Манăн сирĕнпе урăх ĕç çинчен сăмах пур-ха. Йалсенчен пĕрмай протоколсем, çырусем çырса второкласнăй шкултан семинари тума ыйтаççĕ.

— Ха-ха-ха!.. Совет влаçĕнчен ырлăх кĕтеççĕ еппин çынсем...

— Тăхта, Маңуков... Ку кулăшла ĕç мар... Ма ыйтас мар, уçма май пулсан, ма уçас мар?—терĕ Дохтурăв.

— Уçрăр, семинари туса кафедрă илтĕр... Професăр Дохтурăв пултăр... Ха-ха-ха ха-ха-ха-а-а-а!..—тесе вырăн çине кайса ӳкнĕ пек выртат.

Дохтурăв хутсене пăхса тухрĕ те:

— Çак кунсенче вулăс пуххи тăвас пулат. Ку ыйтăва уйрăммăнах лартса Чĕмпĕре Губисполкома çын суйласа йарас пулат... Ĕç тухма пултарат. Пухуне хăвăртрах лухас пулат,—терĕ те, Маңукова пырса хулĕнчен тĕкрĕ.

— Есĕ, Маңуков, ĕç çинчен тĕплĕн шутлама пĕлейместĕн... Ну, кала, мĕне пĕлсе лахлатса култăн?

— Йурамаст ку ĕçе пуçарма. Калăпăр, второкласнăй шкула çухатса семинари уçчĕр... Ну мĕн пулат?.. Халăх Совет влаçĕ йенне карр! çавăрăнса ӳкет, Дохтурăв сăмса хытти тытса йулат.

— Вот... Çавăнтан ĕнтĕ санăн ухмах пуçу палăрат.

— Дохтурӑва директӑр тӑватпӑр... Урӑхла нимле те килӗшместпӗр,—тесе Долгов та ура ҫине тӑчӗ.

— Ан итле Маҫукова... Вӑл кӑштах ӑнланаймаст-ха,—терӗ Дохтурӑв Долгова,—ҫак кунсенчех вулӑс пуххи тумала. Селсоветсене халех, пайанах вулӑс пуххине делегатсем уйӑрса йама хушмала.

— Ҫапла тӑватӑп... Пухуне 20-мӗш чыслапа пухатӑп,—терӗ те Долгов, тухса кайрӗ.

— Игле, йаптӑххи ку ӗҫре нимӗн те ҫук. Семинари уҫатпӑр—ку таврари офицерсене семинарине вӗрентме илетпӗр... Понимайӗш?

— Мӗнле... Раҫ офицерсем сан семинарине вӗренме килеҫҫӗ? Сысна ҫурисем тетним есӗ вӗсене?

— Килеҫҫӗ... Килмесен те кӳмеле.. Шкулта вӗреннӗ май ҫирӗп организаци йантлатпӑр,—терӗ Дохтурӑв.

— Да-а... А уҫса памасан?..

— Уҫмасан плохӑ...

— Ну, ладнӑ... Семинари уҫатпӑр, организаци тӑватпӑр... Степанова хупнӑ. Йалта Кахвунсем ӗҫлеҫҫӗ... Унтан мӗн пулат?

— Ан васка... Патшалӑх ӗҫӗ вӑл вери кукӑлӗ пусса ҫыртса ҫӑтни мар... Степанова хупни вӑл нимех те мар... Сана хупчӗр йе мана—уншӑн ӗҫ тӑхтамаст.

— Миҫе винтовкӑ кӳтӗр Кӑрмӑшран?..

— Ҫӗнни 25, кивӗреххи 5, тепӗр йешчӗк патрун...

— Аҫта вӗсем?

— Секрет... Комитет никама та пӗлтерме хушман... Пуррине пӗл те, малала ан тӗпкӗчле.

— Тотӑ... Вӑрҫӑ ӗҫӗнче секрета тыгма пӗлмеле... Арӑму пулсан, ӑна та ан шан... Свйатӑ сохрани секрет...

— Йалсенче вӗг хаҫ безобрази... Пӗр хресченӗ тыррине сутат, тийесе тухнине ҫул ҫинче сыхлаҫҫӗ... Туртса илеҫҫӗ... Тепӗр кунне теприсем сутаҫҫӗ, малганхисем тыгаҫҫӗ. Йалта „чудӑ“ мӗн хӑглanaҫҫӗ.

— Кашни ҫын хатӗрпе... Пӑшал, наган кашни йалтах тем чухлех. Йалсенче ҫаратса анчах мар, персе пӑрахнисем, пусни тунисем те пулкала пуҫларӗҫ,—терӗ те Маҫукӑв, тӑчӗ.—Раз вулӑс пуххи пухӑнат, то пирӗн пухӑва хатӗрленмеле... Пухӑва офицерсенчен килекенсем пулсан, кӑшт систермеле,—терӗ Дохтурӑв.

— Вот, Маҫуков, мӗн... Санӑн ҫак кунсенче Пиҫнӑна кайса килес пулат... Икӗ ерне иртрӗ, Пиҫнӑпа связь тытмастпӑр... Начаҫник станци патне кӗрегӗн, хӗрлисем ҫинчен пӗлетӗн... Тухачевскине Пензӑ тавра шне мобилизаци иртерме йанӑ, теҫҫӗ... Те чӑнах, сведенисем киралӗ,—терӗ те Дохтурӑв, Маҫуков ҫине пӑхрӗ.

Хӗвел ансан, каҫ пулсан хӑйсен йалне ҫитрӗ Маҫуков. Чутайра семинари уҫасси ҫинчен, Пиҫнӑна ҫитсе станцӑ начаҫникне курса калаҫассисем ҫинчен, Степановсемпе Саверкинсем, Норенбергсем ҫинчен вырӑн ҫине выртсан та унӑн пуҫӗнчен шухӑшсем тухма пӗлмесӗр пӑтранчӗҫ.

Каç пулас умĕн вищĕ йулан Кăрмăш ту хĕрринчен улăхала анчĕç. Пĕри малта, иккĕшĕ йунашар калаçкаласа пыраççĕ.

Малти лаша йĕпкĕм хура. Утнă май пуç ухса, хура кăтра çилхине вашлаттарса, мăйне кукăртса, ташланă пек чавса пырат малала. Кахвун йĕнерпе ларса пырат ун çинче. Çийĕнче шинел, пуçĕнче кăвак веçонкă калпак сылтăмала пăрнăçарах ларнă. Калпак айĕнчен çамка çинеле пĕр пĕргем тухнă хура çўç пайăрки Кахвунăн патвар кĕлеткине кĕрнеклентерет. Хыçалтисенчен пĕри—уйезри политбўроран—Данилăв тенĕскер.

Виçĕ йулан улăха ансан, çаранлăхра кайрĕç ашăпа. Çурăм хыçĕнчи винтовкă вĕçĕнчи штыксем йăлтлатса сикеççĕ. Пантăк касси Кăрмăшран тăвала. Виçĕ йулан пыраççĕ касă йенеле.

Хĕвел анасси çывăх, хĕп-хĕрлех çунат хĕвеланăç. Сăр улăхĕнче сулхăн, Сăр çийĕ тĕксĕм. Сăр урлă карнă касă каначĕ Сăр шывĕ йухăмĕпе выљэл, „чалт!“ чалтлатса чўхенет. Сăрăн тепĕр айаккинчи çырта пушă парум курăнат. Шыв йухăмĕ парума лăкат. Канат çинчи шăлтăрми сиккелесе сас тăват, хўри унăн ирĕклĕн çапкаланса чўхенет.

— Ей, тавай паром! Хăвăртрах касар!—тенĕ сасă Сăр урлă йантраса кайрĕ. Касă касаракан касă пўртĕнчен хыçкаланса, тĕккеленсе тухса тăчĕ; пуçне хыçса Сăр урлă пăхрĕ.

— Хăвăртрах касар!.. Мĕн хыçкаланса тăратăн?—тенине илтсенех, касă хуçи паром çине анчĕ.

— Тăхта,—тесе парома вĕçертрĕ те, канатран тытса уртăнчĕ...

— Йерçнĕ вăхăтра туртса йарар,—тесе Данилăв пирус кăларчĕ.

— Ну, правда, туртса йарар... Пичуркин, ма туртмасгăн?..

— Спасибă, Данилăв йулташ... Тытман йапалана хаљ вĕренес мар,—тесе вăл Данилăв çинеле пăхрĕ.

Паром çитрĕ... Сăмси, шыв хĕрне сарнă кĕпер çине перĕнсе, шыва хирĕç пăрăнчĕ Красногвардейцă тумлĕ, пăшаллă сынсем виççĕн лашисене çавăтса паром çине кĕчĕç.

Тепĕр 10 минутран виçĕ йулан „Пантăк касси“ сăрчĕ çинеле ухса хăпарчĕç. Касă касаракан куçне хĕстерсе, сылтăм аллине çамки çумне тытса пăхса йулчĕ. „Чутай тăрăхнеле кайаççĕ пулас“ тесе касă касаракан пўртне кĕрсе çухалчĕ.

Лаша ури сассисем илтĕнчĕç. Сăрт çинчи вăрман сăмсакĕнче тусан вĕçни курăнчĕ; виçĕ йулан куçран та çухалчĕç...

...Хĕвел ансан, тĕттĕмленсен, виçĕ йулан йал хыçĕнчи картасем çумĕпе хăпарса пралукала кĕрсе кайрĕç. Урам хушшипе ансан, пĕр пўрт патне тăчĕç.

— Çак килте пурăнат вăл... Унăн çывăх тусĕ—Маљуков Васили,—терĕ те Кахвун, капуртан накан кăларчĕ.

Лашасене пахча алăкĕнчен кăшт айаккарах картаран кăкарсан, камăн ăçта тăрасси, мĕн тăвасси çинчен калаçрĕç. Унтан пĕри чўрече патне, тепри анкартинеле тухакан алăка кайса тăрсан, Кахвун алăкне пырса шаккама пуçларĕ.

— Е-е-ей!.. уçăр-ха!.. Хуçисем пур-и?

Илле амăшĕ, чылайах вагăлса кукăрла пуçланăскер, тăрса кантăк умне пычĕ.

— Çырлахсам, турă... Камсем килчĕç пулат-ха тата? Мĕн çĕр хута чупмали пур?—тесе, Илле умне пычĕ.

— Илле, Илле, тетĕп! Гăр-ха, вăран,—тесе Иллене вăратрĕ.— Такамсем алăка шаккаççĕ.

— Уçăр...Ма уçмастăр?..

— Тух ха, ыйтса пĕл,—терĕ Илле.

— Камсем есĕр?.. Çĕрхута мĕн туса çӳретĕр?—тесе Илле амăшĕ çенĕк алăкне уçма пычĕ.

— Хваттере кĕрес тетпĕр. Иллене паллană тăрах кунта хваттере кĕрес терĕмĕр,—терĕ Кахвун.

Алăк уçăлчĕ..

— Ата, кĕр... Паллаймастăп та-ха сана,—терĕ карчăк.

— Илле килте-и?

— Килтех ха, çывăрат..

„Тăрт-тăр р-рт"! тутарчĕ свисток. Пӳртекӳ умне тата иккĕн пырса та тăчĕç. Кахвун кăсйинчен електрически фонар кăларса çутатса йачĕ.

— Çырлахах, турă! . Мĕнех капла? .

— Стой, вырăнтан ан тапраннă пултăр,—тесе Кахвун Илле вырăнĕ патне тăчĕ.

— Лампă çут, кинеми. . Ан хăра,—терĕ Данилăв.

Алăк уçăлчĕ. Пӳрте тепĕр пăшаллă çын кĕрсе тăчĕ.

— Тăр ха, аллусене çӳлерех çĕкле,—терĕ те, вырăн çинчен анчах тăнă Иллене хыпаласа, айаккала тăратрĕ.

Данилăв çав хушăрах Илле çытаррисене йăтсан, çытар айĕнчен наган тухрĕ

— Куна ма кунта хутăн?—тесе, наганă çĕклесе Иллене кăтартрĕ.

— Службăран, фронтран илсе килвĕскерччĕ,—тесе, Илле Данилăв çине пахрĕ. Арчасене, сунтăк-шкафсене пăхма пуçларĕç. Тĕрлĕрен кĕнекесем, хутсем тата пĕр пар офицер тумĕ—„мундир" сĕтел çине туха кăларĕç.

— Асăнмалăх, „на память" хăварсаччĕ ăна.. Кирлĕ пулат... Йалта спектаклăсем лартнă чух та кирлĕ пулаççĕ,—терĕ те, Кахвун çине пахса илчĕ.

— Сана арĕслесе шуглатпăр,—терĕ Данилăв.

— Çырлахах, турă!.. Мĕн пулчĕ ара, Кахвун, мĕн хăтланатăн, ачам?

— Аттисене, тумтирне тупса пар ăна,—терĕ Кахвун Илле амăшĕ çине пăхса.

— Çырлахсам, турă .. Илле...

— Есĕ, карчăк—кинеми, ан хăра... Тĕрĕслеме кирлĕ пирки епĕр ăна кĕçĕр хăвăр йалти председателĕ патне илсе кайатпăр. Тĕрĕссипе каласа парсан, ăна кĕçĕрех калла йаратпăр,—терĕ Данилăв.

— Атă, аттусене тăхăн... Манпа пыратăн. Пăрăнма, тарма ан шутла, персе пăрахатпăр,—терĕ те Данилăв, кабуртан наганне кăларса тытрĕ.

— Ăçта тарас... Ма тарас?.. Тармă епĕ тем айăп туман,—тесе Илле аттисене тăханчĕ.

Лупас айӗнче авган авӑтса йачӗ.—Унтан тепри, виҫҫӗмӗшӗ...—йалӗпех йанраттарса илчӗҫ.

Йал ҫывӑрат.

— Епӗ кӗҫӗр кунтах пулатӑп,—терӗ Данилӑв Кахвуна.

— Есӗр кайатӑр... Председатӗл, есӗ халех икӗ исполнитӗл кунта илсе килетӗн,—терӗ те, сӗтел умне пычӗ.

— Килте пулсан,—терӗ Кахвуна Данилӑв,—ыран тӳрех Кӑрмӑша тытса пырӑр. Вӑхӑта сайа ан йарӑр, хӑвӑртрах ҫитӗр,—тесенех, Кахвунпа йулташӗ тулала тухрӗҫ.

Сӗтел умӗнче чалтлатсах лампӑ ҫунат. Кӑмака хыҫӗнче чарӑнма пӗлмесӗр чӗриклетет шӑрчӑк. Тӗпел кукринче, таҫта сунтӑк хыҫӗнче, шӑши ҫӑкӑр таткине кӑтӑртаттарни илтӗнет. Илле ним чӗнмесӗр, пуҫне чиксе урай ҫинеле пӑхса ларат.

Илле шухӑша кайнӑ. Унӑн пуҫӗнче Маҕук утарри, вӑрман, Титан, Паҫук тата куҫ умӗнчех сӗтел хушшинче унӑн кӗнекисем, алҫырӑвӗсем...

— Так, еппин, Илле... Совет влаҫӗ килӗшместех пулас сире...

— Ма килӗшмест? Совет влаҫӗшӗн епӗр фронтра та вӑрҫрӑмӑр. Фронтра братанисем туса, револуци пуҫартса йатӑмӑр,—терӗ те Илле, пуҫне кӑшт ҫӗклерӗ.

— Титана паллатӑни-ха есӗ?

— Пӗлетӗп... Йалти распутни ҫын...

— Мӗншӗн распутни?

— Нумайах пулмаст Титан Маҕук утарӗнче пулнӑ. Еҫсе ӳсӗрӗлсе Таҕук Хветӗр арӑмне упӑшки куҫ умӗнчех пусмӑрлама тытӑннӑ. Ну, лешсем ку намӑса тӳсме пултарайман, кӑшт ӑна ҫапкаланӑ. Хаҕ ҫавӑнтан вара, Маҕук Павӑлӗпе Титан хушшинче тавлашу тухнӑ. Титан клҕаузничет тӑват. Иртнӗ пухура Маҕук Ваҫлийӗ ҫав ӗҫшӗнех Титана Ҫӗрӗҫ комиҫҫи членӗнчен „ӗҫнӗ пирки" кӑларттарнӑ... Титана пӗтӗм вулӑсӗпех пӗлеҫҫӗ...

— Сан шутупа, Титан „распутни" ҫын еппин?

— Титана пурте пӗлеҫҫӗ... Кирек те кам та ун ҫинчен каласа пама пултараҫҫӗ.

— Титана вагнӑ (хӗненӗ) чух, есӗр утара мӗн тума пухӑннӑ пулнӑ?

— Так, проста... Пулӑ тытса, уҫӑ сывлӑшпа кулҕтурлӑ усӑ курма... Вӑрҫнине... ҫапӑҫнине епӗр курман.

— Мӗн ҫинчен калаҫрӑр-ха?.. Кӑрмӑшран кам пынӑ пулнӑ-ха сирӗн пата?

— Мӗн ҫинчен... Чутайра семинари уҫни ҫинчен каласса савӑнтӑмӑр... Совет влаҫӗ пире, тӗттӗмре пурӑнакан чӑваш халӑхне, ҫутта кӑларат, тесе калаҫрӑмӑр. Урӑх калаҫу пулман.

— Вулӑс пухӑвӗнче Маҕуков Ваҫли патшалӑх кӑларнӑ законсене страховка, тата кӗреҫе ҫӑнӑхӗсем пухассисем ҫинчен каласа, Совет влаҫне хирӗҫ тӑма чӗннине есӗ пӗлетӗн-и?

— Ҫук... Илтмен...

— Вӑрҫӑ хатӗрӗсем пухнӑ пулас есӗр?..

— Ҫук... Манӑн службӑран илсе килнӗ пӗр наган пулса, вӑл хаҕ сирӗн алӑра. Вӑрҫӑ хатӗрӗсене пухни ҫинчен епӗ пелейместӗп.

— Суйатăн, анчах суйни саншăнах сиенлĕ. Тунмасăр, айăпа пытармасăр законпа влаç умĕнче тĕрĕс каласан, айăпĕ пысăк пулсан та, Совет влаçĕ çăмăллăх парать. Ан суй. Пур йапалана ан тун!—терĕ те Данилăв, хутсене пăхма пуçларĕ.

Хутсем хушшинчен Данилăв пĕр канверт туртса кăларчĕ. „Штганаши, Ст. Атаи. Петрейкину“ тесе çырнă канверчĕ çине.

— Кам вăл Петрейкин?

— Вăл çыру епе çырнăскер мар,—терĕ те Илле, ура çине тăчĕ.

— Лар, ан тăр...

— Мана вăл çырăва çын паман... Манҕуков патĕнче манăн пĕр кĕнеке пурăнсаччĕ. çав кĕнеке варрине пулса килнĕ.

Данилăв канверта уçса вулама пуçларĕ.

„...Ĕçсем ăнăçулах мар. Степанова хупнă. Тытантан сыхланăр, май тупсан, çăлăнма хăтланăр. Титинпа Кахвун Кăрмăшра час-часах пĕрлешеççĕ. Çитес кунсенче мобилизацисем пуласси уççăнах палăраççĕ.

Пирĕншĕн Йетĕрнери условисем авăнрах. Мĕн пуласса Йетĕрнерен кĕтмеле“.

Ик-виçĕ хутчен вуларĕ ку хута Данилăв.

— Степанова, Кăрмăш çыннине, офицер пулнăскерне, паллатăн-и есĕ?

— Палламастăп...

— Çак çырăва кам çырнă?

— Пĕлместĕп... Такам çырнă...

— Кĕçĕр пĕлейместĕн пулсан, ак ыран, тен, пĕлекен пулăн... Председатĕл!—терĕ Данилăв кантăка уçса.

— Йа...

— Исполнитĕлсем пур-и?

— Пур... Ак, иккĕн вĕсем.

— Пўрте кĕрĕр... Ну, вот, Илле.. Шутлакаласа пăх. Ыран Кăрмăша, Степановсемпе ларма кайас мар тетĕн пулсан, кĕçĕрех йăлтах каласа пар. Кăшт шухăшласа ларма сана хаҕ вăхăт паратăп,—терĕ те, пўрте кĕнĕ хуралăçсем çине пăхрĕ.

— Тул çутăлаччен çак çынна сыхлаттăр. Ан тартăр, айакран çынпа ан калаçтарăр.

— Ăçта тартăр вăл? Хамăр йалсем... Тарсан та таçтах тарас çук,—терĕ пĕри.

— Ах, ăçта-ши... Мĕн пулчĕ-ши, мĕн айăп турăмăр-ши?—тесе алăкран Илле амăшĕ кĕчĕ.

— Ну, кинеми... Улу санăн ырă шугламан... Сирĕн патăра камсем часах çўреччĕç?

— Пыраччĕç. Йулташсем пыркалаччĕç. Палаймастăп çав епĕ вĕсене... Илле, мĕн пултăмăрах капла?..

— Нимĕн те пулман... Мана тасаран айăплама никам та пултарайас çук...

— Курăпăр... Айăпсăр пулсан, ыйгса пĕлсен, тен, калла йарăпăр.

— Стой!—тенĕ сасă, Кахвун сасси илтĕнчĕ.

— Урапа сасси чĕриклетрĕ....

— Ата, пўрте кĕрĕр...

Маңук Павăлĕпе Маңук Васлине Кахвун пÿрте илсе кĕчĕ.

— Хурăр кутамкăрсене... Ĕçсе ларнă çĕрте тытрăмăр. Пĕри чÿречерен тухса сирпĕнчĕ,—терĕ Кахвун.

— Кахвун, ачам... Мĕн кирлĕ мара калаçатăн? Никам та тарман,—терĕ Маңук Павăлĕ.

— Как тарман... Чÿречерен пăхнă чух есĕр виççĕн лараттăрччĕ. Çенĕкре тĕпĕртетнĕ хушăра пĕри тарма ĕлкĕрчĕ. Вассана та кĕтессинче йарса илтĕм,—терĕ Кахвун.

— Калаçчĕр, вĕсен ирĕк... Есĕ каланине ĕненмеççĕ вĕсем,— терĕ те Васса, Илле çине пăхрĕ, унтан сак çине ларчĕ.

— Тул çугăлнă çĕре Кăрмăшала çитме пултаратпăр.. Кайатпăр пулĕ?—терĕ Кахвун.

— Çĕр хута çÿреччен, тул çутăлсан кайар... Нумайах тăмаст, çутăлма пуçларĕ,—тесе Пасса тултан кĕчĕ.

— Ну, Пасса... Лайăх есĕр çийесшĕн пурăнтăр. Пирĕн пуçа есĕр çийесшĕн пурăнтăр.. Епĕр пĕтсен, сире пурăнма ирĕк пултăр, — терĕ Васли.

— Епĕр сирĕн пуçа пĕтерме сире нимĕн те туман. Тыррăрсене тийесе тухнăран варах пирĕн çийе тарăхса пурăнатăр. Кахвуна вĕлерме те темĕн-чухлех каварланса пурăнтăр... „Самана çавăрăнат. Самана çавăрăнсан хĕрлисене тĕрĕслетпĕр", тесе, хамăр пата та пырса темĕн-чухлех калараăр, хăратрăр.

— Чипер калаç, Пасса кин.. Ма сăмаха ытлашши ывăтатăн?— терĕ Павăл.

Тул çутăлас умĕн виçĕ йулан, пĕр кÿлнĕ урапа, икĕ исполнитĕл çурран Маңук Павăлне, Васлине тата Иллене йалтан илсе тухрĕç.

— Ернекун базара пымала пыр,—тесе, Кахвун Пассана кăшкăрчĕ.

— Йурĕ, базар кун çитетĕп,—тесе, Пасса уйхапхине тăрса йулчĕ.

Лаша ури сассисем, урапа чăрăклатни илтĕнчĕ Йал çине шуçăм çутти ÿке пуçларĕ.

Таçта йал хысĕнче, сатра шăпчăк ыйхăран вăраннă. Ирхи усă сывлăшра унăн сасси илемлĕ. Кăшт тăрсан, Кахвуна асатсан, Пасса утрĕ килнеле.

Ут.т... Угнă май Пассана тĕрлĕрен шухăшсем пырса кĕреççĕ.

— Тăшман... Тăшмана вăхăтра алла çавăрса илмесен, куç умне кăлармасан, вăл ытларах сийен кÿме пултарат, тенĕ сăмахсем — Кахвун сăмаххисем Пассана шухăшлаттараççĕ.

Тул çутăлнă вăхăтра Пасса йала çитрĕ. Пÿрт çумсемпе пырса пĕр пĕчĕкçĕ пÿрте кĕрсе çухалчĕ...

Йал çăварлă Йалта сăмах чупат.

— Титан айăплă... Титан кайса чухнă...

— Титан тĕрĕс тунă... Ха-а... Мĕн шухăш тытнă... Вăрманта вăртăн пуху тунă... Йун тăкма шутланă.

— Çирĕпрех тыткаламасан, вĕсем тем тума та ÿркенмĕç. Шайкă тунă, влаçа хирĕç ĕçлеме тытăннă!

Йал çăварлă... Вутсăрах тĕтĕмĕ тухмаст, тенĕ ваттисем.

Йал çăварĕнче калаçу нумай. Калаçу, паллах, нимсĕртенех йал çине тухман.

## VI.

Вăхăт шăват, кунсем иртеççĕ..

Утăсем çулса пуçтарнă хыççăн, уй-хир ĕçĕсем те черечĕпех пуçтарăнкалама пуçларĕç.

— Çĕртме хытă пулчĕ кăçал. Çĕртме çинче вăхăчĕ те çавна май пулчĕ, сÿре майлах пулаймарĕ, ванмарĕ,—тесе çынсем калаçкалаççĕ.

— Самани хаљ çавнашкал.. Çанталăкĕ те çавна май... Шыррисем Хусана илнĕ. Вăрçă пулатех.. Вăрçăсăрах иртмест пулĕ,—теççĕ йалти çăварсем.

— Каллех пăтрав пулат... Мĕншĕн çав-тери пăтранаççĕ пулат?..

Каç пулттипе çанталăка сивĕ çил тулла пуçларĕ. Шупка ула пĕлĕтсем йăвăррăн шăваççĕ. Кĕрхи çанталăк сивĕ, çитмеçнине тата йĕпе Çурçĕр йенчен çил касат, шăтăк-çурăка кĕрсе шăхăрса вĕрет. Паççасен пÿрчĕн кăмаки труби улат. Чарусăр çил—трубаран анса задвижкасене танкăртаттарат. У-у! уласа кăмака хăшкаса илет.

— Пирĕннисем тасаранах çапла пулчĕç. Никам мар, çав Иллех пĕтерчĕ пире,—тесе Мађук карчăкĕ Паççа амăшĕпе калаçат.

— Кам пĕлет, тен, тасаранах асап курмала пулчĕç пулĕ... Курман, илтмен ĕç çинчен калаçма та пĕлес çук, кин!—тесе, Паççа амăшĕ те çăварланчĕ.

— Çук... Ку саманара ырринех кĕтме çук. Каллех салтаксене пухаççĕ. Хамăр йалтан 9 çын кайнă. Каплах пулсан, Кахвуна та илсе кайĕç ĕнтĕ... Качча кайса упăшкапа пурăнăп теме çук; хĕр парса канлĕнех ларăп темеле мар,—тесе сулахай аллипе тутине хупласа, Паççа амăшĕ хаштах хуйхăрса илчĕ.

Карчăксем ĕнтĕ карчăклах. Иртен илсе—„Ах, самана... Пăлхавлă самана“ тесе калаçу пуçласан, таçта та пырса перĕнеççĕ. Паççа амăшĕпе Мађук Павăл карчăкĕ те калаçура таçтах çитсе, иртнĕ-пулнă кунсене асăнкаларĕç.

— Ах, Кахвунсене Кăрмăшран кăларса каймалла теççĕ,—терĕ Паççа, тултан пÿрте кĕрсе.

— Кайаççĕ пулĕ ĕнтĕ... Хăварас çук вĕсене.. Паççа, ыранах кăларса каймаççĕ пулсан, кайса пăхатăн-и мĕн?—тесе, Паççа амăшĕ тĕпелеле кĕчĕ.

— Паççа, есĕ Кăрмăша кайсан, пирĕннисем патне кайаймăн-ши? Мĕнле-ши?.. Кахвуна калаçсан... Мĕнле те пулин... Çынсем калаçнă тăрăх, Кахвунтан килет, теççĕ. Пуç пурăнсан...

...Çил улат. Чÿречерен кантăксем çине пăрçа сапнă пек тăвăллă çăмăр пĕрчисем чашлаттарса çапăнаççĕ. Çил касат... У-у! улат. Шăмшак çÿçенет.

Хĕрлĕ-Чутайра та ĕçсем ытлашшипех хĕрсе кайнă. Вгорокласнăй шкул вырăнне семинари уçнă. Семинари уçма Кăрмăшран, уйезри Çутĕç пайĕнчен—Сорокин килнĕ. Семинари уçнă. Дохтурăва аслă учитлĕ туса хăварна...

1918-мĕш çул. Самана чăнахах та пăтраннă. Урлă та пирлĕ йалсем тăрăх тем тĕрлĕ сăмах çÿренĕ. Тар шăрши таврана сарăлнă. Вырăнăн-вырăнăн тавра тулхăрнă; çĕр кăкри сиксе чĕтĕреннĕ. Хусан çинчи пĕлĕт тĕтĕмпе чыхăнса каçăхнă.

„...Килеççĕ... çитеççĕ... Шуррисем çĕнтереççĕ... Вăрçă... Инçех мар... Йĕпреç çинче тупăсем йантăраççĕ..."—çăварсем калаçаççĕ.

Кунсем шăваççĕ. . 1918-мĕш çул, çентабĕрĕн 1-мĕш кунĕ... Вăл кун Сăр çине анат йенчен çил каснă. Кăтра хумсем шыва хирĕç тăвалла чупнă. Сăр çийĕ пулнă шавлă, Сăр çийĕнче кунĕпех хум чупнă. Кăрмăшран анатарахри Сăр çыранĕ—„Красный йар" каç пулттипе хура курăннă. Тавра тĕттĕмленнĕ-çемĕн тĕттĕмленсе пынă. Сăр çийĕ кăпăкланса хăпарнă. Урлă та пирлĕ хумсем чупса, çырана çапăнса тулллашнă. „Шал-шал шал-л!" шаллатса Сăр улăхĕнчи тĕттĕмлĕх татах хайарланнă, тискерленнĕ.

Хумлă Сăр тулхăрни, Сăр улăхĕнчи тĕттĕмлĕхри шавлă сас, Кăрмăшри войенком—Рудаков хăлхисене илтĕнмен. Шавлă сас вырăнне вăл Кăрмăшри мешчен хĕрĕ—Маруç сăмаххисене итлесе выртнă. Рудаковшăн шав пулман Маруç кăмăлне пула, вăл хăйĕн çине хунă ответлă ĕçе, Кăрмăшри красногвардине ура çине тăратса, сыхлăх ĕçне тăвассине те хак паман.

Каç пулнă чух кахвуна приказ панă.

— 10 штык—отрйад пайан Хĕрлĕ Чутайа кайат. Агафон Пичуркин отрйад пуçлăхĕ пулса кайат. Чутай тăрăхĕнчи тырă-пулă пухас ĕçе тăват.

Приказ пана, анчах Рудаков Кăрмăша маннă. Рудаков пуçĕнче Маруç пулнă.

— ...Ененместĕп, Маруç... Пирĕн халăх ку тăрăхра лăпкă. Хăшпĕрисем пирĕн шăнаран слон тума йуратаççĕ,—тесе, ăшă пӳлĕмре Рудаков Маруçа ыталанă.

Маруç йăпаннă, хутланса пуçне те Рудаков йанаххисем айне чикнĕ. Тулли кăмăлпа ыталаса, çурăмран шăлса ынатланнă.

Шал-шал-шал-л!—Сăр çийĕ чарăнмасăр, тапхăрăн хытăрарах шаллатнă.

— УИК пуçлăхĕ—Мартйанăв ĕçсене краскăлат,—тет Маруç. Çӳхе тутисем выљанаççĕ, сăмахсем каласа Рудакова йăпатаççĕ. Калаçу-йуптару ытларах сĕткенлĕ ефектлă пултăр тесе, Маруç тутисем каччă тутине тĕкĕнеççĕ, чап! чаплатса уйăрлаççĕ.

Сăр ахăрат. Çыранĕ шывпа чӳхенсе шав туса куçат, шыва ӳксе тĕпнеле пулат.

Тавра тĕттем, Сăр улăхĕ тискер. Улăхра, тĕттĕмре ĕмĕлкесем иртеççĕ...

Ыран çентабĕр уйăхĕн 2-мĕш кунĕ. Кăрмăшра ыран пуçланмала мобилизаци. Пайан, кăнтăр иртсен 2 сехетрен уйезри учитлĕсен конференцийĕ ĕçе тытăннă. Мартйанăв унта шалти ларутăру çинчен сăмах каланă, сыхлăх çинчен калаçу тытнă. Маруçсен килĕ собор чиркĕвĕпе тĕлме-тĕл. Рудаков унта...

— Ах, Маруç...

Да, Маруç... Маруç Кăрмăшри оперативлă тройкăн шанчăклă хĕрĕ.

Шиганов, Саверкин, Петрейкинсемпе Маруç хăй ĕçне тĕвĕленĕ. Оперативлă тройкăн сăнлă-куçлă пуканин комиссара каç-каç выљамашкăн чăнласах илемĕ çитнĕ. Пăхма Маруç илемлĕ. Анчах, асту, тулти илемлĕх хăшпĕр чухне шалти илемсĕрлĕхе витет. Çĕрĕк варалла панулми те тепĕр чух тулашĕпе илемлĕ пулат.

...Кăрмăшра лăпках мар. Шигановăн пўртĕнчен тухса Сорокин гимнази урамнеле уттарчĕ. Кĕтесрен пăрăнса конференци пыран çурта—шкула кĕрсе кайрĕ.

Кам мĕн ĕçле—Сорокинăн хăйĕн ĕç. Сорокин çинче оперативлă тройкăн поручени.

— Йулташсем, регламент тăрăх пирĕн перерыв тумали вăхăт çитет,—Мартйанăв сăмаххисем Сорокин хăлхисене çитсе çапăнчĕç.

— Тăвас...—Перерыв...—терĕ зал. Çавăнтах маларах тухса спискă вулама пуçларĕ. 5—6 йата асăнсан, халăх çине пăхса каларĕ:

— Çак асăннă çынсен халех çак пўлĕме йулмала. Шкулсен списки çине ăнланайăс çук сведенисем кĕнĕ,—терĕ. Зал çарала пуçларĕ. Сорокин бланкăсене валеçсе парат.

— Ачăрха, малта çырни пур. Çавăнга... Кĕçĕрех,—тесе систерет.

Бланкăсем варринче пĕчĕк хут таткисем çине „Шиганов“ тесе çырнă. Вулаççĕ, куçран пăхаççĕ те—„хорошо“ тесе пăрăнаççĕ. Тухаççĕ, пăранаççĕ, Шиганов патне пĕрерĕн çĕрхутах пухăнаççĕ...

Шигановăн пўрчĕ тăвăр. Çынсем пухăнмали пўлĕм тесе никам та калас çук. Анчах унта кĕçĕр пĕр татăлми 10—12 çын лараççĕ.

Норенберг—воински начальник пулнăскер, паллаштарат хăйĕн планĕсемпе. Кăрмăш хулин планĕ листа хут çинче.

— Кунта 10, кунта 20... Казачий слободара 15 çын... Пирĕн алăра кĕçĕр пулат 50 çын. Кусем—связь, лешсем — действуйушчи арми... Кĕçĕр пуçлатпă ... Рудаков çинче хулари охранă, анчах отрйадра хĕрлисем йышлăн мар. 10 штык кайнă Чутай тăрăхне, Кăрмăша пурĕ те йулнă пулас 20 штык. Пĕр отрйачĕ пирĕн илет вăрçă хатĕрсен складне, тепри çĕмĕрет тĕрме...

— План килĕшўлĕ... Надă действоват,—терĕ Петрейкин.

— Иртерех... Васкама йурамаст Пур пунктсенчен те пĕлтерўсем çителĕклĕ мар.

— Килĕшес... Шуткă мар... Кĕçĕр сыхăну çирĕплетес. Ыран Чутайпа калаçса татăлас Çын йарас.

— Кама?..

— Не могу...—терĕ Сорокин.

...Тулта тĕттĕм. Каланча çинчи сторăж иккĕ çапрĕ. Çурçĕр иртни икĕ сехет... Базар лаптăкĕ çутă: ик-виç çĕртре хунарсем çунаççĕ. Ак, инçех те мар, хунар йупи çумĕнче пĕр красногвардейцă—патруљ ыйăхпа антраса сĕнксе тăрат.

Шал-шал шал-л!.. шаллатат Сăр çийĕ. Хыçалала кайакан Кармăш урамĕсем тĕттĕм...

## VII.

Пĕчĕк пўрт... Кĕме-тухма вĕрлĕк алăк. Пўрт хыçĕнче ултă йупалă чусран тунă выљăх карти. Пўрчĕ тăвăр. Алăк панче урлă сак. Икĕ чўрече урамала. Лутра сĕтел малти кĕтесре.

— Титан суйман, Титан ĕçе чухламасăр нихçан та сăмаха ывăтса йаман. Потомуштă, сăмах, калас пулат, салакайăк мар. Систермен мар, вăхăтрах пĕлтернĕ,—тесе Титан сĕтел умне ларчĕ.

— Палăраççĕ... Ĕçсем аванах палăрма пуçларĕç,—тесе Кахвун та сĕтел çине чавсаланса, умĕнчи чейникрен чашăк çине вĕри шыв тултарчĕ.

— Шутланă вĕсем,—тесе чей ĕçме пуçăнчĕ.

— Шутланă кăна мар, вĕсем ĕçлеме те тытăннă. Калас пулат, вĕсен йышĕ те пĕр вăхăтра чылайах пулнă. 1917-мĕш çултах вĕсем офицерсен килĕсене килсе çÿренĕ. Чутайра „Союз спасения родины" тума пуçланă. Пуп таврашĕсем, гаврари суту-илÿ тăвакан паллăрах етемсем пуçтарăннă. 1918-мĕш çул пуçламĕшĕнче, вырăнта Совет влаçĕ пула пуçласан, вăрттăн пухусем туса ĕçленĕ,—терĕ те, çăкăра çавракка чĕлĕсем туса касса, Титан Кахвуна çиме сĕнчĕ.

— Понимайĕш, епĕ ку йапаласене витĕрех пĕлме пуçлани ытла нумайах та пулмаст. Иртнĕ çура, Маӈуков утарĕнчи пуху хыççăн, ку пухăва камсем пухăннине курсан, тишкерме пуçларăм. Пирĕн халăх мар, пире майлă ĕç мар тума пухăннă вĕсем унта,—тесе Кахвунпа пĕрле Титан та чейпе çăкăр çиме тытăнчĕ.

— „Сойуз спасения" тенине камсем организацилесе йертсе пынă пулат?

— Ку йапалана пуçартаканĕсем хаӈ лере—Кăрмăшра лараççĕ. Анчах кусем кăна пулнă çеç мар. Вĕсене йертсе пыраканĕсем уйезра та пулнах пулас. Пухура уйезри комитет çинчен, унăн руководстви çинчен те хăш-пĕрисем калаçкаларĕç.

— Тупас пулат... Тупса тĕппипех кăкласа, тымаррисене хăртас пулат,—тесе Кахвун хĕрсе кайрĕ.—Çумкурăка вăхăтра çумламасан, унăн тымаррисем вăйланаççĕ. Тымаррисем вăйлансан тин кăкласан, уйрăм пайаркисем татăлса та йулма пултараççĕ. Йĕпесапа пулсан, хыççăн хĕвел пăхсан, ку тымарсем чĕрĕлме те пултараççĕ,—терĕ те, Титан çине пăхрĕ.

— Тĕрĕс... Çумкурăкĕсен кун пек паллăлăхĕсем пур. Апла пулсан—çумлассине те тĕплĕрех çумламала. Çийелте курăнса тăран тунине татса ыватнипех чарăнмала мар—терĕ Титан.—Ак, есĕ, Кахвун, ăссăр çын мар, чухлама пултаратăн... Халăх çавăрĕнчен сăмах ахаӈрен тухмаст.

...1917-мĕш çулта Хĕрлĕ-Чутайра, шкулта аслă пуху пулнă. Офицерсем нумайăн пухăнна. Пересшитăй шинел, хулпуççисем çийĕнче ылттăн укалă пагунсемпе йалкăштарнă вĕсем,—тесе чей чашкине тĕксе лартса пуçларĕ Титан.

..Пухура сахалтан та пĕр 200 çын ытла. Тапранчĕ калаçу, пуçланчĕ тавлашу... Вăрçă çинчен, нимĕçсене аркатасси çинчен сăмах çаптарчĕç офицерсем, „Война до победоносного конца!" тесе кăшкăрма пуçларĕç. Выранти халăха, конешнă, ку сăмахсем килĕшсех каймарĕç. Тавлашулă пулчĕ ку пуху. Вот, çак вăхăтран пулас, Хĕрлĕ-Чутайра офицерсем „сойуз" пуçартса йанă. Астăватăп,—терĕ Титан,—Туктамăшсем—Барышникăв офицерсене хирĕç тухса „вăрçă кирлĕ мар, Керенски влаçĕ ĕçлекенсемпе хресченсене кирлĕ мар", тесе кăшкăрчĕ. Пуху умне тухса офицерсене аркатма пуçларĕ. Барышникăв хыççăн халăх кăшкăрма тытăнсан, офицерсем уçă кантăксенчен тухса сирпĕнме пуçларĕç. Астăватăп, офицерсем Барышникăва „анархист" тесе лутăркама пăхрĕç.

Кам чухланă вĕсене... Паллах, тĕттĕм халăх вăл хура тăпрапа пĕр май. Кам мĕн акнă, çав шăтма та пултарнă.

— Да... çапла... Хура тăпра çинче пур тĕслĕ вăрă та шăтма пултарат, анчах ӳсме, ӳссен вăррине çитĕнтерме урăхрах условисем те кирлĕ пулаççĕ. Офицерсем акнă вăрлăх шăтса тухма пуçланă, анчах ӳссе вăрри тытăнайман,—терĕ Кахвун.

— Тĕрĕс мар, йăнăшрах пулат капла шутлани,—терĕ Титан.— Ӳсмен мар... Усnĕ, чечеке те ларнă. Чутай вăрманĕсенче пухусем пирки каварлашни, „Сойуз спасения“ туни—ӳсни мар-и? 1918 çулта ку сойузра тăни, вулăсра националлă çар организацилесе, вăрçă ĕçне вăрттăн вĕренсе хатĕрленнисем—ку чечекĕсем те палăрни пулмаст-и? Кусемсĕр пуçсăр, вĕсем вулăсра пăтравсем туса, çав пăтравсемпе усă курса, Совет влаçĕ майлă çынсене пĕтерме каварлашса спискăсем йантланă Пур майсемпе те халăх хушшине хирĕçле шухăшсем сарма хатĕрленнĕ,—тесе ура çине тăрса уткалама пуçларĕ.

— Пăрах-ха, сăмаха чухларах калаçма йурамаст-и партак,— тесе Титан арăмĕ ыйхинчен вăранса, сак çине тăрса ларчĕ.—Сăмаха персе йаратăн та, кайран сутăн-мĕнĕн сĕтĕрĕнсе çӳретĕн... Сăмаххусемшĕнех ак, пĕтĕн Курайман çынсем ахаҙ те сахал мар.

— Титан сӳйман, сăмаха виçмесĕр, тĕлне пĕлмесĕр калаçмаст,— терĕ те, сак айĕнче ларакан арчаран хутсем каларчĕ. Хутсем хушшинчен пĕр хуçланчăк хута кăларса Кахвуна кăтартрĕ.

— Ак, мĕн шутлаççĕ вĕсем.—Вулат:

„Саввă тусăм! Ман шутăмпа, епĕр, вçотаки йаптăхрах, ĕçлетпĕр. Ман шутăмпа, пирĕн хамăра хирĕç етемсемпе çине-тăрсах кĕрешмеле. Ку ĕçе тума „Хурах“ тенĕ кампанисене иртермеле. Пире хирĕç çынсене, халăх куç умĕнче „вăрă“ йатне илттермеле, халăх аллипе вĕсене пуçтармала. Çак кунсенче Хырлукассинчи пĕр активисне, пуйансен тыррисене ухтарса çӳрекене—Йăван Фунтăна тирпевлеттертĕмĕр. Хурах (вăрă) тума, Фунтă Йăванĕн килне пĕр хĕрарăм кĕпи, икĕ тир кайса чиктертĕмĕр. Хурах „кампанисене“ майласан, самосудсем туса, хамăра хирĕçле çынсен йышне чакарма пултаратпăр. Çитес пухура „Хурах“ кампанисене йепле иртересси çинчен плансем йантлатăп. Пуху варманта—„Шелкерте“ пулат. Пыма тăрăш.

Санăн йулташу Илле.

Вул са пăхсан, ку хута вутпа çунтар“...

— Куратăн-и, мĕн çыраççĕ?..

— Ку хута ăçтан тупрăн?—терĕ Кахвун.

— Иртнĕ кунсенче, Тарапайри Ваҙуковсенне тырăсем тийесе тухрăмăр. Пытарнă тырă 500 пăт тупрăмăр. Кĕлегре хутсем, кĕнекесем выртаççĕ. Ку хут çавăнта тупăннăскер,—тесе хутне хутласа хучĕ.

— Ыр тумаççĕ вĕсем,—терĕ Титан арăмĕ Урине.

— Ну, вĕлерччĕр... Епĕ çук пулам. Тивĕçлĕ çынсем ку историсене пĕлсе йулччĕр. Офицерсем, пуйансем ман шăммине ватса тăпра айне хурсан, манăн тăпрам та пуйансен тискерлĕхне палăртакан тĕме пултăр. Айалтан... ман йун кăшкăртăр!

— Такам пултăр сана шеллекен.., Вилсе выртсан шелленипе тепĕр хут чĕрĕлсе тухас çук,—тесе Урине чылайах сăмахланма пуçларĕ.

— Пăрах-ха есĕ, Урине инке. Ку йапаласем пире хаҙ темрен те ытларах кирлĕ.

— Ыранах утатăп. Кăрмăша çитетĕп. Ваңуковсене тожĕ пуç-тарса кайсан йурамала,—тесе сĕтел умне ларчĕ.

— Ну, вот, сталă быт, вĕсем аллă çын националлă çар тытнă. Ваңуков ку çарта командир пулса ĕçленĕ. 1917-мĕш çулта вăр-мансенче çу каçах маневăрсем тунă.

— Да, вирлĕнех ĕçленĕ,—тесе Кахвун чей чашăкне тĕксе лартрĕ.

— Вăрманта хăтланнисене хамăр та нумай, темĕн-чухлех кур-са. Ĕнесем патне кайнă хĕрачасем те сахал мар курнă. Пăшал-семпех, вăрçă хатĕрĕсемпех хăтланаççĕ. Упаленеççĕ, чупаççĕ, кар-тасем, йăвăçсем хыçне пытанса темĕн тепĕр хăтланаççĕ,—терĕ тўлеккĕн.

— Тем ĕç пулĕ вĕсен,—тўрре вĕреннĕ етемсен... Хăтланччĕр...—тесе Урине сĕтел патне пырса пуçтарма тытăнчĕ.

— Конешнă, вĕсен çыхăну пулнă. Майдан вăрçи, Питĕркассипе Турхан хушшинчи çаранлăхри вăрçăсем те çав халăха пăграш-тарас тĕлĕшпе вĕсем тунă ĕçех пулас,—терĕ те Кахвун, шухăша кайрĕ.

— Майдансем тырă вăрлама килсен хамăр йалтан та иртсе кайрĕç. Кам мĕн çĕклеме ĕлкĕрнĕ, çавна йатса чупаççĕ. Чутай, Серенкасси, Ангар чиркĕвĕн чанĕсем кăрăнлаттарни, халăх çĕмĕрĕлнине епĕр те уйа тухсах итлерĕмĕр.

— Сахал мар тĕрлĕрен маневăрсем тукаларĕç. Чутайра Май-дан вăрçи туса çын вĕлерчĕç; Питĕркассипе Турхан халăхне вăрç-тарса, пĕр лаша вĕлерчĕç, 15 çынна амантрĕç,—тесе Титан сĕтел çине чавсаларĕ.

— Понимайĕш, ман пуçа ак мĕн килсе кĕчĕ. Кăрмăшра арĕс-ленисенчен пĕри—Степанов тени, хăйĕн показанинче çапла каланă: „...Майдан тăрăхне пырсан, Майдан вырăсĕсем Чутайа отрйад йамали çинчен пĕлтĕм. Чăвашра тырă нумай, вырăссем выçă ла-раççĕ, тесе епĕ унта калаçман,“ терĕ.

— Çакна асту. Вĕт Майдан вырăсĕсем Чутайа килсе тырă тийесе кайсан, йалта пухусенче офицерсем, пуйансем „ку влаç влаç мар... Ку вăрăхурах законлĕ влаç“,—тесе, пухусенче халăха пăлхатрĕç. Вăрăсене суд аллине памасăрах, самосуд туса вĕлер-ме вĕрентрĕç... Çыру мĕн калат. Хĕрлўкассинчи Фунтă Йăванне ма вĕлернĕ? „Хурах“ кампани тăвасси ăçтан тухнă?..

...Калаçу пынă. Титанпа Кахвун тăвансем пекех йуратса ка-лаçнă. Йалта отрйад пуйансем патĕнче пытарнă тырăсене ухтару тунă. Йалта реквизици пынă.

1918-мĕш çул карламалах карланă. Фронтсем тытăнса, вăр-çăлă кунсем хайарланнă-çемĕн хайарланнă. Мускав чăнласах вутлă ункă варринче тăрса, пĕтĕм ĕçхалăхне, ĕçхресчĕнĕ хушшинчи ре-воңуцилĕ халăха тăшманпа çине-тăрса вăрçма чĕннĕ.

Çĕлен-калтасем пек йалти кулаксем йăсăрланнă; патшалăхшăн фронтсенче выçлăх тўссе çапăçан паттăрсене тем пек кирлĕ çăкă-ра—тырра-пулла кулаксем шăтăксене пытарса çĕртнĕ. Совет пĕ-тетех тесе ашкăннă. Чутайри „Союз спасения“ Маңуковсене тытса кайнипех пĕтмен. Маңуковсем кăшт çийелерех тухса, куç умнерех курăннă çумкурăкăн тунисем кăна пулнă. Тымаррисем ванман, хăшпĕр пайкисем те чĕррĕнех, нимĕн аманмасăрах йулнă.

Каç пуларахпа Титан патне пĕр пăшаллă красногвардейцă васкасах кĕрсе кайрĕ.

— Йулташ Пичуркин, апатсем çинĕ, йантланнă, сана кĕтетпĕр. Ку йалта ĕçсем пулмасан, кунтан тухма та пултаратпăр,—тесе Пичуркина пĕлтерчĕ.

— Хатĕрленĕр, кĕçĕр каçпа Чутайа çитетпĕр,—терĕ Кахвун.

Тумтирсене тăхăнса Кахвун та пуçтарăнкаларĕ.

— Ну, ку сведенисене хăвăртрах кирлĕ вырăна çитерсе пар. Васкамала...—тесе, Титанпа Уринерен уйăрăлчĕ Кахвун.

— Аван кай ĕнтĕ... Çӳренĕ чух телейлĕ çӳремеле пултăр,—тесе Титанпа пĕрлех Урине те Кахвуна ăсатма тулала тухрĕ.

## VIII.

Чăрмавлă, йăвăррăн шуса тухрĕ пайан кĕрхи хĕвел. Çентабĕрĕн иккĕмĕш кунĕ йевитленсен, хĕвел тепĕр хут тачка пĕлĕт айне сĕтĕрĕнсе кĕрсе çухалчĕ. Кĕрен хĕрхĕм сăнлă хĕвелгухăç хайаррăн, сиввĕн курăнат.

— Тем, тĕлĕксем курнă. Таçта, вăрманта „Шокăљ“ тенĕ Сăр утравĕнче пек туйăнат. Сăр шывĕ çĕпре пек пăтранчăк. Дохтурăв çыран хĕрринче тăнă хушăра çыр куçса йаванса анат. Аннă çĕртрех, тĕпне çитиччен Дохтурăв вăранса кайат.

Шурă кèпе, шурă йĕм вĕççĕн, тăнă-тăман çăварне пирус илсе чиксе чĕртсе йачĕ Дохтурăв.

Кун пек ырă мар тĕлĕксем курăнни Дохтурăва шутлаттарат. Шухăша кайса тăрса, Дохтурăв шароварне тăхăнса йусанкаласан, алăка такам туртрĕ.

— Кам?.. Кăшт тăхта,—тесе, сĕтел çинчи хутсене пуçтарса пуçайне, çытар айне пăрахса алăка пырса уçрĕ.

— Кĕтмен пулĕ. Аван-и?—тесе, Сорокин Дохтурăв çине пăхрĕ. Мĕн есĕ пайан кăмăлсăр?.. Епĕ сан пата порученипе,—тесе, малти пӳлĕмеле Дохтурăвпа пĕрле кĕчĕ.

Çентабĕрĕн иккĕмĕш кунĕ Дохтурăвшăн çапла пуçланчĕ.

Пуçланчĕ... Стена çумĕнчи часси тик-так! так-так! шик-шик! тик-так! туса йĕпписемпе вăхăта тĕллет.

Сорокин та, Дохтурăв та пайан тĕллеççĕ. Кам кама тĕллет... Камăн пемеле, камăн ӳкмеле... Ку... паллах мар...

Сорокин калат:

— Та-а-к... Хăвăртрах пухăнас, хăшĕсене йалсене чупгарас... Вырăнти комитет ларуне ирттерес.

— Тик-так, тик-так, шик-шик, так-так!..

— А как?..

„Союз спасения родины и революции“ умĕнче, Чугай комитечĕ умĕнче, Дохтурăв умĕнче ыйту тăрат..

Дохтурăв—Херлĕ-Чугайри семинаринчи аслă учитлĕ. Аслă çын, чынлă етем—офицер пулнăскер Дохтурăв кĕçĕр пĕччен мар. Иртнĕ каçхи пек шур хут çине тèрлесе, вулăсра „Хурах“ кампанине йепле планлассине çырмаст вăл кĕçĕр. Таврари офицерсем, Керенски çарĕнчен таврăнса çут пагунсене татгарса хуйхă пуснă етемсем, çĕнĕ семинариссем—Дохтурăвăн пайанхи çывăх тусĕсем,

вĕренÿшĕн мар пайан семинарине пухăннă. Сарлака кунчалă атăлă кĕреçе сухаллă кулаксем Дохтурăв пÿлĕмĕнче йавăçаççĕ.

— Кам пултарĕ? Хăшĕсем çĕнтерĕç? Мĕн пулĕ?—пĕринчен пĕри ыйтаççĕ.

...Так, вот, сыны отечества, вăхăт çитрĕ. Çак кунсенче Раççей ыйтуне чехсем татса параççĕ. Ыран-пайан Йĕпреç станцине чехсем çавăрса илеççĕ. Арзамасра Тухачевски арми пухат. Хĕрлĕгварди вырăнне большевиксем регулярлă арми пуçтараççĕ. Революцилĕ 1-мĕш арми йачĕпе большевиксем мобилизаци иртереççĕ. Тухачевски Арзамасран Хусан çинеле кайасса кĕтмеле. Хамăр вăйпа, хамăр организациленĕ пирĕн Чутайри нацилĕ арми, пайанччен пытанчăкла хисепре тăнă пулсан, пайантан хăйĕн сăнне палăртса, истори ĕçне тума йермеле. Тухачевски çарне кайас мар тесен, Кăрмăшра пыран мобилизацине чармала. Тухачевски çулне картламала. Кăрмăшра мобилизаци пырат... Халăха ура çине тăратмала. Малтан, Анастасăвкă таврашĕнчи йалсем пăтравсем тума пуçланă. Кĕçĕр... Кăрмăшри тĕрме пушанмала. Кăрмăшри совет влаçĕ çак кунсенче пĕтмеле. Сорокин пĕлтернĕ тăрăх, Кăрмăшра хĕрлисем 20 штыкран та ытла мар. Кахвун 10 гвардейцăпа ку тăрăхра реквизици туса çÿрет. Хресченсем пирĕн йенче пулмала. Шанчăксем пур,—тесе, Дохтурăв сăмах тытрĕ.

— Пăшал таврашĕсем йепле?—Пулемет пулат-и?..

Сехет 11 çинеле çитет Чÿречесене картланă, пÿлĕме малтан çаклатнă. Çил вĕрет, çăмăр чÿрече кантăкĕсене пĕрĕхсе тĕрлет.

Шкулăн пусма картлашкисемпе Сорокин ухса хăпарчĕ. Алăк тăрăнтлатрĕ.

— Мĕн?!. Кам!?

— Свой.. Уç...

— Пулăр йантă... Йе епĕр, йе вĕсем... Кахвуна тытмала. Вĕсем 10 штык кĕçĕр Чутайа çитеççĕ. А-а... Долгов,—тесе Сорокин çынсем хушшипе Чутайри вулăс председателĕ патне пычĕ.

Долгов—офицерсен шанчăклă çынни. Апла та, капла та Долговшăн аван. Совет ĕçĕпе Совета хирĕçле ĕçе тăвакан офицерсен игенчĕ вăл.

Вулăс кантурĕ тĕлĕнче такамсем калаçаççĕ. Тĕттĕм...

Аçа çиçĕмĕ пек чарласа çитрĕ шкул умне пĕр йулан. Лаши хашкат, çынни шкул килкартине чăмса кĕчĕ...

— Кахвуна тытмала. Кăрмăш пирĕн... Восстани вăйлăн пырат...

— Васкăр! Маçуков Васлийĕ çитсе пĕлтерчĕ.

— А-а... Долгов... Ак, çĕнĕ влаçран сана валли çĕнĕ кучченеç... Кахвуншăн пĕр пулă, ыттисене ху пĕлнĕ пек пĕтерĕн, тесе,—Маçуков Долгова наган тыттарчĕ

— Пайан... Каçпала... 7 сехет тĕлне Кăрмăшри совета пĕтернĕ. Нумай арĕсленĕ.

— Пулчĕ!.. Çитрĕ!.. Реквизици тăвакан Кахвун... ăçта?!.

— Пăшалланăр!.. Нацилĕ гварди, за оружие!—Маçуков сасси.

...Маçуковсен анкартинче офицерсем чупаççĕ... Шăтăкри вăрçă хатĕрĕсене кăлараççĕ.

— Дать залп вверх!..

— Йешчо раз!..

— Кăрст! . Тăрст!. —йантрат анкарти. Йантраççĕ урамсем.

Антра сухра пулнă пек йал хусканма пуçларĕ.

Паççа урама чупса тухса, Маҫуковсен тĕлне çитрĕ.

— Хĕрлисем пĕтнĕ... Кăрмăшра Совет влаçне аркатнă!—тенине илтсен, Паççа Маҫуков Ваçли сассине уйăрчĕ, çавăнтах Кахвуна аса илчĕ.

— Кахвун. . Упăшка... Ăçта-ши вăл?...—Çавăнтах Паççа пÿрт çумçемпе чупса иртрĕ.

Йалган тухнă çĕрте, уйхапхи кутĕнче каска çине кĕрсе кайса, Паççа ывтăнсах кайрĕ. Пуçа çыхнă тутрийĕ вĕçерĕнсе айаккала вĕçсе ÿкрĕ.

— Ах, ма кăшт тăхтамарĕç...

Чутай .. Йепле çитес..

Лыкалă, лапралă, пылчăклă çул.

Каска урлă ÿксен Паççан кăкри пылчăкланнă. Ма-ши... пĕррех хут çав Кахвунпа çыхлантăм?..

Хыçра пăшал переççĕ. Ăçта кирлĕ унта халăх шавлама пуçларĕ.

— Мĕн пулнă?.. Ăçта чупаççĕ!..

— Хĕрлисем пĕтнĕ... Кăрмăш восстани пуçланă. Кахвун отрйачĕ Чутайран тарса саланнă...

Паççа волисполком умне чупса çитсенех, пусма картлашкисем çинче кахвунпа тĕл пулнă.

— Кахвун... Пĕтрĕмĕр... Килеççĕ... Вĕлереççĕ...

Кахвун, арăмне тĕртсе хăварса, волисполком сат картине сикнĕ чух: „Тар!.. Кунтан пăрăн!“ теме ĕлкĕрчĕ.

— Чутай чанĕ хулăм саслă. 256 пăт вăл чанăн йăвăрăшĕ. Пушар тухнă чухнехи пек сĕрлет вăл. Пăшал пĕрмай переççĕ. Чиркÿ патне халăх чупат.

— Хĕрлисене пĕтернĕ. Кăрмăшра çĕнĕ влаç тăваччен „Комитет спасения родины и революции“ еçе тытăнчĕ. Вулăссенче сыхлăх комитечĕсем пулаççĕ...

Кахвун уй урлă чупат. Унăн аллинче пăшал... Кайăк вĕçнĕ пек вăл Туктамăш хыçне çитрĕ. Карта урлă каçса выртса, кăшт сывлăша çавăрчĕ.

— Ах, ăçта-ши вăл?—тесен, Кахвун çывхаракан ĕмĕлке çинчен пăшалне йачĕ. Ĕмĕлке палăра пуçласанах, Кахвун чĕркуçланса ларса пăшала ĕмĕлке çине тыгнăччĕ.

— Паççа, есĕ и?..

— Кахвун!—терĕ те Паççа, ÿкрĕ упăшки çине.

— Паççа, ан кăшкăр... Чупса ан çÿре... Кăрмăшра совета пĕтернĕ. Епĕ кĕçĕрех Йетĕрнене кайатăп. Сывă йул!—терĕ те, аллинчи пăшалне çĕклесе карта урлă сикрĕ.

Каскăн çил касат хирĕçле... Чансем сĕрлеççĕ таврара.

У-у! . улат тĕттĕмри çил...

## IX.

Хĕрсе хĕвел тухнă чух Хĕрлĕ-Чутайри семинари килкартинчен Дохтурăвпа Маҫуков Ваçлейĕ сăрланă тăваткăл хăма çĕклесе тухрĕç. Чутай пупĕ çилхине силлесе чиркĕвеле вĕçтерсе çитрĕ.

Чиркӳ чанӗ танлатма пуҫларӗ. Пайан пуп тавращӗсен, офицерсен—Маңуковсен праҫник-ха вӗт. Боҙшевиксенчен ҫӑлӑннине праҫник тумасӑр, чысламасӑр ӑҫтан иртеретӗн ха?

Пан-н!.. Па-н-н!.. тутарса Чутай ҫийӗн сас кайат...

Маңуков волисполком кӑнчелерӗ ҫине улӑхса тӑнӑ, Дохтурӑв пусма ҫине хӑпарса тӑрса, тӑваткӑл хӑмана вырӑнаҫтараҫҫӗ.

Хура сӑр ҫине шурӑ шултӑра саспалисемпе „Красно-Четаевский волостной комитет безопасности", тесе ҫырса хунӑ.

Туктамӑш айаккинчен халӑх шавлани илтӗнет. Пантӑк псаломшчикӗ ухмаха йернӗ пек чупса, ҫӑварӗсенчен кӑпӑк кӑларса килет:

„Долой красных... Долой боҙшевики! Долой советы!..." тесе, Чутай хушшинеле пӗр кӗтӳ хӗрарӑм, шӑкӑр-шакӑр вӗтӗ ачасене пӗр пулкӑ йертсе ҫитрӗ.

Унта та, кунта та—урлӑ та пирлӗ ҫынсем утаҫҫӗ. Виҫшерӗн, тӑватшарӑн пухӑнкаласа калаҫса тӑраҫҫӗ.

Чиркӳ умне такӑшӗ сӗтел пырса лартрӗ. Маңуков сӗтел ҫине улӑхса тӑрса, картусне хывса шӑршӑлӑ агитацине пуҫарса йачӗ.

„...Тӑвансем, ӗнерхи каҫ, 8 сехет тӗлне епӗр Кӑрмӑш тӗрминчеччӗ... Пӗр кључник пире хатӗрленме хушрӗ... „Кӗҫӗр тухаттӑр" тесе пӗлтерчӗ... Ҫынсем пуҫтарӑна пуҫларӗҫ.

„...Норенберг, Саверкин, Петрейкинсем тӑрӑшса ӗҫленипе, мобилизацийе пухнисем пулӑшнипе, Кӑрмӑшра пӑлхав пуҫартса йарса, влаҫа хамӑр алла илтӗмӗр. Майдан, Анастасӑвкӑ тата Иллӳ вырӑсӗсем вӑхӑтра ҫитсе пулӑшнипе, вӑрҫӑсӑр, йун тӑкмасӑр, вӑрҫӑ хатӗрӗсен складне туртса илсе, Кӑрмӑшра ҫӗнӗ влаҫ—„Комитет спасения родины и революции" туса хутӑмӑр. Уисполком председатӗлне—Мартйанӑва Иллӳ вырӑсӗсем Йетӗрне ҫулӗ ҫинче тытса пуҫтарнӑ. Хӑшне-пӗрне арӗсленӗ, нумайӗшӗ тарма ӗлкӗрнӗ",—тесе ҫамки ҫинчи тарне шӑлчӗ.

— Калама ҫук ӗҫленӗ... Ырӑ ӗҫӳсемпе мухтанатӑн,—тесе, халӑха сирсе сӗтел умнеле тухрӗ пӗри.

— Кам вӑл?.. Мӗллескер?..

— Мӗн тӑвас тетӗн?.. Йе калаҫма памастӑр?—тесе, вӑтам кӗлеткелӗ патвар Титан хытах кӑшкӑрса йачӗ.—Патшалӑх варринче кӑвар, уйрӑм патшалӑх тӑвас терӗр-им?.. Разойдись... Сволочи, офицерье шкура поганая!..

— Тытӑр!.. Ҫыхса леҫӗр ӑна!.. Дармойет, проклҙатӑй!—тесе, Маңуков сӗтел ҫинчен сиксӗ анчӗ.

— Ма тиветӗр?.. Ма мужиксене калаҫма та памастӑр? — тенӗ сасӑсем йантрама пуҫларӗҫ.

— Хупас!..

— Кама хупмала?.. Мӗншӗн?

Иккӗн-виҫҫӗн Титана сӗтӗрме пуҫларӗҫ.

— Памастпӑр, хуптармастпӑр!—халӑх кӗпер ҫинеле тӗркӗлтегсе кайрӗ.

— Лӑпланӑр, халӑх!—терӗ сӗтел ҫине хӑпарса Дохтурӑв. — Влаҫ пирӗн алӑра... Волисполкома иртнӗ каҫ салатса йатӑмӑр. Волисполком вырӑнне „Вулӑсри сыхлӑх комитечӗ" турӑмӑр. Кӑрмӑша опаснӑҫ пӗтмӗн. Кӑрмӑша сыхлама каймала. Хамӑрӑн

сыхлама каймала. Хамăрăн национзлла арми пайан ирех Кăрмăша подкрепленине тухса кайрĕ. Ку сахал... Кашни килĕрен, кашни трубаран йе тĕтĕмрен халех пĕрер çын Кăрмăша сыхлама йамала...

— Каймастпăр!.. Йалăхнă .вăрçса..

— Хăвăр кайса вăрçăр!—терĕ таçтан вĕçерĕнсе чупса çитнĕ Титан.

— Шут ĕç мар...

— Тоттă, вăт, шуткă мар...

— Влаç хушнине итлеменнисене çак кунсенчех тĕрĕслесе тухса, çĕрсĕр, кил вырăнĕсемсĕр хăваратпăр..

— Хăварăр!. Сире çăва (масар) çинче тожĕ пĕрер чалăшран ытлах кирлĕ мар...

— Тытăр!..—наганне кăларса Дохтурăв сикрĕ, анчах халăх хушшинче аташса кайса, Дохтурăва такăшĕ пусса антарчĕ.

Титан таçга тарса çухалчĕ.

— Çавăнтала тарчĕ..

— Ма тытмарăр?..

Туктамăш айаккинчен пĕр йулан вĕçтерсе çитрĕ. Йаштам вăрăм кĕлеткелĕ, ылттăн пагунлă офицер Маӈуков патне пырса рапăрт тытрĕ.

— Кăрмăшпа Чутай хушшинче „цепь связи“ тăратрăмăр... Кашни çухрăмра икшер çын... Хĕрлисем килессе Йетĕрнерен кĕтмеле",—терĕ

Тĕрлĕрен калаçу. Пўрт умсенче, çул варрисенче пулккăн-пулккăн çынсем курăнаççĕ.

— Нумайах пымаст. Ак, курăр, пĕтеççĕ. Вĕсем хыççăн кайма йурамаст.

— Пирĕн мĕншĕн пăтранас? Пирĕншĕн Совет влаçĕ те аван. Кусене курман-ха. Тен, чĕррĕн тир сĕвекенсем...

— Паллах... Пăх, авă, камсем пăтранаççĕ.

Вăхăт шăват.. Чиркў пиртекўнчен хĕрарăмсем, арçынсем те тухкаласа пĕринпе пĕри калаçкалаççĕ.

— Çук, çук... Шанчăклах мар. Илсенчех вăрçă пулат. Вилмели самана анчах ку... Килтен тармала,—тесе, калаçкаласа тухса саланаççĕ.

Кăрмăшри восстани çинчен нумай вырăнсенче тепĕр кунне те часах пĕлмен. Кăшт-кашт илтнĕ сăмахсене теприсем труках уççах та каламан. Турхан вулăсĕ. Кангурĕ Турханга. Кăрмăшран 12 çухрăмра, Хĕрлĕ-Чутайран—9. Пайан кантурта вулăс пуххи. Мобилизаци иртересси, илнĕ ачасене (салтаксене) ăсатасси çинчен военком Прокопйĕв сăмах калат:

— Хĕрлĕ гварди вырăнне регуӆарлă арми кирлĕ. Совет влаçĕ вăрçасшăн мар, анчах ăна пуйансем—шуррисем лапчăтса хурасшăн, конешнă, унсăрăн май килмест.

— Чехсем Хусана илнĕ. Хамăрăн влаçа хамăрăн сыхламала,— терĕ пĕри. Халăх шавлат, калаçат...

— Салтака кайакансем хăшпĕрисем йалта сăтăр тăваççĕ. Мăн Хăмарккара Çимун Ахванаçча хĕстере пуçланă. Илпалисене туртса илсе сутса ĕçнĕ. Игнатий Ваçилчăн кантăкĕсене ватса пĕтернĕ...

— Турханта та пĕринне чӳречисенчен каштасам чиксе, пӳртри потопкăна çĕмĕрсе антарнă. Ма çĕмĕрес?..

— Тĕлне пĕлмесĕр ма калаçас? Хăмăрккара кулаксем пуху тунă. Çĕмĕрмеле пулнă.

— Çĕмĕрме йураман. Кам хушнă çĕмĕрсе сăтăр тума?.. Ку анархи пулат.

Пуху варринеле йут çынсем—вырăссем виççĕн кĕрсе тăчĕç, сăмах ыйтаççĕ.

— Мы делегация от города Курмыша и Ильиной-Горы...

— По какому делу?—терĕ войенком Прокопйĕв.

Виçĕ вырăс пуху умĕнче. Иккĕшĕ сухаллă, пĕри сухалне хырнăскер, çутамрах кĕлеткелĕскер.

— Граждане-земляки, нас к вам послала новая народная власть. Вчера Курмыш освободился от большевиков. Ваше дело поддержать новую власть. Кто не примет участия—лишим земли. Так велела вам передать новая народная власть. Мартьянов убит...

Нумай калаçрĕç вырăссем Çĕнĕ влаç 5 çынтан организациленнĕ. Норенберг, Саверкин, Шиганов, Петрейкин тата Севрӳгĕн тесе асăнчĕç...

— Кр.-Четаи за нас... Сегодня под руководством Четайского офицерства в Курмыш прибыли два отряда...

Пĕр саман халăх лăпланса ларчĕ.

Прокопйĕв сиксе тăрса, лăпкăн пуçларĕ:

— Йулташсем!.. Пăлханма йурамаст... Кăрмăшра апла пулсан та, пирен апла пулма йурамаст...

— Ма йурамаст?..—терĕ пĕри.

— Тăхтăр... Ку йапала нумайа пырас çук. Революцийе шуррисем çĕнтерейес çук.

— Краснисене тытрăмăр!.. Тараççĕ. .

— Ăçта?..

Халăх пăлханма пуçларĕ. Хăшĕсем тула тухаççĕ.

— Кăрмăш йенчен çулпала килеççĕ... Çарранах.. Кĕçĕр Сăр улăхĕнче капансем айĕнче çĕр каçнă, хăйсемпе пĕрле пĕр пулемет туртса тарса, таçта пытартăмăр, теççĕ.

Пухури халăх карласа тухрĕ. Красногвардейцăсене хупăрласа илнĕ. Кăрмăш çинчен ыйтса тĕпкĕчлеççĕ.

— Йарас мар!—Морозовăн мануфактурнăй производствăри рабочи пулнăскерсем.

— Çапса пăрахас вĕсене... Ыраш хурчĕсем вĕсем. Чăваш тыррине ухтарма килнĕскерсем,—тесе такăшĕ кăшкăрат.

Çĕнирçемес тĕлĕнчен Турханала Аттай вулăсĕнчен мобилизацине кайакансем тата вĕсене ăсатакансем вĕçĕ-хĕррисĕр килеççĕ. Турхан ту вĕçĕ. Унта пĕр саманрах лăнках тулчĕ халăх.

Кантур .. Кантур çумĕнче çӳлте вывĕскă:

„Тарханский волостной Исполнительный Комитет Совета рабочих, Крестьянских депутатов“ тесе çырнă ун çине. Красногвардейцăсем вулаççĕ. .

— Спасите нас...—тенĕ пек куçран пăхаççĕ. Халăх шавланине кураççĕ, анчах чăвашла ăнланаймаççĕ. Çенирçемес йенчен йуланпа пĕр офицер тумлĕ пагунлă çын çитрĕ.

Кăна курсанах Прокопйёв волисполком пӳртекӳне хăпарса, волисполкомри сторăжа—Кĕркурине хăлхинчен каларĕ:

— Пăрăнатăп... Краснисене çăлма хăтлан...

Кĕркури пĕшкĕнсе пăхрĕ. Хĕрлисене турткалаççĕ.

— Хĕлĕп!.. Чуп ман патăма, лаша кӳлсе тух,—терĕ те, шыв витри çумĕнчен вĕрен вĕçертрĕ.

— Кайăр... Пăрăнăр... Вĕсене йалта вĕлерме йурамаст...—тесе Кĕркури хĕрлисем патне çитрĕ.

— Çыхăр... Çыхса леçмеле.. Хĕлĕп урапа кӳлсе çитрĕ.

Хĕрлисене, пусма çыхса хунă вылăх пек, урапасем çине пăрахрĕç.

— Ата, лар, Хĕлĕп.. Иллӳне леçсе паратпăр... Йалта йун тăктармастпăр,—тесе, халăх варринчен урапапа тухса кайрĕç. Турхантан тухсан инçех мар—вар. Темшĕн ăна „Теттиварĕ" тенĕ ваттисем. Вара анчĕ урапа.

— Ну, вы теперь, стало быть, можнă калама... спасены.. Не смотри... прям беги!..—терĕ Кĕркури.

— Апашти, красны... Деревнĕ не ходи.. терĕ те Хĕлĕп, вĕренсене пуçтарса, вар тăрăх кайрĕ çаврăнса.

Анланчĕç... Хĕрлисем вар тăрăх кайрĕç...

.. Ытти кунсенчи пекех каç та пула пуçларĕ. Пӳргумĕсенче каç-каç тĕрлĕрен калаçу пулнă пулсан, пайан пур çĕрте те Кăрмăш çинчен калаçаççĕ.

— Ухмах офицерсем хыççăн кайма йурамаст. Ак, подожди-и... Краснисен вăй çук мар. Чутайсене тасатĕç-ха,—терĕ вăрçăран урине таттарса килнĕ Йакăнат.

Йалта хурал.. Хуралга çӳрекенсем иртнĕ чухне вĕсене вĕрентсе калаççĕ:

— Тем хăрушă пулсан, мăн чанне çапăр.

— Ирчченех çӳрĕр..

Кун иртрĕ... Каç пулчĕ..

## X.

1918 мĕш çул... çентабĕрĕн малтанхи кунĕсем чăнахах историлĕ кунсем Хусан таврашĕнчи пĕлĕтсем тар шăршипе капланнă; çĕр кăкри чĕтĕресе таткаланса çурăлнă. Атăл улăхĕ тулхăрнă. Пĕтĕм тавра çатăртатса кисреннĕ. Тупă кĕяçисем вутпа вĕренĕ; пулеметсем çатăртатнă. Самана кутсăр-пуççăр пăграннă. Тăвăл хăпарнă. Тăвăл инçене сарăлнă. Атăлăн пĕр турачĕ — Сăр. Сăр çине тăвăл арки килсе çапнă. Сăр çийĕ-вăрманĕ ахăрнă. Йаштака Сăр çийĕн йуманĕсем ту çинче авкаланнă; вĕрене тени шартлатса хуçăлнă; каврăç йăвăççем шартлатсах хуçăлса çĕр çине ӳкнĕ. Вĕтлехлĕх хăва çĕр çумне тайăлса чашкăрнă

Сăр улăхĕ кутсăр-пуççăр, сĕм тессĕр шупкан курăннă. Тусан, хăйăр тăвăллă çилпе çаврăнса пăтраннă.

Сăр йухăмĕ Кăрмăш тĕлĕнче анлă Сăр çийĕ хăпарнă. Шурă кăпăк кăларса вэлсем чупнă тăвала. Кăрмăшри собор чиркĕвĕн чанĕ сĕрлеме пăрахман. Çĕнĕ влаçшăн Кăрмăш пупĕсем кунтан кун кăшкăрнă „Многая лета"... Кăрмăш сăрчĕ çинче сирпĕннĕ тăпра, чавăннă канав—окопсем.

Йалсем пăлхавлă. Йалсенче пĕрмайах чÿречесенчен шаккаççĕ.

— Килĕрен пĕрер çын каймала... Трубаран. . Тĕтĕмрен пĕрер çын... Каймасан малашне çĕр памаççĕ.

— Йерçÿ çук... Тырă акса пĕтермен...

— Пирĕн уйра сĕлĕ пĕтмен...

— Акман... Вырман... Çĕрçĕр йулатăн, шуйтан кĕвенти!.. Каймастăн?..

— Тар, ывăлăм!.. Тар пĕрех-хут вăрмана!. Ирĕксĕрех хăвалаççĕ... Епĕр кайăпăр уйа, ана çине, тырă вырма,—тесе амăшĕ улне ÿкĕтлет.

Çентабĕрĕн 4-мĕш кунĕ. Кăнтăр иртсен икĕ сехет тĕлне Йетĕрне тĕлĕнче „Чайка" пăрахут[1] сатуррăн кăшкăрчĕ

Çÿлте, палубă çинче пăшаллă çынсем. „Чайка" сăмсинче пулемет, прођоткăсенчен тулала тупă çăварĕсем пăхаççĕ. Çÿлте, малти вĕçĕнче чÿхенет хĕрлĕ йалав.

„Чаш-ш, чаш-ш!" чашлатса, шурă вĕри тар кăларса, „Чайка" хашкарĕ. „Шал-шал-шал!" шавласа çыр хĕррине хум çапат.

...Килеççĕ... Çывхараççĕ. Кĕтеççĕ... тенĕ пек каç пулттипе вăрманти йăвăçсем пăшăлтатнă.

Кăрмăшпа тĕлме-тĕл, Сăр урлă—Иллÿ йалĕ ту çинче. Иллÿрен анат айаккинче вар урлă, вăрманлă сăрт çинче, çĕнĕрен ларнă поçолкă, ун йĕри-тавра вăрман. Вăрман варринче поçолкă. Айакрарахра пăрахăçа тухнă Иллÿ улпучĕн чултан купаланă чиркÿ пекех мăнă часовђă курăнат. Часовђăрен иртсен Сăр хĕрринеле чакăл (чăнкă) çыр Сăр улăхнеле тăранат.

Березовкă йалĕ витĕр Йетĕрнерен Кăрмăша килекен çул выртат. Çула тăрăх вĕтĕ хăва—шĕшкĕлĕх. Йал тулашĕнче, çултан кăшт айакра, шĕшкĕ тĕмми кутĕнче пĕр виле.

Кăрмăшра пăлхав пуçлансан, çĕрле Йетĕрнене таракан—Мартйанăва Иллÿ айаккинчи шуррисен дозорĕ рычаксемпе çапса пăрахнă.

Ак, пайанхипе икĕ кун кунта выртнă çын вилли. Çурри таран пуç купчашки хăйпăнса ÿкнĕ. Курăк çинче йун кĕвелсе хытнă. Йунлă йăлмака çинче пуçран тухнă миме йепресе аннă. Мартйанăв, Уисполком председателĕ тесен те ĕненес килмест.

Анчах, пулнă ĕçе кăтартма урăх паллăсем кирлĕ те мар.

...Çапса пăрахнă... вилнĕ... Березовкă çыннисем виле патне хурал тăратнă.

Мĕн пулат, мĕн кĕтет хаљ поçолкă—ку паллă мар.

Кун пек „парне" ку таврара пĕрре мар. Иллÿ чакăл çыранĕнче татах выртнă икĕ виле. Хĕрлÿкасси йалĕнче, пушар сарайĕ айĕнче татах выртнă иккĕ—пурĕ 5 виле.

Тискер вăй, тăшмансен хăйарлăхĕ тăлпаса ватнă—революци парни пулса 5 виле выртнă икĕ кун.

Хĕвел анасси çывăх, Березовкăран отрйад иртрĕ Чакăл Сăр хĕррине, вăрманлăха кĕрсе саланса выртрĕ. Пулемет Сăр урлă Кăрмăш çинеле пăхат. Пулеметчиксем йантă; патронсем хатĕр;

---

[1] Халĕ вăл Кăрмăшри восстани вăхăтĕнче вележнĕ УИК председателĕ йачĕпе хисепленет.

приказ парасса кĕтеççĕ. Березовкă йал пуçĕнче тупă, кĕпçине Кăрмăш çинеле каçăртнă.

Чакăл сăртран ансан—улăх. Улăхра капансем. Улăхваррипе çыр хĕрри курăнат... Йалкасах Сăр йухат.

„Та-та-та-та!" тăтлатма пуçларĕ пулемет. Шалт-шалт, чалт-чалт! турĕç винтовкăсем, анчах çавăнтах чарăнчĕç. Пулемет та хăйĕн сăввине сыпăлама пăрахрĕ.

— Вперед!.. — илтĕнчĕ командă.

Йăвăçсем хушшипе сăрт çийĕнчен улăха сапаланчĕ отрйад. Йал пуçĕнчи сас-чӳ пăмарĕ...

Кăрмăшран Сăр хĕррине çитиччен выртнă шуррисен цепĕ пaçăрах арканнă.

Хула хыçĕпе, тепĕр айаккинчен пыран хĕрлисен отрйачĕ Кăрмăша çитсе ракетсем йама пуçларĕ...

— Шуррисем тарнă... Кăрмăшра хамăрăннисем пулас, — тесе Березовкă урлă килнĕ отрйад Сăр хĕррине тухрĕ[1].

Норенберг, Саверкин, Петрейкин, вĕсемпе пĕрле шуррисен шанчăксăр вăйĕ, пайан каçхине Кăрмăшран тарнă. Патшалăх укçине çаратса кайнă. Хĕрлисем Кăрмăша илнĕ. Урамсем тăрăх пур çĕрлĕ чупаççĕ. Тимĕр-кăвак мăнă лаша çинче отрйад начаљникĕ Гарин йулташ свисток шăхăртрĕ. Красногвардейцăсем комиссариат умне пухăнчĕç.

— Приказ.. Йалсене кĕçĕрех тухмала... Чăваш йенне пĕр отрйад, пĕр пулемет, тепĕр тупă. Вырăс йенне икĕ пулемет, пĕр тупă...

— ..Не жалейте гадов.. Берегите мирных жителей. Масса за нас.. Она сама нам поможет раскрыть притоны врага,—тесе пĕтерчĕ Гарин хăйĕн сăмахне.

...Велосипедсемпе, урапасемпе пристăњ каççипе каççа Чăваш айаккипе тарнă шуррисем.

Мăн Пантăка çитсен чиркӳ патĕнче митинг тума пăхнă пулнă...

Анчах, халăх хаљ пухăнман вĕсен митингне. Норенберг, Саверкин, Сорокин, Шиганов, Çеврӳгин, Петрейкинсем, вĕсемпе пĕрле пĕтĕм шурă çар тарнă.

— Кам ăçта пĕлет, кам йепле хăтăлма пултарат... — тенĕ хыççăн, шурă çăмха салана пуçланнă.

Хусанушкĕн тĕлĕнчен иртнĕ чух. шуррисене пулăшма тесе тухнă офицер Тихонов Атыкасси, Шганаш, Хазанкинă, Санкинă йалĕнчен „тĕтĕмрен пĕр çын" пухнă çарпа тĕл пулнă.

Шуррисем тарнă.. Тихонов çарĕ хăйне хăйех арканнă...

Хутарта шуррисен çăмхи сӳтĕлсе пĕтнĕ. Çаратса тухнă укçана 60 пин тӳпе туса валеçсе илнĕ. Сорокина лекнĕ 5 000 тенкĕ.

Чăваш йенĕпе тухнă отрйад çентаберĕн 9-мĕш числинче, каçпа Чутайа çитнĕ. Килĕрен киле саланса, восстани вăхăтĕнче кам ăçта пулнине тĕрĕслеççĕ. Шуррисемпе тарнисене, вĕсемпе йерсе ĕçленисене учота илсе тухаççĕ.

Волисполком крыљци çинче пулемет, инçех мар çерем çинче тупă ларат.

[1] Ку тĕрĕсех мар: Кăрмăш хулине Березовкă йевчен илеймен, Сăр шывĕн тепĕр йенĕпе килсе, тепĕр йенчен кĕрсе çавăрса илнĕ.

Редакци.

— Тарнă... Тарнă вĕт, гадсем!—тесе, Титан чупса çитрĕ.

— Кахвун пĕтнĕ... Хĕрлӳкассинче çапса пăрахнă... Пĕри Кахвун.

...Кăрмăшра пысăк демонстраци... Çентабĕрĕн 10-мĕшĕнче Кăрмăшра тепĕр хут Совет влаçĕ Хĕрле çара мобилизаци иртерме тытăннă.

Хĕрлĕ çара илнисем пайан хĕрлĕ флагсемпе митинга тухнă. Трибунă çинче Гарин йулташ. Çивĕччĕн, хайаррăн Гарин йулташ митингра сăмах каланă. Хĕрӳлĕн каланă, хăйĕн çивĕч сăмаххисемпе тăшман ĕçĕсене палăртса çапла пĕлтернĕ:

— Хаљ ĕнтĕ, йулташсем, çак хайаррăн пыран граждăн вăрçинче вăхăтсăр вилĕмпе вилнĕ йулташсене ăсатма кайар. Уисполком залĕнче пайан пирĕн 5 виле. Вĕсем хушшинче тăватă красногвардейцă, пиллĕкĕмĕшĕ — Уисполком председателĕ пулса ĕçленĕ Мартйанăв йулташ, — тесе сăмахне вĕçленĕ.

...Хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ Вĕсен хушшинче хура флагсем вĕçкелесе пырса, хаклă йулташсем вилнине систереççĕ.

Уисполком умне халăх çитсен, умлă-хыçлă тупăксем çĕклесе тухма пуçларĕç. Пĕрре... иккĕ .. виççĕ... тăваттă... пиллĕк... тупăксем çинче хура саспалисем... Ак, пĕри: „Красногвардейцă Пичуркин Агафон“ тесе çырнă тупăкĕ хĕррине.

Тупăксем хыçĕнче куççуљ йухтарса вилнисен çемйисем пыраççĕ. Çара пуçăн, сăхманне йӳле йарса, Паçça та утат тупăксем хыççăн. Урам хушши тулли халăх, темчул йалав вĕлкĕшеççĕ. Пилĕк тупăк умлă-хыçлă, вĕсем тавра хура йалавсем. Вăљ-вăљ вĕлкĕшеççĕ, хуйхăлă сăн хураççĕ Кăрмăш урамĕсем çине.

Шăтăксем йантă. Шăтăк çумĕнче тăмлă тăпра купи çӳлĕ.

Ак ЧеКара ĕçлекен Богданăв йулташ тупăксем умĕнче сăмах калат:

— Тăшман хайар... Тăшмансем шăлĕсене хăйраççĕ. Ак, пирĕн умра пайан револљуцишĕн пуçне хунă 5 йулташсем. Сирĕн тăпрăр çинче тăрса, пайан сăмах паратпăр: ним шеляемесĕр тăшманпа хайаррăн вăрçса, сире сăхса вĕлернĕ гадсене пĕтеретпĕр!..

— Тăрăст!..

Виçĕ хутчен тăрăслатрĕç пăшалсем.

„Пролетарлă влаçшăн...

Еçхалăхĕпе ĕçхресчен ирĕкĕшĕн...

Социалисăмла пурнăçшăн...

— Кĕрешетпĕр...

Çĕнетпĕр...

— Тăшмана

Пĕтеретпĕр!..“

тенĕ сасăсем Кăрмăш урлă, Сăр улăхĕ тăрăх, вăрмансем çийĕн саланчĕç таврана.

Сăр йухат... Йухат вăл тахçанах... 1918-мĕш çулта унăн çийĕ хумханса, кирĕк тăкса тасалчĕ. Çĕнĕ çул, аслă çул çинче истори урапи çаврăнат...

Чăвашĕ, тутарĕ, мăкшă-ирçе, вырăс—Сăр çиййĕ халăхĕ çĕнĕ тапхăрта, аслă стройкăра, класлă, кĕрешӳлĕ, çĕнтерӳлĕ ĕçре пыраççĕ малала.

Маркс — Ленин — Сталин... Ĕçхалăхĕн аслă çулпуçĕсем... Пĕлетпĕр, куратпăр... Çĕрĕн уттăмĕш пайĕ çинче вĕлкĕшекен хĕрлĕ йалавпа çĕнĕ çĕнтерӳсем патне шанчăклăн, йалсенчен, çĕнĕ стройкăсенчен, колхоз хирĕсенчен тухса, ку хулăм сасă сарăлат тĕнчипе.

„Çав пулнă, ку пулнă... Офицерсем, пуйансем Совет влаçне хирĕç тăрса, Кăрмăшра пăлхав тунă", тенĕ сăмах калаçу хушшинче йулнă.

1918-мĕш çулта, çентабĕрĕн 2-мĕш кунĕнче ку пăлхав пуçланнă. Сăр çийĕ ун чухне чăнласах хумханнă...

**Редакцирен:** Кăрмăшри пăлхав çинчен çырнă материалсем (асаилӳсем, документсем) редакци аллинче татах пур. Вĕсене çитес №№-сенче пичетлесе пыратпăр.

ЕЛКЕР С.

# ТĔНЧЕ ВĂРÇИ КУНĔСЕМ.

МЕМУАР.

(Пуçламĕшĕ „Трактăрăн“ 5-мĕш, 6-мĕш номĕрĕсенче).

## XIX.

Вырташăп тин çеç çăлăнса тухнă подвал ани умĕнче. Текех ĕнтĕ вунă утас шуса кайма та вăйăм çук. Çиес те, ĕçес те килнĕ пек. Мĕншĕн тесен, çименни виçĕ талăк ытла. Çавăнпа та карланкă йăлтах типсе ларнă. ăшчик темскер ыйтса хавшăрат.

Выртатăп пăхса умри тĕттĕмленекен талкăма. Мавăн умра—йунлă вăрçă хирĕ. Таçта, сĕвек улăх леш йенче, унта та кунта такăртатат пулемет. Унтах вăхăтран вăхăт пăшал сасси çĕмĕрет. Сайра-хутра, лăпкă сывлăша сиввĕн сăркатса, вĕçеççĕ çĕтсе кайнă суккăр пуљкăсем. Шыраççĕ вĕсем чĕрĕ ӳт, шыраççĕ чĕрĕ йун.

Кăнтăрпа хĕвелтухăç хушшинчен карăнса килекен тĕттĕм чаршавĕ çанталăк тӳпи урлă каçса, хĕвеланăç йенне усăнат. Анчах та хĕвеланăç йенче çаплах-ха çутăн çунат каçхи шуçăм хыçĕ. Çакна пула, уйсенчи пысăк йăвăç, çурт-йĕр кĕлеткисем аванах палăраççĕ пĕр-ик çухрăм таврана.

— Кунта выртса пулмаст. Тĕттĕм пулса çитиччен ăçта та пулин каймалах. Анчах, ăçта кайас, мĕнле кайас?.. Çывăхра пĕр çурт та, пĕр çын мĕлки те курăнмаст. Çавах та, сĕм тĕттĕм пусиччен ăçта та пулсан хӳтлĕх тупмалах,—çакăн пек шухăш çĕмĕрет пĕр пĕччен пуçа.

Виçĕ кун çеç кайала вĕççĕр сарăлса ларнă аслă йал вырăнĕнче—кĕлпе кăмрăк купи анчах. Сат-пахчисем вырăнĕнче лараççĕ çунса хуралнă хăрăк йăвăççем. Кĕлленсе выртакан кăмрăк купisенчен унтан та кунтан шурă сĕрĕм пелкесе вăрçă уйне тĕтĕрет.

— Ăçта кайас?.. Мĕн тăвас?..

Акă, çур çухрам пек анатра, пĕр пĕччен пӳрт (халупă) ларнине тĕллесе илтĕм. Пуçларăм кăштăртатса шăвăнма çав халупă йенеле. Темиçе хут каннă хыççăн, çитсе выртап халупă умне. Халупăн алăкĕ уçă. Шалта—икĕ вырăс, пĕр ватă нимĕç—хуралçă салтак. Вырăссем—халь тин тыткăна лекнĕ çамрăк салтаксем.

Хĕçпăшаллă хуралçă нимĕç плита çинче кавă вĕретет. Вырăссенчен пĕри тăрат, тепри чӳрече çинче ларат. Вĕсем икĕш те хыпалансах кăшлаççĕ çĕрулми. Чӳрече çинче ларакан лучăрканнă симĕс картусне чĕрçи çине хунă та, çĕрулми турамĕсене икĕш те çав картус çинчен илсе çийеççĕ.

Епĕ халупă ăшне шăвăнса кĕтĕм. Плита умĕнче ăшталанакан нимĕç ман çине тинкерсе пăхса:—Рус?.. вервундет?—терĕ те, каллех хăйĕн ĕçне пикенчĕ.

— Братцы... парӑрччӗ мана, тархасшӑн, пӗрер ҫӗрулми!—тилмӗретӗп вырӑс салтакӗсене.

— Мӗнпурӗ те пилӗк ҫӗрулми анчахчӗ. Кӗл ҫине хутӑмӑр та, пиҫмен вӗсем. Есӗ ҫийейес те ҫук, памалӑх та ҫук,—тесе хучӗҫ вырӑссем.

— Пиҫмен те пулсан парӑрччӗ пӑртак... епӗ ҫименни виҫӗ талӑк ытла,—пусахласах ҫыпҫӑнатӑп вырӑссем ҫумне.

— Епӗр те икӗ талӑк тӗпренчӗк те ҫимен, братец... На, ҫисе пӑх еппин, ҫийейетни?—терӗ вӗсенчен пӗри мана икӗ ҫаврашка кӗллӗ ҫӗрулми турамӗ тыттарса.

Чӑн та, ҫӗрулми турамӗсем чӗп-чӗрех. Вӗсене аран кӑшлакаласа йатӑм.

Хуралҫӑ нимӗҫ кавӑ ӗҫме хатӗрленет. Акӑ, вӑл хӑйӗн ранцинчен кирпӗч пек тӑваткӑл ҫакӑр кӑларса касаг те, ун ҫине ҫу сӗрсе кавӑ ӗҫме пикенет.

— Есӗ, братец, нимӗҫрен ҫӑкӑр ыйтса пӑх-халӗ. Тен, сана вӑл парӗ,— теҫҫӗ мана вырӑссем. Пыратӑп шуса кавӑ ӗҫекен нимӗҫ умнеле.

— Вас ист инен гефеллиг, рус? (Мӗскер сана кирлӗ, вырӑс?)—терӗ нимӗҫ ман ҫинеле тинкерсе пӑхса.

Епӗ ӑна паллӑсемпе кӑтарткаласа ҫӑкӑр ыйтнине пӗлтеретӗп. Нимӗҫ ӑнлавать. Вал мана пӗчик ҫӑхе чӗлӗ касса тыттарат. Ҫӑкӑр ҫиме тытӑнатӑп. Анчах, чӑмлакан ҫӑкӑра нимпе те ислентерме ҫук. типсе пӗрӗнвӗ карланкӑ кашни ҫӑтмассерен ҫӑрлас пекех ыратат. Ҫӑкӑра аран ӗмкелесе йаратӑп.

Ҫисе пӗтерсен, нимӗҫ салтакӗ мана хӑйпе пӗрле тулала тухма чӗнчӗ.—Гехен, рус... коммен!—терӗ вӑл аллипе тулала сулса кӑтартса. Епӗ шуса тухрӑм.

Акӑ вӑл, шоҫҫе ҫулӗ ҫине тухса тӑрат те, мана ҫул тӑрӑх анат йенне тӗллесе кӑтартса:—Хир ист ди хаузе... дас ист вооӊ шпитаӊ (вӑн унта ҫуртсем пур, вӑл госпигаӊ пулмала),—тет. Пӑхатӑп тинкерсе кӑтартнӑ ҫӗреле. Айакра, тепӗр ҫухрӑм йахӑнра, пӗр-икӗ ҫурт мӗлки курӑнса карӗ. Каҫхи тӗттӗм сӑнӗ ҫапнипе вӗсен кӗлетки аран паларат.

— Гех дортхин, рус... ин шпиталлен гуте хабен (кай ҫавӑнта вырӑс... госпитӑлре аван пулат),—тет мана нимӗҫ, аллипе ҫуртсем йенеле сулса. „Шпитаӊ“ тенине епӗ ӑнланса илтӗм. Ку мана госпитале кайма калат пулмала, тесе шутларӑм. Пуҫлатӑп каллех сӗтӗрӗнсе шума анатра курӑннӑ ҫуртсем йенеле.

Вӑхӑт ҫуркаҫ тӗлвеле. Ҫӗр питне сӗм тӗттӗм хупласа илчӗ. (Галицири уйӑхсӑр каҫсем май уйӑхӗнче те пӑч тӗттӗм пулаҫҫӗ). Епӗ ҫаплах кӑштӑртатса шӑватӑп-ха ҫулпала. Ман умри ҫуртсем ӗнтӗ паҫӑрах тӗттӗм ӑшне путнӑ. Епӗ вӗсене нимӗн те курмастӑп. Вӑйӑм пӗтсе ҫитрӗ. Малтанрах кашни 50—40—30 метр кайсан ҫех пӗрре канаттӑм пулсан, халӊ ӗнтӗ кашни 10—15 метртах пӗре чарӑнса выртатӑп.

Теттӗм сывлӑрша манӑн ҫула урлӑ час-часах пуӊкӑсем шӑхӑрса иртеҫҫӗ. Хам, ҫур пурнӑҫлӑ ҫын анчах пулин те, ҫавах вилесшӗн мар.—Каллех, тепле, пуӊкӑ ан лектӗр, асту!—шутлатӑп ӑшӑмра. Пуӊкӑсенчен сыхланса час-часах ҫул ҫийӗпе

мар, ҫул хӗррипе выртакан канава анса, канав тӑрӑх шӑвӑнатӑп. Анчах канавӗнче те тӗрлӗрен йапала чӑрмантарат. Ӑҫта кирпӗч, вак чул катӑкӗсем йе пушӑ конҫерв банки куписем тӗл пулса пӳлеҫҫӗ текех уҫҫӑн шӑвӑнма. Качав тӑрӑх шума кансӗр пирки, хӑш-пӗр тӗлтре шоҫҫе ҫулӗпе кайма хӑтланатӑп. Анчах та шоҫҫе ҫинче пӳрне хуламӗш кӑпка тусан. Ку тусан тӑрӑх шума та канавринчен ырах мар.

Ҫавталӑк лӑпкӑ. Тӗттӗм. Тӗттӗмри лӑпкӑ сывлӑша фронт тӑрӑх чарӑнмасӑр шатӑртатса тӑракан пӑшал-пулемет сасси ҫех сиввӗн чӗтретет. Вӑхӑчӗпе инҫетре, Пермышӑлђ форчӗсем йенче, ҫаплах «ур-ра!» кӑшкӑрни йантратат. Кӑна хире-хирӗҫ атакӑна кайакансем кӑшкӑраҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтрах, йунашар улӑх лачакинче, имсӗр-сумсӑр шапасем пӗр харӑссӑн такӑлђтатса хӑлхасене йӗкӗлтеҫҫӗ. Малала шуса̀ пынӑ май кӗҫех ҫав шапасен шурлӑхне кӗрсе путассӑн туйӑнат. Сӗм тӗттӗмре пӗччен шуса пынӑ чух шутлатӑн: тӗлӗк-и ку, йе чӑнах?.. Йе епӗ хам вилсе манӑн чун ҫеҫ ҫапла аташса ҫӳрет?.. Ҫук, тӗлӗк мар ҫав, чӑнахах! Суран кӑвар пек пӗҫертсе ыратни, ыҫӑ хырӑм ҫийессӗн пек хавшӑрни—ҫаксем пурте хам чӗррӗнех ҫӳренине систереҫҫӗ.

Акӑ, халђхи ҫуртсем патне ҫывхаратӑп пулмала. Мана хирӗҫ те, майлӑ та икшерӗн, тӑватшарӑн нимӗҫ санитарӗсем иртсе ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ. Вӗсем вӑрҫӑ хирӗнче выртакан аманнӑ салтаксене йӑтаҫҫӗ. Епӗ тӗттӗмре канав тӑрӑх мӗшӗлтетсе пынине сиссен, ку санитарсем ман пата пухӑнаҫҫӗ те, мана шӑрпӑк ҫутса пӑхаҫҫӗ.—Асту, шпион тесе чиксе ан пӑрахчӗр тата!—шикленетӗп хӑш чух ахалех. — Рус?.. вервундет?.. — тейеҫҫӗ шӑрпӑк ҫутнӑ нимӗҫсем. Епӗ вӗсене хам сурана кӑтартап. Вӗсем мана, госпитале кайма хушаҫҫӗ те, часах пӑрахса хӑвараҫҫӗ.

Ирхи шуҫам килеспе ҫитсе перӗнтӗм хайхи ҫуртсем патнеле. Кунта йунашарах икӗ халупӑ. Халупӑсем ҫумӗнче лӑчах нимӗҫ салтакӗ: хӑшӗ выртнӑ, хӑшӗ лараҫҫӗ. Кусем канакан салтаксем.

— О, рус!.. вервундет?.. Капут, рус!?. (А вырӑс, амантӑн, пӗтрӗн?!.)—теҫҫӗ нимӗҫсем, епӗ йавӑррӑн шуса пынине курсан

— Йа, йа капут!—тетӗп епӗ весене хирӗҫ. Нумайӗш кулаҫҫӗ.

Кӗретӗп шуса пӗр халупине. Кунта, улам сарнӑ тӑм урайӗнче, туллийех аманнӑ нимӗҫ салтакӗсем. Хӑшӗ ахлатаҫҫӗ, хӑшӗ вӑрӑммӑн нӑйкӑшса ӑнтрашаҫҫӗ. Выртакан ҫынсем хушшинче шалала шуса иртме вырӑн ҫук. Пӳртри сывлӑш йӑвӑр. Йун шӑрши, бензин шӑрши сӑмсасене питӗрет.

Тӗпелте тӑракан санитарсем ман ҫине пӑхса темскер такӑлтатса илчӗҫ. Акӑ, вӗсенчен пӗри ман пата пычӗ те, мана кайала тухма хушрӗ. Епӗ тухрӑм. Санитар та тухрӗ ман хыҫран.—Гехен, рус! (айта, вырӑс!)—терӗ вал мана. Аллипе кӑчӑк туртса чӗвет хӑй хыҫҫӑн шӑвӑнма.—Ӑҫта илсе кайат ку мана?.. Пӗр-пӗр шӑтӑка илсе кайса пӑрахасшӑн мар-ши?— текен шухӑш ҫиҫсе илет пуҫӑмра. Пыратӑп нимӗҫ санитарӗ хыҫҫӑн мӗшӗлтетсе. Ҫитрӗмӗр икӗмӗш халупӑ тӗлне. Умран пыракан нимӗҫ унта кӗрсе карӗ. Епӗ те кӗреп ун хыҫӗнченех. Кунта та урайӗнче

суранлă нимĕç салтакĕсем. Леш пÿртĕнчи пекех—ахлату, ныйкăшу, ăнтрашу. Çапах та кунта пĕр кĕтесре пушă вырăн пур. Алăкран кĕрсенех ларат пĕр сĕтел. Сĕтел çинче—çутнă лампă. Сĕтел çумĕнчех тăрат ик-виçĕ санитар. Мана илсе пынă нимĕç ку санитарсемпе калаçат.

Нумай калаçмарĕç. Мана, пÿртĕн хыçал йенче курăнакан алăкĕнчен кĕртсе, пĕр пĕчикçĕ пÿлĕме хучĕç. Кунта пурĕ те пĕр çын анчах выртат. Ку çын—вырăс салтакĕ. Халупă урайĕ ытти сен пекех тăмпа хăйăртан хытарса тунăскер. Анчах та урайне ик-виç пÿрне хулăмĕш улăм сарса хунă. Ку улăм—суранлă çынсемшĕн пит те ырă, çемçе тата ăшă. Майласа выртгарсанах, санитар ман çине пĕр вилнĕ нимĕç салтакĕн шенелне илсе пырса витрĕ. Капла витни мана ăшăтсах йачĕ. Ку ăшăту ÿте-шăмшака анчах мар, çак вăхăтрах ăшри кăмăлпа сисĕме те çитсе тиврĕ. Мĕншĕн тесен, халђччен „тăшман" тесе йутшăнтарнă нимĕç салтакех хамшăн тăрăшни, вăл мана хĕрхенни—таçти, пĕр-пĕрне палламасăр пурăнакан ĕççынни сем хушшинче те темле курăнми тăванлăх, хĕрхенÿлĕх пурри не пĕлтерчĕ. Нумай та выртмарăм, çав санитарах мана шуратнă, çупала сĕрнĕ икĕ çĕрулми илсе пырса тыттарат. Ку çĕрулмисене илсен—çийес килни те лăпланчĕ, кăмăл та тулчĕ.—Тен, пăрахмĕç-ха... май пулсан, сыватса çын та тăвĕç,—шутларăм хамăн ăшăмра. Çапла, виçĕ талăк хушши вăрçă хирĕнче йăваланса çÿресе пур шанчăка çухатнă хыççăн, каллех ĕмĕт çиппи сыпăнса, пурнăç йенне туртни сисĕнчĕ.

---

Улăмлă урайĕнче выртма лайăх. Хытă ывăннă хыççăн ыйхă та пусат. Анчах, суранăм пĕтĕм ура тăрăх хĕртнĕ пăшатанпа тирнĕ пекех чике-чике çунтарат, нийепле те çывăрма çук. Суран урнипе турткалашса выртвă вăхăтрах имшер сасă илтĕнет:

— Хăш полкран есĕ, земђак?

— Литовски полкран.

— Апла... пĕр полкранах-çке епĕр... Епĕ сана курнă пек... сăвна паллатăп,—тет çав сасах вăрахăн йынăшса.

Кăна мана хуричченех пĕчĕк пÿлĕмре пĕччен выртнă вырăс салтакĕ калаçат. Вăл 40 çулала çитнĕ ысăк, ватă салтак. Унăн пуçĕ çинче пусса лартнă хура калпак пек хура çÿç, йанахĕпе пичĕсем çинче хăлхаран хăлха патне çитичченех мăкланса ларнă хура сухал. Ку салтака епĕ те курнă, паллатăп.

— Курмасăр... Аманнă каçхине пĕрле, пĕр пÿртре выртрăмăр вĕт. Есĕ вăрăм тенкĕл çинчеччĕ, епĕ вилнĕ Будкевич çумĕнче выртрăм,—тетĕп.

— А-хă... çапла çав. Пÿрчĕ çуннă чух мана нимĕçсем йатса тухрĕç, атту хам та çунса кайаттăм пуђ...—Мĕнле çитсе выртрăн ес ку халупăна? Çавăн чухнех йатса килчĕç-им сана?

— Аран-аран... Турă пулăшрĕ пуђ анчах. Унсăрăн пĕтес пулат. Нимĕçсем вĕсем çунакан пÿртрен йатса тухрĕç те, йунашар пахчана кĕртсе хучĕç çеç... Кайран, каçхине, икĕ пађак хресченне 2 крон укçа парса, аран кунта илсе килтертĕм... Нимĕçсем хăйсемех кăтартса йачĕç ку халупăна...

— Ăçта-ши пирĕн ытти аманнисем?. Çунакан пӳртрен пирĕнсĕр пусне татах 6—7 çын çăлăнса тухнăччĕ вĕт?..

— Пĕлместĕп... пĕтрĕç пуљ..—вата салтак вăраххăн йынăшса илсе, йерипен тепĕр йенне çаврăнса выртрĕ.

Чӳречерен ирхи кăвак çутă керет. Йунашар пӳлĕмре вимĕç салтакĕсем ахлатни, вăхăтран вăхăт санитарсем çĕнĕрен суранла салтаксене йăтса кĕрсе кăптăртаттарни—ирхи вăхăта пĕр канăç та памаççĕ.

XX.

Майăн 9-мĕш кунĕ каç йенеле сулăнат. Кунĕпех тупă кĕмсĕртетни, йĕтресем шартлатни çурăлни, инçетре пулеметсем такăртатни илтĕнсе тăрса халхасене ывăнтарче пайан. Хăш тупă йĕтрисем епĕр выртакан халупă патĕнчех çурăлса саланаççĕ. Ку пире чылайах шиклентерет. Вырăссен артиллерийĕ епĕр выртакан халупăсене курат те пулмала! Вăл ăна, тĕллесех пеме тытăнсан, часах аркатса хума та пултарат. Ахăрнех, çуртсем тăррине çакса йанă Хĕрлĕ хĕрес йалавне курнипе, вĕсем ку çуртсем çине пемеççĕ. Час часах сывлăшра çĕтсе кайнă пуљкăсем те пирĕн пӳрт стенисене пырса çапăнаççĕ. Анчах та вăл пуљкăсем ĕнтĕ халљ хăрушах мар. Мĕншĕн тесен, вĕсем инçетрен ывăнса вĕçсе çитнĕскерсем, стенана перĕнсенех унта керсе лараççĕ, витĕр шăтарса тухаймаççĕ.

* *
*

Каллех пулчĕ каç. Тĕттĕмленсе çитсенех, халупăна ноçилкала австри салтакĕсем пырса тулчĕç. Вĕсем аманнă çынсене ноçилка çине хурса, кашни çынна тăватшарăн çĕклесе кайма пуçларĕç.

Çитрĕ черет мана çĕклеме. Акă, мана пирпе карса тунă ноçилка çине вырттарчĕç те, ноçилка аврисене тăватă вĕçрен 4 салтак тытса, вĕсене хулпуççисем çине хучĕç.

— Фертиг? (хатĕр?)—кашкăрчĕ пĕри.

— Фертиг!—терĕç ыттисем. Ноçилка умĕнчен иккĕн, хыçĕнчен те иккĕн çĕкленĕ санитарсем, тикĕс утăмсемпе харăссăн йарса пусса, мана йăтса тухса кайрĕç.

Тулта тĕттĕм. Хам, санитарсен хулпуççи çинчи ноçилка çинче месерле выртса пырса, уйар тупере чалхаракан мĕлйун çăлтăрсем çине пăхнă. Хĕсĕк ноçилка çинче хăйаккăн-мĕн çаврăнкалама майĕ çук. Ахаљ те манăн суран йăвăррипе çаврăнма та май килмест.

Пӳртрен тухсанах санитарсем, пĕр васанлă çырма çулĕ çине ӳксе, сĕвек çырма тăрăх утса кайрĕç. Мана йăтнă пек йăтса пыракансем пирĕн умра та, хыçра та пур. Акă, пĕр çухрăм ытларах йăтса кайрĕç. Харăс та тикĕс утаччĕç санитарсем. Сасартăк, умра пыракан пĕр санитарĕ таканат. Таканат те, хулпуççи çинчи ноçилкă аврине вĕçерет. Ноçилкă тайăлат. Епĕ, нимĕнрен те тытмансăр, тӳрех çĕре чул пек персе антăм. Хытă ӳкрĕм çĕр çине. Ӳкрĕм суравлă ура йеннех. Çакăнта ӳкнипе „дум-дум“ çĕмĕрнĕ пĕç шăмми пушшех те ванса карĕ пулмала. Хам пĕрре çех сиввĕн кашкăрса йатăм.

— Ах, со!?. (Акă йепле!?.)—кăшкăрса йачĕ хыçран йăтса пыракан пĕр нимĕçĕ. Такăнса ўкекене вăл темскер хытă вăрçса хучĕ.

— Шаде, шаде... (Шел, шел...) - хыттăн шакăлтатса илчĕç санитарсем

Каллех йăтса хучĕç носилка çине.

— Айн! цвай! дрей!. Фелтрагев!—командă пачĕ хытă кăшкăрашакан хыçри санитарех. Пурте харăс çĕкленсе каллех утма пуçларĕç

2—3 çухрăм пек утсан, çитес çĕре çитрĕç. Мана вырăс салтакĕсем вырткан çĕре, пĕр сарайне хурса вырнаçтарчĕç. Ку сарайăн пĕр вĕçĕнче лашасем тăраççĕ, тепĕр вĕçĕнче суранлă вырăс салтакĕсем.

* *
*

Çутăлчĕ. Епĕ çывраймарăм. Суран хыттăн ыратни, каçхи сулхăм виттĕр çапсах шăнтни—канăçлах памаççĕ.

Уçă сарайĕнчи улăм çинче епĕр 5 çын выртатпăр. Кусем пурте йăвăр суранланнă Раççей салтакĕсем. Сарайăн икĕ йенĕ те уçă. Çине çапă сарса улăмпа витсе хунă Ку сарайĕнчех, пирĕнтен 2—3 хăлаçра, лашасем кăкаранса тăраççĕ. Сарай пуçĕнчех пĕр пĕчиксĕ çĕнĕ пўрт. Ку пўртре сурансене çыхакан пункт. Пунктра пĕр тухтăр, фелдшĕр, санитарсем.

Сарай çуммипех фронт йенне иртсе кайат аслă çул. Çул леш йенче лартса ўстернĕ çамрăк хыр рашчи. Пирĕн сарайтан лереле, çулпа рашча хушшинче, шап-шур чечеке ларнă сат-пахчи. Йĕрки-йĕркипе ларакан чечеклĕ çимĕç йăвăççисем хушшипе шакăрах карса тухнă çўлĕ чатăрсем. Вĕсенче аманнă нимĕç салтакĕсем выртаççĕ. Малта, сат-пахчи урлă, хырлăх рашчи хĕрринче ларат курăнса ик-виç хутлă пысăк шурă çурт. Ку вырăн пĕр-пĕр помешчик имениĕ пулмала.

Çак сарайĕнче епĕр икĕ ерне йахăнах выртрăмăр. Пурнăç кулленех пĕр йевĕрлĕ иртет. Малтанхи ернинче вăрçă сасси хăлхаран каймарĕ. Иртен пуçласа каçченех тупа сасси çĕмĕрет. Унтан та, кунтан та пулемет такăртатни илтĕнет. Шултра тупа йĕтрисем сайра-хутра пирĕн çывăхах пырса вăркăнаççĕ; вĕсем час-часах çумри хырлăх рашчине ўксе шартлатаççĕ, йе хăш чух пирĕн сарай урлă та ўхĕрсе иртсе, таçта инçете ўксе çурăлаççĕ. Паллах ĕнтĕ, кунта та, вырăссен артиллерийĕ пĕрре перее йанă хушăра, нимĕçсем Раççей çарĕ çинеле 3—4 хут вăркăнтараççĕ.

Ерне иртсен тип тупăсем кĕрлеви йăвашланса-йăвашлансах пырса, йулашкинчен часах илтĕнми те пулса ларчĕ. Ку Раççей çарĕ Перемышăле пана хыççăн каллех хаварт чакма пуçланинчен килчĕ пулмала. Фронт Галицирен тухат. Вăл Раççей çĕрĕ йенне çывхарат.

Пирĕн сарай çуммипе вырткан шоççе тăрăх кунĕ-кунĕпе çар халăхĕ вĕркĕшет. Фронт йенеле хĕçпăшаллă çар ушкăнĕсем иртеççĕ. Фронтран кайала суранлисене, чирлисене турттараççĕ; йе час-часах çĕршер çынпăн пысăк ушкăнсемпе тыткăна

лекнĕ Раççей салтакĕсене хуса иртеççĕ. Çӳлте, сайраран кĕрлеççĕ пĕчĕк йероплансем.

Раççей çаре чакнипе нимĕç çарĕ хĕпĕртет. Акă, хĕрлĕ йе кăвак кăкăрлă, пуç çинче шурă султан вĕççе пыракан австри гуссарĕсем, венгĕр уланĕсем. Вĕсем, самăр лашасем çинче ескадронĕ-ескадронĕпе тикĕссĕн уттарса пырса, йан-йан йантратаççĕ шовинисăмлă вăрçă йурриве. Акă, иртеççе кăвак мундирпе витĕннĕ çурран çар ушкăнĕсем. Вĕсем, ухутана упа хăвалама кайнă пекех, сăмаллăн шакăлтатса калаçаççĕ, ахăраççĕ, кулаççĕ, йе йантратаççĕ салтак йурриве. Канма чарăннă нимĕç салтакĕсем час-часах пирĕн пата та пырса тараççе:—Но, Русланд капут! (Раççей пĕтрĕ!)... Епĕр Галицине анчах мар, кĕçех ак Кийĕва, Мускава çитсе кĕретпĕр... Ей, ан макрăр, часах вăрçă пĕтет вĕт,—тесе кулаççĕ вĕсем. Акă мĕншĕн савăнаççĕ нимĕç салтакĕсем! Вĕсене Раççей çарĕ хăвăрт чакса пыни хаваслантарнă. Ку нимĕç ĕççынисемшĕн патриотисăмлă суйа савăнăç. Чăн та пур, çаксем хушшинчех хуйхăлăн сĕнксе таракан салтаксем те пур. Анчах та, ку вăхăтра вĕсем сисĕнмеççĕ, ун пеккисем хыçра йе айакра шăппăн шухăша кайса тăраççĕ.

* * *

Икĕ ерне хушшинче пирĕн сарайне аманнисене чылай илсе пырса тултарчĕç. Кашни кунах тăватшар-пилĕкшер çын илсе пырса хураççĕ. Паллах, кусем пурте тенепле çеç илсе пынăскерсем. Аманнисене пухакан пункта вĕсем ман пекех хăйсем пырса çăлăннă, йе пунктран çывăх пулнипе çеç вĕсене нимĕç санитарĕсем те илме пултарна. Пунктран инçетре выртакан суранлă вырăс салтакĕсене нимĕççем çĕклесе çӳресшĕнех хыпмаççĕ.

Сарайĕнче выртма кăнтăрла аптрамалах мар. Каççерен, сулхăн çил вĕрнипе, начарланнă шăм-шаксене шăнтса вĕлерет. Çавăнпа та пуљ, кунта кашни кунах икшер-виçшер çын вилет. Вĕсене çырма хĕрринчи пĕр тарăн подвала илсе кайса пăрахаççĕ. Пире пăхма пĕр тыткăна лекнĕ вырăс салтакне хушнă. Икĕ кунтан йе кун сиктерсе сарай пуçĕнчи пӳрте çĕклесе кайса суравсене çыхаççĕ. Кунти тухтар ман суранран дум-дум стаканне касса кăларчĕ. Ку пуљкă стаканĕ пĕтĕм пĕç витĕр тухса, тепĕр йенчи тире çеç шăтарса тухайман мĕн.

Апат-çимĕç—кашни кун 500 грам шурă сухари, икшер лапша премĕк тата пĕр чашăк кавă. Йавăр суранлисем мĕн панине çисе йараймаççĕ. Вăй пĕтсе çитнипе епĕ те çийейми пултăм.

Ку лупас айĕнче епĕр вимĕç çарĕ савăннине курса икĕ ерне ытла выртрăмăр. Фронт Раççей йенеле шувă май, шоççе тăрăх австро-венгри çарĕ çех иртме пуçларĕ. Германи çар ушкăнĕсем курăнми пулчĕç.

Кунĕн-çĕрĕн тăмасăр, çыхса хунă пекех пĕр вырăнта хытса выртнă чух темĕн те шухăшлаттарат: „...Нимĕççем пире тăшман тесе персе ӳкерчĕç те, халљ тата хăйсемех чĕртесшĕн имлеççĕ. Кунта пĕр çынăннах усаллăх та пур, хĕрхенӳлĕх те пур! Мĕнтен-ши ку килет?..“ Шутлатăн:—Мĕн пирки капла пĕр айăпсăрах вĕççĕр асап тӳссе пурăнмала пултăн-ха есĕ?.. Хамшăн-и,

çывшăн-и?.. „Патшапа патшалăхшăн“ терĕç пулсан,—кам вăл патша, мĕн вăл патшалăх?.. Етем çĕр çине патшапа патшалăхшăн çеç çуралса ÿсет-ши вара?. Етемĕн патшашăн пурăнмала, ăна усă кÿмеле,—патшапа патшалăх мĕн те пулин усă тăваççĕ-ши „хăйĕн“ етемmине? Мĕнле усă кÿнĕ-ши мана халиччен патша йе патшалăх?..“—темĕн тĕрлĕ шухăш, вĕççĕр, пĕр канăççăр шухăш час-часах пусмăрласа аптратӑт мана никам та пырса пăлхатман вахăтсенче. Акă, час-часах, ун пек шухăш çăмхисене сÿтсе выртнă чухне, пирĕн сарайне пĕр çын пырса кĕрет. Вăл пырсанах шухăш çиппи татăлат.

Хĕрĕхеле çитнĕ лутра çын, сарлака та хура сухаллă çын. Ун çийĕнче йаланах пĕр кивĕ жилет, урисенче катмар та лÿчĕркенчĕк атăсем. Вăл пырат пĕр сассăр, шăппăн. Малтанах пурне те пĕрле сывлăх сунат, унтан кашни аманнă салтак умне тăрса халапа çапма тытăнат: ес ăçтисем? хăш кĕпĕрне? йалтан-и, хуларан-и? Килте кам-кам пур?—тĕпчет. Унтан кашни кун, çĕнĕрен пырса хунă аманнисем патне пырса:—ну, санăн часси, кĕмĕл кашăк, йе ылттăн кĕмĕл укçа-мĕн çук-и? Пулсассăн—сут! Атту вĕ·ем сан пурпĕрех усăсăр çухалаççĕ кунта... Епĕ сана австри укçи паратăп... Сире хаљ австри укçи кирлĕ пулат ĕнтĕ,- шалат вăл çемçе чĕлхепе çавăрса. Епĕр часах ку çын чейне усламçă иккенне сисетпĕр. Вăл Галици йеврейĕ иккен. Суранла салтаксен йулашки пур-çук мулĕпе услам тăвакансккер. Анчах, çапах та, вăл таçти йутă çĕрте пиренпе вырăс чĕлхипе çыхăххăн калаçнине кура ăна хавасланса кĕтсе илетпĕр. Пирĕн хушăрах пĕр суранлă йеврей, Раççей йеврейĕ выртат. Ку йеврей Галици усламçине таван пекех йышăнса илсе, унпа тăрса ларсах калаçат, анчах лешĕ ăна çавах та нимле пулăшу пани курăнмарĕ.

* * *

Пирĕн сарайĕнче пурте пекех ура аманнă салтаксем. Вĕсем йăвăрран, сайра-хутра çеç аран хуçкалкаласа выртаççĕ. Тула тухмала пулсан—чисти тамăк! Вĕсем хăйсем тĕллĕн упаленсе тухма та пултараймаççĕ. Тархаслаççĕ вара хурал тăма хушнă вырăс салтакне. Ку салтак пырса аманнă салтака тулли михĕ пек хăй çурăмĕ хыçне çакат те, сарай çумĕнчи çырма хĕррине илсе кайат. Унта вара вĕсене ача пек тытсах иснĕртет. Анчах, çак хушарах суранлă урана хуçкаласран сыхланмала. Ача пек макăраччĕç вата çынсемех суранĕ перĕнкелесе ыратнине тÿсеймесĕр.

Çуркуннехи кунсем вăрăм. Пĕр ĕççĕр кунĕ-çĕрĕпе хускалмасăр выртасси тунсăхлă. Вăхăта кĕскетме час часах йунашар выртакан салтаксемпе калаçатăн.

— Ех, вăрçă! вăрçă!—тет манпа йунашар çын, таçти Калугă йенчи вырăс.—Çынна, вăл сывă чух, чĕрĕ чух тавай перес, чикес, вĕлерес!.. Укеретĕн персе, çав „тăшман“ тенĕ çынах темле хĕрхеннĕ пек пулса кайатăн. Акă, пире те вĕт нимĕççем „тăшман“ тесех персе ÿкерчĕç те, халь каллех чĕртсе çын тăвасшăн пăхаççĕ тата... Тĕлĕнмеле! Каллех чĕртесшĕн пулсан, малтанах

пеме те кирлӗ пулман пӗрех хут!—хуҫкалат вырӑс хӑйӗн хӗррисӗр шухӑшне.

— Епӗ калани ҫавна!.. Темшӗн вӑрҫатпӑр? Такамшӑн? Пурте пӗр шухӑш тытмала та, карах пӑрахса каймала ку вӑрҫа,—тетӗп вырӑса хирӗҫ.

Калаҫу чӑсӑлат кам та пулин пырса кансӗрлечченех. Хӑш чух пустуй, ниме тӑман вакӑ ӗҫ ҫинченех вӑраххӑн калаҫса выртатӑн. Йе чӗнми пулса, сехечӗ-сехечӗпе йынашкаласа ҫех ирттеретӗн. Ҫапла выртнипех ку вырӑнта икӗ ерне иртсе карӗ.

## XXI.

Май уйӑхӗн йулашки кунӗсем.

Тин ҫеҫ хӑпаракан хӗвел хӗрӳлӗн пӗҫертме тытӑнат. Пирӗн сарай ҫумӗнчи аслӑ сат-пахчи, йурпа хупланнӑ пек, шап-шур чечекпе витӗннӗ пахча, кӗмел те укаӑн ҫиҫсе тӑракан мӗлйунлӑ сывлӑм пӗрчисенчен ҫаплах-ха типсе ҫитеймен.

Сасартӑк шавламашкӑн тытӑнат аслӑ сат хушши. Кӗтмен ҫӗртенех тулаҫҫӗ пырса автомобилсем, лазарет линейкисем, фурманкӑсем (тарӑн урапасем), вӗсемпе пӗрлех австри санитарӗсем.

— Акӑ ӗнтӗ, сире илсе кайма ҫитрӗҫ.. Ҫитет сире улӑм ҫинче кунчухлӗ йӑваланса выртса,—терӗ ҫак вӑхӑтрах пирӗн сарайне кӗрсе тӑвӑ усламҫӑ-йеврей.

— Илсе кайсан аванччӗ... Хаљ те икӗ ерне выртрӑмӑр тӳссе... Каҫхиве сивӗ, кантӑрла вӗри.. Пӑхни йӗркп ҫук!—тесе хучӗ аран илтӗнекен имшер сасӑпа, пӗр шӑммипе тирӗ ҫеҫ тӑрса йулнӑ, шурӑхнӑ, шӗвӗр питлӗ ҫамрӑк салтак.

Суранлисене пуҫлаҫҫӗ ҫӗклеме. Пурте хавас. Савӑнатпӑр ачасем пекех.

Анчах та, автомобилсем пире тивӗҫмеҫҫӗ. Пире, тем пек йӑвӑр суранлисем пулсан та, лазарет линейкисем те лекмерӗҫ. Вӗсем ҫине пӗтӗмпех палаткӑсенче выртакан Германипе Австри салтакӗсене ҫеҫ тийерӗҫ.

Раҫҫей салтакӗсене пурне те чи йулашкинчен, халтӑрка фурмансем ҫине ҫеҫ тийесе хураҫҫӗ. Пирӗн фурмансем майланса вырӑнтан хускаличчен, нимӗҫсене тийенӗ автомобилсем часах вӗҫтерсе куҫран та куранми пулчӗҫ.

* *

Виҫӗ кун шӑваҫҫӗ фурмансем шоҫҫе ҫӳлӗпе. Виҫӗ кун шӑваҫҫӗ вӗсем йерипен Карпатсем йенеле. Чуллӑ ҫул хытӑ та халтӑрка. Хаљ ӗнтӗ пире кайала, Австро-Венгри ҫӗрне—Галала илсе кайаҫҫӗ. Пирӗн ушкӑнра пурӗ 20 лав.

Фурманкӑ хулӑм хӑмаран тунӑ тарӑн тӗплӗ урапа. Пирӗн фурманкӑсем ҫинче кашнинчех 2-шер йе 3 шер ҫын—аманнӑ, чирленӗ салтаксем—Раҫҫей салтакӗсем. Кашни лав пуҫӗнчех пӗрер австри салтакӗ. Вӗсем фурманкӑ пуҫӗнчи ҫӳлӗ ларчӑк ҫинче ларса пыраҫҫӗ.

Епӗр пӗр фурман тӗпӗнче иккӗн. Манпа ура вӗҫлӗн хӑрах алли суранланнӑ салтак тайӑнса выртса пырат. Вӑл манпа

час-часах:—есĕ ытла чăсăлса выртса пыратăн... мана ваҫҫи вырăн хăвармастăн!..—тесе хирĕҫет. Хăш-пĕр чух урисемпе те тапкаласа илет вăл мана.

— Курмастăн-им есĕ манăн сан пек ларма майĕ ҫук.—тетĕп епĕ ăна. Куштан салтак вăрҫат-вăрҫат те, каллех лапланат. Ҫапла вăл мана пĕр-икĕ кун хушши текех кансĕрлесе пычĕ. Унтан урах ҫĕре куҫса ларчĕ.

Манăн айра австри шенелĕ, ҫийелте кивĕ одейал. Сиктерекен чуллă ҫул тăрăх кусакан фурманкă тĕпĕнче пĕр сӳхе шенел ҫинче ҫех выртса пыма пит те кансĕр. Кашни сиктерӳ сурана ыраттарат.

Суранлă, чирлĕ ҫынсемшĕн виҫĕ кун каймали ҫул ҫăмăл мар. Ҫанталăкĕ уйар та шăрăх тăрат. Ăшчик типсе ларнипе, суран та пĕҫертсе ăшталанипе кашни ик-виҫ ҫухрăм каймассерен лавăҫĕнчен шыв пама ыйтатăп Лавҫи, хĕрĕхсенчен иртнĕ паҫак, мана аван пăхса пырат. Вăл, пĕр хирĕҫмесĕр, хăйĕн пысăк бакалепе мана текех сивĕ шыв ăсса пырса тыттарат.

Кăнтăрлапа каҫ-ерен пирен лавсем йалсенче чарăнса канаҫҫĕ. Лавсем чарăнсанах, фурмансене паҫак-руҫҫин хĕрарăмĕсем, вĕсен ачи-пăчисем илеҫҫе сырăнса. Мен ҫитекенĕ пăхат кармашса фурман тĕпнеле. Пăхаҫҫĕ вĕсем фурман тĕпĕнче выртакан ҫурри вилĕ ҫынсене. — Ах!..—теҫҫĕ—ахлаҫҫĕ хуллен хашлатса. Пăхаҫҫĕ чеммесĕр салхулăн сĕнксе. Курасшăн вĕсем хăйсен тăвапĕсене, курасшăн шыраҫҫĕ пăллакансене. Тӳсеймесҫĕ вată карчăксем: пирĕн ҫине пахса хăшĕ шаппăн ĕсĕклеҫҫĕ, хăшĕ сасăпах пуҫлаҫҫĕ ӳлеме. Паллах, ку карчăксене епĕр анчах мар, вĕсене хăйсен ывăлĕсем те ҫаплах таҫта асап курса вилесси хурлантарат. Ман ҫумра австри шенелĕ выртат. Ҫакна кура, хĕрарăмсемпе ача-пăчасем мана пушшех те йышлăн пуханса пăхаҫҫĕ. Мана австрийан теҫҫĕ пулмала Хăшĕ-пĕри паҫакла йе руҫҫила сăмах хушаҫҫĕ. Епĕ вĕсене хам Раҫҫей ҫынни иккенне пĕлтеретĕп те, вĕсем пĕр шарламасăр тăраҫҫĕ тинкерсе.

* *

Виҫҫĕмĕш кун каҫпала ҫитрĕмĕр Санок хулине. Ку Санока епĕр виҫĕ ерве ҫеҫ кайала, Галицирен чакнă чух, хаварначчĕ пăрахса. Кунта пит е хула хĕрринерех ларакан пĕр пысак лазарета вырнаҫтарчеҫ. Ку лазарет вăрҫăччен шкул ҫурчĕ пулнăскер.

Лазаретра пирĕн ҫийри нумай вăхăт хушши тарпа тата йунпа хытса ларнă шăршлавнă симĕс тумтирсене хывса илчĕҫ. Аранах уйăрлтăмăр ку вăрҫа тумĕсенчен. Вĕсене тĕркелесе ҫыхсах склада илсе карĕҫ.

— Ах,—терĕм епĕ, тумтирсене илсе кайсан.—ман шалавар кăсийинче пăртманет пурччĕ... унта тенкĕ ҫур кĕмĕл укҫа... Парăр-ха шалавара!—кăшкăртăм австри санитарне.

Утса пычĕ матар санитар. Каларăм, каларăм—нимĕн те ăнланмарĕ. Хăйхи чĕнет тепĕр руҫҫин салтакне. Руҫҫин ăнланат.

— Ан хăра... вăл тумтирсем ҫухалмаҫҫĕ. Хăвăра кунтан ăсатсан, тумтирĕрсем те пĕрлех пыраҫҫĕ,—йăпатрĕ мана руҫҫин.

— Е-е-й, мĕн тăван халь ĕнтĕ Раççей укçипе? Кунта каймаст вĕт вăл!.. Халĕ ĕнтĕ австри укçи кирлĕ пулат, — тесе хучĕ тата хампа йунашар выртакан тыткăнри салтак

Епĕ лăплантăм. Анчах та 1 тенки—Макшанран тухнă чух хамăн йашă чухнехи атта сутса илнĕ укçа. çур тенки — атте парса йанинчен йулнăскер, — пат те шеллĕн туйăнчĕç мана. Вĕсене йунпа вараланнă кăсйерен фронтра та никам кăларса илейменччĕ. Çавăн пекех, килтен парса йанă хура сатин кĕпене хывса илвине те хĕрхеннĕ пек пултăм. Мĕншĕн тесен, пахан туйăначчĕç мана çак килтен пана йапаласен йулашки татăкĕсем.

## XXII.

Епĕ лазаретăн 2-мĕш хутĕнчи палатăра. Палати таса та çутă. Кунта 12 çын выртат. Вĕсенчен çурри австри çыннисем. Кроватсем çуккипе пурте урайĕнчех, улăм тӳшексем çинче выртатпăр. 12 çынна икĕ ĕрете, икĕ стена хĕррипе йунашар вырттарса тухнă.

Икĕ кунра пĕрре айалти хута сурансене çыхма йатса антараççĕ. Ку вара маншăн чылайах йавăр. Йатса кайнă чух шăмшака çĕмĕреççĕ, сурана çыхнă чух ăна çуса, касса, хырса пĕтерсе ыраттараççĕ.

— Мĕнпе амантăн?—тет мана тухтăр.

— Дум-думпа,—тетĕп епĕ.

— Çук! Нимĕçсем дум-думпа пемеççĕ. Вырăссем анчах переççĕ ун пек пульăпа,—тет тухтăр мана ĕнентерсех.

— Çук мар. Мана суранлатнă чух германецăсем пĕтĕмпех çурăлакан пулькăсемпе çунтарчеç,—тетĕп епĕ тухтăра хирĕçлесе.

— Суйатан!.. Нимĕçсен çурăлакан пулькă çук...—хĕремесленсех кăшкăрат ман çине хайхи тухтăр. Епĕ парăнатăп. Чăн çинченех, хам чăнах та суйнă пек туйăнса карĕ.—Нимĕçсен думдум çук,—теççĕ увтах таракан фелдшерсем те.

* *

Палатăсенче лăпкă. Суранлă салтаксем пăталаса хунă пек кунĕн-çĕрĕн çĕклеймесĕр выртаççĕ улăм матрассем çинче чăсалса. Вĕсен тире шăмăланнă сăн-пичĕ çинче пурпăç йăлкăшмаст. Тута хупă, чĕлхе хускалмаст, путса аннă куççем выльанмаççĕ. Имшер куççем ним сăлтавсăр йе умри стенасене, йе кантăк витĕр курăнакан уйар тӳпен кăвак касăкне тĕллесе илсе, сехечĕ-сехечĕпе пĕр сикмесĕр пăхаççĕ тинкерсе.—Ех, çут тĕнч!.. вĕçейесчĕ тухса çав кăвак сывлăшала кайăк пек пулса!—хапсăнат хăш чух таçтан килсе тухнă ĕмĕт.

Лăпкă, лăп палата. Вăхăтран вăхăт санитар кĕрсе тухни çеç хускалми сывлăша варкăштарса хăварат. йе суранлă салтаках хайне йунашар выртаканпа пĕр-икĕ сăмах хушса илни пĕтĕм шăплăха çурса пăрахат.

Палатăри çакан пек çурри вилĕ пурнăçăн виççĕмĕш кунĕ. Манăн куççем манпа ура вĕçлĕн выртакан пĕр çамрăк çынна тĕллесе илчĕç. Пăхатăп, тишкеретĕп. Курнă çын пек, паллалă

пек. Акă, çак хушăрах, хăй çамрăк хăй те мана тĕллет. Пирĕн куççем сассăр ыйтупала çыхăнса ларчĕç.

— Хăш полкран пулатăн ес, земљак?—ыйтатăп çакăнтан.

— Литовскинчен, — тет вăл.

— Чăваш мар пулĕ-çке есĕ?—тĕпчетĕп епĕ хаваслanарах.

— Чăваш... Ес те чăваш-и?.. Чим, еп сана паллана пек-çке?— хирĕçле тĕпчеме пуçларĕ чĕрĕлсе кайнă чăваш çамрăкĕ.

— Палламасăр ара... Мокшанта вĕт пĕрле вĕрентĕмĕр. Анчах ротăсем уйрамччĕ пирĕн Çавах та, пĕрмайах курнăçнă хăшчухне калаçнă та пулĕ Есĕр вăн пирĕн йал ачипе, Трекăв Васинкпе пĕрле, пĕр взводрах вĕренеттĕр. Астăватăн и?

— А-а-а... Трекăвпа!.. Халђ ĕнтĕ пайанхи пекех астуса илетĕп... Н-та-а! еп сана Трекăвпа çӳренине нумай курнă. Анчах халђ сăну сан нимпе палламала мар... типнĕ есĕ,—тет çамрак чăваш. Унтан епĕр пĕр-пĕрин хушамачĕсене, ăçти чăвашне, хăш ротăра пулнине, ăçта, мĕнле суранланнисене ыйтса пĕлетпĕр.

Ку чăваш Йетĕрне патĕнчи Турай вулăссем иккен. Унăн хушамачĕ—Илйин. Вăл, сывă чух, хĕрлĕ питлĕ чăмăр йашăччĕ. Халђ пит-куçĕ шурăхса типсе ларнă. Унăн та манăнни пекех хăрах ури аманнă. Паллашнă кунхинех санитартан Илйинпа иксĕмĕре йунашар вырттарма ыйтатпăр. Пире йунашар выртта-раççĕ. Вăйсем çук пулсан та, савăннипе текех шăкăлтатса выртатпăр, мĕншĕн тесен, хам аманнăрanпа епĕ ку тарана çитиччен пĕр чăваш та курманччĕ. Пурте таçти—Херсонски, Костромски, Тулђски, Смоленски тата ытти йенчи те çынсем. Çак тĕрлĕ йенчен тухса пăтранса кайнă çар халăхĕ хушшинче Хусан кĕпĕрни çыннине те сайраран çех тĕл пулма ленкет. Çавăнпа та, тенепле, çакăн пек вăхăтра ху кĕпĕрнӳ çыннине—халиччен нихçан курман таçти вырăс, тутар йе ытти халăх çыннине тĕл пулсан та, унпала çывăх йулташ пекех хаваслanса калаçатăн. Илйин чăваша курни йепле савантармĕ? Вăл вĕт халиччен курнăçнă, пĕрле пулнă, пĕр уйез чăвашĕ. Çавăнпа та епĕр унпа малтанах тăван пек килĕштерсе пурăнтăмăр.

— Таçта ĕнтĕ пирĕн Васинк, Трекăв текенни? . Чĕрĕ-ши вăл, вилĕ-ши? Вăл сирĕн ротăрах пулнă вĕт?—тетĕп Илйина, унпа чи кирлĕ самахсене калаçса пĕтерне хыççăн.

— Епĕ ăна хам сусăрланиччен ик виçĕ кун малтан курнăччĕ. Сывăччĕ ун чух. Анчах халђ пĕлме çук... темле . таçта вăл,— тесе хучĕ Илйин. Пĕр тапхăра вăл шăпланчĕ, ассăн, хашлатса илчĕ, унтан каллех пуçларĕ калаçма.

— Е-ех ку, ма хут амансан та Раççейех тухмала пулмарĕши? Раççейе йулнă пулсан, сывалса çитиччен киле те кайаттăмăр. Халђ кунта—те чĕрĕлес те вилес?.. Вилсен те пире никам пĕлес çук ĕнтĕ,—кулђанса илет Илйин.

— Аплаччĕ те вăл, анчах ним тума та çук .. Епĕ акă мĕн килтен тухнаранпах, тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ килти çинчен пĕр хыпар та илмен. Темле пурăнат атте-анне? Йепле пурăнаççĕ тăвансем? Икĕ пиччем тахçанах вăрçăра. Те чĕрĕ, те вилĕ вĕсем? Пит те пĕлес килет. Анчах, ним тума та çук, — тетĕп Илйина хирĕç.

— Ҫапла ҫав, ҫапла,— килӗшет Илйин манпала.

Кунсем, ҫӗрсем тӑвӑррӑн, аран шӑвӑнса иртеҫҫӗ. Ку тунсӑхлӑха ирттерме пире, Илйинпа иксӗмӗре, пӗр-пӗринпе калаҫса йӑпанни пит те ҫӑмӑллатать.

* * *

Мана, сурансене ҫыхмали пӳлӗме йатса кайса, сӗтел ҫине вырттарчӗҫ. Суранӑм ман хӑрушӑ. Вӑл хуралать, ҫӗрме тытӑнать. Суранлӑ ура тӑршшипех шыҫса, кӗҫ-вӗҫ ҫурӑлас пек кӳпчесе кайать. Ҫак вӑхӑтрах сывӑ ури типсе, хӑрӑк шанкӑ пек ҫеҫ тӑрса йулчӗ.

Сурансене ҫыхакан пӳлӗмре пӗр ватӑрах тухтӑр, ик-виҫӗ ҫамрӑк ҫын. Ҫамрӑккисем практикри медик-студентсем пулас. Акӑ, ман сурӑна тухтӑр пырса пӑхать. Вӑл хӑйӗн ҫӳхе резинкӑ перчаткӑ тӑхӑннӑ аллисемпе суран айаккисене пуса-пуса илет. Пӳрнесемпе тӗкнӗ май, суран таврашӗнчен лӑчӑрт! лӑчӑрт! туни илтӗнет, шӑтӑксенчен ҫӑра пӳр пелкесе тухать. Тухтӑр, нимӗҫ чӗлхипе темскер хӑвӑрт каласа хучӗ. Ҫамрӑк медиксем пурте хыпаланса темӗн тума хатӗрлене пуҫларӗҫ.

Ҫак хушӑрах пӗр ҫамрӑкӗ ман сӑмса умне марлӗ хучӗ те, ун ҫине темле емел пӗрӗхтерме пуҫларӗ. Хӑй ҫак вӑхӑтра хама пӗр чарӑнмасӑрах калаҫтарать. Калаҫкаланӑ ҫӗртех манӑн куҫсем хуралса килчӗҫ, пуҫ ҫаврӑнса кайрӗ.

— Мӗскер тӑваҫҫӗ кусем мана?... Вӗлермеҫҫӗ-и? Тавай кӑшкӑрас, вӑй ҫитнӗ таран тапӑртатас!—кӑшкӑратӑп, мӗнпур вӑйпа кӑшкӑратӑп пек, анчах хамӑн сассӑм тухмасть. Антрашатӑп ҫеҫ. Пӗр-икӗ минут. Сӗтел ҫинче выртнӑ ҫӗртенех таҫта путса, путса ҫӗр тӗппелех анса кайнӑ пек туйӑнать.

— Акӑ, хаљ касаҫҫӗ, вакласҫҫӗ пулмала ӗнтӗ мана!..—пӗчик ҫеҫ шухӑш ҫиппи туртӑнса илет таҫта, пуҫ мимин пӗр кӗтессинче.—Кӗҫех чун тухать!.. Чун ӳтрен уйрӑлать!—кӑшт ҫеҫ ҫиҫсе илет сӗм тӗттӗм пуҫра шухӑш. Тепӗр минут иртет. Анчах та, нимӗн туйми пулнӑ ӳтрен ни чун уйрӑлса кайни ҫук, ни шухӑш сисӗмӗ выљанса тӑни ҫук! Пӗтӗм сисӳ, пӗтӗм танпуҫ йӑлтах сӗм тӗттӗмлӗхе путса хупланать. Ҫапах та, таҫта, пуҫ тӗпӗнче, сӳни-сӳнми тӗлкӗшекен кӑвар пек ху пуррине пӗлтерекен сисӗм ҫухалаймасть. Анчах ку сисӗм ытла та вӑйсӑр, начар. Вӑл ҫинҫе шурӑ хӗлӗх пек ҫеҫ татӑлмасӑр чӑсӑлать.

Темиҫе минут выртнӑ—паллӑ мар. Такам питрен ҫупӑрлани сисӗнсе кайрӗ. Сассем мӑкӑртатни илтӗнчӗ. Куҫа уҫса пӑхатӑп. Мана носилкӑ ҫине илсе хураҫҫӗ. — Ку мӗн турӗҫ мана?.. Ҫынна ҫывратса касат теҫҫӗ, ҫавӑн пек турӗҫ пуљ.. Анчах урана татса илменҫке-ха. Мӗн тунӑ вӗсем?—шухӑшла пуҫлатӑп каллех.

Акӑ, мана хамӑр палатӑпа илсе пырса, Илйинпа йунашар вырттараҫҫӗ.

— Ну час илсе килмерӗҫ сана,— тет мана Илйин.

— Ҫывратрӗҫ... анчах тем турӗҫ,— тетӗп епӗ ӑна.

Мана ҫурӑмран пуҫласа икӗ пӗҫ кӑкӗсене ҫитиччен йӑлтах ватка хурса, хулӑмӑн бинтӑласа лартнӑ-мӗн. Хыпашлатӑп аллӑмпа. Кӗрех кайаҫҫӗ алла хӑвӑл резинкӑ кӗпҫе вӗҫӗсем.

Икĕ вĕç! Сылтăм вĕче айаккине касса шăтарса, унта виттĕрех хăвăл резинкă трубка лартнă иккен! Епĕ ăна нимĕн те сисмен.

Иртет пĕр 5 минут.

— Ай, санран пуђ, темскер усал шăршă тампа пуçларĕ,— тесе хучĕ Илйин йĕрĕннĕ пек пулса. Мана лайăхмаррăн тупăнса карĕ

Одейала сирсе суран çинеле пăхатăп. Илйин та пăхат.

— Вăн вĕт резинкă трубкăсем вĕçĕпе çĕрĕк пўрĕ йухат. Çыхнă бинтуна варалана. Матрасна та варалат вăл ак сан, айна клейонкă сармала,- терĕ Илйин.

Епĕ суранран çăра йунлă пўр перçе тухнине кура темле шиклевсе, çўçенне пек пулса кайрăм.

— Ай, ытла та йăвăр шăршă! Чисти виле шăршийех!—терĕ те Илйин, сăмси вĕçне тытса манран тўнтер йенеле çаврăнса выртрĕ. Мана ку сăмахсем чылайах хурлантарчĕç.—Мĕншĕн епĕ капла Илйинпа калаçса выртма та йурăхсăр пултăм?.. Йĕрĕнет вăл манран!—ăшра шухăшлатăп. Витенетĕп пит çинченех одейалпа. Выртатăп Илйин пекех, çурăмпа ун йенеле çавăрăнса.

Манăн суран хытă йухма пуçларĕ. Кашни кунах ăна çуса хуламăн сыхаççĕ. Çакăнтанпа Илйинпа та сайраран çеç калаçма пуçларăмăр.

Икĕ ерне выртсан, пире Санокран Деберцен хулине асатса йачĕç.

## XXIII.

Ийуђ уйахĕн ватам кунĕсем.

Карпат сăрчĕсем хушшинчи шарлатса йухакан шывсен улăхĕпе вăрăм хура çĕлен пек авкаланса пырат пирĕн пуйăс. Ку пуйăс—таварлă пуйăс. Унта тулли чĕрĕ тавар.

Вăл тавар—тискер йунлă вăрçă кăларса таракан чĕрĕ аш таварĕ.

Кашни вагон урайпе пĕр 10 сантиметр хуламĕш сарнă шултра çункав (стружок). Çункав çинче ĕречĕ-ĕречĕпе выртаççĕ чирленĕ, суранлă салтаксем. Хăш вагонĕнче Раççей салтакĕсем, хăшĕнче йăлтах—австрисем.

— Акă ĕнтĕ, каллех Карпатсем!.. Ех, килес килмест-çке кунта кайала!—тесе пыраççĕ суранлă салтаксем.

Карпатсен хушшинчен тухаспа, пуйăс пĕр станцăра чарăнат. Кунта йунашарах Деберцен хули ларат.

Пире малтанах станцăри бараксене вырнаçтарчĕç. Баракĕсем таса мар, кивĕ бараксем. Вырттарчĕç пурне те çара, нимĕн сарман хăма саксем çине. Кунта пĕр талăк выртса асаплантăмăр.

Тепĕр кунне—кăнтăрла çитеспе, пире çĕклеме пырса тулчĕç çамрăк матар салтакĕсем. Ку салтаксем—урса кайнă хулиганла шовиниссем. Вĕсем вырăссене çав-тери кураймаççĕ: мăшкăлаççĕ, тĕккелеççĕ, носилкасем çине хуçкаласа хураççĕ. Нумайĕшĕ, суранĕсене ыраттарнаран, айлатса кăшкăраççĕ, макăраççĕ.

— Ех, москаљ! куш!.. (Ех, вырăс! усал!) —тесе кăшкăраççĕ матар салтакĕсем.

Ак, черет ман пата та çитет. — Цĕтереççĕ ĕнтĕ кусем,—тесе хăрасах выртатăп.

— Москаљ, кала: миçе матар вĕлертĕн? — кăшкăрса йачĕç носилка çĕклесе пынă икĕ матар, хам пата çитсе тăнă-тăманах. Вĕсем словакла-чехла каланисене епĕ чылайах тăнлатăп

— Нем, я не москаљ,—терĕм епĕ вĕсене хирĕç.

— Нем москаљ... Козак? да? .. Ой, козак не добре! . курва!..— кăшкăрса йачĕç каллех хайхисем, мана носилка çине хуçса хума çĕклесе.

— Ней, ней... я—нем козак, нем москаљ...—тесе хутăм епĕ. Матарсем ман çине ка-ăн! тинкерсе пăхрĕç.

— Кто це будеш? Татар?—тĕпчеççĕ вĕсем.

— Нем татар,—чуваш,—тетĕп вĕсене.

„Чуваш“ тенине ăнланмасăр вĕсем темиçе хутчен те çĕнĕрен ыйтса пĕлчĕç. Йулашкинчен, манпа йĕркелĕнех каласма пуçласа, тула çĕклесе тухрĕç.—У москали козак не добре! Николай Николайч (главнокомандуйушчи) не добре!—калаçса пыраççĕ хайхисем.

— Да... козак не добре, Николай Николайч не добре!.. а чуваш добре!..—тетĕп вĕсене. Матарсем кулаççĕ.

Мана çĕклесе иртекен пер барак пуçĕнче нумай салтаксем, суксфирсем, капралсем кĕпĕрленсе тăраççĕ.

— Цуас!.. Цуас!..—кăшкăраççĕ мана йатса пыракан матар салтакĕсем, ман çинеле пуçĕсемпе сулласа кăтартса. Барак пуçĕнче таракан çар халăхĕ пире сырса илчĕ. Мана носилки мĕнĕпех çĕре лартрĕç. Пĕтĕм салтак ушкăнĕ ман йĕри-тавра кĕпĕрленсе, ман çине пăхса тăрат. Акă, вĕсен хушшинчен пĕр хĕрĕхеле çитнĕ тăлпан капрал (кĕçĕн çар чынĕ) тухат те, манран чăвашне ыйтса пĕлет. Вара пурне те чăваш çинчен темскер матарла чылай каласа пачĕ. Ман халхапа пĕр „цуас... цуас“ тенĕ сăмахсем çеç кĕрсе вырнаçаççĕ. Ахăрнех, ку капрал чăвашсем çинчен Мессарошпа Мункачи кĕвекисем тăрăх пĕлнĕскер пулмарĕ-ши?

* * *

Деберценре пире бараксене выранçтарчĕç. Кашни баракра 100 çынна йахăн выртат. Ку шутран çурри ытла ман пек йăвăр суранлисем Кашни барак пуçне пĕрер тухтăр, 4—5-шер сестра, çавăн чухлех санитар.

Кунта баракĕсене таса тытаççĕ. Сурансене те хытă имлеççĕ. Йăвăр сурансене кашни кун кроват çинчех икшер хут çуса сыхаççĕ. Анчах çийесси йенчен пит те начарланса çитрĕ. Çын пуçне 300 грама йахăн кукуруз çăкăрри, ирпе-каç пĕрер мискă кавă, кăнтăрла çеç кăшт йашка. Сывалса çитекенсем выçăпа хытă аптăраççĕ. Епĕ, начарланса çитнипе, панă пек çăкăрне те çисе йарайми пултăм. Ман йулакан çакăра сывăраххисем пĕр-пĕринпе варçсах иле-иле каиаççĕ.

Хăрушă иккен „дум-дум“ пуљкă тивнипе пулнă суран. Ун пек пуљкăпа суранланнисем час-часах суранĕ çĕрсе асланнипе, йун пăсалнипе кайран виле-виле выртаççĕ.

Мĕн тĕрлĕ суранланни çукчĕ-ши кунти бараксенче! Йĕтре осколкипе йе дум-дум лекнипе хăшин пĕрин пичĕ хăйпăнса

тухнă, хăшин пуљкă пичĕ витĕр тухса шăлĕсене, чĕлхине çĕмĕрсе тухнă, хăшне çăвартан кĕрсе ĕнсерен шăтарса тухнă. Ун пеккисене сĕт çеç ĕмкĕчпе ĕçтереççĕ. Кунтах алли-ури татăкки, кăкăртан суранланни, темĕн тĕрлĕ аманни те ахлатса, йынăшса выртат.

Акă, манпа тĕлме-тĕлех, пĕр икĕ утас пек иртсе сӳремели хушă урлă ларакан кроват çинче, выртат пĕр илемлĕ сарă вырăс каччи. Ăна—Серйожă, теççĕ. Серйожăн суранĕ сулахай хул калакĕ çинче. Вăл дум-дум пуљкăпа аманнă. Çак Серйожă малтан йерипен утса та çӳреччĕ. Хăй илемлине кура, ăна сестрасем те йуратсах пăхаччĕç. Уйрăмăнах 4 сестраран пĕри, те чех те, словак хĕрарăмĕ, çирĕм пилĕкеле çитнĕ чăмăр, хитре сăн-сăпатлă хĕрарăм, час-часах Серйожă патне пырса ăна йăпатат, ачашлат. Сестрасем Серйожăна тăхăнма кĕпе-йĕмне те, халатне те чи лайăххине суйласа параççĕ. Анчах та Серйожă кунран кун хăвăрт вăйсăрланса пыма пуçларĕ. Унăн суранĕ шалтан шала çĕрсе кĕрсе аслансах пырат. Шăммисем курăнма пуçлаççĕ. Пĕр-икĕ ернерен вăл кроват çинчен те тăраймасăр пулса выртат. Серйожăна йуратакан сестра ăна чĕртессипĕн пĕтĕм тимне хума тытăнат. Серйожă хăйĕн вилĕмĕ çывхарнине сисет. Анчах та илемлĕ каччăн нимпе те вилесси килмест. Вăл текех йынăшат, хăш-пĕр чух хурлăхлăн ăнтрашса макăрса та илет. Ун пек чухне ăна сестра пырса йăпатат: „Ох, ты, Серйожă мой, русский!.. может лепше будет... лепше...“—кроват çумне ларсах пусĕнчен ачашлат Серйожăна сестра.

Анчах та ку çамрăкăн сываласси çук. Ăна çывăх кунсенчех суранран йун пăсăлса кайнипе вилессе кĕтеççĕ. Çакан пек хăрушă дум-дум суранĕ.

Илйин чăвăш манран уйрăм. Епĕ ăна кунта мĕнпурĕ те икĕ хут çеç куртăм. Йулашки тапхарта вăл хăйĕн гипспа, хулăм хутпа чĕркесе хытарнă урипех çĕкленсе, костыљ çинче уртăнса çӳреме хăтланаччĕ. Кайран ăна урăх кураймарăм.

* *
*

Нйулĕн малтанхи кунĕсем. Пире Деберценрен кăларса татах шалала, Венгри çĕрнеле ăсатаççĕ.

Ку тапхăрта йăвăр суранлисене пурне те ноçилкасемпех вагон çине лартса йачĕç. Ман ноçилкăна вагон чӳречи умнех çакнипе, мана Венгри çĕршывне пăхса пыма питте аван пулчĕ. Пуйăс хăвăрт шуса пынă май, текех улшăнса пыракан уй-хирĕн чĕрĕ картинĕ, мана пĕр вăхăта хамăн сурансене те йăлтах мантарса йачĕ.

Карпат тăвĕсем сĕвекленççĕ. Умра Венгрин сарăлса çитнĕ уйĕсем, йешĕл вăрманĕсем, йалĕсем, пахчисем уçăла-уçăла выртса йулаççĕ. Пирĕн пуйăс хăвăрт йарăнса Дунай улăхнеле вĕçтерет. Чугунçул икĕ йенĕпе те пиçсе çитекен сарă тулă, çĕрулми, виноград, кукуруз, фасољ уйĕсем лараççĕ хумханса. Улăхсенче матар хресченĕсем утă çулаççĕ.

Акă, час-часах матар йалĕсем ларса йулаççĕ. Ку йалсенчи тĕрлĕрен тĕслĕ черепицăпа ылмаштарса витнĕ тăваткăл çурт

ҫийӗсем илемлӗн улаланса курӑнаҫҫӗ. Йал таврашӗнче йешӗл сат-пахчисем. Вӗсенче тӗрлӗрен йӑвӑҫсем тӳленсе чӑмӑртаннӑ ҫимӗҫӗсемпе шерепеленсе лараҫҫӗ.

Йешӗл те илемлӗ Венгри ҫӗрӗн айлӑмӗ. Ӑна аслӑ Дувайпа Тиссӑ шывӗсем шӑварса выртаҫҫӗ. Венгри ҫерне пирӗн патри пек ишӗлчӗк ҫырмасем таткаласа выртмаҫҫӗ. Унта таран ҫырма ҫук. Ҫырмасем вырӑнне сӗвек тӗплӗ васансем. Ку васансем тарах, симӗс ҫерем ҫийӗпе йӑлтӑртатса йухат тӑра шыв. Тикӗс уйсем тӑрӑх унта та кунта йӗркипе ларакан пирамидла топаль тӑррисем, каштансем, йуман пек акаци рашчисем кӗпӗрленсе ларни курӑнат. Вӑл рашчасем унта матар йалӗсем йе чугунҫул станцисем пуррине пӗлтереҫҫӗ.

Епӗр ӗнтӗ Карпат сӑрчӗсене нумай инҫете, хыҫа пӑрахса хӑвартӑмӑр. Анчах та, хӑш-пӗр сӑртсен шӗврешкисем ҫаплахха сухалмаҫҫӗ куҫсенчен. Ку сӑрт тӑррисем Венгри ҫӗрӗн кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫ чиккисенче хуралҫӑ улӑп мӗлкисем пек тӑраҫҫӗ каранса. Сайраран тӗл пулаҫҫӗ пӗчӗк вӑрмансем, рашчасем. Вӗсенче ҫӳлӗ бук, граб, кавраҫ, вӗрене ушкӑнӗсем лараҫҫӗ варкӑшса лӑпкӑ ҫилпеле.

Илемлӗ, пит те илӗртӳлӗ Венгри ҫӗршывӗ. Йешӗрет вӑл тӗрлӗ тыпулпа. Анчах та... ку илем пирӗншӗн мар! Епӗр пӗр ирӗксӗр, ҫурри пӗтнӗ ҫынсем. Епӗр Раҫҫей патшипе унӑн улпучӗсем хуса тухнипе вӗсен вӑрҫи вилӗмне суннӑ ҫынсем. Ҫаван пекех, ку илем матар ӗҫҫынни сем шӗн те мар. Вӗсем унта ирӗклӗн ҫӳресе савӑнаймаҫҫӗ. Вал илемлӗх пӗтӗмпех Венгри ҫӗрулпучӗсемпе австри мулхуҫисен аллинче. Ҫак улпутсен ирӗкӗпех ака матар ӗҫҫыннисем те тӗнче вӑрҫине йаваҫса хӑйсен йунне йухтараҫҫӗ. Ҫак ҫӗршыв ҫыннисем ӗнтӗ—матар хресченӗсем, хӑйсен буржуази ултавне паранса, тӗнче вӑрҫинче арӑслан пек хайарран ҫапаҫаҫҫӗ.

## XXIV.

Йулашкинчен пире пуйӑс Комаром хулине илсе пырса тӑкрӗ.

Комаром „комитат“ (облӑҫ) центрӗ. Вӑл Дунай хӗрринче ларат.

Дунай тӑрӑх кунӗн-ҫӗрӗн тӗрлӗрен прахут, баржӑлӑ буксир вӗҫӗлтетет. Вӗсем кӑшкӑрашни хула шавне пуҫшех те вайлатат.

Комаромра пире малтан пӗр пушаннӑ хапрӑк ҫуртне вырнаҫтарчӗҫ. Кунта епӗр ҫитиччен хӗл вӑхӑтӗнче суранланна Раҫҫей салтакӗсем выртаҫҫӗ. Вӗсем хушшинче пуринчен ытла алли-урисене тӑм илсе татнисем. Ку аманнисенчен нумайӗшӗ ӗнтӗ сывалса ҫитнӗ: вӗсем утаҫҫӗ, шавлаҫҫӗ, ҫавӑнтах вӑрҫса та илеҫҫӗ. Йӑвар суранлисене кун пек халӑх хушшинче выртма кансӗр. Ҫавӑнпа та, тепӗр виҫӗ кунран пире уйӑрса, хула айӑккинчи чирлисен баракӗсене куҫарса хучӗҫ.

* * *

Епӗр выртакан ҫӗрте 4 барак йунашар.

4 баракран виҫҫӗшӗнче туллийех суранлӑ-сымар Раҫҫей салтакӗсем. Пӗринче—сурансене ҫыхмали пӳлӗм, ҫӑванмали ваннӑ

пӳлӗмӗ, кăнцелери тата кухнă. Ку тăватă барака йӗри-тавралах йӗплӗ пралукпа карталаса лартнă. Пертен пӗр хапха умӗнче кунӗн-ҫӗрӗн пăшаллă хурал.

Чирлисем выртакан виҫӗ барака йӗркипе 1-мӗш, 2-мӗш. 3-мӗш барак текен йат панă. 1-мӗш баракӗ пӗчӗк, унта 50 ҫын йахăн ҫеҫ выртат. 2-мӗшпе -мӗш бараксем вăрăм, вӗсенче йаланах 100-шер ҫынтан кайа мар. Ман вырăн 3-мӗш баракра.

Барак ăшӗнче тăватă йӗрке ҫӳлӗ тимӗр кроватсем лартса тухнă. Икӗ йӗрки—икӗ стена ҫуммипе, иккӗшӗ—барак варрипе, пуҫлă-вӗҫлӗн лараҫҫӗ. Манăн кроват хыҫалти стена ҫумӗнчи ӗретре чи хӗрринче ларат. Манпа йунашарах санитарсем пурăвакан пӳлӗме кӗмелли алăк. Вăл пӳлӗмре йаланах 5—6 санитар—австри салтакӗсем.

Кашни кроват ҫинчех аманнă, суранланнi Раҫҫей салтакӗ. Вӗсенчен ҫурри ытла ура ҫине тăрайманнисем. Кашни кроват пуҫӗнчех хура хăма ывăс. Вăл ывăссен пӗр пуҫне шурă краскăпа нимӗҫле: «Унгарн. Комаром. Кранкенабтейлунг—XI» (Вӗнгри. Комаром. Чирлисен уйрăмӗ—XI)—тесе ҫырса хунă. Ку пирӗн адрес. Ҫак ывăссем ҫинех—кроват ҫинче выртаканăн хушамачӗпе йатне, вăл мӗнле полкра пулнине ҫырнă тата унăн суранне хăҫан ҫыхнипе ăна мӗнле апат памалине (диетă) ҫырса тăраҫҫӗ.

Кроватӗн тепӗр вӗҫӗнче пӗчӗкҫӗ клейонкă сумкă ҫакăнса тăрат. Вăл сумкăра чирлӗ ҫыннан температури мӗнле танине кăтартакан диаграмма. Вăл диаграммă ҫине кунсерен икшер хут—ирпе те каҫпала палла туса тăраҫҫӗ.

* *
*

— Ну ӗнтӗ—сывалăп-и йе вилӗп, мӗн пуласси пулӗ ҫакăнта,—терӗм епӗ. Ҫакăн пек шухăш пырса кӗчӗ ман пуҫа, хамăра Комаромри барака вырнаҫтарсанах.

Ку шухăш ман йăнăшмарӗ. 7 уйăх ытла выртрăм епӗ Комаром хулинче. 7 уйăх тăршшӗ ҫичӗ ҫул тӳссе ирттернӗ пекех туйăнчӗ. Виҫӗ хутчен ҫывратса пысăк операцисем туни, икӗ тапхăр хытă чирлесе вилес патнех ҫитнисем, ӗҫме-ҫимине чун тыт малăх ҫеҫ парса усрани, кунӗн ҫӗрӗн тăмасăр пӗр вырăнтах йăваланса выртни—пурте пӗр тӗвве пӗрлешсе, кашни минута, кашни сехете ахаль чухнехинчен 5 хут ытла сисӗнтереҫҫӗ.

Ху пурнăҫунта мӗн те пулин пулмасан, кашни талăк тăршшийех пӗр йевӗрлӗн иртсе кайат. Ирхине, 7 сехетре, дежурни санитарсем тăрса тухса, барак ăшне тасатма пуҫлаҫҫӗ. Тасату пӗтсен, ҫав санитарсемех пысăк тирӗксемпе шыв илсе, чирлисен пичӗсене ҫуса тухаҫҫӗ.

8 сехет.—Кавă илме!—илтӗнет кухньăра ӗҫлекен пырса кăшкăрни. Санитарсем пысăк лотокпа пуҫлаҫҫӗ кавă ҫӗклеме.

Кашни ҫынна—пӗрер стакан кавă. Ăва мискă тӗпне йарса параҫҫӗ. Кавă ӗҫни ҫиес килнине вăйлатат. Анчах та, ҫук нимӗн ҫимели!

Ҫитет 9 сехет.

— Визит!— кăшкăрат ҫумри баракран чупса пынă санитар.

— Визит!.. Визит!—текен сассем пăшăлтатса вĕçессĕ баракра шалтан шалала. Утма пуçланисем те пурге харпăр кроватĕ çине пырса лараççĕ, харпăр вырăнĕсене йусаççĕ. Санитарсем хыпаланса барак тăрăх татах тепĕр хут чупса тухаççĕ Вĕсем куçа курăнакан çитменлĕхсене сиреççĕ: чирлисен кроватĕ çинчи одеĭал хĕррисене тикĕслеççĕ, тин çеç шăлса тасатнă урайĕнче çӳпçап пĕрчисем пулсан, вĕсене илсе пăрахаççĕ тата ыт. те.

Акă, алăкран пырса кĕрет шурă халатлă çынсен ушкăнĕ. Чи малта—тухтăр, ун хыçĕнче фелдшерсем, сестра, кăнцелерти писăр. Кусем çумнех хутшăнаççĕ баракри санитарсем. Алăк патне пырса тăнă дежурни санитар, тухтăр пырса кĕрсенех аллине „чеçт" тытса, ăна кĕске рапăрт парса илет. Вара визит пуçланат.

Кашни çыннах тинкерсе пăхса иртет тухтăр. Йавăр суранлисем умĕнче чарăнса, вĕсен температура диаграммине пăхат, пайан суран çыхмалисенне пуç вĕçĕнчи хура ывăс çине çырса паллă тутарат.

Визит пĕтсенех санитарсем тухтăр кăтартса хăварнă чирлисене пуçлаççĕ йăтма суран çыхакан барака. Ку барак умĕнче, йуман пек çӳлĕ акацисем айĕнче, вуншар çын таран пухăнса выртаççĕ пиртен карса тунă ноçилкасем çийĕнче. Вĕсем кĕтеççĕ суранне çыхма черет çитессе.

Суран çыхакан пӳлĕмрен час-часах илтĕнет хайаррăн ахлатни, макăрашни, тискеррĕн кăшкăрашни. Кусене хирург-тухтăр аллине лекнисем кăшкăраççĕ. Нимĕс хирургĕ, тен, хай ăсталăхне тыткăнри çынсен шăмшакне вакланипе ӳстерме шутланăран пулĕ, кашни кун 5—6 пысăк операци тăват. Вăл суранлисем çинче, вĕсене çывратса та, çывратмасăр та, тĕрлĕрен експериментсем туса иртерет. Хăшин алли-урине виç-тăватă хутчен кĕскен татса пырса, ăна текех çĕле-çĕле лартат; хăшин суранĕсене виттĕр шăтарса, унта резинкă кĕпçе кĕртсе лартат (пӳр йухса тухма); çĕрекен сурансене тĕпне çитиччченех касса çурса, унта осколкă таврашĕсем шырат, çийелтен çĕрекен ӳтсене касса йе хырса пăрахат тата ыт. те.

12 сехет—кăнтăрла.

Бараксене çăкăр персе çитет. Ăна санитарсем сарлакă лотоксемпе йатса пыраççĕ.

Ех, çăкăр! Нумай кĕтнĕ çăкăр!. Вăл пурне те хускатат. Çăкăр çĕклесе пыни пĕтĕм барак ашне чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртет.— Çăкăр!.. Çăкăр килет!—йантратаççĕ сассем баракра. Пурте йăшăлтатаççĕ. Кроват çинчен тăрайманнисем те пуçĕсемпе çĕклесе килекен çăкăр йенне туртăнаççĕ.

Ку çăкăр—кашни çынна 300 грам. Унпа талăк пурăнмала. Тӳсеймесĕр, шăртланса кĕтсе илеççĕ выçă çынсем пĕрре çимелĕх çăкăр татăкне. Паллах-ха, пур татăкĕ те пĕр виçелĕ, çавах та ку выçă çынсене пĕр пек туйăнмаст. Вĕсем кашни тĕпренчĕкех пысăк шута хураççĕ.

— Ой, пан санитар!.. парăр-ха мана урăх татăк. Вăн çав татăкне... парăр пажалăстă,—тилмĕрет пĕри, хăй умне хурса панă çăкăр татăкне кайала тавăрса.

— Е-ей, йалан мана ҫакӑн пек пӗчӗк паратӑр... парӑр-ха вӑн ҫав хыттилӗ касӑкне... Лукач! Ҫедлак!—ӳпкелешет тепри.

Автраҫҫӗ ҫӑкӑр валеҫекен санитарсем тӗрлӗ йенчен кӑшкӑракан сассем минретнипе.

— Не крич!.. Пречу тако кричеши?.. Всему единако, по триста грамму,—вӑрҫса пӑрахат ҫӑкӑр валеҫсе тухакан австри салтакӗ—словак Лукач Ҫат! ҫапса илет вал лоток йенне чӑсӑлакан алӑсене. Тата ҫак вӑхӑтрах хӑй, хаљ ҫеҫ ҫапса илнӗ вырӑссене кӳрентерес мар тесе, аптранипе ирӗксӗр кулса та илет.

Лукач—сарӑ сӑн-сапатлӑ, пӗчӗк уссилӗ, ӑшӑ кӑмӑллӑ лайӑх салтак. Вӑл вырӑссемпе пӗрмайах выљашат, калаҫат, йунлӑ вӑрҫа чунӗ-чӗрипех кураймасӑр ылханат. Ҫедлак—Лукачӑн ҫывӑх йулташӗ. Вӑл та словак Хурарах сӑн-питлӗ, хура уссилӗ, хыткан шӑмшаклӑ санитар. Ҫедлак та аван, анчах вал Лукач пекех халлапланма пултараймаст. Кусене иккӗшне те вырӑс салтакӗсем пурте йуратаҫҫӗ.

Баракри аслӑ санитар—Томшич, кӗрнеклӗ ватӑ унтӗр. Томшич—чех, аллӑ йенне ҫывхарнӑскер, сӑмахламах йуратмаст. Ун тути хӗрривче пӗрмайах пӗр-икӗ шит тӑршшилӗ авӑнчӑк хура чӑпӑклӑ чӗлӗм ҫӳрет ҫакӑнса. Те ҫунат ку чӗлӗм, те ҫунмаст, анчах та ӑна Томшич сехечӗ-сехечепе ҫӑвартан пӑрахмасӑр ҫӳрет ҫӗклесе. Томшичӑн йачӗ—Михаил. Вырӑссем ӑна „дядя Мишӑ“ тесе чӗнеҫҫӗ. Томшич чӗлӗмсӗр ҫӳренине курсан, вырӑс салтакӗсем ӑна: ей, дядя Миша, ма самаварна пӑрахрӑн? тесе тӑрӑхлаҫҫӗ те, вӑл хӑй те вара тинех пӗр-икӗ шутлӗ сӑмах каласа, кӑшт сиввӗн йӑлкӑшса илет. Ҫӑкар валеҫнӗ чухне Томшич пулсан, никам та кӑшкӑрашма хӑйаймаст. Ҫӑкар порцине улӑштарма ыйтакансене Томшич пӗрре анчах хыттӑн хӑтӑрса пӑрахат те, пурте шӑп пулаҫҫӗ.

Ҫӑкӑр валеҫсе пӗтет. Апат илсе пырасса кӗтнӗ хушӑра, нумайӗшӗ ҫӑкӑрне пӗчӗккӗн ҫырткаласах ҫисе йараҫҫӗ.

— Куҫа йӗкӗлтет тек... пӗрре ҫи те—пӗттӗр луччӗ!—йӑпатаҫҫӗ хӑйсене хӑйсем ҫӑкӑрне апатченех ҫисе йаракансем.

— Минаш!..—кашкарат алӑкран пырса кӗнӗ матар хӗрӗ Каталина. Ҫемҫе аљтапа кӑшкӑрнӑ хӗрарӑм сасси—уҫӑ сасӑ—пурне те алак йенеле ҫавӑрӑнса пӑхтарат. Каталина, лутра та самӑр хӗрарӑм, кухнљара ӗҫлесе пурӑнат. Сывалма пуҫлана вырӑссем, хӗрарӑм курманнипе тунсахланӑскерсем, Каталина сассине илтсенех ун патнеле пуҫтарӑнаҫҫӗ. Анчах та Каталина вырӑссемпе пите ирӗлсех калаҫмаст, хӑйне маннӑн тыткалат. Ҫак хушӑрах вӑл, хӑй патне пирӗн баракри матар-санитар—Барта пырса перӗнсен, сасартӑк чӗрӗлсех кайат. Унӑн, вырӑссем умӗнчи сулхӑн ҫанталӑк пек сӑн-пичӗ хӗвеллӗн ҫиҫсе йӑлкӑшмашкӑн тытӑнат. Барта—патвар пӳлӗ ҫамрӑк салтак, час-часах Каталинӑна тытса ыталат, ӑна ҫапкалат, тӗккелет. Анчах, апла пулин те, Каталина Бартӑна нимӗн те ҫиленмест. Барта Каталинӑпа алхасни ҫине йӗри-тавра пухӑннӑ вырӑс ҫамракӗсем ӑвӑнса ҫеҫ пӑхса тӑраҫҫӗ.

Акӑ, тепӗр вунӑ минутран „минаш“ персе ҫитет. Минашӑн малтанхи чашӑкӗнче, пӗр 10 кашӑк пуле, кукуруз йе тулӑ

ҫӑнӑхӗпе йурса тунӑ шӳрпе. Унтах пӗр 25 грам пек аш татӑкӗ. Ку вӗри шӳрпене пурте хыпалансах ӗҫсе йараҫҫӗ. Ана ӗҫсе йанӑ тӗле иккӗмӗш чашӑк ҫитет. Кашни ҫыннах мискӑ тыттараҫҫӗ. Мискӑ тӗпӗнче 4—5 кашӑк пек ҫӗрулми нимӗрри, йе ӑшаланӑ купӑста, йе фасоль, йе ҫулла пулсан—симӗс пӑрҫалӑ фасоль хутаҫҫи,—ӑна пӗҫерсе параҫҫӗ.

Паллах, ку апатпа тӑранма ҫук. Вӑл ҫийес килнине вӑйлатса хырӑма йӗкӗлтеме ҫеҫ пултарат. Апла пулин те, ҫакӑнпа ӗнтӗ каҫчен пурӑнмала.

Каҫхи апат—кӑнтӑрла иртсен 6—7 сехет тӗлнеле. Ку тапхӑрта пӗр чашӑк ҫеҫ. Вӑл чей пек ӗҫмели вӗри шӳрпе. Ку шӳрпе те, пӗчӗккӗн сыпсан, вунӑ кашӑк пулма пултарат. Текех, ыранччен ӗнте нимӗн те ан кӗт. Ыран ҫеҫ пайан илнӗ чухлӗ порцисене тепӗр хут илме пултаратӑн.

Сывалма пуҫланисем выҫӑпала хытӑ аптӑраҫҫӗ. Вӗсен мӗнпур шухӑшӗ ӑҫтан та пулин, мӗн те пулсан тупса ҫийесси ҫинчен анчах. Хӑшӗ-пӗри каштан йӗкеллисене пухса кӑшлаҫҫӗ. Хӑшӗ чирлӗ выртакансене тӗрлӗ майпа пулӑшкаланӑ пек пулса, вӗсенчен ҫисе йарайман ҫӑкӑр татӑкӗпе апат шӳрпиве илсе тӑма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫаксем хушшинчех. чӗлӗм туртакансем пулсан, вӗсен пурнӑҫӗ пушшех те йӑвӑр. Тапак памаҫҫӗ, ӑна илме укҫа ҫук. Ҫакна пула, туртмасӑр пурӑнайман ҫынсем, хӑйсем ҫийес 300 грам ҫӑкӑрне сутса тапак илтереҫҫӗ.

— Виҫӗ кун выҫӑ выртам, чӗлӗм туртмасӑр пурӑнаймастӑп,— тет манран икӗ кроват урлӑ выртакан ватӑ салтак Димитрӗв—Калуг кӗпӗрни вырӑсӗ. Чӑнах та, Димитрӗв ик-виҫ кунра пӗре ҫӑкӑр порцине сутса тапак илсе тӑрат. Выҫӑпа, чӗлӗм туртса ҫех пурӑннипе Димитрӗв ҫинче чӗрӗ етем сӑнӗ курӑнмаст. Вӑл ырхан, типшӗм, пичӗ-куҫӗ ун сарӑхса кӑвакарса ларнӑ. Димитрӗв пеккисем пирӗн хушӑра сахал мар.

Анчах та, асту, хӑвӑн ҫӑкӑр порцине сутнине пуҫлӑх таврашсем ан курнӑ пулччӗр! Вӗсем курса тытсан—тепӗр кунне ҫав пӗчӗк ҫӑкӑр татӑкне те илейместӗн. Ҫавӑнпа та ку ӗҫе тума „суту-илӳ“ ӗҫне матур пултаракан ҫынна ҫех йамала. Ун пек „маклӗр“ ӗҫне сывалса ҫитнӗ йулташсем тӑваҫҫӗ. Акӑ, Ваҫка Беспалӑв—Курски кӗпӗрни вырӑсӗ, хӑрах туйа ҫинче ҫӑмӑллӑн уксаклаcа ҫӳрекенскер, ку ӗҫе аван пултарат. Беспалӑв, чирлисемпе утайманнисем ыйтнипе, „суту-илу“ ӗҫне кунне темиҫе хут та кайса килет.

Ҫӑкӑрне йӗплӗ пралук карта тулашӗнчи аслӑ ҫул хӗрринче ларакан матар ачисене сутаҫҫӗ те, мӗн кирлине те вӗсенченех илеҫҫӗ.

(Малали пулат).

## РЕДАКЦИНЕ КИЛНĔ ÇЫРУ

**Редактăр йулташ!**

„Трактăр"-` аљманахăн 5-мĕш №-ĕнче манăн „Хĕнхур айĕнче" поема пирки çырнă статйăра йăнăш вырăн пур. Вăл РАПП чухнехи йăнăш. Поэтсен пурин те Д. Бедный пек çырмала, поэзине демйанлатмала (одемьянивание) текен йăнăш лозунга хўтĕлени, Д. Бедныйăн „Слезай с печки" йатлă произведенине вырăнсăртарах ырласа тăкни. Ку статйана эпĕ Елкерĕн поэми пичетленсе тухичченех кĕнеки ваљљи умсăмах вырăнне çырса панăччĕ. Вулакансемпе статйапа усă куракансене асăннă йăнăш вырăна эпĕ пачах кăларса пăрахма ыйтатăп.

Статйа автăрĕ **Д. Данилов.**

Мускав, 1/II—34 ç.

**Редакцирен:** Д. Данилов статйи пекех, унпа пĕрле пичете парса типографире нумай (2 çул ытла) пичетленмесĕр выртса кайа йулнă пирки аљманахăн 5-мĕш №-ĕнче А. Ĕ ç х ĕ л ĕ н „Урра-кăшкăрулăрах" поеминче йурăхсăр методпа („метод проэктов") хавасланнă вырăн пур. Çак йăнăшпа та аљманаха вуланă чухне асра тытма сĕнетпĕр.

**Редакци.**

Ответлă редактăр **Н. ВАÇАНККА.**

Редколлеги членĕсем: **И. Кузнецов, А. Золотов, Иван Мучи, Уйăп Мишши, Е. Захаров, Митта Ваçлейĕ, П. Осипов.**

Техн. редактăр **Н. Йангас.**

# ТУПМАЛИ.


*Стр.*

1. **А. Талвир.** Ылттăнту (роман сыпăкĕсем) . . . . . . . . 3
2. **Мраҥкка Микихверĕ.** Аван пурăнатпăр (5 актлă пйеса) . . . . 45
3. **Марк Аттай.** Сăвăсем:
   - Йалти пуçлăхсем . . . . . . . . . . . . 84
   - Чăхă . . . . . . . . . . . . . . . 84
   - Мулкачсем . . . . . . . . . . . . . . 85
   - Тĕлĕнмеле тĕлĕк . . . . . . . . . . . . 85
   - Поет . . . . . . . . . . . . . . . 88

ПАЙАНХИ САН-САПАТ.

4. **Лашман С.** Советсен тĕп хули — социалисăмла Мускав (дневник тетрадĕсенчен).
   - Мускав—Ленин хули . . . . . . . . . . . 89
   - Пйатилеткă йумахĕ . . . . . . . . . . . 93
5. **В. Худар.** Тăван вĕлле (ескиз) . . . . . . . . . 100
6. **Ив. Ивник.** Утă çинче. Каçхине (сăвăсем) . . . . . . . . 106

ПУРАНСА ИРТЕРНИ.

7. **М. Калай.** Сăр çийĕ хумхансан (калав) . . . . . . . . 107
8. **Блкер С.** Тĕнче вăрçи кунĕсем (мемуар, малали) . . . . . . 141


---


Ответ. редактор Н. ВАСЯНКА.
Техн. редактор Н. ЯНГАС.

Сдано в набор 8/III-34 г. Подписано к печати 28 IV-34 г.

Формат 62×94/16. Тираж 4 000 экз.
Печ. листов 10¼. В одном печ. листе 52 000 знаков.

Чувашгиз № 30. Индекс X—3. Заказ № 542.
Чувашлит № 1335.

Типография № 2 Чувашского Государственного Издательства в гор. Алатыре, Чувашской АССР.